# ЧӐВАШ ЧӖЛХИ, ЛИТЕРАТУРИ, ХАЛӐХ СӐМАХЛӐХӖ

Статьясен пуххи

Шупашкар 2015

УДК 80/81
ББК 80
Ч-12

Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ăслăлăх канашĕ йышăнăвĕпе пичетленет

*Пухса хатĕрлекенĕ тата ăслăлăх редакторĕ А.В. Кузнецов*

**ЧĂВАШ ЧĔЛХИ, ЛИТЕРАТУРИ, ХАЛĂХ СĂМАХЛĂХĔ:** статьясен пуххи / пухса хатĕрл. тата ăсл. ред. А.В. Кузнецов. – Шупашкар: ЧПГĂИ, 2015. – 256 с.

«Чăваш чĕлхи, литератури, халăх сăмахлăхĕ» статьясен пуххи – 1972–1974 ҫулсенче институтра тăватă кăларăмпа тухнă ярăма асра тытса, унăн паха енĕсене шута илсе калăпланă кĕнеке. Хальхи вăхăтра чăваш халăхĕн пуян культурине тĕрлĕ енчен тишкерекен, ачасене пĕлӳ паракан ăсчахсемпе тĕрлĕ шайри вĕренӳ учрежденийĕсенче ĕҫлекен вĕрентекенсен филологи ăслăлăхĕн топонимика, этнолингвистика, лингвокультурологи, литература пĕлĕвĕ, фольклористика юхăмĕсене кĕрекен статйисене пичетленĕ.

Кĕнеке тăван халăх кун-ҫулĕпе, чĕлхипе, литературипе, фольклорĕпе, апат-ҫимĕҫĕпе, Чăваш Енри ял ячĕсемпе кăсăкланакансене кирлĕ пуласса шанатпăр.

ISBN 978-5-87677-207-7

© Кузнецов А.В. пухса хатĕрленĕ тата редакциленĕ, 2015
© Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ, 2015

## ТУПМАЛЛИ


Ум сăмах 5

*Егоров Н.И.* Сирĕн ял ячĕ мĕн калать?.. 7

*Иванова А.М.* Таса агнонимсене пулăвĕ тĕлĕшĕнчен тĕпчени 19

*Иванова А.М., Фомин Э.В.* Словаре кĕмесĕр юлнă чăваш сăмахĕсен пуххи 29

*Исаев Ю.Н.* Нăрваш Шăхаль тата Вăрманхĕрри Шăхаль çыннисен Н.В. Никольский архивĕнче упранакан çырăвĕсем 46

*Кириллова И.Ю.* Илле Тăхти «Выçлăх çул» поэмăна хайланин историйĕ 67

*Кузнецов А.В.* Чăваш халăх хутшăну культурин авалхи палăрăмĕсем: танлаштаруллă тата шайлаштаруллă тĕпчес ыйту 71

*Лебедев Э.Е.* Чăваш тата туркă чĕлхисенчи пĕр евĕрлĕ глагол кӳлеписем 93

*Леонтьева З.И., Леонтьева Е.Н.* Элĕк районне кĕрекен Сатлайка тăрăхĕнчи микротопонимсем 113

*Леонтьева Е.Н.* Сĕт юр-варĕ тата унран хатĕрленĕ апат-çимĕç 119

*Родионов В.Г.* Г.И. Комиссаров (Вантер) – халăхăмăрăн аваллăхне тĕпчекенĕ 122

*Семенова Т.И.* Уяв (вăйă) йăли-йĕркин чăваш халăх пурнăçĕнчи вырăнĕпе пĕлтерĕшĕ 127

*Сергеев В.И.* Чăваш чĕлхинчи тăванлăха палăртмалли мелсем 145

*Сергеева Е.В.* Чăвашсен чустаран хатĕрленĕ апат-çимĕç ячĕсем 165

*Терентьева О.Н.* Илле Тăхти пултарулăхĕнче тавралăх халапĕсем сăнланни 171

*Федотова Е.В.* Илле Тăхтин «Матюк аппа» калавĕнчи тĕлĕк сăнарлăхĕ 177

*Федотова Е.В.* Тупмалли юмахсене пухни, пичетлени тата ушкăнлани 180
*Федотова Е.В.* Чăваш наци шухăшлавĕ тупмалли юмахсенче сăнарланни 190
*Федотова Е.В.* Юмахсенчи тупмалли юмахсем 195
*Филиппов А.Л.* Çыннăн шалти тĕнчине тата ăс-тăн тăрăмне концептсемпе палăртасси 199
*Фомин Э.В.* Н.И. Ашмарин словарĕнчи икшер хут тĕл пулакан сăмах майлашăвĕсем çинчен 218
*Яковлев П.Я.* Библин чăвашла куçарăвĕсенчи араб тата перс сăмахĕсем 226
Паллă тĕпчевçĕсен юбилейĕсем
Бурыкин Алексей Алексеевич (60 çул тултарнă май) *(Исаев Ю.Н., Лебедев Э.Е.)* 240
Добродомов Игорь Георгиевич (80 çул тултарнă май) *(Исаев Ю.Н., Кузнецов А.В.)* 243
Дыбо Анна Владимировна (55 çул тултарнă май) *(Исаев Ю.Н., Кузнецов А.В.)* 247
Лукоянов Геральд Васильевич (80 çул тултарнă май) *(Исаев Ю.Н., Кузнецов А.В.)* 250
Насилов Дмитрий Михайлович (80 çул тултарнă май) *(Исаев Ю.Н., Кузнецов А.В.)* 253

# УМ САМАХ

Чăваш халăхĕн пуян чĕлхи, сăнарлă та ытарлă сăмахлăхĕ, икĕ ĕмĕр ытла аталанса пыракан çырулла литератури нумай-нумай тĕпчев ĕçĕнче сăнланнă. Юлашки çулсенче вĕсем ытларах вырăсла тухнине шута илсе эпир чăвашла кăларăм хатĕрлерĕмĕр. Филологин тĕрлĕ енĕсене – чĕлхе пĕлĕвне, фольклористикăна тата литература пĕлĕвне – тишкернĕ статьясене пĕрлештерсе уйрăм кĕнеке тума хистекен тепĕр сăлтав – институтăн виçĕ пайĕнчен филологи енĕпе ĕçлекен пĕр пĕрлĕх туса хуни. Кунтах халăх йăли-йĕркипе ĕçми-çимине тĕпчесе çырнă чăвашла ĕçсене те вулакан патне çитерме шутларăмăр.

Çак кăларăмра сахал мар кăсăклă ыйту çине хурав тупма пулать.

Кĕнекере топонимсемпе çыхăннă икĕ ĕç вырăн тупнă: Н.И. Егоров Чăваш Енри ял ячĕсене пăхса тухса вĕсем мĕнрен пулса кайнине ăнлантарнă, З.И. Леонтьева тата Е.Н. Леонтьева Элĕк районне кĕрекен Сатлайка тăрăхĕнчи алла яхăн микротопоним пĕлтерĕшне уçăмлатнă.

А.М. Ивановăпа Э.В. Фомин тĕрлĕ çăл куçсенче çырăннă, анчах та сăмах кĕнекисене лекеймен тĕслĕхсене тупса палăртнă, вĕсемпе вулакана паллаштарасшăн.

Ю.Н. Исаев хальхи Чăваш Республикин Патăрьел районне кĕрекен Нăрваш Шăхаль тата Вăрманхĕрри Шăхаль ялĕсенче пурăннă маттур чăвашсем Н.В. Никольский профессор патне янă çырăвĕсене тишкернĕ, вĕсене кăсăк асăрхаттарусемпе пуянлатса вулакана ăнланмалла хатĕрленĕ, чăваш çыннин çыру çырас ăсталăхне, нисеп уйрăмлăхĕсене уçса пама тăрăшнă.

А.В. Кузнецов чăваш халăх нисепĕн тĕрлĕ енĕсене ытти халăхсеннипе танлаштарса, авалхи палăрăмсене тупса тĕпчеме тĕллев лартнă.

Э.Е. Лебедев ĕç-хĕл кӳлеписене тишкерсе турккăпа чăваш ĕç-хĕлĕсен пĕр евĕрлĕхне палăртать.

В.И. Сергеев, А.М. Иванова тата П.Я. Яковлев чăваш чĕлхинчи сăмахсемпе ăнлавсен уйрăм йышĕсене – тăванлăха

палăртмалли мелсене, пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмахсемпе сăмах майлашăвĕсене тата чăваш чĕлхине урăх чĕлхесенчен кĕнĕ сăмахсемпе ăнлавсене – ушкăнланă, ăнлантарнă.

А.Л. Филиппов ĕçĕ чăваш çыннин туйăм, ăс-тăн тăрăмне, шалти тĕнчине концептсен шайĕнче тĕпченипе палăрса тăрать.

Э.В. Фомин «Чăваш сăмахĕсен кĕнекине» Н.И. Ашмарин хăш-пĕр сăмах майлашăвĕсене икшер хут кĕртнин сăлтавĕсене шыраса тупса, пĕр сăмах майлашăвĕсенех тĕрлĕрен ăнлантарнине е урăх тĕслĕхсемпе çирĕплетнине асăрхаса вулакан патне çитерме шут тытнă.

Этнографи енĕпе икĕ ĕç вырăн тупнă: Е.Н. Леонтьева сĕтрен, Е.В. Сергеева чустаран хатĕрленĕ чăваш апат-çимĕçĕпе кăсăкланнă, вĕсен ятне, пĕлтерĕшне уçса пама ăнтăлнă.

Литература пĕлĕвĕпе халăх сăмахлăхĕн пайне кĕнĕ ĕçсенче В.Г. Родионов паллă историк, этнограф, чĕлхеçĕ, фольклорпа литература тĕпчевçи, чăвашсене çутта кăлараканĕ Г.И. Комиссаров (Вантер) халăхăмăрăн аваллăхне епле тĕпчени пирки хыпарлать, Е.В. Федотова чăваш халăх сăмахлăхĕнче тупмалли юмахсем мĕнле вырăн йышăнни, вĕсене камсем тата хăçан пухса кун çути кăтартни, мĕнле ушкăнлани пирки сăмах хускатать, вĕсенче палăракан наци шухăшлавне, тупмалли юмахсем халăх сăмахлăхĕн тепĕр тĕсĕнче – юмахсенче – мĕнле вырăн тупнине палăртма тăрăшать. Илле Тăхти пултарулăхне халалланă ĕçсен ярăмĕнче И.Ю. Кириллова унăн «Выçлăх çул» поэми мĕнле çуралса халăх патне çитнине, О.Н. Терентьева çыравçă пултарулăхĕнче мĕнле тавралăх халапĕсем сăнланнине тата Е.В. Федотова «Матюк аппа» калавĕнчи тĕлĕк сăнарлăхне кăтартса параççĕ. Т.И. Семенова уяв (вăйă) халăх пурнăçĕнче мĕнле вырăн йышăннине, унăн пĕлтерĕшĕ мĕнлерех пулнине кăтартать.

«Паллă тĕпчевçĕсен юбилейĕсем» пайра тĕрĕк чĕлхисене тĕпченĕ, чăваш чĕлхине халалласа пĕлтерĕшлĕ ĕçсем çырнă паллă ăсчахсем çуралнăранпа 2014–2015 çулсенче 55, 60, 80 çул çитнине халалланă статьясем вырнаçнă.

Пĕтĕмĕшле илсен эпир сĕнекен кĕнеке чăваш халăхĕн чĕлхипе, сăмахлăхĕпе, литературипе, этнологийĕпе, кун-çулĕпе кăсăкланакансемшĕн паха ĕç пулмалла.

## *Н.И. Егоров*

# СИРĔН ЯЛ ЯЧĔ МĔН КАЛАТЬ?..

Пысăках мар пирĕн Чăваш çĕр-шывĕ – пурĕ те 18,3 пин тăваткал километр. Пысăк карттăсем çинче те вăл юман çулçи пек кăна курăнать. Анчах çак пĕчĕк территори çинчех 2 пин ытла ял вырнаçнă. Вĕсен кашнин хăйĕн ячĕ пур. Нумайăшĕн пĕрре çеç те мар, икшер, виçшер е ытларах та. Пĕр йышши ячĕсене чăвашсем хывнă, теприсене авал çак тăрăхра пурăннă халăхсем, виççĕмĕшсене вара чăвашсенчен те каярах килсе тухнă тутарсем, вырăссем, ирçесем е ытти халăхсем панă. Мĕн чухлĕ юхан шывпа кӳлĕ, вăрман-ката, улăх-çаран, çырма-çатра тата Чăваш Енре! Вĕсен те кашнинех хăйĕн ячĕ пур. Çакнашкал тĕрлĕ вырăн ячĕсене наукăра «топонимсем» теççĕ. Грекларан чăвашла куçарсан «топоним» тени «вырăн ячĕ» тениех пулса тухать. Вуншар пин топоним чăваш тăрăхĕнче. Вĕсен кашнин хăйĕн шăпи, кун-çулĕ, историйĕ, кашнин хăйĕн пĕлтерĕшĕ пур.

Вăл е ку пайăр ят епле пулса кайнипе нумайăшĕ кăсăкланать, вĕсен вăрттăнлăхне шыраса тупма, ăнланса илме тăрăшать. Сĕм авалтанпах çынсем пайăр ятсем епле йĕркеленсе кайнине ăнлантарса пама тăрăшнă, уйрăм ятсене хăйсем пĕлнĕ сăмахсемпе танлаштарса пăхнă. Халăх хушшинче çапла майпа хăй тĕллĕнех çĕнĕ ăслăлăх – этимологи – йĕркеленме тытăннă. Анчах та халăх этимологийĕ наукăран питĕ инçе тăрать, нумай чухне сăмахсене тĕрĕс мар ăнлантарать. Сăмахран, Патăрьел районĕнче *Ахпӳрт* ятлă ял пур. Халăхра ял ятне çапла ăнлантараççĕ. Пăла тăрăхне пирвай куçса килнĕ чăвашсем юхан шыв хĕрринче пӳрт ларнине курнă та: «Ах, пӳрт!» – тесе кăшкăрса янă-мĕн. Çапла майпа *Ахпӳрт* ял ячĕ пулса кайнă иккен. Тĕрĕссипе вара *Ахпӳрт* – авалхи çу чăвашсен (язычниксен) арçын ячĕ пулнă. Чăвашсем патне ку ят тутарсем урлă кĕнĕ. Тутар

тата ытти тӗрӗк чӗлхисенче ку ят *Хакберди* евӗрлӗ илтӗнет, вӑл *хак* «чӑн» (выр. «истина») – «мӑсӑльмансен Аслӑ Туррин эпитечӗ» – тата *берди* «пачӗ» сӑмахсенчен пулнӑ, чӑвашла «Турӑ пачӗ» тенине пӗлтерет. Ахӑртнех, ял пуҫласа яракан ҫын *Ахпӳрт* ятлӑ пулнӑ.

Нумай-нумай пайӑр ятсем пире ятарлӑ тӗпчесе пӑхмасӑр ним ҫинчен те каласа парайма ҫӗ. Анчах вӗсен каламалли нумай. Топонимистсем – топонимсене тӗпчекенсем – пайӑр ятсемпе куҫа-куҫӑнах калаҫаҫҫӗ. Вӗсене пайӑр ятсем хӑйсен вӑрттӑнлӑхне уҫса параҫҫӗ, пирӗн ҫӗр-шывӑмӑрӑн авалләхӗпе тӗплӗнрех паллашма пулӑшаҫҫӗ.

Вулакансем те пайӑр ятсен вӑрттӑнлӑхне пӗлме тӑрӑшаҫҫӗ. Уйрӑм ял ячӗсем мӗнле пулса кайнине каласа пама ыйтаҫҫӗ. Ҫавӑнпа хӑш-пӗр ял ячӗсем мӗне пӗлтернине тата вӗсем епле пулса кайнине ҫырса кӑтартма шутларӑмӑр.

**Акташ** (Хӗрлӗ Чутай районӗ) – авалхи чӑвашсен арҫын ячӗ, тутар чӗлхинчен кӗнӗ. Вӑл икӗ пайран тӑрать; тутарла *ак* «шурӑ» тата *таш* «чул» сӑмахсенчен йӗркеленнӗ, чӑвашла «шурӑ чул» тени пулать.

**Акчура** (Куславкка районӗ) – авалхи чӑвашсен арҫын ячӗ, тутарла *ак* «шурӑ» тата *чура* «паттӑр» сӑмахсенчен пулса кайнӑ, чӑвашла «шурӑ паттӑр» е «сӑваплӑ паттӑр» тенипе тӳрӗ килет.

**Алманчӑ** (Красноармейски, Патӑрьел районӗсем), **Алманчӑк** (Вӑрнар районӗ) – авалхи чӑвашсен сӑмахӗ, вӑл куланай пуҫтаракана пӗлтернӗ. Монгол чӗлхинчен кӗнӗ *алман, албан* «хырҫӑ», «куланай» сӑмахран *-чӑ* аффикс хушӑннипе пулнӑ; танлаштар: *пулӑ* + *-ҫӑ* – *пулӑҫӑ, тимӗр* + *-ҫӗ* – *тимӗрҫӗ* е *тимӗрчӗ. Алманчӑ* сӑмах авал ҫын ятӗнче те ҫӳренӗ.

**Арапуҫ** (Вӑрмар, Патӑрьел районӗсем) юхан шыв ятӗнчен пулса кайнӑ. Вӑрмар районӗнчи Арапуҫ ялӗ чӑн та Ара шывӗ пуҫланнӑ вырӑнта ларать, Патӑрьел районӗнчи Арапуҫ ялӗ XVI ӗмӗр вӗҫӗнче Вӑрмар районӗнчи Арапуҫӗнчен куҫса ларнӑ. *Ара* юхан шыв ячӗ авалхи марисенчен сыхланса юлнӑ. Ҫармӑс чӗлхинчи *ар, ара* сӑмах «юхан шыв» тенине пӗлтерет, вӑл мари чӗлхипе хурӑнташлӑ финн-угр чӗлхисенче анлӑ сарӑлнӑ: венгрла *ер, ар*, мансилле *ар, ари* «юхан шыв». *Ар* сӑмах Чӑваш, Тутар, Мари республикисенчи топонимсенче

тăтăш тĕл пулать: *Ар Сĕнтĕр* (Муркаш районĕ), *Арйынгывуй* (< *Ар* + *Юнкă* + *пуç*), *Ар-Пингель* – Марий Элти ял ячĕсем. Чăваш çĕр-шывĕнчи *пуç* сăмахпа вĕçленекен ял ячĕсем пурте пекех юхан шыв ячĕсенчен пулса кайнă, ял юхан шыв пуçламăшĕнче вырнаçнине палăртать: *Энĕшпуç, Шутнерпуç, Шĕнерпуç, Кĕсерпуç, Санарпуç, Шанарпуç, Куснарпуç, Пăлапуç Пашьел, Хумпуç Патăрьел* т.ыт.те. Мари чĕлхинче *вуй* «пуç» сăмах та топонимсенче çак пĕлтерĕшпех çӳрет.

**Ар Сĕнтĕр** (Малый Сундырь), **Ар Юнкă** (Малая Юнга) йышши топонимсенче *ар* сăмах «пĕчĕк» тенине пĕлтерет. Туçи марисем *ар* «пĕчĕк» сăмаха тури (вирьял) чăвашсен калаçăвĕнчен илнĕ. Вирьялсен чĕлхинче пĕр виçĕ-тăватă ĕмĕр каялла кăна «пĕчĕк» пĕлтерĕшлĕ *ор* сăмах пулнă, мал енчи тата анатри чăвашсем ăна *ур* тенĕ. Анчах та халь вĕсен чĕлхинче *ур* «пĕчĕк» сăмах упранса юлман. Апла пулин те чăваш чĕлхинче ытла нумаях та пулмасть *ор* / *ур* «пĕчĕк», «кĕçĕн», «сахал» сăмах пулнине хăш-пĕр топонимсем ĕнентерсе параççĕ. Акă, сăмахран, Улатăр районĕнчи Эйпеçсемпе Суйкăн çĕрĕсем урлă *Ур Пасна* (Малая Бездна) ятлă пысăках мар шыв юхса выртать. Пĕр тăват çĕр çула яхăн авал, Эйпеçсем Сăр вăрманĕваррине кĕрсе тĕпленнĕ вăхăтра, чăваш чĕлхинче *ур* «пĕчĕк» сăмах тулли пурнăçпах пурăннă иккен. Вăл кăк чĕлхеренех упранса юлнă. Пур тĕрĕк чĕлхисенче те «пĕчĕк, сахал» пĕлтерĕше *аз* сăмахпа палăртаççĕ. Сахалтан та икĕ пин çур çул авал кăк тĕрĕк чĕлхинчи *аз* сăмах чăваш чĕлхин никĕсĕ пулса тăнă огур чĕлхинчи ротацизм законне пăхăнса *ар* евĕрлĕ янрама тытăннă. Огур чĕлхи вăл карасук археологи культурине хăварнă авалхи инди-иран йăхĕсем огуз тĕрĕк чĕлхипе калаçма тытăнсан пулса кайнă. Инди-иран чĕлхисенче, авалхи инди-европа чĕлхинчи пекех, сăмах варрипе вĕçĕнче янăравлă *з* сасă пулман. Тĕрĕкленсе пынă май вĕсем огуз чĕлхинчи *з* сасса калайман пирки ун вырăнне *р* сасă калама пуçланă. Çапла вара, инди-иран йăхĕсем тĕрĕкленсе пынă май, авалхи огуз тĕрĕк чĕлхин çĕнĕ диалекчĕ йĕркеленнĕ. Ку диалектпа калаçакансем хăйсене, хăвăрах тавçăртăр пулĕ тетĕп, огурсем теме тытăннă. Пирĕн эрăченхи VIII–VII ĕмĕрсенчех карасук

культури сӳннӗ. Ҫавӑнтан вара эпир хальхи чӑваш чӗлхин никӗсӗ пулса тӑнӑ огур диалекчӗ Ази варринче 2700–2800 ҫула яхӑн авал йӗркеленнинне пӗлетпӗр. Авалхи пӑлхар ӑрӑвӗсем пурте огур йӑхӗнчен тухнӑ, вӗсен ячӗ *аслӑ огур* тенине пӗлтерет. Ҫавӑнпа Византи ӑсчахӗсем авалхи пӑлхарсене «великие болгары» тенӗ. Куратӑр-и: кӗске кӑна сӑмах миҫе пин ҫулхи аваллӑха упрать! Кулленхи калаҫуран тухса ӳкнӗ пулсан та ялсемпе ҫырма-ҫатра ячӗсенче упранса юлнӑ сӑмахсем пире истори авӑрне илсе кӗрсе каяҫҫӗ те халӑхӑмӑрӑн шурӑ хут ҫине хураланса юлма ӗлкӗреймен аваллӑхӗпе паллаштараҫҫӗ. Темиҫе ӗмӗр каяллахи лару-тӑру топонимсем витӗр тата уҫӑмлӑрах курӑнать.

Чӑваш Республикин ҫурҫӗр пайӗнче «ҫармӑсла пуплекен» топонимсем нумай. Вӗсем ҫак тӑрӑхра 400–500 ҫул авал туҫи мари йӑхӗсем пурӑннине каласа параҫҫӗ.

**Васнар** (Красноармейски районӗ) – ҫармӑс чӗлхинчен юлнӑ юхан шыв ячӗ, марилле *вэс, вэсэ* «тепӗр, тепре», «иккӗмӗш», «лешӗ» тата *энгер* «юхан шыв» сӑмахсенчен пулса кайнӑ, чӑвашла «иккӗмӗш ҫырма» е «леш ҫырма», «тепӗр ҫырма» тенипе тӳрӗ килет. Юхан шыв ячӗ каярахпа ҫав ырӑнта йӗркеленнӗ ял ятне куҫнӑ.

**Вишенер** (Хӗрлӗ Чутай районӗ) – мари чӗлхинчен юлнӑ юхан шыв ятӗнчен пулса кайнӑ ял ячӗ, марилле *виш* «уҫӑ (ырӑн)» тата *энгер* «юхан шыв» сӑмахсенчен йӗркеленнӗ, чӑвашла «уҫӑ ҫырма» тенине тӳрӗ килет. Вишенер ҫырми вӑрманлӑ ҫӗрте мар, уйланкӑ ҫӗрте юхса выртнӑ пулмалла.

**Вунпӳкасси** (Сӗнтӗрвӑрри районӗ) авалхи *вунпӳ* сӑмахран пулса кайнӑ. *Вунпӳ* тесе вунӑ ҫын пуҫлӑхне (десятский князь) каланӑ. Авалхи чӑвашсен тата *ҫӗрпӳ* (сотский), *пинпӳ* (тысяцкий), *тӗмпӳ,* е *тӗмпек,* (десятитысяцкий) тата *ӗмпӳ* (великий князь) «патша» титулсем те пулнӑ. Вӗсем те ял ячӗсенче палӑрса юлнӑ: *Ҫӗрпӳ* хули, *Тӗмпек* – ял ячӗ т.ыт.те.

**Ёнкӗлт** (Хӗрлӗ Чутай районӗ) – авалхи ҫу чӑвашсен арҫын ячӗ, тутар чӗлхинчен кӗнӗ. Тутарла *ян* «чун» тата *килдӗ* «килчӗ» сӑмахсенчен пулса кайнӑ. Ялӑн ырӑсла ячӗ – Янгильдино – тутар чӗлхине ҫывӑхрах, мӗншӗн

тесен вырăс тиекĕсем чăваш ялĕсен ячĕсене Хусан ханĕсен çыравçисен хучĕсенчен илнĕ.

**Ĕнел** (Елчĕк районĕ) – авалхи титулран пулса кайнă ят. Елчĕк районне ку ял хальхи Куславкка районĕнчи Ĕнел вуннинчен (çĕр общининчен) XVI ĕмĕр вĕçĕнче куçса пынă. «Ĕнел» титул Атăлçи Пăлхар патшалăхĕнчех пулнă, чăвашсен вăл XVII ĕмĕрчченех сыхланса юлнă.

**Исментер** (Етĕрне районĕ) – авалхи чăваш ятĕнчен пулса кайнă, перс чĕлхинчен кĕнĕ сăмах.

**Йĕпреç** авалхи арçын ятĕнчен пулса кайнă. Ку ят тутар чĕлхи урлă араб чĕлхинчен кĕнĕ, арабсем ăна еврейсенчен илнĕ. Сăмахăн сасă кӳлепи çапла улшăнса пынă. Авалхи еврей чĕлхинче *Абрахам* «халăхсен ашшĕ» тенине пĕлтернĕ, ку ят грексем урлă вырăс чĕлхине те кĕнĕ, унта вăл *Абрам* е *Авраам* формăсенче çӳрет, чăвашсем вырăс чĕлхинчен ăна кăшт улăштарса йышăннă та *Упрам* теме тытăннă. *Йĕпреç* формăпа çӳрекен ят пирĕн чĕлхене пачах урăх çулпа килнĕ. Авалхи еврейсенчен *Абрахам* сăмаха арабсем йышăнса юлнă та *Абурахим* теме тытăннă. Арабсенчен ку ят перссене кĕнĕ, перссенчен мăсăльман тĕнĕпе пĕрле тĕрĕк халăхĕсем хушшине сарăлнă, азербайджансем, туркменсем, пушкăртсем, казахсем, тутарсем ку ята *Ибрахим* евĕрлĕ туса хунă. Кулленхи калаçура çак ятăн çепĕçлĕх формисемпе анлă усă курнă. Авалхи чăвашсен çак ятăн çепĕçлĕх формисем нумай пулнă: *Ипрай, Йĕпрей, Ипраç, Йĕпреç, Йĕпрем, Эпрем, Эприм, Епрай, Йĕпрӳк, Япрай, Эпри, Ипрей* т.ыт.те. Хальхи Йĕпреç посёлокĕ ларакан вырăна чи малтан Йĕпреç ятлă çын пырса ларнă пулмалла. Йĕпреç тăрăхне чăвашсем XVI ĕмĕр вĕçĕпе XVII ĕмĕр пуçламăшĕнче кăна пырса тухнă.

**Кĕнер** (Куславкка районĕ) мари чĕлхинчен юлнă юхан шыв ятĕнчен пулса кайнă. Марилле *кӳй* «чул» тата *энгер* сăмахсем пĕрлешнипе пулса кайнă, «чул çырма» тенине пĕлтерет. *Кунер* ял ячĕ – çак сăмахăн фонетика варианчĕ кăна.

**Кĕтеснер** (Вăрмар районĕ) – мари чĕлхинчен юлнă юхан шыв ятĕнчен йĕркеленсе кайнă ял ячĕ. Марилле *кăдэж, кыдеж* «уйрăм пай», «пӳлĕм», «уйăру» (чăвашла *кĕтес* сăмах та мари сăмахĕпе хурăнташлă) тата *энгер* «юхан шыв»

сăмахсенчен пулса кайнă, чăвашла «уйăракан çырма», «чикĕри çырма» тенипе тӳрĕ килет. Кĕтеснер ялĕ Кивĕ Вăрмар ялĕнчен уйрăлса тухнă та Кĕтеснер çырми çине пырса ларнă, 1780 çулта, сăмахран, ку яла «Тинсарина Малые Урмары тож» ятпа палăртнă. Вăрмар, Тупах (Тансарино), Эçпепе, Кавал, Шулхан, Кĕтеснер ялĕсем авал пĕр кăкран хунаса кайнă ялсем пулнă.

Чăвашла *кĕтес,* марилле *кăдеж* сăмахсем иккĕшĕ те вырăс чĕлхинчи *кутец, кут* «угол», «закоулок», «тупик», «конец глухого захода, залива, заводи, мыса» сăмахран аталаннă. Кукрине сылтăмран ӳкекен Кĕтеснер çырми тавраш ĕлĕк Вăрмар вуннин (çĕр общинин) çĕрĕсен Ара вăрманĕ çумĕнчи кĕтесĕ пулнă.

**Кипеç** (Елчĕк районĕ), **Кипеч** (Канаш районĕ) – авалхи çу чăвашсен арçын ятĕнчен пулса кайнă ял ячĕсем. Тутар чĕлхи урлă араб чĕлхинчен кĕнĕ, арабла *Хайбулла* «Аллах вăрттăнлăхĕ» мăсăльман ятĕнчен пулса кайнă. Тĕрĕк чĕлхисенче вăл *Кайбыч, Кайбыш, Кайпăч, Куйпăч* çепĕçлĕх формисенче çӳренĕ. Чăваш чĕлхинче вăл *Кипеç, Кипеч* формăсем йышăннă. Сăмах май каласан, *Куйбышев* хушамат та çак ятранах пулса кайнă. *Кипеч* сăмаха чăвашла *кӳпеçĕ* «кӳпе тăвакан», «кольчуга тăвакан» сăмахпа çывăхлатни тĕрĕсех мар.

**Курнавăш** (Елчĕк районĕ) мари чĕлхинчен юлнă, марилле *корно* «çул» тата *вож* «юпă» сăмахсенчен пулса кайнă, çул юппинче ларакан яла пĕлтернĕ. Çакă та интереслĕ. Елчĕк районĕн территорийĕнче çармăссем нихăçан та пурăнман. Ăçтан пырса лекме пултарнă-ха унта çармăсла ял ячĕ? Ĕçĕ акă мĕнре. ***Курнавăш*** (Новые Шимкусы) ялĕ Тăвай районĕнчи Тушкил (Шимкусы) ялĕнчен куçса ларнă. Тушкил тăрăхĕнче халĕ те *Курнавăш çăлĕ, Курнавăш уйĕ, Курнавăш çулĕ* текен топонимсем упранса юлнă.

**Кушар** (Красноармейски, Вăрнар районĕсем) – мари чĕлхинчен юлнă топоним, çармăсла *кож* «чăрăш» (*кожер* «чăрăшлăх») сăмахран йĕркеленнĕ. *Кушар* ят ял чăрăшлăхра йĕркеленсе кайнине палăртса тăрать. Чăвашсен *кушар* уяв ячĕ те çак мари сăмахĕпех çыхăнса тăрать. Чăнкасси ялĕ çывăхĕнчи вăрманта пулнă çак çурхи уяв, П.Н. Осиповăн «Кушар» пьеси мехелĕпе, пĕтĕм чăваш

халăхне паллă пулса тăчĕ. Кушар сăмах малтан уява мар, уяв иртекен вырăна кăна пĕлтернĕ.

**Кушлавăш** (Хĕрлĕ Чутай, Вăрнар районĕсем) мари чĕлхинчен юлнă юхан шыв ятĕнчен пулса кайнă. Ку топонимра та *кож* «чăрăш» сăмах пур, *кожла* сăмах мари диалекчĕсенче «чăрăшлăх» тенине пĕлтерет, *вож* «шыв юппи» тени пулать. Çапла вара *Кушлавăш* тени «чăрăшлăхри шыв юппи» тенипе тӳр килет. Кушлавăш тăрăхĕ авал сĕм вăрманлă пулнă. Аса илер-ха Çемен Элкерĕн «Хĕн-хур айĕнче» поэминчи йĕркесене:

Кушлавăш текен вун икĕ ял уйĕ
Хура вăрманпа хупланса выртать.

*Хура вăрман* тесе чăвашсем хыр-чăрăш вăрманне каланă.

**Мĕшĕл** (Сĕнтĕрвăрри районĕ) – мари чĕлхинчен упранса юлнă топоним, марилле *мӳжӳл* сăмах «пĕчĕкçĕ кӳлĕ» тенине пĕлтерет. Чăнах та, Мĕшĕл ялĕ лачакаллă-шурлăхлă çырма хĕрринче ларать. Авал ку вырăнта кӳлĕсем те пулнă.

**Муркаш** (авал – **Муркавăш**) мари чĕлхинчен юлнă çырма ятĕнчен пулса кайнă. Марилле *морко* «ярапа, шерепе» пĕлтерĕшлĕ, тури чăвашсен чĕлхине те кĕнĕ вăл, вирьялсем пиçиххи шерепине *морка* е *моркка* теççĕ. Сăмахăн иккĕмĕш пайĕнче эпир пĕлекен *вож* «юпă» сăмах тăрать. Муркаш тĕлĕнче, ахăртнех, темиçе çырма юппи пĕр çĕре пĕрлешсе «шерепеленсе» тăнă пулмалла.

**Нарат Чакки** (Сĕнтĕрвăрри районĕ) тутарсем урлă килнĕ монголла *нарат* «хыр» сăмахран тăрать. *Чакă* пайĕ те тутар чĕлхинчен кĕнĕ тĕрĕк сăмахĕ, вăл «вăрман», «чăтлăх», «ката» тенине пĕлтерет. *Нарат Чакки* «хыр вăрманĕ» тени пулать. Вăрмар районĕнчи Аслă тата Кĕçĕн Чак(ă) ялсен ятĕнче те вăрмана пĕлтерекен *чак* сăмах тĕл пулать.

**Пайкилт** (Канаш районĕ) авалхи чăваш ятĕнчен пулса кайнă, тутарла *бай* «пуян» тата *килдĕ* «килчĕ» сăмахсенчен тăрать. Ача çурални авалхи çыншăн пуянлăх килнипе пĕрех пулнă, çавăнпа та ачине *Пайкилт* ятлă хунă. Яла никĕсленĕ çын ячĕ пурăна киле ял ятне куçса кайнă.

**Пăртас** (Вăрнар, Вăрмар районĕсем) авал Атăл тăрăхĕнче пурăннă халăх ятĕнчен пулса кайнă. Пăртассем иран ушкăнне кĕрекен чĕлхепе калаçнă пулмалла. Вĕсен чĕлхинчен сыхланса юлнă топонимсем, йышлах мар пулин те, Атăл тăрăхĕнче тĕл пулаççĕ. Марий Элта *Парат* ятлă юхан шывсем темиçе те пур. Çак топоним осетинсен (авалхи ас, яс халăхĕн тăхăмĕсен) чĕлхинчи *фурд* «юхан шыв» пĕлтерĕшлĕ сăмахпа хурăнташлă. Дуная юхса кĕрекен Прут юхан шывĕн ячĕ те асăннă сăмахсемпе хурăнташлă. *Пăртас* халăх ячĕ те иран чĕлхисенчи «юхан шыв» пĕлтерĕшлĕ *парат, пурат* сăмахран пулса кайнă. Пăртас тени парат (юхан шыв) çинче пурăнакан ас халăхĕ тениех пулать. Авалхи пăртас халăхĕ XI–XII ĕмĕрсенче пăлхар-чăваш йăхĕсемпе пĕрлешсе кайнă, анчах та хăйсен ятне вĕсем ял ячĕсенче упраса хăварнă.

**Пикшик** (Елчĕк, Шупашкар, Канаш районĕсем) тутарсенчен илнĕ авалхи чăваш ятĕнчен пулса кайнă. Тутарла *бейĕк* «пысăк, аслă» тата *шейх* – авалхи мăсăльман титулне пĕлтерекен – сăмахсенчен *Бийикшейх* ят пулса кайнă. Чăвашсем çак ята кĕскетсе *Пикшик* туса хунă. Ял пуçарса янă çын ячĕ каярахпа ял ятне куçса кайнă.

**Сарьял** е **Сăрьел** (Етĕрне, Вăрнар районĕсем) Сарри паттăр ятĕнчен пулса кайнă. *Сарри* – чăвашсен авалхи княçĕн ячĕ. Чăвашсем вырăс патшалăхĕпе пĕрлешнĕ вăхăтра унăн чапĕ мĕнпур Чăваш Ене сарăлнă. Унăн ялне те Сарри ялĕ тенĕ чăвашсем. *Сарри ялĕ* сăмах майлашăвĕнчен каярахпа *Сарьял* топоним йĕркеленсе кайнă. Чăвашсен паян кунччен Сарри паттăр çинчен калакан халапсем сыхланса юлнă.

**Сăкăт** (Патăрьел, Вăрнар районĕсем), **Сăхăтпуç** (Тăвай районĕ) – питĕ ватă сăмах, вăл пура культурине хăварнă сĕм авалхи иран йăхĕсенченех сыхланса юлнă. Иран чĕлхисенче *согд* сăмах «таса», «шурă» пĕлтерĕшсемпе çӳренĕ. *Сăкăт* малтан юхан шыв ятне пĕлтернĕ, кайран кăна ял ятне куçса кайнă. Ку топонимăн пирвайхи пĕлтерĕшĕ «шурă шыв», е «таса шыв» пулнă. Чăваш Республикинче *Шуршу* (Шурă шыв) ятлă темиçе çырма тата ял ячĕ те пур. Шупашкарти *Сугутка* шыв ячĕ те çак ретрех тăрать.

**Сĕнтĕр** (Вăрмар, Етĕрне, Муркаш районĕсем), **Сĕнтĕрвăрри, Сĕнтĕрпуç** (Сĕнтĕрвăрри районĕ) – мари чĕлхинчен сыхланса юлнă юхан шыв ячĕ. *Сĕнтĕр* ятлă юхан шывсем Марий Элта тата Чулхула облаçĕнче нумай тĕл пулаççĕ: *Шĕнтĕр, Шĕнтĕрйел (Марий Эл), Сънетĕр, Сенетор, Сяндер, Сандыревка, Сентър, Синдоровиц* (Чулхула облаçĕ). Ку топонимсем финн-угр чĕлхисенчи «юшкăн», «тăм» пĕлтерĕшлĕ *сӳнед* сăмахран пулса кайнă. Ун çумне «юхан шыв» пĕлтерĕшлĕ *ар* сăмах хушăннă. *Сĕнтĕр* топоним чăвашла «тăм çырма» е «юшкăнлă çырма» тенипе тӳрĕ килет. Сĕнтĕрвăрри – Сĕнтĕр шывĕн вăрринче, вăл Атăла юхса тухнă çĕрте ларать. Топоним çакна пит аван кăтарса парать.

**Çĕрпӳ хули, Çĕрпӳел** (Йĕпреç, Комсомольски районĕсем) авалхи *çĕрпӳ* «çĕр çын пуçлăхĕ» (сотский князь) титулран пулса кайнă. *Çĕрпӳ хули* вырăнĕнче авал *Пăлат* ятлă çĕрпӳ ялĕ пулнă. Ытти çĕрти *Çĕрпӳ* ялĕсем Çĕрпӳ хули туса хунă вăхăтра Çавал тăрăхĕнчен куçа-куçа ларнă.

**Тăрăн** (Патăрьел, Канаш, Шупашкар районĕсем) авалхи титул, вырăсла «князь» сăмахпа тӳрĕ килет. *Тăрăн* ятлă ялсенче авал чăнах та чăвашсен улпучĕсем – *тăрăнсем* – пурăннă пулмалла. *Тăрăн* титул авал çын ятĕнче те çӳренĕ.

**Турхан** (Патăрьел, Хĕрлĕ Чутай, Çĕмĕрле, Çĕрпӳ районĕсем) авалхи титулран пулса кайнă, вăл куланайран хăтарнă пĕчĕк улпута пĕлтернĕ. Турхан сăмах монгол чĕлхинчен кĕнĕ, монголла *тархан* сăмах тимĕрçĕне пĕлтерет. Ылтăн Уртара тимĕрçĕсене çар валли хĕç-пăшал тунăшăн куланайран хăтарнă пулнă. Каярахпа *турхан* сăмах социалла титула куçса каять, куланай тӳлессинчен хăтарнă çынна, унтан улпута пĕлтерме тытăнать. *Турхан* сăмах çын ятне те куçса кайнă. Вырăс патшалăхĕнче XVI–XVII ĕмĕрсенче хĕсметре тăнă ют халăх çыннисене те *турхан* тенĕ.

**Улянкă** (Тăвай районĕ) *уйланкă* сăмахран пулса кайнă. *Уйланкă* тесе вăрман варринчи пысăках мар уя, уçланкăна каланă. Ял вăрман варринчи уйланкăра никĕсленсе кайнă пулмалла.

**Ураскилт** (Элĕк районĕ) авалхи чăваш ятĕнчен пулса кайнă. Çын ячĕ тутар чĕлхинчен кĕнĕ, тутарла *ураз* «ăрăс, телей» тата *килдĕ* «килчĕ» сăмахсенчен тăрать. *Ураскилт* чăвашла «ăрăс килчĕ» тенипе тӳрĕ килет. Яла *Ураскилт* ятлă çын пуçласа янă пулмалла.

**Ушанар** (Канаш районĕ) мари чĕлхинчен сыхланса юлнă юхан шыв ятĕнчен пулса кайнă. Марилле *ош* «шурă, таса» тата *энгер* «юхан шыв» сăмахсенчен тăрать. Чăвашла «шуршу» е «шурă шыв» тенипе тӳрĕ килет.

**Хайпăла** (Шăмăршă районĕ) – авалхи чăвашсен арçын ячĕ. Араб чĕлхинчи *Хайбулла* «Аллах вăрттăнлăхĕ» арçын ячĕ чăваш чĕлхине тутар чĕлхи урлă кĕнĕ. Ял пуçласа янă çын ячĕ ял ятне куçса кайнă. (Кипеч ялĕ çинчен çырнине вулăр).

**Хапăс** (Вăрнар районĕ) – авалхи арçын ячĕ, араб сăмахĕнчен пулса кайнă. Арабла *хафиз* «хӳтĕлевçĕ, управçă» сăмах, Аллах эпитечĕ пулнăскер, мăсăльмансен хушшинче çын ятĕнче çӳренĕ. Çак ят тутарсем урлă чăваш хушшинче те сарăлнă. *Хапăс* ят тепĕр араб сăмахĕнчен те пулса кайма пултарнă. Араб чĕлхинче *хафез* сăмах «ăсчах, пĕлĕмçĕ, вĕрӳçĕ», «Коран вулакан», «тиек» пĕлтерĕшсемпе çӳрет. Хусан хаклăхĕсенче *хапăс* е *апăс* тесе хан указĕсене çыракан-вулакан тиексене каланă. Ку сăмах чăваш чĕлхине те кĕнĕ, халăх сăмахлăхĕнче анлă тĕл пулать. *Хапăс* сăмахăн пĕлтерĕшĕ çак такмакра аван палăрать:

Хапăс килет, апăс килет,
Хусантан уккас килет...

Хан указĕсене вулакан тиексен титулĕ çын ятĕнче те çӳренĕ. Каярахпа ял пуçласа яракан çын ячĕ ял ятне куçса кайнă.

**Хăвăлçырма** (Елчĕк районĕ) пĕрре пăхма чăвашла *хăвăл* тата *çырма* сăмахсенчен пулса кайнă темелле пек. Анчах та çырма хăвăл пулма пултараймасть-çке. Топоним пĕлтерĕшне ял ячĕн тутарла варианчĕ уçăмлатать. Тутарсем *Хăвăлçырма* ялне *Куш Елга* теççĕ, вăл вырăсла ял ятĕнче те çаплипех юлнă – *Кош-Елга*. Тутар чĕлхинче *куш* сăмах «йĕкĕр, мăшăр» пĕлтерĕшпе çӳрет, *елга* сăмах

юхан шыва пĕлтерет. Тутарла *куш елга* тени чăвашла *йĕкĕр вар* тениех пулать. Апла пулсан *Хăвăлçырма* ял ятĕнчи *хăвăл* сăмах та тутар чĕлхинчи *куш* сăмахпа хурăнташлă пулма кирлĕ. Ку чăнах та çапла. Сасă тӳр килĕвĕ тĕлĕшĕнчен пăхсан тĕрĕк чĕлхисенчи *коош, куш* сăмах чăвашла *хăвăл* пулмалла та. Хальхи чăваш чĕлхинче «мăшăр, йĕкĕр» пĕлтерĕшлĕ *хăвăл* сăмах çухалнă, вăл *Хăвăлçырма* ят ятĕнче кăна сыхланса юлнă. Сăмах май каласан, «Нарспи» поэмăри *Хушăлка* ял ячĕ те «йĕкĕр вар» тенинех пĕлтерет, вăл тутар чĕлхинчен кĕнĕ вариант. Унăн тĕп чăвашла форми *Хăвăлçырма* пулмаллаччĕ.

**Чаканар** (Красноармейски, Шупашкар, Етĕрне, Элĕк районĕсем) мари чĕлхинчен юлнă юхан шыв ятĕнчен пулса кайнă. Марилле *чак* «çывăх» тата *энгер* «юхан шыв» сăмахсенчен пулса кайнă. Чăвашла «çывăх çырма» тени пулать.

**Шешкенер** (Шупашкар районĕ) çармăс чĕлхинчен юлнă юхан шыв ятĕнчен пулса кайнă. Марилле *шашкэ* «шашкă» (шывра пурăнакан мамăк тирлĕ чĕрчун) тата *энгер* «юхан шыв» сăмахсенчен тăрать. Шашкăсем пурăнакан çырмана авал марисем *Шашкă çырми* тенĕ. Чăваш чĕлхине *шашкă* «норка, выдра» сăмах марисенчен кĕнĕ.

**Шуртавăш** (Çĕрпӳ районĕ) çармăс чĕлхинчен сыхланса юлнă юхан шыв ятĕнчен пулса кайнă. Марилле *шордо* «пăлан» тата *вож* «юпă» сăмахсенчен тăрать, «пăланлă юхан шыв юппи» тенине пĕлтерет. Шуртавăш тăрăхĕнче авал пăлансем пурăннă. Çавал улăхĕсенче кăпка (торф) кăларнă чухне халĕ те тăтăшах пăлан шăммисем тухаççĕ.

**Шутнерпуç** (Вăрмар районĕ) мари чĕлхинчен упранса юлнă *Шутнер* çырма ятĕнчен пулса кайнă. Ял *Шутнер çырми* пуçланса каякан вырăнта ларать. Çармăсла *шудо* «курăк» тата *энгер* «юхан шыв» сăмахсенчен тăрать, «курăклă çырма» тенине пĕлтерет.

**Энĕш** – нумай ял ячĕсенче тĕл пулакан сăмах, юхан шыв ятне те пĕлтерет. Чăваш Республикинче **Энĕшпуç** (Вăрмар районĕ), **Энĕш Кăршка, Энĕшкасси Катек, Энĕшкасси Кушкă, Энĕшхĕрри** (Çĕрпӳ районĕ) ялсем пур. Ку ятсем пурте юхан шыв ячĕпе çыхăннă. Чăваш чĕлхинче халĕ те уйрăм калаçусенче «юхан шыв» пĕлтерĕшлĕ *ĕнеш,* е *энĕш,* сăмах тĕл пулать. Чăваш

чӗлхине ку сӑмах авалхи тутар чӗлхинчен кӗнӗ. Тутар чӗлхинче *инӗш* сӑмах пысӑках мар юхан шыва пӗлтерет, вӑл чӑвашла *ан, анӑç* сӑмахсемпе хурӑнташлӑ. Шыв юхса выртакан айлӑм вырӑна *ӗнеш* е *энӗш* тенӗ чӑвашсем. Каярахпа çак сӑмах пайӑр юхан шыв ятне куçса кайнӑ. Энӗш тӑрӑх вырнаçнӑ ял ячӗсем юхан шыв ячӗпе çыхӑннӑ.

**Эçпепе** (Вӑрмар районӗ) – тутар чӗлхинчен кӗнӗ ят. Хусан ханстви вӑхӑтӗнче Эçпепе чӑвашӗсене пӗр тутар мулли мӑсӑльман тӗнне вӗрентнӗ. Çав мулла Мекка хулине мӑсӑльмансен сӑваплӑ Кааба чулне пуççапма кайсан, Эçпепесем, тутар тӗнне пӑрахса, авалхи çу чӑвашсен йӑлипе пурӑнма тытӑннӑ. Меккӑна кайса килнӗ мӑсӑльмансене *хаджи* тенӗ. Çак тутар муллине чӑвашсем *Хаç папай* «Хадж тунӑ папай» тенӗ. *Хаç папай* ятӗнчен пурӑна киле *Эçпепе* пулса кайнӑ. Эçпепе ялӗ Кивӗ Вӑрмартан уйрӑлса тухнӑ, XIX ӗмӗр вӗçнелле те чӑвашсем ку яла *Пӗчӗк Вӑрмар* тенӗ пулнӑ. Каярахпа кӑна *Эçпепе* ят çирӗпленсе çитнӗ.

**Юмалӑх** (Етӗрне районӗ) – чӑваш сӑмахӗ, *юманлӑх* сӑмахӑн диалект варианчӗ. Вырӑсла ку яла *Тюмерля* тенӗ. Ку вариант çармӑс чӗлхинчен юлнӑ. Çармӑсла *тум,* е *тумо,* сӑмах юмана пӗлтерет, *тумер, тумерле* тени чӑвашла «юманлӑх» тенипе тӳрӗ килет. XVIII ӗмӗр вӗçнелле те ку яла *Тӳмерле* тенӗ пулнӑ-ха, каярахпа кӑна, туçи çармӑссем чӑвашланса пынӑ май, ял ятне чӑвашла калама пуçланӑ. Çапла майпа *Юмалӑх* вариант çирӗпленнӗ. Тӑвай районӗнчи *Тӗмер* ял ячӗ те марилле *тумер* «юманлӑх» сӑмахранах пулса кайнӑ.

**Янкӑлч** (Канаш районӗ) авалхи чӑваш ятӗнчен пулса кайнӑ. Ку ята чӑвашсем тутарсенчен илнӗ. Пайӑр ят тутарла *яна* «çӗнӗ» тата *кӑлӑч* «хӗç» сӑмахсенчен пулса кайнӑ, чӑвашла «çӗнӗ хӗç» тенипе тӳрӗ килет. Ял ячӗ çак вырӑнта ял пуçласа янӑ çын ятӗнчен пулса кайнӑ.

**Янсит** (Вӑрмар районӗ) тутар чӗлхинчен йышӑннӑ авалхи çын ятӗнчен пулса кайнӑ. Тутарла *яна* «çӗнӗ» тата *сеит* (титул ячӗ) сӑмахсенчен йӗркеленнӗ. Янсит ялӗ Çӳлти Кинчер (Янситово) ялӗнчен тухса ларнӑ. *Янсит* ятлӑ çын Кинчер ялне пуçласа яракансенчен пӗри пулма пултарнӑ.

*А.М. Иванова*

# ТАСА АГНОНИМСЕНЕ ПУЛĂВĔ ТĔЛĔШĔНЧЕН ТĔПЧЕНИ[1]

Таса агноним – пĕлтерĕшĕ паллă мар сăмах е сăмах майлашăвĕ: *вуслăр* [т. 5, с. 275][2]; *ĕсме* [т. 4, с. 139]; *ăмăши ларăри* [т. 4, с. 41]; *тĕттĕм тутлăх* [т. 15, с. 104].

Çав шутах иккĕленӳллĕ пĕлтерĕшлĕ тĕслĕхсене те кĕртмелле: *ăмтăл – ăнтăл* тениех мар-и? [т. 5, с. 404]; *йĕс* чыс? [т. 5, с. 79]; *мĕрчен кайăк* кайăк ячĕ? [т. 8, с. 347]; *уйран кĕпçи – уйран çӳпçи* вырăнне йăнăш çырни мар-и? [т. 3, с. 192].

Ытларах чухне таса агноним ют чĕлхерен кĕнĕ сăмахран пулса каять: *ĕреске* < выр. *резко*; *кача: кача тăвар* ытлашши тăварлă < çармТ. *качы,* çармУ. *кочо* йӳçĕк; *кăрмисун* < фр. *frank-mason*; *шĕпил* < нидерл. *spijl* шĕвĕркке; *Ильмар: Ильмар кĕлли* киремет ячĕ < удм. *инмар* турă; *калаклă: калаклă саппун* хул пуççи урлă çакакан саппун < тут. *калаклы* хăлхаллă.

Тăван чĕлхе хатĕрĕсемпе йĕркеленсе кайнă таса агноним та сахал мар. Пулăвĕ тĕлĕшĕнчен эпир вĕсене виçĕ ушкăна уйăрса пăхма тивĕç: 1) сăмах майлашăвĕсем[3]; 2) мăшăр сăмахсем[4]; 3) аффикс хушăнса пулнисем.

Пирĕн ĕçĕмĕрĕн тĕллевĕ – аффикс хушăнса пулнă агнонимсене пăхса тухасси. Вĕсен тытăмĕнче вăл е ку форманта уйăрма пултарни сăмах пĕлтерĕшне уçăмлатма нумай енчен пулăшать, агнонимĕ мĕнле пуплев пайне кĕнине, вăл еплерех йĕркеленсе кайнине ăнланса илме май парать.

Тĕпчевре иккĕмĕшле агнонимсене пуплев пайĕ тăрăх виçĕ ушкăна уйăрса тишкернĕ. Кашни ушкăннех мĕнпур тĕслĕхе кĕртме тăрăшнă. Материала словарь статйи хальлĕн йĕркеленĕ. Иккĕленӳллĕ пĕлтерĕше ыйту паллипе палăртнă. Н.И. Ашмаринăн «Чăваш сăмахĕсен кĕнекипе» 1985 çулхи «Чăвашла-вырăсла словарьти» вырăсла ăнлантарăва чăвашла куçарса панă.

**Япала ячĕ тăвакан модельсем**

**-ав (-ев, -в)** – ĕç-хĕлтен тăсăмлăх пĕлтерĕшлĕ ĕç ячĕ тăвакан аффикс.

Ĕç-хĕл + *-ав* = япала ячĕ:

*йăпав* кăмăл пусар? [т. 5, с. 79] < *йăпа-н* / *йăпа-т* + *в* = йăпану;

Чĕлхемĕрте асăннă моделе çывăх тутар йышăнăвне тупса палăртнă: *сăрав* кăтарту? *Сăрава кăларнă лашине. Çухалнă лашана паллаттарма пасара кăлараççĕ, çавна сăрава кăларни теççĕ* [т. 11, с. 273] < тут. *сорау* ыйту. *Сăрав* – *сорау* сăмахăн тутарла кӳлепи чăвашланса кайнипе пулнă тĕслĕх.

**-ам (-ем, -м)[1]** – япала ятне пĕчĕклетӳ пĕлтерĕшĕ кӳртекен аффикс

Япала ячĕ + *-ам* = япала ячĕ:

*кӳлем* кӳлленчĕк? *Тăхăр тăрна тăр шывра, хур-кăвакал кӳлемре; савнă туссем вăйăра, савманнисем ăйхăра* [т. 7, с. 69];

*çурккам* пуртăпа çурнă пуленкке пайĕ? *Юман çурк[к]амĕ. Купăста çурк[к]амĕ. Çурккам, çуркам* татăк, пуленкке [т. 12, с. 271];

**-ă (-ĕ)** – ĕç-хĕл çумне хушăнса ĕç ятне палăртакан аффикс.

Ĕç-хĕл + *-ă* = япала ячĕ:

*тархă. Çĕмĕрнĕ. Тархă тунă ăна* [Таланцевсен заводне] [т. 13, с. 224] = тарăхă ~ тарăху;

*тытă* тытмалли хатĕр? *Мĕнте пурнăç тыттине курать-ха Урха? Мĕскер-ха çав уншăн нимĕрен те паха?* [т. 14, с. 12] = тыткăч.

**-ăм (-ĕм, -м)** – ĕç-хĕл çумне хушăнса ĕç ятне палăртакан аффикс.

Ĕç-хĕл + *-ăм* = япала ячĕ:

*çăтăм* çăтса янă сыпкăм? [т. 13, с. 46].

**-кăç (-кĕç)** – ĕç-хĕлтен кăрал пĕлтерĕшлĕ япала ячĕ тăвакан аффикс.

Ĕç-хĕл + *-кăç* = япала ячĕ:

*куçкăç* [т. 7, с. 38] = куçса çӳремелли хатĕр;

*ӳркевĕç* кахал? [т. 4, с. 20] = кахал, наян, ӳркевçĕ;

*чавкăç* [т. 15, с. 123] = чавмалли хатĕр?

*ярăнкăç* чуччу? [т. 4, с. 227] = чуччу.

Агноним шутĕнче çӳрекен *ӳркӳç* сăмах (*Ӳркӳç вăкăр пĕр çул чĕкĕрнĕ* [т. 4, с. 21]) кахала мар, хăравçа пĕлтерет, танл.: авалхи тĕрĕкле *ürk* хăра[5]; тут. *өркешү* хăраса ӳк[6], каярах кахал пĕлтерĕшлĕ **ӳркӳç / ӳркевçĕ* сăмахпа пĕрпекленсе кайнипе пулнă.

**-çă (-çĕ, -ăç, -ĕç, -ç)** – япала ятĕнчен ĕçлевçĕ пĕлтерĕшлĕ сăмах тăвакан аффикс.

Япала ячĕ + -*çă* = япала ячĕ:

*вĕçлевçĕ* [т. 5, с. 376] = ĕçе вĕçлекен çын;

*йĕкӳçĕ* пĕр текстра кăна тĕл пулать. *Эсĕ мана айăплама çĕнĕрен айăплакансем* (ал çырăвĕнче – *йĕкӳçĕсем*) *тупа-тупа хуратăн* [т. 5, с. 115] = айăплавçă;

*тарăç: тарсăр тарăç* укçасăрах тара кĕнĕ ĕçлевçĕ? [т. 13, с. 206] = тӳлевсĕр ĕçлеме килĕшнĕ тарçă.

**-лăх (-лĕх)** – япалапа паллă ятĕнчен абстрактлă пĕлтерĕшлĕ сăмах тăвакан аффикс.

Япала ячĕ + -*лăх* = япала ячĕ:

*вăкăрлăх* çапуççи çинчен калакан тупмалли юмахра. *Пĕр енĕ юманлăх, тепĕр енĕ çăкалăх, варринче вăкăрлăх*[7] = вăкăрла тыткаларăш, конт. тĕккелешӳ;

*курăмлăх* çын хăйне ыттисене кăтартни? *Çинçе пӳме ӳстертĕм атте-аннене хăналăх, пичче-инкене курăмлăх* [т. 6, с. 313] = çынна кăтартмалăх;

*кӳллĕх* сăмавар çинчен калакан тупмалли юмахра. *Варри вутлăх, йĕри-тавра кӳллĕх*[8]; танл.: *кӳллĕх-шурлăх* [т. 7, с. 72] = нумай кӳлĕллĕ вырăн;

*прихутлăх* чиркӳ прихучĕ? *Тупташ çулĕ мăн çул-çи, мăн çул-çи мар – прихутлăх, прихутлăх мар – касаклăх, касак майри (çавă пур)* [т. 10, с. 274] < приход;

*сарайлăх* лупас, сарай? *Алăк умĕнче сарайлăх, сарнă тӳшек тăршшипе, эпир килтĕмĕр çак киле авалхи йăла тăршшипе* [т. 11, с. 62] = сарай;

*сăрлăх* ут кăшкарĕ çинчен калакан тупмалли юмахра. *Çеçен хирте сăрлăх ларать* [т. 11, с. 269] < диал. *сăр(лăх)* вăрттăнлăх;

*хăвăллăх. Атте-анне аса килсен хăвăллăхран тухса пăхатăн* [т. 16, с. 312] = çĕр айĕнчи хăвăл вырăн;

*хĕтевлĕх* хевтелĕх? [т. 17, с. 70];

*шăмăрлăх* сиен? *Онтан шăмăрлăхран пуçне урăх ним те кориместĕн. Шăмăрлăх туса анчах порнать вăл* [т. 17, с. 297] < çарм. *шымыр* (çичĕ пакша) йӳнĕ = сиен.

*хĕрĕхлĕх* сăрлавçă? *Çип пĕвеме хĕрĕхлĕхе параççĕ, о çиппе вара ик рас краска чикет те тепĕр сантала чиксе парать* [т. 17, с. 46–47] = сăрлавçă.

Ку модельпе килĕшӳллĕ тутар чĕлхинчен хатĕр хальлĕн кĕнĕ тĕслĕхсем те пур: *ăрăшлăх* тăван ачи? [т. 4, с. 61] < тут. *арышлык* (= чăв. *ырашлăх*) усрава илнĕ ача (Ф.И. Тагирова пĕлтернĕ тăрăх); *читĕнлĕх* [т. 15, с. 216] < тут. *читенлек* кăткăслăх.

Паллă ячĕ + -*лăх* = япала ячĕ:

*ĕрсĕрлĕх* намăссăрлăх? *ĕрсĕрлĕхрен хуйхăпа намăс нумай çуралать.* Тĕрĕс мар çырнă сăмах мар-ши? [т. 4, с. 136] = ирсĕрлĕх, нĕрсĕрлĕх;

*тутлăлăх* пылак апат? [т. 14, с. 189] = пылаклăх; техĕмлĕх.

**-у (ӳ)** – ĕç-хĕлтен тăсăмлăх пĕлтерĕшлĕ ĕç ячĕ тăвакан аффикс.

Ĕç-хĕл + -*у* = япала ячĕ:

*сулăшу* валеçсе тухни? [т. 11, с. 176].

**-чăк (-чĕк)** – япалапа паллă ятĕнчен пĕчĕклĕх пĕлтерĕшлĕ япала ячĕ тăвакан аффикс.

Япала ячĕ + -*чĕк* = япала ячĕ:

*кĕмĕлчĕк* çĕлен çинчен калакан тупмалли юмахра – кĕмĕл? *Вăрăм-вăрăм вăрăнчăк, ылтăн пуçлă кĕмĕлчĕк* [т. 7, с. 252].

Паллă ячĕ + -*чăк* = япала ячĕ:

*вăрăмчăк* çĕлен çинчен калакан тупмалли юмахра. *Вăрăм-вăрăм вăрăмчăк, ылтăн пуçлă кĕмĕлчĕк*[8] = вăрăммăн тăсăлса выртакан япала.

**Паллă ячĕ тăвакан модельсем**

**-ам (-ем, -м)** – паллă ятĕнчен паллă ячĕ тăвакан аффикс:

Паллă ячĕ + -*ам* = паллă ячĕ:

*сăртлам* сăртлă-туллă? [т. 11, с. 279] < *сăртлă* + -*ам;*

*шăлкам: шăлкам тăман* çĕр çумĕпе шăлса çăвакан юр[9].

**-ти** – евĕрлев сăмахĕнчен пахалăх пĕлтерĕшлĕ паллă ячĕ тăвакан аффикс.

Евĕрлев сăмахĕ + *-ти* = паллă ячĕ:

*вĕтĕрти* [т. 5, с. 384] = вĕлтĕртетекен;

*йăнкăлти* [т. 5, с. 77] = найка;

*чикĕлти. Чи-чи чикĕлти, чи-чи чикĕлти, чикĕлтерĕм, мĕн терĕм. Йăптăх-йăптăх ямари. Эсĕ те чипер, эпĕ те чипер, сантан чиперри тата пур. Чăн чиперри кунта-мĕн, сик тух...* [т. 15, с. 200].

**-чăк (-чĕк)** – ĕç-хĕл çумне хушăнса пахалăха кăтартакан аффикс.

Ĕç-хĕл + *-чăк* = паллă ячĕ:

*сĕвĕрĕнчĕк* имшер, ланчашка? [т. 11, с. 295];

*тапранчăк* хусканакан, куçакан? [т. 13, с. 200];

*тăхăнчăк* [т. 15, с. 6] = ытлашши тумтирлĕ;

*тĕрĕнчĕк: тĕрĕнчĕк утти* ӳсен-тăран ячĕ. *Йĕри-тавра çавăрăнакан курăка тĕрĕнчĕк утти теççĕ* [т. 15, с. 82–83] = пĕтĕрĕнчĕк;

*чаркаланчăк* [т. 15, с. 150] = армак-чармак.

**Ĕç-хĕл тăвакан модельсем**

**-ăн (-ĕн, -н)** – ĕç-хĕле таврăну пĕлтерĕшĕ кӳрекен аффикс.

Ĕç-хĕл + *-ăн* = ĕç-хĕл:

*вĕркелен* пир тĕртни çинчен калакан тупмалли юмахра. *Вăрăм юмах ярăп та вĕркеленсен çапкаланса çӳрĕп* [т. 5, с. 368] = чĕтрен, силлен;

*хĕскелен* хĕсĕнкеле? *Анчах çапла хĕскеленсе çырнипе часчасах статьясем лайăх тухман* [т. 17, с. 64] = хĕсĕнкелен.

**-ла (-ле)** – япала ятĕнчен ĕç-хĕл тăвакан аффикс.

Япала ячĕ + *-ла* = ĕç-хĕл:

*какайла* какай ту? [т. 6, с. 20];

*карсакла. Çутă çулăм карсакланă виçĕ пусăн пыршине* [т. 6, с. 104] = ?

*кăчăкла. Кăчăкласа тăрат – мĕне те пулсан чун туртат* [т. 7, с. 207] = кăтăкла;

*кăшкарла* кăшкар ту? *Урапана кăшкарласа хунă* [т. 7, с. 218];

*мелĕмле. Мелĕмлесе çитертĕр тесе* [т. 8, с. 222] < *Мелĕм (Валĕм) хуçа* Турăпа тан хисеплĕ ят [т. 5, с. 162] = Турра ӳкĕте кĕртмелĕх кĕлĕ вула?

*çăтăмла* пĕр сыпкăм çăтса яр [т. 13, с. 46];

*çухала* çуха ту? [т. 12, с. 288];

*тĕнкеле* ыйтса ил*?* [т. 15, с. 53];

*тумхахла* такăн? *Лаша тумхахлать* [14, с. 131];

*уймăлла* мел туп? *Арпа арăм саклаçнă пурăнсан уймăлласа мул хыват* (написано *уймăлла саснул хывам*) *тиеççĕ* [т. 3, с. 191], танл.: *уймăллăх* диал. чеелĕх, хайла; мел, хăнăху;

*хапăла* кăмăллă йышăн? [т. 16, с. 51] = хапăлла;

*харлавла* [т. 16, с. 62] < *карлав + -ла?*

*хытарла* çирĕплет? *Мана туя кайнă чохне атте эрех ан ĕç тесе пит хытарласа ячĕ. Хытарласа кала* [т. 16, с. 111] = хытарса кала;

*чышмăрла* [т. 15, с. 187] = хĕне.

**-лан (-лен)** – япалапа паллă ятĕнчен ĕç-хĕл тăвакан аффикс.

Япала ячĕ + *-лан* = ĕç-хĕл:

*амурккалан* непристойно вести себя? *Мĕн амурккаланса çӳретĕн, килĕшет-и-мĕн пек?* [т. 2, с. 227] = якăлтатса çӳре;

*аркаслан* 1. испортиться? *Пĕр-пĕр япала аркаслансан ниепле майлама хал çук*. 2. стать злым, озорным [т. 1, с. 334];

*имлен* сиплен? *Имленсе пĕтсе пынă* [т. 3, с. 117] = сиплен; ӳт ил;

*йĕптăхлан. Йĕптăхланчĕ. Лаша шыва кĕрсе ӳкнĕ те кайран типнĕ, вара унăн çăмĕ кăтăркаланса ларнă* [т. 5, с. 129] = кăтăркалан;

*йĕрмĕшлен* йĕр, макăр? [т. 5, с. 406] = йĕркеле, макăркала; йĕме, макăрма хатĕрлен;

*каклен* типсе кай? *Пирĕн орпа такçанах вырмалла полнă поль олă, халь какленсе кайнă та шĕпĕртетсе çиç ларать* [т. 6, с. 24] = диал. куштăрка, типсе кай; ӳксе пĕт, çулçăсăр, çимĕçсĕр тăрса юл[9];

*катмаклан* тĕллевсĕр ĕçле? *Мĕн катмакланса çӳрет-ши çав?* [т. 6, с. 164] = *катмаклан* растопыриваться, широко раскидывать руки и ноги[9];

*кăмпăслан* йӳçсе кай? *Орян кăмпăсланса ларнă, сыпмалли та çок – йӳçĕ* [т. 7, с. 145] = *кăмăскалан* кăмпалан, кăвакар; йӳç[9];

*кекмеклен* [т. 6, с. 188] = чĕввĕн тăр?

*кĕлĕшлен* кĕл пулса тăр? *Уяр çу, типĕ çу пит вăраххăн иртрĕ, пĕр тумлам та çумăр тĕсĕ пулмарĕ; сивĕнсе пĕлĕтлĕ ĕнтĕ кĕр те çитрĕ, кĕлĕшленнĕ тăпра нӳрелсе курмарĕ* [т. 7, с. 246–247] = кĕллен;

*кĕрмелен* тăрăш? *Кĕрмеклен* мар-и? *Кĕрӳшĕ кĕресшĕн кĕрмеленет, лешсем çĕлĕкне илесшĕн кĕрмеленеççĕ* [т. 7, с. 292] = *кĕрмеклен* пĕтĕм вăйран тăрăш[9];

*кукален* упален? [т. 6, с. 258] = кармаклан, тăрмаш;

*пилен* пиллĕхлĕ пул? *Пиленсе каять* [т. 9, с. 209] = пиллен;

*сăнарлан* евĕрлен? [т. 11, с. 262] = ӳкерĕн;

*талпаслан* усалланса кай? *Тан пиçен, тан пиçен, талпасланас сасси пур* [т. 13, с. 170] = пустуй, ытлашши калаç;

*тăрлан* тăрăлан? [т. 14, с. 323];

*текмеклен* пĕтĕм вăя пухса тăрăш? *Текмекленсен те çитеймерĕм* [т. 13, с. 271] = тăрăш, тапалан;

*терпеклен* мĕн пур вăя пухса тăрăш? *Хăйĕн савнă Мушшине терпекленсе тăратать* [т. 13, с. 308] = тăрăш;

*тĕрлен. Авалтанхи шухăшăм, тăвас тенĕ ĕмĕтĕм çухалчĕ пуль ахалех. Тĕрленни те вырăнсăр...* [т. 15, с. 87] = тĕллен;

*тикелен* чикелен? *Лаши, пойккайĕскер, çапнине тӳсеймесĕр тарăн çĕрелле сиксе кĕчĕ те темле масарла тикеленсе кайрĕ* [т. 14, с. 32, 1, т. 15, с. 196–197] = чикелен (ĕлĕкхи орфографипе килĕшӳллĕн (хальхилле – *ч* çырас вырăнне) *т* çырса янипе çыхăннă тĕслĕх);

*ӳкĕтлен* (*ӳкĕтленекен* сăмахра тĕллевне пурнăçлама тăрăшакан çын?) [т. 4, с. 12] = ӳкĕте кĕр;

*хĕлен. Ма çоралас, ма хĕленес? Хĕленмен полсан, çоралман полсан çак çĕр çинче çĕрес çокчĕ, çак хорлăха корас çокчĕ* [т. 17, с. 17] < (ĕç-)хĕллен = тертлен;

*чунлан. Вара вĕсене тупсан пăхрĕç тет те, чăнах чунланма пуçланă тет. Вара кăсем вĕсене касса вакласа çунтарса кĕлне те вĕçтерсе ячĕç тет* [т. 15, с. 235] = чĕрĕл;

*чыклан. Çын çинĕ чона чыкланат* [т. 15, с. 182] = чыхăн, вил, пĕт;

*юншахлан* тунсăхла? *Хура чĕкеç мăйĕсем шурă ула, мĕншĕн юншахланат-ши вăл çура? Юншахланмăччĕ-çке (юншахланмĕччĕ-çке) вăл çура, савнă йăви юлат аякка* [т. 4, с. 338] = юншăх;

*ярăнлан* ярăмлан? *Чӳречĕрсем çинче виçĕ мерчен, хăçан ярăнланса тăни пур* [т. 4, с. 227].

Паллă ячĕ + *-лан* = ĕç-хĕл:

*хатĕвлен* хатĕр пул? *Пур çĕрте те ĕçе тухма хатĕрленсе (хатĕвленсе?) тăраççĕ* [т. 16, с. 71] = хатĕрлен?

*хăвартлан. Ăмăртăва тухнă пулмалла кăсем, уйрăмах хăвартланаççĕ* (?) [т. 16, с. 310] = хăпартлан, хăвăртлан?

*чукăхлан. Уйрăм хуçалăхпа пурăнакан хресченсем чукăхланса çитсе хăйсен çĕр татăкĕпе çемйине те тăрантарайманнине кам пĕлмест* [т. 15, с. 220] = чухăнлан;

*чунсăрлан. Анне! тесе кăшкăрса чунсăрланать хуйхăпа* [т. 15, с. 237] = каçса кайса йĕр, макăр.

Евĕрлев сăмахĕ + *-лан* = ĕç-хĕл:

*кĕмсĕрлен* кĕпĕрленсе шавла? [т. 7, с. 254] = шавла;

*кĕперлен* çĕре хытарса ларт. *Çăмăр пĕтĕмпех хăяра, оммая, копăстая кĕперлентерсе лартнă* [т. 7, с. 263] = хытарса.

**-лат (-лет)** – япала ятĕнчен ĕç-хĕл тăвакан аффикс.

Япала ячĕ + *-лат* = ĕç-хĕл:

*какайлат* какайлантарса яр? [т. 6, с. 20].

Евĕрлев сăмахĕ + *-лат* = ĕç-хĕл:

*çĕриклат* чĕриклет? [т. 13, с. 106];

*тьăхлат. Сăмса питĕрĕнсен вара вăл кунĕпе сăмсинчен сывлăш пертерсе тьăхлатса çӳрет* [т. 15, с. 121].

**-т** – ĕç-хĕле хистев пĕлтерĕшĕ кӳрекен аффикс.

Ĕç-хĕл + *-т* = ĕç-хĕл:

*кушкăркат – коштăрка, куштăрка* сăмахăн хистев форми мар-ши? [т. 7, с. 65];

*тивĕрт* тиверт? *Унта вара çулçă пуçтараттăмăр та тивĕртсе яраттăмăрччĕ* [т. 14, с. 28] = вут хыптарса ил;

*тишкĕрт* тишкер? [т. 14, с. 78] = тишкерттер.

**-(т)тар (-(т)тер)** – ĕç-хĕле хистев пĕлтерĕшĕ кӳрекен аффикс.

Ĕç-хĕл + *-(т)тар* = ĕç-хĕл:

*йăкăштар* [т. 5, с. 53] = хăвăрт шутар;

*кекмеклентер. Леш вырăн патне çитсессĕн Яхуте упăте пĕр пăлана кекмеклентерсе сĕтĕрсе пынине курнă* [т. 6, с. 188] = чĕввĕн тăратса?

*кӳтер – кӳте* (шăнса кай) ĕç-хĕлĕн хистев форми? *Кӳтерес* [т. 7, с. 89] = *кӳттер* шăнтса яр[9];

*çуйтар* сулăн? *[Чăваш интеллигенцийĕн] тепĕр пайĕ чăвашран пăрăнса урăх çĕре ĕçлеме çуйтарчĕ* [т. 12, с. 202; 1, т. 11, с. 168–169] = пăрăнса кай?

*урпалаштар. Урпалаштарса ларать* – канаш паракан пек (sic!) [т. 3, с. 287];

*чăрлаттар* [т. 15, с. 274] = чăр-р сасă кăларса çур, чĕр;

*чулкăштар. Вăл (вĕре çĕлен) çапла çӳрет: хĕвел ансан тĕттĕм поличчен таçтан тухать те хăва вут пек хĕп-хĕрлĕ, çап-çутă хĕм тăкса уй урлă, ял урлă чулкăштарса каять вара* [т. 15, с. 226] = ?

*чышкăнтар* [т. 15, с. 187] = тĕксе яр; ӳкер, вăйлă çу (çумăр е юр çинчен)[9].

**-тат (-тет)** – евĕрлев сăмахĕнчен ĕç-хĕл тăвакан аффикс.

Евĕрлев сăмахĕ + *-тат* = ĕç-хĕл:

*транкăлтат* [т. 15, с. 111].

Тĕпчевçĕсем маларахри тапхăрта таса агноним пĕлтерĕшне уçса парсан та вăл нихçан та юрăхлă сăмах пуласса шанманччĕ[10]. Пĕлтерĕшсĕр сăмах ыйтăвне тĕпченĕ май ку шухăша улăштарма вăхăт. Агноним сăмахсенчен чылайăшĕ словаре те, кулленхи пурнăçа та кĕме тивĕç.

## Кĕскетӳсем

бот. – ботаника сăмахĕ; выр. – вырăсла; диал. – диалект сăмахĕ; нидерл. – нидерландла; çармУ. – улăх çармăсла; çармТ. – туçи çармăсла; танл. – танлаштарăр; тут. – тутарла; удм. – удмуртла; фр. – французла; чăв. – чăвашла.

### Литературăпа ăнлантарусем

[1] Тĕпчев ĕçне РГНФ пулăшнипе «Чăваш чĕлхинчи пĕлтерĕшсĕр сăмахсене уçăмлатасси» 13-04-00045 № проектпа килĕшӳллĕн пурнăçланă.

[2] Çакăнта та, малалла та çак ĕçпе усă курнă: *Ашмарин Н.И.* Чăваш сăмахĕсен кĕнеки: 17 томлă. Хусан: Татполиграф; Шупашкар: Чăваш патш. изд-ви, 1928–1950. Литература списокне анлăлатса ярас мар тĕллевпе тĕслĕхсем хыççăнах томпа страницине асăнса хаварнă.

[3] *Фомин Э.В.* Семантизация фразеологически связанных агнонимов чувашского языка // Вестник Чувашского университета. 2014. № 3. С. 89–92.

[4] *Иванова А.М.* Агнонимичные парные слова в чувашском языке // Ашмаринские чтения. Чебоксары, 2014. С. 67–74.

[5] Древнетюркский словарь / Ин-т языкознания АН СССР. Л.: Наука, Ленингр. отд., 1969. С. 626.

[6] Татарча-русча сүзлек: ике томда. Казан: Мәгариф, 2007. Т. 2 (М-Я). С. 118.

[8] Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1984. Т. 5. 351 с.

[9] Чăвашла-вырăсла словарь / М.И. Скворцов ред. 2-мĕш кăларăм. М.: Русский язык, 1985. С. 609.

[10] *Фомин Э.В.* Асемантичная лексика чувашского языка: проблемы реконструкции значений // Третьи Флоровские чтения. Глазов, 2009. С. 108.

## СЛОВАРЕ КĔМЕСĔР ЮЛНĂ ЧĂВАШ СĂМАХĔСЕН ПУХХИ[1]

*А.М. Иванова, Э.В. Фомин*

Тĕпчевçĕсем шутласа кăларнă тăрăх, темиçе ĕмĕре тăсăлакан çырулăхлă чĕлхере çĕр пине яхăн сăмах пулма тивĕç. Чăваш словарĕсем ку чăнлăха хирĕçлеççĕ: çырулăхĕ те, лексикографийĕ те XVIII ĕмĕртенех аталаннă, сăмах хисепĕ çеç çителĕксĕр – чи пысăк чăваш словарĕнче 55 пин сăмаха яхăн кăна.

Сăлтавĕ кунта акă мĕнре: пирĕн чĕлхе çĕнĕ пулăма е япалана уйрăм сăмахпа мар, сăмах майлашăвĕпе палăртма тăрăшать. Çав хушăрах Европа чĕлхине евĕрлекен лексикографи сăмах майлашăвне словаре уйрăм статьяласа кĕртессине хирĕçлет.

Словарь пĕчĕклĕхĕн тепĕр сăлтавĕ морфологипе çыхăннă. Тĕслĕхрен, япала ятĕнчен пулнă *-лă (-лĕ), -сăр (-сĕр)* аффикспа вĕçленекен сăмахсене паллă ячĕ мар, япала ячĕн форми теме йышăннă. Ĕçĕ-пуçĕ вара кунтан та кăткăсрах. Сăмахăн танлаштару форми пулайсан – вăл паллă ячĕ, пулаймасан – япала ячĕн пурлă форми, танлаштарăр: *вăйлă(рах)* – паллă ячĕ, *çӳçлĕ(рех?)* – япала ячĕн форми. Тутар чĕлхеçисем кун пирки шутла-шутла питех аптрамаççĕ:

**калайлы** *прил.* 1. обитый, оправленный, покрытый жестью; 2. обитый, покрытый листовым железом; железный[2];

**чәчле** *прил.* 1. с волосами, имеющий волосы; 2. волосяной[3];

**өметсез** *прил.* 1. безнадежный, ненадежный, не подающий надежды; 2. отчаявшийся, потерявший надежду, унылый, пессимистический[4].

Чĕлхемĕрĕн сăмах пуянлăхĕ çинчен шутланă май тепĕр саманта асăнса хăвармалла. Хăй вăхăтĕнче Чăваш патшалăх

гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче словарь картотеки пуçтарнă. Атăл тăрăхĕнчи ытти чĕлхе тĕпчевçисем çак ĕçе ăмсанса ырлаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсен кун пек йăла пулман.

Çавăн пекех пирĕн тулли диалектологи словарĕ çук. Словарь çуккине ăнланмалла та пек: чĕлхемĕрĕн вырăнти калаçăвĕсем вăйлах аталанса çитеймен. Анчах диалектологие курмăш пулни чăваш чĕлхе пĕлĕвне нумай енчен чухăнлатать. Çак сăмахах фразеологи словарĕ пирки те калама пулать.

Эпир хамăрăн тĕпчевре хальччен словаре кĕмесĕр юлнă сăмахсене пичетлетпĕр. Чăваш чĕлхе пĕлĕвĕнче кун йышши ĕçсем тĕл пулаççĕ-ха (сăмахран, Л.П. Сергеев тĕпчевĕсем). Ырă йăлана малалла тăсас пулать. Пирĕн шутпа, çĕнĕ лексикăна сыпăкăн-сыпăкăн халăх çине кăларса пыни чăваш лексикографине туллинрех аталанма хистесе пырĕ.

Сăмах «çĕнĕлĕхне» тĕрĕслемелли тĕп çăлкуç шутне эпир çак кĕнекесене суйласа илнĕ: Н.И. Ашмарин словарĕ[5], 1985 çулта Мускавра тухнă чăвашла-вырăсла словарь[6], 2009 çулта Хельсинкире пичетленнĕ чăваш чĕлхин тӳнтер словарĕ[7] (ку кĕнекене литература чĕлхинчи мĕн пур сăмаха кĕртме тăрăшнă тесен те йăнăш пулмĕ).

Аяларах илсе панă сăмах пуххи 138 леммăран тăрать. Леммăна çырса кăтартасси ĕçĕмĕрте çак йĕркепе пулса пырать: 1) лемма (ăна çăра сас паллипе уйăрнă); 2) ăнлантару пайĕ (ытларах чухне оригиналти пек хăварма тăрăшнă); 3) пуплеврен илнĕ тĕслĕх; 4) сăмах паспорчĕ (вĕтĕрех уйăрса çырни сăмахăн географи хутлăхне, икĕ кĕтеслĕ скобкăра пани çав сăмаха усă курнă çырулăх тĕслĕхне кăтартать).

**алма-шӳлкеме** хĕрарăмăн тенкĕрен хатĕрленĕ капăр хатĕрĕсем. *Пуян çынсен те алми пур-çке, / алми-шӳлкемисем тенкĕрен. Илепар, Куславкка р-нĕ*[8].

**асăмчах** асамçă. *Тутар патши Супетей аптăрасах çитнĕ. Вара вăл асăмчахсемпе тухатмăшсене пуçтарса канаш ыйтать... Баратаевка, Чĕмпĕр обл.*[9]

**атикка** вун икĕ мăйракаллă сатана. *Хăш шуйттанĕсем: «Тавай атиккана кайса калас, илсе килес атиккана кунта!» теççĕ. Вĕсен атиккăшĕ — вун икĕ мăйракаллă сăттана... Хурниç, Самар обл.*[10]

**ашшавлик** (аш явлăк) сĕтел çитти. *Ванькка Курак йыснăшĕ панă ашшавлике сарса прахать те — музыка хускалса каять. Ашшавлик çинче мĕн çиес тенĕ, çав пур. Пăслăк, Пушкăрт*[11].

**ăвă** пĕлтерĕшĕ паллă мар. *Кантăк ăвăнче кӳлĕ çук...*[12].

**ăлачăн** ăмăрткайăк йышши вĕçен кайăк. *Кăçалхи çулччен ăна / этем ывăль-хĕрĕ мар, / çӳлтен вĕçен ăлачăн та, / шывра ишен çăрттан та, / çӳлтен çӳрен уйăх та курман. Кив Шешкел*[13].

**ăслăç** ăсчах. *Чăн та каларĕç мана Хырлăх ялĕнче ăслăç пур тесе, халĕ ăслăça хам куçпа куртăм. Улатăр*[14].

**вакат** каникул. *Унăн (*Кушкă чăвашĕн. — *Э.Ф.) праçникĕ çук, вакачĕ çук: шкула кайман чухне вăл вăрман турттарать, утă кӳрет, тырă сутма каять*[15].

**вала** ула. *Пĕр начар хресчен пĕртен-пĕр вала мăкăрне симĕс курăк çине питĕ начар пăхса кăларнă. Вăрманкас, Муркаш р-нĕ*[16].

**вăй кил** йывăр пул. *Кĕçĕрхи çĕр питĕ сыхă пулăр! Мушть, çичĕ уралă лашапа вун икĕ пуçлă çĕлен хăй килĕ; мушть, мана кĕçĕрхи çĕр пит вăй килĕ. Аслă Çĕрпӳел, Комсомольски р-нĕ*[17].

**вăй ту** турт. *Эсĕ ăна кирек епле хăратсассăн та пулла ан пар. Вăй туса иле пуçласан эсĕ пуллуна аллăна ил те ак çапла каласа çĕре çĕклесе çап: «Ку пулă ман телейĕмччĕ, эсĕ ăна манран туртса илесшĕн, сана та пулмĕ, манăн телейĕме туртса илеймĕн», — тесе çĕклесе çап. Кӳлпӳç, Тутарстан*[18].

**вăрăмчăк** вăрăмлăха евĕрлекен сăмах. *Вăрăм-вăрăм вăрăмчăк, ылтăн пуçлă кĕмĕлчĕк. (Çĕлен.)*[19]

**вăрман урлăсем** Чутай енче Сăр тăрăх пурăнакансене çапла калаççĕ. *Купăс кĕвви, ташă сасси илтĕнет. Çавăнталла утрăмăр. Пăхса тăтăмăр-тăтăмăр та хăюлланса вăрман урлăсем ташша тухрĕç*[20].

**вернах** чăнах. *Улăп ĕçе туса пĕтерсенех вернах та пĕр чике тăриш старик пырса кĕрет те Улăпа калать: «Тахçанах сана кĕтнĕччĕ, халь тин килтĕн-и?» – тет. Семен Федоров, Етĕрне*[21].

**вутлăх** вучах. *Варри вутлăх, йĕри-тавра кӳллĕх. (Сăмавар.)*[22]

**выхăт** çĕр айне пытарса хунă пуянлăх; сакай. *Пирĕн çĕрте пĕр тĕлте пит пысăк выхăт пур, вăл Ахтапана кайнă çĕрте Хула ăшĕнче*[23].

**ер** *япала ячĕ,* пĕлтерĕшĕ паллă мар. *Карчăк Ваньккӑна калать: «Эсир кăçта каятăр, салтака каятăр-им – пурте салтакла тумланнă, ерсемпе, пурте лашапа?» – тет. Этĕльел, Пушкăрт*[24].

**ĕнтрĕк апачĕ** сеппер, явкай апачĕ. *Ухтиван Шурчаналла анать. Ирхине Шупашкартан тухнă вăл. Халĕ ĕнтрĕк апачĕ тĕлне çуралнă çĕрелле çывхарса пырать*[25].

**йĕрле** ухă йĕппин тимĕртен тунă çивĕч вĕçĕ. *Тăнла, Пăлхар, Пӳлер, Тилçе – / хĕрӳ текелĕ тимĕрçе: / «Тăшман валли хĕртеп йĕрле, / ăна, пăлхар, эс тыт, йĕрле...»*[26].

**кан** пĕлтерĕшĕ паллă мар. *Атьăр туя, ачасем: / ура канне кӳрĕпĕр, / алă канне кӳрĕпĕр, / ĕçĕпĕр те çийĕпĕр, / выльăпăр та кулăпăр, / юрлăпăр та ташлăпăр. Элĕк р-нĕ*[27].

**касу** йывăç каскалассипе çыхăннă ĕç. *Каскалакансем пура пураççĕ, / чăн ăстисем касу касаççĕ. Çтуххаль, Самар обл.*[28]

**кăкак** кисĕп е çекĕл. *Сĕм вăрманта кăкаклăх йывăç çук. (Çӳç.)*[29]

**кăс** пĕлтерĕшĕ паллă мар. *Сик-сик кутлă, кăс çĕлĕклĕ, пурçăн йĕмлĕ. (Кăсăя.)*[30]

**кăтай** пĕлтерĕшĕ паллă мар. *Çӳллĕ тусем хушшипе тухнă чух / шурă кăтай чул куртăмăр, / шурă кăтай чул çинче / кĕмĕл старик куртăмăр. Кивĕ Шешкел, Тутарстан*[31].

**керван** караван. *Керван таптанă çул халь курăнмасть*[32].

**китай** пĕлтерĕшĕ паллă мар. *Кăвакарса килекен кăвак пĕлĕт / кăвак китай карса та чарăнас çук. Ăсанпуç, Самар обл.*[33]

**корап** тупăк. *Эп вилсен вара вилĕ картине илсе пур тет çак сӳнтĕке. Ман шăтăк ăшне аяла ларт, корапня ларт он çине*[34].

**куля** чăпта. *Эпир, хĕрарăмсем, носилкăсемпе тăпра тултараттăмăр, куçса анасран çул хĕррипе хăйăр тултарнă тулли кулясене çаплипех хурса хăвараттăмăр*[35].

**куна** ăнăçлăх? *Аслă çулпа килет аслă апус, / улма чăпар учĕ – çул пуçĕ, / йĕпкĕн хура учĕ – çул куни, / тимĕр кăвак учĕ – кил куни. Кивĕ Шешкел, Тутарстан*[36].

**курăк-чечек** çĕр çумĕнчи ӳсен-тăран. *Аслă çеçен хирте ялан шывлă кӳлĕсем тата юхан шывлă çырмасем пулман: чĕрчунсем тата курăк-чечексемпе йывăçсем çумăр шывĕпех пурăннă*[37].

**куç ăвă** пĕлтерĕшĕ паллă мар. *Ашшĕ кĕçĕн ывăлне пит хĕрхенчĕ тит те каларĕ тит: «Улăм, ан кулян, куçна макăрса ан йĕпет, на сана пăхăр çĕрĕ, ăна ан çухат, çак çĕрĕ витĕр шăхăрсан мĕн кирли сана веçех куç ăвăнче пулса тăрĕ, халĕ киле каях», – терĕ тит те шăтăка кĕрсе карĕ тит. Атмалкасси, Элĕк р-нĕ*[38].

**куç яр** пир тĕртнĕ чухне ача-пăчана шанса паракан çăмăл ĕç. *Пир тĕртет анне пуç чиксех, / куç ярса пулăшап, пĕчĕкскер*[39].

**куштан-кахал** ĕçлемесĕр пурăнма тăрăшакан çын. *Йăпăх-япăх – ямшăкра, куштан-кахал – кантуртa*[40].

**кӳллĕх** нумай кӳлĕллĕ вырăн, шывлăх[41] > **вутлăх**.

**кӳмĕлтĕрĕк** лаша ăмри (тӳшĕ) тĕлĕнчен тытăнтарнă ут тавраш. *Сахьян такмак – çумĕнче, / кӳмĕлтĕрĕк – тӳшĕнче, / хăмçи – çумĕнче, кутлăхĕ – çийĕнче. Кивĕ Шешкел, Тутарстан*[42].

**кӳрнек** пĕлтерĕшĕ паллă мар. *Улăм çӳппи çĕр кӳрнек, / улăм çӳппи вĕçсессĕн / шӳтте кайĕ çĕр кӳрнек. Элшел, Тутарстан*[43].

**лекуш** лакуш, ярăнмалли вырăн. *Çăварни лекуш йăмраллă та, / йамра хошшипе отма çол та... Пушкăрт, Етĕрне р-нĕ*[44].

**лис** йытă ăрачĕ? *Харăс çак тинĕс урлă каçаççĕ. Хăрхăмĕ юрлать: «Вĕр-вĕр, лиссăм, вĕр, лиссăм, / какала, чăххăм, какала, / авăт, автан, авăт». Вара автанĕ авăтса, чăххи какаласа, йăтти вĕрсе тинĕс урлă каçса карĕçĕ. Красноусолка р-нĕ, Пушкăрт*[45].

**лутăрчак** лутра. *Тупиччен сиксе тухса харпăр хăйне çăлма пулать. Апла пултăр тесен çак сăмахсене каламалла: «Лутăрчак, лутăрчак, / лутăр-латăр лутăрчак, / катка çӳллĕш анчах пул!» Куна лутăрчак туни теççĕ. Лутăрчак – лутра пул тенине пĕлтерет имĕш*[46].

**ляхах** пĕлтерĕшĕ паллă мар. *Тепĕр каç полчĕ те, опана хорал тиврĕ. Çав чавса тăршшĕ старик каллех килчĕ те сăрана ĕçме поçларĕ. Çак опа: «Ляхах! – тет. – Ма ĕçен сăрине?» – тет. Алькеш, Шупашкар р-нĕ*[47].

**манка-сурчăк** сăмсапа çăвар хăвăлĕнчи çăрарах шĕвек. *Кайран этем малтанхи пек илемлĕ пулайман. Манки-сурчăкĕ тухса пĕтсен вилмелле пулнă. Кив Симук, Самар обл.*[48]

**маткăч** патша. *Чи малтан икĕ маткăч (патша) суйлаççĕ*[49].

**мăл** темĕнле вĕтĕ пулă ячĕ. *Кăвакарчăн кӳлĕ çине çитсе ӳкрĕ те сĕлĕ мăлĕ пулса кайрĕ (мăл вăл вĕт çеççĕ пулă, сĕлĕ пĕрчи пек çеç). Кӳлпуç, Тутарстан*[50].

**мĕссĕр** Египет çынни, пуян араб. *Атăл тăрăх килнĕ хурт куççи – / маншăн пулчĕ хурлăх, вут пуççи. – / Пилсĕр тăрăн сутрĕ мĕссĕре, / уйрăлатăп, çĕрĕм, ĕмĕре*[51].

**мурьям** выльăх масарĕ. *Пуç хунă çынсен кăтрисем пек умра / кĕл тĕслĕ кăлкан хумханать-и / е путăк та шăтăк мурьям çийĕнче / çĕлен çĕкленсе шăхăрать-и – / кашни хускану чулланан чунсенчен / таçти ĕмĕре кăларатĕ*[52].

**непĕссĕр-ĕмĕтсĕр** хытă, хапсăнчăк. *Ĕлĕк-авал пĕр ялта икĕ пуян пурăннă тет. Иккĕшĕ те çав тери непĕссĕр-ĕмĕтсĕр пулнă тет. Йăлпăлак-Матвеевка, Пушкăрт*[53].

**-няк** пулас, пулмалла. *Антун çиет-çиет те тăранас чухне калать: «Хăлха илтми пулчĕ-няк, карчăк?» – тет*[54].

**пай** пуян. *Пай мучи калпакĕ пайăр кăвак. (Тӳпе.)*[55]

**палушник** пĕлтерĕшĕ паллă мар, помощник? *Сакăр вун салтак, ик секлеттер, пĕр палушник. (Тĕренче.)*[56]

**папуй** пĕлтерĕшĕ паллă мар. *«Эх, салтаксем, аванах ачисем, / мĕншĕн питĕр-куçăр кăн-кăвак?» / – «Ир те, каç та папуй çинĕрен». Чăваш Эштепенĕ, Самар обл.*[57]

**пару** налук. *Саманисем йывăр, пару хаклă, / епле иртерем-ши ĕмĕре? Кивĕ Шерешкел, Тутарстан*[58].

**пашлăк** пĕлтерĕшĕ паллă мар, башлык? *Măн акай пашлăкне вуннăн çĕклеççĕ, мăн пичи пашлăкне пиллĕкĕн çĕклеççĕ. (Хушпупа çĕлĕк тăхăнни.)*[59]

**патьяна** патьен. *Тарасапа ăсмалла, ушачĕпе тултармалла, патьянапа ĕçмелле. Кивĕ Шешкел, Тутарстан*[60].

**пăлат-хурçă** тимĕр. *Юрать-ха пирĕн ачан / пăлат-хурçă хĕçĕ пулчĕ, хурçă хĕçĕ çивчĕ пулчĕ. Кивĕ Шешкел, Тутарстан*[61].

**пăлчăрав** керванри тĕвесене пĕр-пĕринчен кăкармалли çăмăл сăнчăр. *Багдад хулин селемлĕ мулĕпе / керван çӳренĕ ĕлĕк ку хирпе. / Ашель чунне хускатнă шăнкăрав, / йĕрес пек чанкăртатнă пăлчăрав...*[62]

**пăшал-тупă** етрепе пемелли хĕç-пăшал. *Пăкач вăйлă вăрçнă тет, / анчах унăн çарĕнче / пăшал-тупă пулман тет, / сенĕксемпе вăрçнă тет. Чăвашкасси, Чĕмпĕр обл.*[63]

**перĕш** платник хатĕрĕ. *Вăрман та сасси мĕн ус(ăл)лă? / Пулĕпе перĕш сассисем ай усăллă*[64].

**пĕлĕнтеш** пĕлĕш. *Пĕлĕм çиме пĕлĕнтеш, хуплу çиме хурăнташ*[65].

**пĕр хутлă** ухмах. *Пĕр патшан виçĕ ывăл пулнă, кусенчен кĕçĕнни пĕр хутлăрах пулнă. Кив Улхаш, Чĕмпĕр обл.*[66]

**пĕрлешĕн** ыттисемпе пĕрле пул. *Атьăр тăрар, хĕç тытар, / пĕрлешĕнсе вăй пухар. Йĕкер, Самар обл.*[67]

**пулĕ** платник хатĕрĕ[68] > **перĕш**.

**пуссачи** пуса ачи? *Çӳллĕ ту çинче – ват юман, / юман та мар, мĕн те мар, / пуссачи, пуссачи, / тиек ачи пулайчĕ... Йăлпăлак, Пушкăрт*[69].

**пуç пăрах** уçăмсăр пĕлтерĕшлĕ. *Кăçал илнĕ çĕнĕ çын / ĕçре маттур пулинччĕ... / Урпа вырма тытăнсан / пуç пăрахать теминччĕ. Аслă Микушкел, Самар обл.*[70]

**путаш** пĕлтерĕшĕ паллă мар. *Мучăшĕ кăна «Эй, путаш! Çав укçа сасси анчах, ăсу пулсан пурăнăн», – терĕ тет. Шĕмшер, Элĕк р-нĕ*[71].

**пӳлек** вилнисене асăнса хунă парне. *Багдад хулин селемлĕ мулĕпе / керван çӳренĕ ĕлĕк ку хирпе... / Кунта халь – кĕл те ваннă тăм чӳлмек, / Ватти хăварнă асăнса*

*— пӳлек*[72]. *Вĕри сывлăшпа çил сывлать кӳ те кӳ, / юлать тайăлса кĕл чечекĕ. / Кам чĕртнĕ кунта несĕлсен чечекне? / Е вăл ырă тăхăм пӳлекĕ?*[73]

**пӳр-суран** юхан-шăтан чир. *Иккĕмĕш хутĕнче хресчен улпута юмăç пулса улталама шут тытрĕ. Кĕленчене шыв, ал шăлли илсе улпут ялне кайрĕ. Ял тăрăх вăл: «Камăн пӳр-суран тӳрлетмелли пур!» — тесе кăшкăрса ута пуçларĕ*[74].

**пӳрт(ӳ)кӳ** çенĕк, алкум. *Киле çитсен старик туйисене пӳртӳкӳ (пӳрт умĕ) çумне тăратрĕ те пӳрте кĕчĕ. Ярмушка, Вăрнар р-нĕ*[75].

**ратне-ăру** тăван-хурăнташ. *Пире выляма-кулмашкăн / ратне-ăру пуçтартăр, / выльăр-кулăр теейрĕр. Похвиçнĕ, Самар обл.*[76]

**рашшива** кимĕ. *Çав Стенька Разин хăйĕн ушкăнĕпе Атăл тăрăшпе рашшивасене — кимĕсене çаратса çӳренĕ. Энĕш Кăршка, Çĕрпӳ р-нĕ*[77].

**ривитник** пĕлтерĕшĕ паллă мар. *Нăр-нăр ривитник. (Чĕлĕм.)*[78]

**саккалийăн** илемлĕ? *Апи илсе панă пыçахийĕ / саккалийăн корнтăр-и. Яккушкăнь, Элĕк р-нĕ*[79].

**саксук** кайăк ячĕ, шанкă кайăк? *Ан макăр, анне: ху ылхантăн вĕт, / «Çут тĕнчелĕхре саксук пул», — терĕн. Çирĕклĕ, Пушкăрт*[80]. *Вара амăшĕ çилленсе ылханса каланă: «Саксук пулăр», — тенĕ. Çавăнтан ачисем саксук пулса вăрмана вĕçсе каяççĕ тет. Хушăлка, Трепьел, Пушкăрт*[81].

**саксун** саксонец. *Атте-анненĕн пултăм юратман ачи, / атте-анне пачĕ мана саксун аллине, / саксун леçрĕ сахăр савăтне. Шурту, Саратов обл.*[82]

**Салука** Хапăс вăрманĕ. *Аса илӳ! Каллех çитер мана / сĕм сулхăнлă лаштра Салукана!*[83]

**сăрлантар** çӳçентер. *Палуба çине тухрĕç. Нӳрлĕ сулхăн пит-куçа çапрĕ, çан-çурăма сăрлантарчĕ*[84].

**сăрлăх** пĕлтерĕшĕ паллă мар. *Çеçен хирте сăрлăх ларать. (Ут кăшкар.)*[85]

**секлеттер** пĕлтерĕшĕ паллă мар, секретарь?[86] > **палушник.**

**сĕвешĕлен** чĕрĕл. *Эсир мана кӳлĕрен кăларăр та йăвалантарса ăшри шыва юхтарса кăларăр. Сылтăм хул айĕнчи пĕчĕк кĕленчери име шăршлаттарăр. Манăн çĕрнĕ ӳтĕм сĕвешĕленĕ. Паасонен*[87].

**сурчăк-сĕлеке** çăвар хăвăлĕнчи çăрарах шĕвек. *Этем мĕншĕн сурчăк-сĕлекеллĕ. Кив Симук, Самар обл.*[88]

**суханлăх** сухан лартса ӳстерекен пахча. *Пирн пахчи те – суханлăх, / сирн пахчи те – суханлăх. Хирлеппуç Мĕлĕш*[89].

**сӳнтĕк** арча. *Марян полнă пысăк сӳнтĕк, тăршшă чалăш полнă, çӳллĕшĕ олтă шит полнă. Пушкăрт*[90].

**сӳрек** ырă. *Тӳре айăпланă çынна та / анваскăр, ан таптăр тӳрех. / Хамра пуррине çех ыйтатăп: / çынсем, пулăрсамăр сӳрек*[91]. *Анне чĕрçийĕ мар иккен тавралăх, / аттем пек сӳрек мар иккен çынсем*[92].

**çава-çурла** утă çулмалли, тырă вырмалли хатĕрсем. *Хăртна-пĕр пырсан мĕн хавас? – / Çава-çурла сасси пит хавас. Лачкасси, Тăвай р-нĕ*[93].

**çарран-çарамас** тумтирсĕр, атă-пушмаксăр. *Кунта ачи-пăчи, ватти-вĕтти, хĕрĕ-арăмĕ, çарран-çарамас туллиех*[94].

**çеçкелĕх** чечеклĕх. *Çаранлăхра кăлканлăх иккен, / кăлкан айĕ çеçкелĕх иккен. Кивĕ Шешкел, Тутарстан*[95].

**çĕр виçӳçĕ** мишавай. *Кушкă Чăвашĕ çĕр виçӳçĕ пулмалла иккен*[96].

**çилĕшлĕ** хаяр. *Çилĕшлĕ Иван (Иван Грознăй) патшара ларнă чух малтанласа Хусан хули тутар патши аллинче пулнă... Мăн Шемертен, Етĕрне р-нĕ*[97].

**çумăр кайăкĕ** çĕр чĕкеçĕ, вĕршĕн. *Çĕр чĕкеçĕсем (вĕршĕнсем, çумăр кайăкĕсем) аялтан тата кăшкăрса вĕççен – çумăра*[98].

**çут тĕнчелĕх** çут тĕнче. *Ан макăр, анне: ху ылхантăн вĕт, / «Çут тĕнчелĕхре саксук пул», – терĕн. Çирĕклĕ, Пушкăрт*[99].

**тай** пĕлтерĕшĕ паллă мар. *Çурхи те шывпала юхса та кайнă пулсассăн / аслă тай улăха тухса та выртас-мĕн. Томаккасси, Шупашкар р-нĕ*[100].

**таяк** ватӑлса кукӑрӑлнӑ ҫын. *Килне Сементей йӑлтах хуҫӑлса, таяк пулса таврӑнчӗ*[101].

**тӑнкӑлта** лакӑм-тӗкӗм. *Эпир ҫав старикрен чарӑнса ыйтрӑмӑр: / «Салам-алик, тав сире, асатте! / Ҫӳллӗ тусем ҫинчен ансассӑн, / ҫеҫен хире тухсассӑн / хӑта килне ҫитме инҫе-и?» — терӗмӗр. / Кӗмӗл старик кӑмӑлпа каларӗ: / «Сакӑр вун сакӑр сакӑлта, / тӑхӑр вун тӑхӑр тӑнкӑлта... / Хӑта килне ҫитиччен / ҫич сӗм вӑрман витӗр тухмалла...» Кивӗ Шешкел, Тутарстан*[102].

**тӑш** тӗш(ӗ)? *Мӗн тӑвас — вилес килмест: ҫут ҫанталӑкра пӗр сехет пурӑнсан та тем тӑшнех тӑрать — ҫӑмха илет те тухса утать ҫул ҫине. Хурашаш, Хӗрлӗ Чутай р-нӗ*[103].

**тӗреле** тӗлле. *Ахванеҫ капкас тумлӑ ҫын ҫине тӗрелесе пӑхрӗ, ку хаяр тӗслӗ пулсан та мӗншӗн пӗртте чӗнмест-ха, шавламасть-ха тесе шухӑшласа илчӗ*[104].

**туй сӳрте** туй кистень. *Чул айне пытарнӑ паттӑра — / улӑп ҫын пуҫ хунӑ вӑрҫӑра. / Ак выртать муртайнӑ ун хӑрти, / ҫич юта хӑратнӑ туй сӳрти*[105].

**тупӑ** тупсӑм. *Юмах ярӑп, туппине хамах калӑп. (Калӑп.)*[106]

**туракка** тура. *Каҫпа вутӑш пынӑ та кантӑкран шаккать тет: «Тураккана пар мана, тураккана пар мана!» — тесе йӑлӑнать тет. Ҫӳлти Кинчер, Вӑрмар р-нӗ*[107].

**тутлӑ-имлӗ** пылак, сывлӑхшӑн усӑллӑ. *Тутлӑ-имлӗ мунчи пултӑр, / йӳҫҫи кайтӑр, пылакӗ юлтӑр...*[108]

**улмалӑх** пан улми пахчи. *Пирн униче — улмалӑх. / Ай-хай, тӑвансем, тӑвансем, / улма татма килсемӗр... Карапаш, Сӗнтӗрвӑрри р-нӗ*[109].

**умсан** килен. *Пукане сиксе тӑчӗ те хӑйпе умсанса, хӑйне хӑй тӑрӑххӑн пӑхса ташлама пуҫларӗ*[110].

**уртах** урта ҫарӗ. *Сикнӗ унӑн (*Аттилӑн. — *Э.Ф.) урхамахӗ, / йӗс чӗрнеллӗскер, Ҫулпар. / Унӑн хыҫҫӑн — хун уртахӗ / Чул тӑва ватса чӑл-пар*[111].

**усӑ** ывӑс, хупкӑҫ. *Апат пӗҫерме те май ҫукчӗ, ҫав хурт йывӑҫсем ҫинчен хурансене тӑкӑнатчӗ, хурансене усӑсемпе хуплаттӑмӑр*[112].

**ӳпкем** ӳпкев. *Пуçлă-вĕçлĕ анана / таптанăшăн ӳпкем пур, / аттепеле аннене / çуратнăшăн ӳпкем пур. Чипикаран, Пушкăрт*[113].

**ӳтен** ашкăн, иртĕх. *Усал малтан аякра ӳтенет, аякран яла килет*[114].

**хантарай** кахал, Н.И. Ашмарин словарĕнче – *хантар. Хантарайсем – кантурта*[115].

**хăмçа** пĕлтерĕшĕ паллă мар[116] > **кӳмĕлтĕрĕк.**

**хăрăк-шанкă** типĕ вутă-шанкă. *Çӳрерĕ ку çапла вăрманта хăрăк-шанкă пуçтарса. Хĕрлĕ Чутай*[117].

**хăтлă-сăтлă** хăтлă. *Хăтлă-сăтлă çак тăван çĕре / тек кураймăп ырă тĕлĕкре*[118].

**хăяклă** хăяккăн. *Ачи-пăчи месерле, ашшĕ-амăшĕ хăяклă. (Сак.)*[119]

**хăят** Тутарта Пăва тăрăхĕнчи Хăятра ĕççи умĕн irттернĕ ярмăрккă. *Хăюсăр çын хăйиччен хăят та çитĕ, иртсе те кайĕ*[120].

**хĕске** рак. *Раксем (хĕскесем) шывран типĕ çĕре тухаççĕ пулсан – çанталăк пăсăласса*[121].

**хирлӳ-пирлӳ** пĕлтерĕшĕ паллă мар. *Хирлӳ-пирлӳ сак çине, / трн, трн, трн!.. / хăййи çăмне чавмалла, / пурçăн мамăк тумалла, / ӳссе çитнĕ сар хĕрне / пустав сăхмань тумалла, / хĕрне качча памалла. Кушар, Красноармейски р-нĕ*[122].

**чару-тăву** мĕн те пулин тума ирĕк паманни. *Туй халăхĕ: «Ирĕк, ирĕк! Чару-тăву çук!» – теççĕ. Кивĕ Шешкел, Тутарстан*[123].

**чашкă-савăт** чашăк-кашăк. *Пурте çисе тăрансан: «Нимтеçук, пух чашкă-савăта!» – каллех хушать утаман. Виçпӳрт Шăмăршă, Шăмăршă р-нĕ*[124].

**чăс** мухтан. *Васили каларĕ: «Эпĕ санăн йоратнă кĕрӳ пулатăп!» – терĕ. – «Лапах-и?» – терĕ ĕмпӳ. – «Чăнах çав, чăсмасăрах калатăп!» – терĕ*[125].

**чее-ултавçă** суеçĕ. *Шуйттансем аптраса чее-ултавçă арăм патне пынă та каланă: «Эпир арлă-арăмлă пурăнакан çынна çылăха кĕртме вун икĕ çултанпа тăрăшатпăр...» – тенĕ. Çĕн Якаль, Самар обл.*[126]

**чесресе кай** хăямата кай. *Ванькка калать: «Айăпĕмĕнĕ чесресе кайтăр. Эсĕ мана амун кĕслине илсе тухса пар», — тет*[127].

**чĕвĕр** хирĕç тăр. *Урампа иртсе пыракан чăваш арăмне шкульниксем мăшкăллама тытăнсан, урампа иртсе каякан чăваш хресченне чулпа пеме тытăнсан Кушкă чăвашĕ урса каять те пурне те тăлласа ватать. Кам чĕвĕрет, çавăнтах чикелентерет, кам алла лекет, çавăнтах кукăрăлса анать*[128].

**чĕкенлĕ** тĕрленĕ питлĕ. *Ăна çуртра пĕр çын çӳрет çавна, унта чĕкенлĕ минтер хураççĕ, çăмарта параççĕ. Треппĕл, Пушкăрт*[129].

**чĕкĕ** шĕвĕр. *Урхамахĕ улма чăпар... / тăлпăвĕ тимĕр, чĕрни чĕкĕ, / таканĕ кĕмĕл, тĕсĕ шур пăвăр. Кивĕ Шешкел, Тутарстан*[130].

**чĕркки** вăрăмтуна. *Ĕлĕк пĕрре çĕлен вăрăмтунана (черккие) тĕл пулнă та каланă: «Тĕнчере кам юнĕ тутлăрах, çавна пĕлсе кил-ха», — тенĕ*[131].

**чит** ют. *Чит çĕрсенче пурăнма / ытлашши те йывăрмĕн. Шланлă, Пушкăрт*[132].

**чукшан** чукмар. *Пуян çынпа тус пултăм та, / çурмран чукшан каймарĕ. Çĕнĕ Чăлкасси, Кашан р-нĕ*[133].

**чӳклевçĕ** чӳк йĕркине туса пыракан çын. *Ак тухĕ ирпе яланхи йĕркепе / пушар пек чӳклевçĕ хĕвелĕ*[134].

**шантар** жандарм? *Сакăр вун салтак, икĕ шантар, пĕр улпут. (Тĕренче.)*[135]

**шăша** савăт. *Хĕрсем çăхана икĕ шăша (савăт) пачĕç те, вăл кранклатса вилĕ шывĕпе чĕрĕ шывне илме вĕçсе кайрĕ. Кӳлпуç, Тутарстан*[136].

**шăши-мăши** шăши тавраше. *Вылянă чухне çапла пуплеççĕ: «Шăши-мăши ăçта?» — «Шăтăкра»*[137].

**шĕр хурăн** хăраххăн çамрăк хурăн. *Хунав çеçĕ шĕр хурăн / пĕлтĕрхи çеç хĕрес те*[138].

**шинкар** хупах хуçи. *Çиччĕпелен кайрăм ямшăка. / Шинкар патне кĕтĕм каç выртма...*[139]

**шукалăх** шуçлак вырăн. *Тăвайкки хĕрри — шукалăх, / шумастăр-çке, ачасем! Маслă, Куславкка р-нĕ*[140].

**ывӑнт** ывӑнтар. *Яра куна тӑрӑшса ӗҫленипе / ал-урана аванах ывӑнтрӗ. Йӑвашкел, Тутарстан*[141].

**ыйха лӗшке** ҫывӑр. *Хуҫа ҫенӗхре ҫывӑракан тарҫине вӑратрӗ тет те ятлать тет: «Мӗн ыйха лӗшкетӗн! Вӑрӑсем тапӑннӑ, йытта вӗлерчӗҫ, мӗншӗн тухса пӑхмарӑн!» – тесе кӑшкӑрать тет. Атӑльял, Шупашкар р-нӗ*[142].

**ырӑ-кирелӳ** киремет. *Ху выҫӑ лар та эс киремете чӳклеме ан ман. Ҫынсене ҫиллен те ун умӗнче йӑваш пул. Вӑрҫса-хирӗлсе эс ырӑсене-кирелӗве ҫеҫ тарӑхтаратӑн*[143].

**эккӗл** чечек ячӗ. *...Виҫ ҫеҫпӗл, ик эккӗл хуратӑп Чавайн умне*[144].

**юлтай** ютшӑнчӑк. *Ют хушшинче юпах тиха та юлтай*[145].

**юмра** йӑмра? *Юмра вӑрӑм тееҫҫӗ, унтан вӑрӑмми чӑрӑш пур*[146].

**юнкав** Аслӑ мункун, ӗлӗк чӑвашсем ҫак кун тӗрлӗрен киремете чӳк тунӑ, выльӑх пуса-пуса парне панӑ кун. *Юнкавӑн (аслӑ юн кун) ҫанталӑк ҫиллӗ пулсан тырӑ тӑкӑнать*[147].

**ятамас** пӗлтерӗшӗ паллӑ мар. *Ятамас салтак йӑлт та ялт, / ҫӑнӑх чӑпти паш та паш. (Мулкач.)*[148]

### Литературӑпа асӑрхаттарусем

---

[1] Тӗпчев ӗҫне РГНФ пулӑшнипе «Чӑваш чӗлхинчи пӗлтерӗшсӗр сӑмахсене усӑмлатасси» 13-04-00045 проектпа килӗшӳллӗн пурнӑҫланӑ.

[2] Татарча-русча сүзлек: 2 томда / Татарстан Республикасы фәннәр академиясе, Г. Ибраһимов исемендәге тел, әдәбият һәм сәнгать институты. Казан: «Мәгариф» нәшрияты, 2007. Т. 1. С. 517.

[3] Ҫавӑнтах. Т. 2. С. 568.

[4] Ҫавӑнтах. С. 116.

[5] *Ашмарин Н.И.* Чӑваш сӑмахӗсен кӗнеки: 17 томлӑ. Хусан; Шупашкар, 1928–1950.

[6] Чӑвашла-вырӑсла словарь. 2-мӗш кӑларӑм / М.И. Скворцов ред. М.: Русский язык, 1985. 712 с.

[7] Zheltov P. Reverse dictionary of Chuvash / P. Zheltov, E. Fomin, J. Luutonen ; Lexica Societatis Fenno-Ugricae ; Sociйtй Finno-Ougrienne. Helsinki, 2009. 344 p.

[8] Пуян ҫынсен те тухья пур-ҫке... // Чӑваш халӑх сӑмахлӑхӗ. Шупашкар, 1978. Т. 3. С. 59.

[9] Супетей Улăпа пĕтерме тăрать // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1987. Т. 6, п. 2. С. 258–259.

[10] Хресчен ывăлĕ пуп тирне сӳни // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1976. Т. 2. С. 54.

[11] Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 436.

[12] «Эп çак ăрама ма килеп?..» // Ĕçпе йăла юррисем. Шупашкар, 2013. С. 313.

[13] Мăн кĕрӳ такмакĕ // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1979. Т. 4. С. 17, 418–419.

[14] Пуппа кĕтӳç // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 2. С. 162.

[15] *Иванов И.* Чăваш халăх ывăлĕ // Тăван Атăл. 1988. № 4. С. 47.

[16] Вала мăкăр // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1973. Т. 1. С. 36.

[17] Иван паттăр // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 1. С. 138.

[18] Вун икĕ çула кĕрĕшнĕ тарçă // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 1. С. 372.

[19] Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1984. Т. 5. С. 194.

[20] *Угольников А.* «Çурăмсене çеç кураймарăмăр...» // Тăван Атăл. 1990. № 12. С. 29.

[21] Улăп // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 1. С. 201–202.

[22] Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 5. С. 254.

[23] Выхăт // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 6, п. 2. С. 209.

[24] Вăтăр пĕр ывăл // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 1. С. 224.

[25] *Уяр Х.* Савтепи вилĕмĕ // Тăван Атăл. 1990. № 9. С. 11.

[26] *Ахун В.* Керван çӳренĕ ĕлĕк ку çулпа // Тăван Атăл. 1986. № 5. С. 46.

[27] «Атьăр туя, ачасем...» // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 4. С. 7.

[28] «Каскалакансем пура пураççĕ...» // Ĕçпе йăла юррисем. С. 413.

[29] Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 5. С. 215.

[30] Çавăнтах. С. 196.

[31] Мăн кĕрӳ такмакĕ // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 4. С. 12.

[32] *Ахун В.* Керван çӳренĕ ĕлĕк ку çулпа. С. 47.

[33] «Шуралса та килет те шурă шурăмпуç...» // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 3. С. 91.

[34] Асамлă çапкăçпа вут чулĕ // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 1. С. 277.

[35] *Угольников А.* Кăтартнă ĕç. С. 20.

[36] Мăн кĕрӳ такмакĕ. С. 15, 418.

[37] Шаланкăпа (текерлĕкпе) ула курак // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 6, п. 2. С. 72.

[38] Кукша Йăван // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 1. С. 204.

[39] *Яккусен П.* «Пĕчĕк пӳрт. Кăмака. Вут ташлать...» // Тăван Атăл. 1990. № 1. С. 43.

[40] Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 5. С. 76.

[41] Çавăнтах. С. 254.

[42] Мăн кĕрÿ такмакĕ. С. 20, 419.
[43] «Улăм çÿппи çĕр кÿрнек...» // Ĕçпе йăла юррисем. С. 437.
[44] «Çăварни, Çăварни терĕмĕр те...» // Çавăнтах. С. 371.
[45] Пикепе хăрхăм // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 1. С. 325.
[46] *Воронцов Г.И.* Ача-пăча вăййисем. Шупашкар, 1992. С. 34.
[47] Кукша тата упапа шуйттан ачи // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 1. С. 437.
[48] Этем мĕншĕн сурчăк-сĕлекеллĕ // Çавăнтах. Т. 6, п. 2. С. 76.
[49] *Воронцов Г.И.* Кăтартнă ĕç. С. 81.
[50] Вун икĕ çула кĕрĕшнĕ тарçă // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 1. С. 371.
[51] *Ахун В.* Керван çÿренĕ ĕлĕк ку çулпа. С. 47.
[52] *Исмуков Н.* Улăп çĕрĕ // Тăван Атăл. 1988. № 11. С. 27.
[53] Ĕмĕтсĕр пуян // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 2. С. 71.
[54] Антун чеелĕхĕ // Çавăнтах. С. 299.
[55] Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 5. С. 172.
[56] Çавăнтах. С. 236.
[57] «Эй, салтаксем, аванах ачисем...» // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 3. С. 144.
[58] «Атăлсем тăрă, шывĕ сулхăн...» // Çавăнтах. С. 182.
[59] Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 5. С. 281.
[60] Мăн кĕрÿ такмакĕ. С. 31.
[61] Çавăнтах. С. 22.
[62] *Ахун В.* Керван çÿренĕ ĕлĕк ку çулпа. С. 47.
[63] Емел паттăр // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 3. С. 43.
[64] «Вăрман та сасси мĕн усăллă...» // Ĕçпе йăла юррисем. С. 19, 517.
[65] Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 5. С. 52.
[66] Пăхăр упа // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 1. С. 375.
[67] Атьăр тăрар, хĕç тытар! // Çавăнтах. Т. 3. С. 39.
[68] «Вăрман та сасси мĕн усăллă...».
[69] «Çÿллĕ ту çинче – ват юман...» // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 3. С. 352.
[70] «Çĕн çăпата, шур чăлха...» // Çавăнтах. С. 354–355.
[71] Укçапа мĕн тăвас, ăсу пултăр // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 2. С. 174.
[72] *Ахун В.* Керван çÿренĕ ку çулпа. С. 47.
[73] *Исмуков Н.* Улăп çĕрĕ.
[74] Иртен-çÿрен хресчене ан кÿрентер! // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 2. С. 75.
[75] Туй-Тупала // Çавăнтах. С. 189.
[76] «Ах, аттеçĕм-хуçаçăм...» // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 4. С. 6.
[77] Стенька Разин // Çавăнтах. Т. 6, п. 2. С. 335.
[78] Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 5. С. 269.
[79] «Шор кримски калпакне...» // Ĕçпе йăла юррисем. С. 168.

[80] Саксук // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 4. С. 295.

[81] Çавăнтах. С. 68, 390.

[82] «Атте-анненĕн пултăм юратман ачи...» // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 3. С. 205.

[83] *Емельянов А.* Ютри яшлăх // Тăван Атăл. 1991. № 2. С. 24.

[84] *Юман М.* Атăл калавĕ // Çавăнтах. 1989. № 3. С. 26.

[85] Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 5. С. 183.

[86] Çавăнтах. С. 236.

[87] Ванюххапа ачисем тата Алена Красавица // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 1. С. 158.

[88] Этем мĕншĕн сурчăк-сĕлекеллĕ. С. 76.

[89] «Пирн пахчи те – хăмлалăх...» // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 4. С. 141.

[90] Асамлă çапкăçпа вут чулĕ. С. 276.

[91] *Исмуков Н.* «Çеçке те çыр курăкĕ пултăр...» // Ялав. 1987. № 10. С. 4.

[92] *Исмуков Н.* «Чат çăтмахри пек шухăшсăр ачалăх...» // Çавăнтах. 1988. № 12. С. 9.

[93] «Уя-пĕр тухсан мĕн хавас?..» // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 3. С. 221.

[94] Куçма Çинахвунччă пăхаттир // Çавăнтах. Т. 2. С. 214.

[95] Мăн кĕрӳ такмакĕ. С. 14.

[96] *Иванов И.* Чăваш халăх ывăлĕ // Тăван Атăл. 1988. № 4. С. 48.

[97] Çилĕшлĕ Иван патша Етĕрнере // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 6, п. 2. С. 314.

[98] Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 5. С. 141.

[99] Саксук // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 4. С. 295.

[100] «Малаллине те шутланă...» // Çавăнтах. Т. 3. С. 132.

[101] *Юхма М.* Термен // Ялав. 1989. № 9. С. 33.

[102] Мăн кĕрӳ такмакĕ. С. 12.

[103] Шарапчăк // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 1. С. 258.

[104] *Юман М.* Атăл калавĕ // Тăван Атăл. 1989. № 3. С. 25.

[105] *Ахун В.* Керван çӳренĕ ĕлĕк ку çулпа. С. 47.

[106] Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 5. С. 243.

[107] Вутăш (322) // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 6, п. 2. С. 205.

[108] Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 6, п. 1. С. 88.

[109] «Пирн униче – шĕшкĕлĕх...» // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 4. С. 186.

[110] Пукане // Çавăнтах. Т. 1. С. 71.

[111] *Ахун В.* Чул пике // Тăван Атăл. 1990. № 9. С. 28.

[112] *Угольников А.* Кăтартнă ĕçĕ. С. 20.

[113] «Турă лаша теейсе...» // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 3. С. 170.

[114] Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 5. С. 52, 330.

[115] *Ашмарин Н.И.* Кăтартнă ĕçĕ. Т. 16. С. 48; Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 5. С. 82.

[116] Măн кĕрӳ такмакĕ. С. 20.

[117] Хаяр карчăк // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1976. Т. 2. С. 127.

[118] *Ахун В.* Керван çӳренĕ ĕлĕк ку çулпа. С. 47.

[119] Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 5. С. 235.

[120] Çавăнтах. С. 107, 330.

[121] Çавăнтах. С. 137.

[122] «Хирлӳ-пирлӳ сак çине...» // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 3. С. 235.

[123] Măн кĕрӳ такмакĕ. 33.

[124] Р-р-р, чукмар // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 1. С. 272.

[125] Асамлă çапкăçпа вут чулĕ. С. 289.

[126] Чӳк // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 6. П. 2. С. 109.

[127] Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 1. С. 437.

[128] *Иванов И.* Кăтартнă ĕçĕ. С. 47.

[129] Мункун юррисем // Ĕçпе йăла юррисем. С. 409.

[130] Măн кĕрӳ такмакĕ. С. 20, 419.

[131] Чĕкеç хӳри мĕншĕн икĕ юплĕ // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 6, п. 2. С. 71.

[132] «Сар măйăра çӳреме...» // Çавăнтах. Т. 4. С. 189.

[133] «Пуян çынпа тус пултăм та...» // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 3. С. 53.

[134] *Исмуков Н.* Улăп çĕрĕ. С. 28.

[135] Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 5. С. 236.

[136] Çитмĕл çичĕ чечекрен çĕлетнĕ кĕпе // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 1. С. 96.

[137] *Воронцов Г.И.* Кăтартнă ĕçĕ. С. 92.

[138] *Львов П.* Юлташ сăвви // Тăван Атăл. 1990. № 5. С. 29.

[139] «Çиччĕпелен кайрăм ямшăка...» // Ĕçпе йăла юррисем. С. 77, 519.

[140] «Тăвайкки хĕрри – шукалăх...» // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 3. С. 305.

[141] «Тавтапуçăм улаях та кĕсрене...» // Ĕçпе йăла юррисем. С. 22.

[142] Хуçапа тарçă // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 2. С. 23.

[143] *Уяр Хв.* Кĕрхи çумăр. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1984. С. 21.

[144] *Исмуков Н.* Мари Эл // Ялав. 1989. № 11. С. 11.

[145] Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 5. С. 52, 330.

[146] «Вăрман варĕнче хурлăхан...» // Ĕçпе йăла юррисем. С. 313.

[147] Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 5. С. 152, 331.

[148] Çавăнтах. С. 194.

# НĂРВАШ ШĂХАЛЬ ТАТА ВĂРМАНХĔРРИ ШĂХАЛЬ ÇЫННИСЕН Н.В. НИКОЛЬСКИЙ АРХИВĔНЧЕ УПРАНАКАН ÇЫРĂВĔСЕМ

*Ю.Н. Исаев*

Николай Васильевич Никольский профессор[1] «Чăваш календарĕнче» çапла палăртнă: «Эпĕ чăвашсем епле пурăнни, вĕсем епле пулни çинчен кĕнеке çырасшăн. Çав кĕнекене çырма чăвашсем çинчен тĕрлĕ çĕртен çырусем урлă пĕлесшĕн... Чăвашсем çинчен çак эпĕ ыйтнă тăрăх çырас пулать. Çырасса чăвашла çырмалла. Кунта ыйтманнине те çырма юрать. Çырас тесен пĕр прихут çинчен е пĕр ял çинчен çырас пулать»[2]. Çак пархатарлă сĕнĕве итлесе нумай-нумай çĕртен хут вĕреннĕ чăвашсем Н.В. Никольский патне хăйсен пурнăçĕ пирки çырса пĕлтереççĕ. Пĕтĕмĕшле 300 яхăн пысăк том калăпламалăх материал пуçтарăнать. Ытларахăшĕ Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕн ăслăлăх архивĕнче упранать. Историпе фольклор, этнографи пайĕнче пирĕншĕн питĕ интереслĕ çырусем тупăнчĕç. Çак çырусен тексчĕсем тăрăх ăнлантарусем парас терĕмĕр.

Пĕрремĕшĕ – Чĕмпĕр кĕпĕрнин Пăва уесĕн Турхан вулăсĕн Чиркӳллĕ (Нăрваш) Шăхальри Андрей Ефимов Упа (е Медведев) çĕр ĕçлекен çырăвĕ. Çыракан пирки калас пулсан, тӳрех куçа курăнакан пĕр лайăх япала пур: вăл чăваш нисепне (этикетне) лайăх пĕлекен çын.

Чи малтанах Андрей Ефимов Упа хăйĕн статусне (çĕр ĕçлекен) палăртать, профессора тав туса, вăл пархатарлă ĕç туни пирки çирĕплетсе калать. Тепĕртакран автор Никольский ыйтнине хуравласа хăйсен кулленхи пурнăçне сăнлама тытăнать.

Тĕлĕнсе каймалла тирпейлĕ пуçлать. Малтан ялти общинăн тулашри çăмăл мар хутшăнăвĕсем пирки сăмах

тытать. Ытларах чăвашсемпе мишерсем хушшинчи пĕр танлăх çукки çинчен кулянса пĕлтерет. Мишер чăрсăр, хăюллă пулнишĕн хурласа тиркет, çав вăхăтрах парăнас кăмăл çуккине, уçăмлă мар пулин те, палăртать. Каярах чăвашсем хăйсем пĕр пек марри çинчен пуплет. Хăй пурăнакан вырăнти чăвашсемпе («пирти чăвашсем») вирьялсене ырăпа танлаштарма хăтланса пăхать, анчах çийĕнчех тата хăйсен патĕнчи чăвашсене вирьялсенчен кăшт та пулин «çӳллĕрех» картлашка çинче тăраççĕ тет («пирĕн чăвашсем аван, сарри нумай»). Мĕншĕн тесен, унăн шухăшĕпе, вĕрӳ-суру чĕлхине пĕлекенсем пурнăçран кая юлнă.

Корреспондент темĕнле шалти туйăмĕпе Никольский профессор православи чиркĕвĕнчен айккинче тăманнине туять, çавăнпа православи тĕнне кĕмен чăвашсен кулленхи пурнăçĕн культурине пит ырласах каймасть. Комплимент ытларах чиркӳ хуçисене лекет. Çапла пулин те вăл хăй авалхи йăла-йĕркене пăхăннине пĕлтермест, тен, каллех халăх этикетне пăхăнса çыруне вулаканĕн мĕн вулас килет («...Вальки тени тем тени пулать вара вăл?...»), çавна çырать. Çав вăхăтрах, тен, чеен хай ăшĕнче: «Лартса ятăм», – тет пуль. Чăвашăн менталитет уйрăмлăхĕ çапларах, нимĕн те тăваймăн.

Çыру авторĕ ялти халăхăн пурнăçĕ пирки сăмахне малалла тăсать. Тĕрлĕ енлĕ хак парать. Çĕр сахал пулни, тĕш тырă акса туса илме пит аванах марри çыруран паллă. Çавăнтах эпир ял халăхне вăрман, çăмăл мар пулин те, тăрантарни пирки пĕлетпĕр («эпир вăрманпала кăна пăртак пурăнатпăр»). Унсăр пуçне ял халăхĕн хутшăнăвĕ куç умне тухса тăрать. Ансатах пулман пулĕ тĕрлĕ обществăлла ĕçре харăсах пĕр чĕлхе тупма, çавăнпа хура халăх хушшинче, ахăртнех, тĕрлĕ тавлашу-хĕвĕшӳ те пулкаланă.

Влаçпа уйрăм çын хутшăнăвĕсенче те тĕрлĕ пăтăрмахсем сиксе тухаççĕ. Çавă кăмăллă – судьясем чăвашсемех. («Пирĕн судьясем хамăр чăвашсемех, хамăр чĕлхепех ыйтаççĕ»).

Юлашкинчен çыруçă хăйĕн пирки сăмах калать. Малтанах çĕр çинче ĕçленине палăртсан та хăйне кӳрентермест. Хăй çыру ĕçне пĕлнине те, унăн килĕнче самай чылай кĕнеке пуррине те палăртать. Çав вăхăтрах вăл хăйĕн тĕп тĕллевне пытармасть: «Мана пĕр çирĕм пуслăх кĕнеке ярса парăр», – тет.

Хутшăну мешехине тытса пырса корреспондент Никольские тав тăвать («пире çутта кăларакансем, пире ан пăрахăр, Сире те Турă ан пăрахтăр. Яланах сирĕн ĕçсем ăнса пыччăр»).

Тата мĕн паха. Малтанхи йĕркесенче çыру авторĕн мĕскĕнленни курăнать пулсан, вĕçĕнче, архиерей сăмахне аса илсе те пулин, чăвашсем маттурришĕн мухтанни палăрать.

## 1. Чĕмпĕр кĕпĕрнин Пăва уесĕнчи Турхан вулăсĕн Чиркӳллĕ (Нăрваш) Шăхальри Андрей Ефимов Упа (Медведев) çĕр ĕçлекен 1911 çулхи январĕн 27-мĕшĕнче Н.В. Никольский патне янă çыру

*Ку сăмаха эпĕ, Андрей Упа, эсир Çулталăк кĕнеки çине[3] çырнă чăвашсем епле пурăнни çинчен сирĕн сăмаха итлесе çырас терĕм[4]. Пирĕн чăвашсем хушшинче халап епле çӳренине эпĕ хам та илтнĕ. Пирĕн чăвашсем тутар-мишер çинчен калаççĕ. Мишер усал теççĕ, вĕсем çынна улталаççĕ, суту-илӳ тунă чух та чăваша пĕр-икĕ пус та пулин лартаççĕ. И çавăнта ырри те пур. Вĕсем, мишер тени, ăçта çитнĕ унта хĕнеме тытăнаççĕ. И тата чăнах пулчĕ: хамăр кӳршĕсене лартма тытăннă, халĕ кăна, крещеней иртсен, çĕрле, çур çĕрте, Шăнкăртам мишерĕ Сидор ятлă çынна лавçа тытса кайма çирĕм пуса килĕшнĕ, пилĕк çухрăма. Вĕсем çитнĕ те лашине урама, чӳрече тĕлне, тăратнă. Хăйсем пӳрте кĕнĕ. Унтан мишерĕ сăмавар лартнă тата пĕр бутылка палăштав эрех илнĕ. Сидора чей ĕçме лартнă, эрехне те ĕçтернĕ. Çитменнине тата мишерĕ хут купăс каланă. Çав вăхăтра мишер ачи кулачă илме кайнă. Вăл кулачне илсе килнĕ вăхăтра урăх мишере систерсе хăварнă. Ачи таврăнсан ĕçсе çинĕ вăхăтра урăх*

*мишерӗ лашине вӑрласа илсе кайнӑ. Унтан Сидор ӗҫсе ҫисен киле таврӑнма тӑнӑ та – лаша ҫук та. Сидор лашине шырама тытӑннӑ, лашине тупайман. Вара лаша киле кайнӑ пуль тесе килне таврӑнать, килӗнче те ҫук. Арӑмӗсем Сидор таврӑннине курсанах йӗрсе янӑ. Ҫапла ӗнтӗ мишерсем пурӑнаҫҫӗ*[5].

*Пирӗн ял Апӑрша ятлӑ ҫырмара, шурӑ тӑмлӑ вырӑнта ларать. Икӗ-виҫӗ ҫухрӑмра юманлӑх, яхтӑпа чӑрӑш – вунӑ ҫухрӑмра.*

*Пирӗн ялта арҫын 389. Ҫын халӗ 383 ҫын, 5 ҫын кӑна ӳснӗ. Ҫӗнӗпе ят туни 7 ҫул. Хӗрарӑм та унтан 2 ҫын ытла. Вырӑссем пирте ҫӗр ӗҫлекен 2 кил кӑна. Вӗсем мӗн пурӗ 13 ҫын. Мишер ҫук. Пирӗн мишере юратмаҫҫӗ. Пирӗн ялта чинлӑ ҫынсем ак ҫаксем: пачӑшка, тиечук, 2 учитель. Пачӑшка – вырӑс, тиечук – чӑваш, учительсем – чӑваш.*

*Пачӑшка та питӗ лайӑх, чиркӳре питӗ лайӑх вӗрентеҫҫӗ, турӑ юррине те лайӑх юрлаттараҫҫӗ. Пӗри прихут шкулӗ, тепри министерствӑ шкулӗ. Учительсем 35 тенкӗрен кая илмеҫҫӗ.*

*Эпӗ чӑвашсен сӑн-сӑпачӗ ҫинчен ҫырасшӑн. Пирӗн чӑвашсем пӗр пек мар. Вӗсем икӗ тӗрлӗ. Вирьялсем теҫҫӗ, вирьял тени Кӑрмӑш уесӗнче*[6] *нумай, урӑхла калаҫаҫҫӗ – ҫемҫен. Пирӗн чӑвашсем Чӗмпӗр кӗпӗрнин Пӑва уесӗнче нумай, вӗсем урӑхла калаҫаҫҫӗ; апла калаҫмаҫҫӗ, хут ҫинчи сӑмах пек калаҫаҫҫӗ. Пирти ҫынсем вирьялсене тӗттӗм ҫынсем вырӑнне хураҫҫӗ, «Вӗсем нумайӑшӗ ӑрӑмӑҫ, тухатмӑш, вӗрӳҫӗ ҫынсем», – теҫҫӗ. Пирти чӑвашсем аван, сарри нумай, хури те пур, ҫапах сахал. Пирӗн хура куҫа, чакӑр куҫлине «аван, илемлӗ» теҫҫӗ. Пирте халӗ питӗ аван, Турӑ сӑмахне итлеҫҫӗ, чиркӗве ҫӳреҫҫӗ, киремет таврашне пуҫҫапнине курман та, чирлесен-тусан вӗрнине*[7] *илтмен, тӳрех чиркӳре исповедовать тутараҫҫӗ [ҫылӑх каҫарттараҫҫӗ], молебен тӑваҫҫӗ. Вӗрни-сурнине илтсен кулаҫҫӗ, намӑс теҫҫӗ. Ӗлӗк пулнӑ, киремете пуҫ ҫапнӑ, вӗрнӗ-сурнӑ, чӳк тунӑ. Ҫын вилсен панихида тӑвас вырӑнне хывнӑ та, ҫимине урама кӑларса пӑрахнӑ*[8] *та йытӑсем, анчӑксем ҫинӗ теҫҫӗ.*

*Пирĕн авалхи чăвашсем, чăнах та, тĕттĕм пулнă, киреметсене пуççапнă, така, тиха, хур, ĕне пуснă, вĕсене пурне те вальки тесе асăннă. Вĕсем, авалхи çынсем, киреметрен хăранă: «Чӳк тумасан çумăр пулмасть», — тенĕ тата «вĕлерет» тенĕ. Вальки[9] тени тем тени пулать вара вăл?*

*Ну, тата эпĕ прихут пуху çинчен калас тетĕп. Кăçал прихут пуху пулчĕ. Хуралĕсене тытса пĕтерсен просверни çинчен тапратса ячĕç[10] те, пирĕн ялтан пĕр чухрах çын, Игнатий ятлă çын, кăшкăрса ячĕ просвернине хак ӳкерес терĕ-и, ĕлĕк просвернийĕ 30 тенкĕ пулнăччĕ, халĕ ăна 20 тенкĕ кăна хăварчĕç. Çав Игнатий тени, шӳреке янахлăскер, çутă пуçлăскер, пуçĕнче пĕр çӳç пĕрчийĕ те çук, кукăр пилĕклĕскер, çав тапратса ячĕ те, пурте çавăн сăмахне пăхрĕç. Хăй кашни кун ĕçе çӳрет, хăй çулталăкне те пĕр просвир илмен пулĕ. Унтан пачăшкă[11] каларĕ, хака ӳкерме юрамасть терĕ те, унтан хайхи Игнатий пачăшкана: «Эсĕ, пачăшка, 10 тенкĕ хур, тиечук, 5 тенкĕ хур, вара 15 тенкĕ пулать», — терĕ. Çапла каласан пачăшка аллипе сĕтел çине шак турĕ те: «Не мои дела», — тесе тухса кайрĕ.*

*Ну, тата эпĕ чăвашсем епле ремеслапа пурăннине çырас тетĕп. Эпĕр çĕрпе питĕ усă кураймастпăр, мĕншĕн тесен пирĕн çĕр хура тăпра мар, тăм, вăрман хĕрринче, çавăнпа та питĕ начар. Пирĕн 383 ята кашни пуса, кашни хире 153 десятиной[12] тивет, пĕр десятина вăта çĕртен шутласан 6—7 урапа тырă пулать, унпала вара епле çисе пурăнмалла. Эпир вăрманпала кăна пăртак пурăнатпăр, тата вăл та пулин, вăрманĕ, хаклă. Вăрмана илес тесен делянки те хаклă. Çара юманпа çăка илес тесен 200 тенкĕрен кая çук. Яхтă, чăрăш илес тесен йӳнни те 500 тенкĕрен кая çук. Самăй хакли 1000 тенкĕ ытла. Тата квартал илес тесен сухостой типĕ шаршан кодовка[13] касма — вăл та хаклă, пилĕк тенкĕрен кая çук, ăвăс кадавки те яхтăпа чăрăш 10—12 тенкĕ. Пĕр кадавкаран 10 лав пулать.*

*Хирти çынна сутма пасара кайсан 50—60 кăна параççĕ. Питĕ пурăнма хĕн, эй турă!*

*Ну, эпĕ тата судьясем çинчен çырас тетĕп. Юри хам шухăшласа мар, чăннине калап, хам курнине. Пирĕн ялта Леонти е Айкка Левентей теççĕ. Çав Левентей тени суда панă пĕр çын çинчен. Пĕр çыннăн тăлăх ача юлнă. Çав ачан 4 ят: ашшĕн, тетĕшĕн, шăллĕн. Тăлăх ачан ятне илме тытăннă хайхи Левентей. Судьясене ĕçтернĕ те, вĕсем тăлăх ачан ятне Левентее пӳрнĕ. Вара епле пирĕн судьясем тăваççĕ. Унтан çав тăлăх ача земской начальникне прошени парсан тин каялла илнĕ. Пирĕн судьясем хамăр чăвашсемех, хамăр чĕлхепе ыйтаççĕ.*

*Ну тата куланай (подать) çинчен. Пирĕн куланая параймасан уретникпе туммирсене илсе тухаççĕ те пасара илсе кайса сутаççĕ, тата çуклă-пурлă анапа çĕре сутаççĕ, ялпа параççĕ. Сборщик пичечĕпе услови тăваççĕ, кăçал мăкаçее (общественный склад) хывтарса тарăхтарчĕç. Час хывайманнине акнă калчине сутса тӳлеттерчĕç. Епле ĕнтĕ пире пурăнма хĕн.*

Песня
Пирĕн хуйхăллă юмах юрри

Ей, çынсем, сисĕрех,
Епле çутă хĕвел,
Тухса пăхăр урама.
Хыçал енчен пĕлт килчĕ,
Çутă хĕвеле хупларĕ.
Хĕвел ăшши ыррине
Сирсе ячĕ çавра çил.
Çавра çилсем иртиччен
Шăнса епле чăтатпăр.
Хĕвел çинчен пĕлт иртсен,
Ешĕл курăк сарăлĕ.

Хура вăрман хуйхисем –
Пирĕн хресчен çимĕçĕ.
Пирĕн хресчен вăйĕсем –
Сарă улпут савнăçĕ.
Эй, халăхсем, вăранăр,
Тул çутăла пуçларĕ.
Эй, çынсем, савăнăр,
Хĕвел тухĕ, çутатĕ.
Хура вăрманти тилĕсем
Тухса курчĕç çут хире,
Пирĕн чăваш ачисен
Турă ырлăх-пиллĕхпе
Çутă ӳкĕ пит çине[14].

*Ну, савнă тăвансем, эпĕ халĕ нимĕн те çыраймарăм-ха, ӳлĕмрен çырăп. Çак çыру çитсен витĕмĕ пулсан эсир мана ан пăрахăр, эпĕ те сирĕн сăмаха пăхăп. Сирĕн ырă*

*кӑмӑлтан ыйтап, пӗр ҫирӗм пуслӑх кӗнеке ярӑр, эпӗ те сире халӑх хушшинчи сӑмаха пӗлтеретӗп. Халӗ ҫырма хӑрап, ӳлӗмрен ҫырап. Ну тата манӑн Евангели, Часослов, Октоих, Требник, Страстная Седмица тата разные рассказы пур, мӗн пурӗ 23 кӗнеке пур.*

*Ну тата эпӗ сиртен пӗр сӑмах ыйтасшӑн, ҫӗр ҫинче мӗнле патша пур, вӗсем епле вырӑнта пурӑнаҫҫӗ, миҫешер салтак, мӗн ҫисе пурӑнаҫҫӗ, вӗсен миҫешер ҫухрӑм ҫӗрӗ, мӗнле тинӗс хушшинче пурӑнаҫҫӗ, ҫавна ҫырса ярӑр, ну, сывӑ пулӑр.*

*Пире ҫутта кӑларакансем, пире ан пӑрахӑр, Сире те Турӑ ан пӑрахтӑр. Яланах сирӗн ӗҫсем ӑнса пыччӑр.*

*...Архиерей чиркӳ пӑхма килсен питӗ юратрӗ. Архиерей каларӗ: «Чӑвашсем вырӑссенчен пилӗк картлашка ҫӳлте тӑраҫҫӗ», — терӗ пире.*

*Ну, тата пирӗн ялта учительте Кушак (е Кушӑк) ачи Алексей Степанов ятлӑччӗ. Вӑл халӗ Хусана кайнӑ теҫҫӗ, хам пӗлместӗп, ҫавна салам ярап, мушӗт, ҫавӑнта пулӗ.*

*Мой адрес, пишите: Симбирская губерния, Буинский уезд, Тарханская волость, с. Норваш Шигалей, Андрей Ефимов Уба*[15].

ЧПГӐИ ӐА. Историпе фольклор, этнографи пайӗ. I пай. Т. 183. С. 117—122.

Иккӗмӗш ҫыру авторӗ — хутла пӗлекен хресчен, Вӑрманхӗрри Шӑхаль ҫынни Варфоломей Тимофеев. Автор ку материала 1911 ҫулхи июнӗн 25-мӗшӗнче (хальхи стильпе июлӗн 8-мӗшӗнче) Н.В. Никольский историк-этнограф патне Хусана ярса панӑ. Шӑп ҫак ҫул чӑвашсен чаплӑ ученӑйӗ «Чӑваш календарӗнче» чӑвашсем ҫинчен сведенисем пуҫтармалли программа пичетленӗ[16].

## 2. Чӗмпӗр кӗпӗрнин Пӑва уесӗнчи Турхан вулӑсӗн Вӑрманхӗрри Шӑхальри Варфоломей Тимофеев хресчен 1911 ҫулхи июнӗн 25-мӗшӗнче Н.В. Никольский патне янӑ ҫыру

*Эпир, тӗне кӗнӗ чӑвашсем, пиртен тутарсем инҫе мар, ҫичӗ ҫухрӑмра, пирӗн яла мишерсем (тутарсем) нумай*

*пыраççĕ. Пирĕн чăвашсем тутарсем хăйсен тĕнне вĕсен Мăкамет хушнине тĕрĕс тытса пурăнаççĕ теççĕ. Чăвашсем тутар тĕнне ĕненмеççĕ те, чăваш хăй тĕнĕ çинчен нимĕн калама та пĕлменни темĕн чухлĕ.*

*Пирĕн ял: Симбирской губернии Буинского уезда Тархановской волости дер. Подлесных Шигалей. Пирĕн ял Апăрша çырми икĕ юппи хушшинче вăрман хĕрринче ларать, типĕ çырма хăй, тарăн, çулла чĕп ĕçмелĕх те шыв юлмасть, вăрмана кĕрсен çырма пĕтет. Пирĕн Апăрша çырми Пăла шывне тухать. Пирĕн ялта арçын 340 çынна яхăн, хĕрарăм 280 çынна яхăн, мĕн пурĕ 620 çынна яхăн пурăнать. Чăвашран урăх тĕн çук пирĕн ялта, пĕр-икĕ виçĕ кил вырăссем пур та, вĕсем те полный вырăс мар. Пĕри, салтак, майра вырăс хĕрне илнĕ, вĕсем чăвашла калаçаççĕ, тепри пурлакара[17] çӳрекен (из духовного рода), арăмне учитель илнĕ те, вĕсем ачисемпе вырăсла калаçаççĕ, тата тепри, салтак, майра илнĕ те тоже чăвашла калаçаççĕ.*

*Ваттисем калаçаççĕ: пирĕн çырма эпир астăвасса шыв вар тăрăх çерем çинчен кăна юхать, теççĕ. Халь чиркӳ лартса чиркӳ те курăнас çук. Тата калаçаççĕ: укăлча ăшĕнче выльăх çисе пĕтерейми курăк пулнă, этем çисе пĕтерейми çĕр çырли пулнă, унтан укăлча ăшĕнчен утă çула пуçларĕç тет те, малашне ырă самана пулас çук, укăлчаран утă çула пуçларĕç, тесе калаççĕ  ваттисем. Халь укăлча ăшĕнче çырлапа утă мар, чечек кăларнă вăхăтра та чĕп çыртмалăх курăк çук, йĕтем пек хуп-хура тăпра. Аллă çул малтан вăтăр-хĕрĕх кил кăна пулнă, халь çĕр çирĕмултă (126) кил. Кивĕпе утмăл пилĕк ят пулнă, халĕ çĕнĕлле тусан виç çĕр сакăр (308 душ) ят.*

*Тата ваттисем калаçаççĕ: ĕлĕк чӳк[18] туса, киреметсене[19] пуççапса, чей ĕçмен, хальхи вырăсла саккунсене те пĕлмен, пальницисем те пулман, кайман та, пальница, им вырăнне ĕлĕк чуксем тунă. Ватти-вилнисене хывса пурăннă, чиртен-муртан хĕр аки[20] туса ял тавра çаврăннă, тата урăххисем те пур чăваш йĕркисем, и тоже авалхисем сывлăхлă, вăрăм ĕмĕрлĕ пурăннă теççĕ.*

*Чăвашсем — вăтам çынсем, ытла пысăк мар, ытла пĕчĕк мар, илемсĕр çын сахал, илемлĕ шăм-шаклă, уссине вăрăм ӳснине, мăйăхне çăра тухнине, çамрăксене çӳçне салтакла илнине, çӳллĕшĕ икĕ аршинтан[21] кайине юратмаççĕ,*

*тăват-пилĕк вершуклине[22] юратаççĕ, хулăнăшне çирĕм ик вершуклине, çинçе те вăрăммине; сарлака та хулăммине, çӳллĕшĕ лутрине юратмаççĕ. Хĕрарăма çӳллĕшне икĕ аршинтан икĕ-виçĕ вершук маллине юратаççĕ, ик аршинтан кайине, çӳхине «килĕшӳсĕр» теççĕ. Куçĕ чакăр, кăвак куçлине юратаççĕ.*

*Арçын тумтирĕсем: тăлăп, кĕрĕк, сăхман, чаппан, шелеткĕ[23], халат, пиçихи, чĕн пиçихи, тумтир çинчен çыхакан кушак пиçихи, шарăх[24], çĕлĕк, халь пеншаксем[25] те, вырăс тумтирсене те тăхăнаççĕ, кĕпе-йĕм, партанка[26], хĕлле шур тăла, çăпата, ăшă чăлха, çăм чăлха, алса, пански алса, сăран алса, çăм алса, шăлавар.*

*Хĕрарăм тумтирĕсем: тутăр, тухья, ешен, хӳре, сурпан, пиçихи, çут пиçихи, пуç тутри, сăрка[27], хушпу, пански чăлха, тăла чăлха, пушмак, пачинка[28], ум çакки, шăрçаллă мăя, тевет, тенкĕлле мăя, мăя, тухья-хушпу çинчен тăхăнакан калпак, шӳт шерепи, хĕлхăлхи[29], чĕн пиçихи, çăпата, кăкăрлăх. Тухьяна тиртен тӳпеттей пек туса, тăрнашкаллă туса, тĕслĕ-тĕслĕ вĕтĕ шăрçасемпе тĕрлесе çĕлеççĕ. Янах айĕнчен çыхаканнисене тенкĕсем çакаççĕ йĕри-тавра сапаклантарса[30].*

*Хушпăва та хулăн тăларан калпак пек туса, нухратпала кĕмĕл укçасем çакса тăваççĕ, ĕнсе хыçĕнчен вĕт шăрçапа шерепелентерсе, сурпан вĕçĕ пек антарса, чи вĕçне хӳре пек туса çакаççĕ. Хĕрсем тухья, арăмсем хушпу тăхăнаççĕ. Хĕрарăмсем ĕçлеме кайса тумланаççĕ, çулла хĕрсем праçник ум кĕрĕше[31] тырă вырма кайнипе тумланаççĕ е хăйсен пĕтсен ахаль кун кĕрĕше каяççĕ. Хĕлле те ыраш çапма кĕрĕше кайса тумланаççĕ, çуркунне вăрман тасатма кайса тумланаççĕ, пуянсене ашшĕсем тумлантараççĕ. Праçникре пушмак-атă тăхăнаççĕ, ĕç вăхăтĕнче çăпата сыраççĕ. Арçын атă тăхăнать, хĕрарăм пушмак-патинка тăхăнать. Çăм атă пурте тăхăнаççĕ.*

*Тумтир çинчен: халĕ ĕлĕк тăхăнман тумтирсене тăхăна пуçларĕç теççĕ. Чаплăран та чаплă тăхăнать теççĕ.*

*Пуянсем витре çурă ĕçеççĕ, çукăнсем пĕрер четвĕрт ĕçеççĕ, четвĕрт ĕçейменнисем те пур[32].*

*Пĕрре пур чăн ватă çын, сакăр вунна çитет, аттесем калаçаççĕ, çĕр çула çитсе вилнĕ теççĕ. Çĕртен иртнине те калаççĕ. Ĕлĕк чей ĕçмен, халь чей ĕçсех пăсăлаççĕ пуль теççĕ.*

*Ĕлĕк çĕртен иртнĕ, халĕ аллă çула çитсен пӳртрен те тухаймасть.*

*Чăвашсем вăйлă лавкка тытаймаççĕ, вак-тĕвек тавар кăна, чей-сахăрсемпе кăна суту-илӳ тăваççĕ. Тутарсем вата выльăх-чĕрлĕхе сутаççĕ, илмелли пулсан та тутарсем тупса параççĕ. Пиртен вун икĕ çухрăмра Юхма пасар пур. Унта пур тавар та эпир сутмалли-илмелли, пасар питĕ вăйлă пулать, вутă хаклă, выльăхсем те хаклă. Хуть кам та Юхма пасарĕ пек пыран пасар çук теççĕ. Тата Аслă Арапуç пасарĕ пур, 8 çухрăмра. Унта илес тавар йӳнĕ.*

*Пирĕн таврара анасем тăрăшĕ çĕр чалăш[33], сарлакăшĕ вунă хăлаç[34]. Анавăй[35] вăй илнине вырмасăр хăварнине çăкăр сăмсипе чавса çĕре чикнине, кĕлте çине ларса кĕл тунине, авăн тăррине[36] кĕлте çакса хăварнипе тырă ан татăлтăр тесе тутлă апат çинине, тыр-пул вăйлă, хулăм пултăр тесе.*

*Ку чухне вĕлле хурчĕ усракан çук, пымас, чăнах та, вĕлле нумай усранине калаçаççĕ, çĕршер пуç, пилĕк çĕршер пуç, хăшĕ тата ăшчутне[37] те пĕлмен теççĕ, ун пекне хурт чĕлхине пĕлет пуль теççĕ. Юн кун çуралнă çынна хуртран телейлĕ теççĕ.*

*Чăвашсем çурт таврашне йăмра, çӳçе, шĕшкĕ, хурлăхан йывăççи, пилеш, палан, хурама, йĕлме, хурăн, хăмла çырли йывăççи, йӳçĕ улма йывăççи, панулми йывăççи [лартса ӳстереççĕ]. Панулми йывăççине пур йывăçран юратаççĕ.*

*Ку таврара пулă тытмаççĕ. Кунта аслă шыв çуккă. Çавăнпа вăл йĕркене пĕлмеççĕ. Пасартан кăна илсе çиеççĕ. Воплă, тип карас, лещĕ, капченый[38] сасан, уральски, тип сасан – çавсем тухаççĕ пасара.*

*Выльăх-чĕрлĕхĕ, верно, вăл хăш çынна пĕр тĕслĕ, тепĕр çынна урăх тĕслĕ выльăх килĕшет, мĕншĕн пынине пĕлместĕп. Выльăха пăснă чух хăмăт таврашне касса илсе каяççĕ е лаша çилхине, хӳрине касса илсе каяççĕ тата вите таврашне укçа пăрахаççĕ. Мĕн каласа пăснине пĕлместĕп, пăсакансем пĕлеççĕ пуль, вĕрме-сурма вĕреннĕ çынсем вĕрсе-сурса тӳрлетеççĕ.*

*Çĕр ĕçлессинчен пуçне, хĕлле вăрман касса сутса усă кураççĕ. Хĕрарăмсем сӳс-кантăр арласа-тĕртсе ĕçлесе пурăнаççĕ. Пичке-шетник тăвакансем пур, пирĕн ялта юта каякан çук, таврари ялсенче пичке-шетник туса çӳрекенсем пур, ярмукана[39] туса каякан та пур.*

*Япала илсен килӗшсе сасатка[40] параҫҫӗ, еше кутӑн ан кайтӑр тесе. Мӑкӑрич[41] вӑл япала илсен кӗлтуса ӗҫеҫҫӗ, вӑрӑм ӗмӗрлӗ пултӑр тесе, пехил пултӑр, сана выльӑх, мана укҫи пехил пултӑр тесе. Алӑ ҫапни: алӑ ҫапса килӗшсен кутӑн кайсан усӑллӑ пулмасть теҫҫӗ, укҫи те, таварӗ те. Вӑл йӑла пирӗн таврара ӗмӗр-ӗмӗрех, пур асаттесем те пӗлмеҫҫӗ.*

*Куланай[42]: спорщик[43] хурса ят тӑрӑх хурса пухаҫҫӗ. Кам паманнине анине сутса тӳлеҫҫӗ.*

*Салтаксене хулана леҫме халӑхпа тытса леҫеҫҫӗ. Укҫине салтака кайман ӑруран кашней килрен ҫирӗм пилӗкшер пус илсе тата приюма кайнӑ чухне пӗрер тенкӗ укҫа параҫҫӗ: кайнине те, юлнине те, тата миҫе ача, пурте пӗрер тенкӗ хӑйсен укҫине староста аллине параҫҫӗ. Кайманнисен укҫи каять, кайнисем пӗрле уйӑраҫҫӗ.*

*Чирсене чунлӑ япала пулса ҫӳренине пӗлмеҫҫӗ те[44]. Мур пуссан[45] мура ӑсатаҫҫӗ ватӑ ҫынсем, купӑс каласа, юрласа: хӗр йӗрри йӗр, ачи маттур Самсун пур, кинӗ чипер Ахпике[46], теҫҫӗ; пӑтӑсем, ҫӑмартасем, какайсем, эрекесем ӗҫсе-ҫисе, чустасемпе ҫын кӗлетки[47] [туса] пусчикӗ[48] ҫӗр чиккине кайса пӑрахаҫҫӗ. Лаша кӳлсе кас тӑрӑх юрласа ҫаврӑнаҫҫӗ те пӑтӑсене кайса леҫеҫҫӗ. Халь эп астӑвасса та турӗҫ те, чӑнах та, мур ҫавӑнтанах чарӑннӑ пек пулчӗ.*

*Ача ҫуратнӑ чухне хӗрарӑмсем услам ҫу хырӑмне сӗреҫҫӗ. Чиркӳве кайса (перчешет[49]) Христос ӳчӗпе юнне сыпаҫҫӗ.*

*Ҫӗлӗклӗ-калпаклӑ, кӗпеллӗ ҫуралнӑ ачана телейлӗ теҫҫӗ. Ҫуралнӑ чух месерле ӳксен – пурӑнать, ӳпне ӳксен вилет теҫҫӗ. Ача сыссан тасатсан, кипке ҫумне сар юлсан ача пурӑнать теҫҫӗ, чухлакан чухлать те, эпир пӗлместпӗр. Тин ҫуратнӑ арӑмсем вӗрӗлес мар тесе ҫӑпати тӗпне кӗл хурса сыраҫҫӗ, сивӗ ҫил ҫине тухмаҫҫӗ, вут патне кӑмака умне пымаҫҫӗ. Ачи ҫуралсан ача патне ангел та, шуйттан та пырать пулать те, тавлашаҫҫӗ пулать, шуйттан манӑн тесе йышӑнсан вилет теҫҫӗ, ангел йышӑнсан пурӑнать теҫҫӗ. Ача ҫуратаймасӑр асаплансан пульницӑна каяҫҫӗ, папкӑ[50] илсе килеҫҫӗ. Ӗлӗк ача ҫуралсан «пусран тупрӑмӑр, шывран тупрӑмӑр, вӑрмантан тупрӑмӑр» тенӗ.*

*Ачана ят пани. Ялти ватӑсем пухӑннӑ та ача ашшӗсем патне мата (е мачча?) ҫине виҫҫӗн-тӑваттӑн улӑхнӑ та, шухӑшланӑ та ҫав ятлӑ хурас тесе кӑшкӑрнӑ. Унтан вара пӳрте кӗрсе тутлӑ апат ҫинӗ те, ача ячӗ пулнӑ[51]. Ача*

*пурӑнманнисем пурӑнччӑр тесе ак ҫапла ят панӑ: Курак, Чакак, Чӗкеҫ, Ҫерҫи...*[52] *Тата тӗне кӗртме кайнӑ чухне кама малтан тӗл пулнӑ, ҫавна кума тӑваҫҫӗ.*

*Ачана ҫуралсан пӗр эрнерен, хӑшӗ икӗ-виҫӗ эрнерен, ҫитереҫҫӗ. Пуяннисем маннӑ кӗрпесем ҫитереҫҫӗ, вӑй ҫитменнисем ҫӑкӑр е сахӑрпа чӑмласа ҫитереҫҫӗ. Килӗнче вырӑсла вӗрентеҫҫӗ, урама выляма чӑваш ачисемпе чӑвашла вӗренеҫҫӗ, ачисене вырӑсла тумлантараҫҫӗ.*

*Ачасене ҫывӑратнӑ чухнехи юрӑ: «Папи, папи, паранки, чучи, чучи, чуранки, хурама хуппи сӑпки, уртӑш йывӑҫ пӗкечи, и... и... папа, и... и... папа...» Кӗленче, ҫӑмарта, шакӑртма-шӑхличи, урапасем илсе туса параҫҫӗ. Чупакан ачасем тупӑлла, кӑлайла, шакӑлла, калӑпла, шӑтӑкла, вырӑсла тупӑлла, тухса кӗмелле, ҫакан авмалла, ҫӑкӑрла, япсӑрла [выляҫҫӗ], тата та пур.*

*Хӗрачасем пиллӗкре-улттӑра арлама тытӑнаҫҫӗ. Арҫын ачасем ҫиччӗре-саккӑрта-тӑххӑрта ӗҫе тытӑнаҫҫӗ. Венчет туни те саклаҫ*[53] *пулса ҫӑкӑр-яшка кӑна ҫинӗ тет*[54]*. Даже атте-анне, пичче, инке, хунеҫе, хунеме, аппа, йысна, пӑятам, пӑянам, пӑяхам, кин теҫҫӗ.*

*Чӑвашсем вырӑспа, ҫармӑспа, ирҫепе хурӑнташлӑ пулаҫҫӗ е юратаҫҫӗ те.*

*Тӗне кӗмен чӑваш пиртен вӑтӑр ҫухрӑмран ҫывӑхра ҫук та, пӗлместпӗр.*

*Тӗлӗке ӗненеҫҫӗ. Только кашней тӗлӗке мар. Чӑн пулӗ: сайра тӗлӗк чӑнни теҫҫӗ. Кам ватӑрах ҫын чухлать, ҫавна тӗлӗк параҫҫӗ. Яла кӗтӳ кӗрсен мур пулать теҫҫӗ, тӑрӑ шыв курсан — кун ҫути, йытти ҫыртсан — ҫын вӑрҫасса, ҫапасса, арман хытӑ авӑрсан — пуҫ ҫаврӑнасса, ача тытсан — чир, ҫын вилсен — чӗрӗлессе, чирлӗ ҫын чӗрӗлсен — вилессе, арман тупсан — пурнӑҫ пӗр май пырасса, юман кассан — арҫын, ҫӑка кассан — хӗрарӑм вилессе. Хӑш енче каснӑ, ҫав енче вилессе, хӗрлӗ вӑкӑр выляса ҫӳресен — вут-кӑвара, пӑрҫа курсан — йӗрессе, ҫӑмӑр курсан — йӗрессе, хурт вӗҫсен — юр ҫӑвасса, сӑра ӗҫсен — йӗпене, хавасланса юрласа ташласан — йӗрессе, хуйхӑрса йӗрсен — аван вӑл, ӳсӗр пулсан — хуйхӑ, тырӑ вырса пӗтерсен — вилессе, суха тусан — ҫын вилессе. Ҫӑкӑр нумай тупсан курсан — нумай пурӑнасса теҫҫӗ. Тата та нумай, хут та ҫитмӗ.*

*Вăрçнă чух: по-матерна ругат[55] туса хытă вăрçаççĕ. Упăшки ĕçкĕллĕ пулсан арăмĕ хуçа пулать. Ашшĕпе хăшĕ тĕпе юлать, çавна нумайрах пулать. Тĕрли пур, ашшĕ поряткалă[56] пĕр пек парсан хăех уйăрса кăларать, çурт памасан халăх илсе парать. Пин те пĕрре питĕ пуянни, мулне хĕрĕ валли те пай кăлараканни пур. Ача-пăчи юлмасан ратнине, хурăнташне пулать. Пекунт[57] вун сакăр, çирĕм, çирĕм икĕ çулччен тăваççĕ.*

*Чăвашсем вырăса юратаççĕ. Тутара тухнă чăвашсем Христос тĕнне тытакансене юратмаççĕ те, йĕрĕнеççĕ те. «Чăвашсем ма вырăс пулман-ши?» — теççĕ.*

*Пухăва кайма, кам пуян, чаплă, хаяр, çивĕче юратаççĕ. Ĕçе те çавсемех тăваççĕ. Укас килсен сельской писарь пухура вуласа кăтартать. Сельской писаре вырăсла пĕлекенсем куçарса параççĕ. Пирĕн волостной сутра[58] чăваш сутйисем, кам вăрттăн укçа парать, çавăн май сутит[59] тăваççĕ, е паллашнă хурăнташ май сутит тăваççĕ. Юратакан юратать, юратманни юратмасть, тĕрлĕ çын пур, хăшин сута çӳресси килет. Турă тавăртăр тесе калакан нумай. Вăрăсем лашана нумай вăрлаççĕ. Вара май килсен пустараççĕ, пустараймасан сута параççĕ, çынна вут тĕртекене тытсан премо вута ы[вă]таççĕ. Ваттисем калаçаççĕ: айăпсăр çынна пĕр айăпĕсĕрех çухалнă, çухалчĕ теççĕ, пĕр айăплă çын пĕтĕм ратнине, пĕтĕм ял-йыша айăпа кĕртет теççĕ.*

*Чăвашсем тупа туни. Ей Богă, Турă пур, çавна ан курам, çĕлĕк[ĕ]ме ан курам[60], Турра ан курам, чиркĕве ан курам. Çĕр çыртаççĕ тата ачи-пăчине асăнаççĕ, тытаççĕ, тата та нумай. Мур-мĕн пу[л]сан «хамăр çылăхшăн Турă янă пулĕ» тесе калаççĕ. Мур килессе чухлакан чухлать, теççĕ, тĕлĕк тăрăх.*

*Чăвашсем вилене кункăра туса вырттарнă[61], пуçне кăнтăралла туса айăккăн вырттарнă, сылтăм аллине аялалла туса вырттарнă теççĕ. Ах тесе сывласа янинчен урăх сывламан, ӳчĕ-тирĕ пĕр пек шăнса кайнă. Çын вилсен пытарма лашапа, хăнкăрав-шăнкăрав çакса, тилкепе вырăнне пир хунă[62], çапла пытарма кайнă. Çын хĕвел тухнă чухне вилсен «кун пĕтмесĕр вилет» теççĕ, хĕвел аннă чухне вилсен «кун пĕтсе вилнĕ» теççĕ.*

*Çăлтăр ӳкнине курсан «çын вилет» тенĕ, «хăш енче çăлтăр ӳкет, çав енче çын вилет» тенĕ. Асамат кĕперне*

*курсан «çырмаран аслă шывран шыв илет, туртать» тенĕ. Çумăр-мĕн çумасан çерçи учӳк[63] тунă. Çерçи [учӳкĕнче] кашней килрен сĕт, кĕрпе пухса çырма хĕрринче, пĕве хĕрринче икĕ хуранпа — пĕринче сĕтпе пăтă, тепринче сĕт яшки — пĕçерсе çинĕ, унтан çерçи тытса шыва янă, çăмăр хуллисене илсе хуçса килсе шыва лартнă, хĕр-хĕрарăмĕ шыва кĕрсе таврăннă.*

*Çавра çиле тухатмăш, асамçă çын çавăрса çӳрет пулать, çавăнпа çавра çил ăшне çĕçĕ-мĕнĕ ытсан тăрăнать пулать[64]. Пирте халап пур: пĕр çын çара çиле çĕçĕ ывăтнă та, çĕççи çухалнă, пĕр виçĕ уйăхран ку сутта кайнă та хăваттире çывăрма кĕнĕ, унта ку хăйĕн çухалнă çĕççине паллать. Ку ыйтать: «Ăçтан тупрăн ку манăн çухалнă çĕççе? — тет, хваттер хуçи калать: «Ху мана çавăрса иртсе кайнă чух çĕççĕне ывăтрăн та, мана çурăмран тăрăнчĕ», — тенĕ те хăйĕн çурăмне кăтартса каланă тет. «Тьфу! Тьфу! Ăçтан килнĕ çавăнтан ху çулупа кай», — тесе каланă тет.*

*Кунта турă кĕлеткисем туман, йăвăçа, тункатана, катана, çырма пуçне, çырмасене, вăрмансене, хăйсем вĕрентнисене кăна пуççапнă. Чӳк туса пурăн, чӳк тунă чух ял ăçта пуççапма вĕрентнĕ çавăнта кашни килĕрен пашалу пĕçерсе кайнă, ялпа тиха, така, хур-кăвакал, вăкăр илсе кайнă, пирвай çӳлти Турра — чăн Турра — така пуснă, панă. Унтан киремете — выльăхсем çине сивĕ шыв янă та, çырлахать-и, çырлахать-и тесе тăнă та, чĕтренĕ те, çырлахрĕ, каçарчĕ тесе тин пуснă (сивĕ шыв ярсан чунлă япала чĕтремесĕр тем тутăр) та пысăк хурансемпе пĕçернĕ, унтан пĕтĕм ял-йыш ларнă та, ватă çынсем какайне-ашне, пашалуне, пăттине пурне те валеçнĕ. Хĕрсем, арçын ачасем унта вăйă[65] вылянă. Унтан пилеш патакки вăрмантан касса таврăннă та шатăртаттараканни тунă. Кашней килрен шатăртаттарса шаккаса, пилеш патакпа кашней хуралта çапса-хĕнесе тухнă. Кашней хуçа хăшĕ çăмарта, шăрттан парса янă, çапла сĕрене[66] хăваласа тухсан çăмартасене сĕрен хăвалакансем çерем çине тухса çинĕ. Унтан тепĕр кунах хытă сухана[67] тухнă. Çапла вĕсем чир-чĕртен, инкекрен-синкекрен çапла тунă. Тата муртан хĕрĕх хĕр хĕр аки туса сухаласа çавăрнă ял тавра.*

*Кунти чăвашсем (кĕлетке) хăйсене пуççапмалли турăсем туман, святой иконсем анчах лартнă.*

*Вăпăр[68] çывăрнă чухне ыйăхран вăратман теççĕ. Арçури вăрманта кăшкăрса çӳрет теççĕ. Шыва май тесен çынна тупаймасть тет, шыва хирĕç тесен çынна тупать тет. Çынпала калаçнă теççĕ. Вĕре çĕлене[69] каçпа вут пек вĕçсе çӳрет теççĕ, çынсене улталать теççĕ. Эсрелĕ çын вилнĕ чухне чун илме килнĕ теççĕ. Киремет [тесе] пуççапма вĕрентнĕ вырăнсене калаççĕ. Хĕрт-суртне çурт хуçи тенĕ, кашней çуртра пур теççĕ. Ăна пăтăпа чӳк тăваччĕç тет, халь тумаççĕ. Пирĕшти[70] тесе ангел-хранитель тетпĕр, çавна каланă.*

*Унта ыттисене курмасăр-илтмесĕрех каланă пуль, чăваш сăмахне пурне те çырас тесен хут та çитмест.*

*Шыврине шыва кайсан çăнăх-кĕрпесем янă. Çав вырăна усал ерсе тепĕр çынна хăратнă. Çавна «шыври шуйттан» теççĕ. Чăваш вăл нимĕн те пĕлмест, тĕлĕк пек анчах калаçать. Чăвашсем пин тĕслĕ халăх, пин тĕслĕ чĕлхе ăçтан тухнине пĕлсе пĕтерейменççĕ. Чăваш тĕнне ăçтан тухнине пĕлмеççĕ, хăй[сен] тĕнне хăй[сем] те пĕлмеççĕ. Крым çинчен те нимĕн те каламаççĕ. «Мадяр», «ходяр», «булгар», «бешене», «биляр»[71] тенĕ сăмахсем илтмен те.*

*Чăвашсем çын чунĕ леш тĕнчене куçать теççĕ. Шуйттана ангелтан пулнă теççĕ. Вот калаççĕ: кам çылăхлă, унăн чунне шуйттансем лаша туса çӳреççĕ теççĕ. Юмăç-вĕрӳçĕ, чĕлхеçĕ, асамçă, тухатмăш, пăсамçă шуйттан вĕрентнипе пĕлет теççĕ. Пăртак хут пĕлекенсем авалхи йăлана пăрахнă.*

ЧПГĂИ ĂА. Историпе фольклор, этнографи пайĕ. I пай. Т. 207. С. 47–54.

Варфоломей Тимофеев программа ыйтăвĕсем çине тĕплĕн хуравласа питĕ паха материал пуçтарать, çав шутра: ял вырнаçнă вырăн çинчен, çын шучĕ (маларахри тата çав вăхăтри), кунта е çывăхра пурăнакан ытти халăх çыннисем, миçе ят çĕр, халăх сăн-сăпачĕ, чăваш тумтирĕ, пуянсемпе чухăнсем, сывлăх, чир-чĕр тата ĕмĕр тăршшĕ, суту-илӳ, çĕр ĕçĕ тата унпа çыхăннă йăла-йĕркесем, хурт-хăмăр ĕçĕ, мур чирĕ, пахчара ӳсекен йывăçсем, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе çыхăннă пулăмсем, арçынсен тата хĕрарăмсен ал ĕçĕ, сататкă, мăкарич, куланай пухни, салтака ăсатни, ача çуралнипе çыхăннă йăла-йĕрке, воспитани, çемье, вилесене епле пытарни, ялти пухусем, вулăс правленийĕ, вулăс сучĕ, мифологи, XX

ĕмĕрчченех сыхланса юлнă чăваш тĕнĕ, тĕлĕксем, чӳксем т.ыт.те. Автор çĕнĕ пулăмсене, улшăнусене палăртать, вĕсем, калăпăр, тумтирте, йăла-йĕркесенче, хутла вĕреннинче палăрнă. Паллах, начар енлĕ улшăнусене те асăрхамасăр иртсе кайма çук, сăмахран, çав вăхăтра эрех ĕçес йăла çирĕпленме тытăнни, вырăс чĕлхинчи мат сăмахĕсемпе усă курма пуçлани. В. Тимофеев авалхи вăхăтра халăха, уйрăмах ваттисене ытларах хисепленине асăрхать.

Автор çырса хăварнисем Нăрваш Шăхальсен çĕр-ик çĕр çул каяллахи пурлăх тата ăс-тăн культурине аван çутатса параççĕ.

Андрей Упа çырăвĕнче те, Варфоломей Тимофеев çырнă çырура та таврари Çĕньял, Тикеш, Именкасси чăвашĕсене аса илмеççĕ, кӳршĕ ялти мишерсене сăнлаççĕ. Вĕсем çыннăн тĕрлĕ пахалăхĕпе Шăхаль çыннинчен уйрăлса тăнине палăртаççĕ, çавăнтах мишерсен вăйлăрах енĕсем пирки çырсан Шăхаль çыннисем те (хăш-пĕр енчен те пулин) аптрасах тăманнине палăртаççĕ.

**Литература, асăрхаттарусемпе ăнлантарусем**

[1] Николай Васильевич Никольский (07.05.1878 – 02.11.1961) – историк, этнограф, фольклорист, истори ăслăлăхĕсен докторĕ, профессор. «Хыпар» хаçат йĕркеленĕ (1906), «Çулталăк кĕнеки» чăваш календарьне çĕнĕрен йĕркелесе пичетленĕ (1903–1914). Тĕплĕнрех: Чувашская энциклопедия: в 4 т. / Чуваш. гос. ин-т гуман. наук. Т. 3: М–Се. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2009. С. 241. URL: http: // enc.cap.ru.

[2] *Димитриев В.Д., Леонтьев А.П., Матвеев Г.Б.* Н.В. Никольский – ученый, просветитель, общественный деятель. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2011. С. 99.

[3] Çулталăк кĕнеки = Чувашский календарь – чăваш календарĕ, Н.И. Золотницкий 1867 çулта кăларма тытăннă. 1903 çулта çĕнĕрен кăларма пуçлаканĕ – Н.В. Никольский. Календарьте халăх сăмахлăхне, сăвăсене, калавсене, вырăс писателĕсен чăвашла куçарнă хайлавĕсене, тĕрлĕ этнографи материалĕсене, вĕрентӳ ĕçĕнчи документсене пуçтарса пичетленĕ. Çав кĕнекерех Никольский профессор вулакансене хăй йĕркеленĕ методикăпа материалсем çырса ярса пама ыйтнă. 1996 çултан пуçласа Чăваш наци библиотеки кашни çул тухакан «Время. События. Люди» альманаха ĕлĕкхи пек «Çулталăк кĕнеки» ятпа кăларать.

[4] Малалла автор Н.В. Никольский ырă ĕçсем тунăшăн савăннине пĕлтерет, çынсене çутта кăларас тесе тăрăшнăшăн унпа мухтаннине палăртать.

[5] Шăнкăртам мишерĕ çак ĕçе тăвас тесе малтанах шутласа, тепĕр мишерпе кавар туса, тен, Шăхаль ялĕнчи пĕр-пĕр айван çынна палăртса та хунă пулĕ. Çавăнпа ĕнтĕ мишерĕ яла çитсен лавçа килне кĕртсе хăналать, хăнийĕ лăштăрах пулсан купăс каласа лавçăн сисĕмлĕхне вăйсăрлатать. Тен, çакнашкал «спецопераци» таврари тĕрлĕ ялсенче пĕрре çеç мар иттернĕ.

[6] Казанская губерния, Курмышский уезд... Тĕплĕнрех: Чувашская энциклопедия. Т. 2. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2008. С. 406.

[7] Вĕрӳ-суру чĕлхи (Наговор) // Ашмарин Н.И. Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. Т. 5: Й–В. Шупашкар: Руссика, 1994. Репринт. кăларăм. С. 354–356.

[8] Вилнĕ çынна асăннă чухне аслинчен пуçласа черетпе пурте хывнă: çăкăр, икерчĕ тата ытти çимĕçе пĕрер татăк хуçса илсе пĕр чашăка хывнă, унтах пĕрер кашăк пăтă, яшка хывнă, тепĕр савăта кăшт сăра тăкнă. «Пехил ту! Пĕр турам çăкăр пĕр çăкăр пултăр. Акă сана какай, икерчĕ, сăра, эрех. Леш тĕнчере те кунти пекех пурăн, ĕç, çи», – тесе каласа хывнă. Хунă çимĕçе урама е хапха юпи патне илсе тухса тăкнă, ăна йытăсем çиеççĕ, çапла майпа хывни вилнисем патне çитет тесе шутланă.

[9] *Вальки, валле. Валь* турă ячĕ, *валĕм* (доля) сăмах чӳк туса панине пĕлтерет. Калăпăр, киремете валĕм, хĕрт-сурта, карта пуçне т.ыт.те чӳк туса панă чухне: «Валĕм пултăр!» – тенĕ. Чӳк валли пуснă выльăха та çаплах каланă: валĕм лаша, валĕм пăру, валĕм путек...

[10] *Просверни – просвир* (чиркӳре тĕн йăли-йĕркине тунă чухне усă куракан пĕчĕк кулач). Кашни прихутра просвир пĕçерме пĕр хĕрарăма уйăрса лартнă. Ăна ĕçшĕн тӳлеме, çăнăх туянма халăхран укçа пуçтарнă. Текстра çавăн çинчен сăмах пырать.

[11] 1904–1916 çулсенче Чĕмпĕрти тĕн семинарийĕнчен вĕренсе тухнă Николай Иоаннович Румянцев службăра тăнă // Государственный архив Ульяновской области Ф. 134. Оп. 2. Д. 321. Л. 52–54 об.

[12] *Десятина* – теçеттин. Ят çĕрĕ кашни пусăра е хирте 153,5 теç. Ят çĕрне арçын пуçне панă (мужская наличная душа), хăш чухне хĕрарăмсене те. Теçеттинре 10 925 тăваткал метр, е 1,09 га, пулать, Пусăсем виççĕ пулнă: уçăм пусси, е ыраш пусси «озимое поле», çур тырри пусси «яровое поле», çĕртме пусси «паровое поле». Çавăнпа автор кăтартнă хисепе 3 çине хутламалла: 153,5 х 3 = 460,5 теç. Кашни пусăна пĕр тан шутласан, вĕсем яланах тан пулмасан та пултарнă. Ялта 383 ят, виççе хутласа пулнă числона 383 çине пайлăпăр: 460,5 : 383 = 1,2 теç. Кашни ят çĕрĕ пуçне 1,2 теç. çĕр тивнĕ. Ку чăваш ялĕсен вăтам хисепĕнчен пĕчĕкрех.

[13] Автор асăннă сăмах «кодовый», «кодировка» (вăрттăн паллă) сăмахсенчен пулнă тесе шутламалла. Урăхла каласан, йывăç касма паллă тунă лаптăк. Вĕсене картса штамп çапса палăртнă. Автор пĕр кадавккаран 10 лав тухать тесе çырать, 25 кубла метра яхăн.

[14] Юрӑ сӑмахӗсене ҫыру авторӗ хӑй ҫырма та пултарнӑ. Литературӑра ун пек тӗслӗх урӑх курӑнмарӗ.

[15] Чӑваш Республикин патшалӑх историйӗн архивӗнче интереслӗ материал тӗл пулчӗ. Ҫавна пӗтӗмӗшле, ним улӑштармасӑр илсе паратпӑр: «Нӑрваш Шӑхаль ялӗн хрестком ларӑвӗ. № 4-мӗш протокол. 29.04.1928 г. Ларура 8 ҫын пулнӑ. Пуҫлӑхӗ – Калашников. Ҫыруҫи – Хура Куҫ Хветӗр.

Пулӑшу ыйтса панӑ заявленисене пӑхса тухнӑ хыҫҫӑн ҫакӑн пек йышӑну тунӑ: Ҫӗнӗ Шӑхальсене: Алексей Убана – икӗ пӑт сӗлӗ парас (вӑрлӑх), Андрей Убана – пӗр пӑт сӗлӗ, Игнати Убана – сутшӑн (ссуда. – *Ю.И.*) тӳлеме 1-мӗш октябрьччен вӑхӑт парас» (Чӑваш Республикин патшалӑх историйӗн архивӗ. Ф. 2299. Оп. 1. Д 1 б. С. 13).

[16] *Никольский Н.В.* Собрание сочинений. Т. 1. Труды по этнографии и фольклору чувашского народа. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2004. С. 450–464.

[17] *Пурлакра* — бурлака кайни.

[18] *Чӳк* — йӑла-йӗрке, ырӑ турӑсене, усал сывлӑшсене, ваттисене кӗлтуни тата парне пани, ырлӑх ыйтни, ҫырлахтарни. Ҫулталӑк хушшинче тӗрлӗ чӳксем сахал мар туса ирттернӗ. Автор хӑшӗ-пӗрисене асӑнать.

[19] *Киреметсем* — аслӑ тата кӗҫӗн ырӑсем. Вӗсене асӑнмалли вырӑнсем кашни ялӑнах пулнӑ (ҫӳллӗ вырӑн, киремет йывӑҫҫи, ҫӑлкуҫ), вӑл асамлӑ вырӑнсене халӗ те пӗлеҫҫӗ. Киремет чӳкӗсене пӗтӗм халӑхпа ирттерме XIX ӗмӗрӗн пуҫламӑшӗнчех чарнӑ, ҫапах та вӗсене вӑрттӑн каярахпа та тунӑ. Мӑшӑрланакан каччӑпа хӗр киремете парне пама XX ӗмӗрченех ҫӳренӗ. Унта ытти сӑлтавсемпе те кайнӑ.

[20] *Хӗр аки* — авалхи йӑла-йӗрке, ял тавра хӗрсем тумтирӗсене хывса, сухапуҫне кӳлӗнсе ҫӗрле хӗвеле май йӗр туртса ҫаврӑнни. Ӑна ҫынсене тата выльӑхсене мур чирӗсем лекесрен туса ирттернӗ.

[21] *Аршин* — аршӑн, виҫе 71,1 сантиметрпа танлашать. Аршӑнпа ҫурт-йӗр тунӑ чухне, ҫӗр тата ытти япаласен тӑршшӗне виҫнӗ чухне усӑ курнӑ.

[22] *Вершук* — вершок, виҫе 4,4 см.

[23] *Шелеткӗ* — жилетка. XX ӗмӗр пуҫламӑшӗнче ҫӗнӗ йышши тумтир туянма, ҫӗлеттерме тытӑнаҫҫӗ. Кун пек тӗслӗхсене автор татах та илсе кӑтартать.

[24] *Шарӑх* — шарф.

[25] *Пеншак* — пиншак.

[26] *Партанка* — пурттенкке.

[27] *Сӑрка* — ӗлӗкхи тум эрешӗ; мӑй, кӑкӑр е ҫурӑм ҫине ҫакнӑ ҫип тата шӑрҫа эреш; сыхӑ-управ пӗлтерӗшлӗ. Г.Н. Орков тӗпчевҫӗ анат енчи чӑвашсен эрешӗ тесе ӑнлантарать.

[28] *Пачинка* — пушмак (ботинки).

[29] *Хӗлхӑлхи* — пallӑ мар сӑмах.

[30] Хĕрарăмсен тумĕ-эрешĕ питĕ кăткăс пулни курăнать. Халĕ чылайăшĕ сыхланса юлман.

[31] *Кĕрĕш* — харпăр хăй вăйне сутни (наниматься).

[32] Автор пуянлăха çĕнĕ меслетпе — эрехпе (ханшапа е лавкка эреххипе – уççăн палăртман) виçет. Н.В. Никольский апат-çимĕç пирки темиçе ыйту та лартнă, В. Тимофеев пĕр ыйтăвĕ çине çеç («Çулталăкра халăх эрехе миçе витре ĕçет?») хурав парать.

[33] *Чалăш* — виçе (косая сажень), 248 см.

[34] *Хăлаç* — виçе (маховая сажень), 176 см.

[35] *Анавăй* — пулăхлăх йăла-йĕрки (культ плодородия).

[36] *Авăн* — кĕлте типĕтме вĕрлĕксемпе конус евĕрлĕ туса лартнă хатĕр, тĕпĕнче шăтăк чавса вут хунă, тĕтĕмпе кĕлте типĕтнĕ. Анкартинчи лашапа кĕлте аштармалли юпа тăррине те çапман кĕлте çыхнă. Ку йăла-йĕрке те пулăхлăхпа çыхăннă.

[37] *Ăшчут* — счет.

[38] *Капченый* — тĕтĕмленĕскер.

[39] *Ярмука* — ярмăрккă.

[40] *Сасатка* — задаток.

[41] *Мăкăрич* —мăкарич (магарыч).

[42] *Куланай* — налук.

[43] *Спорщик* — сборщик.

[44] Кун пек ыйтăва Н.В. Никольский панă, автор хурав парайман пек çырать. Тĕрĕссипе хуравĕ пулнă. Мура каччă евĕр сăнласа, ăна «хĕр парса» (чипер Ахпике), хĕр йĕрри йĕрсе, юрласа, «хăна туса» (ĕçсе-çисе) кучченеçсемпе ял çĕрĕн чиккине ăсатса янă.

[45] *Мур пуссан* — сикекен чир (эпидеми) хăвăрт сарăлни.

[46] Самсон – Библири сăнар (Авалхи (е Кивĕ) Халал. Израиль Тӳрисен кĕнеки. 13–16-мĕш сыпăксем), филистимлянсемпе ирĕклĕхшĕн кĕрешнĕ. Пĕчĕклех вăйлă ача пулнă, ирех авланма шутланă, анчах та унăн авланма юраман. Тен, çырури Ахпике Самсонăн хĕрĕ-арăмĕ Далида (Далила) пулĕ. Çак сюжетра чăвашăн тĕрлĕ чирсемпе е йывăрлăхпа кĕрешме авалхи культурăн йăлипе Христос тĕнĕн таса (сăваплă) кĕнекисенчи йăла-йĕрке хутшăнса пĕр ĕç тума пуçлаççĕ. Текстра Самсун сăнарне уçăмлах палăртман. Пирĕн шутпа, Самсун сăнарĕн пĕлтерĕшĕ икĕ енлĕ. Текстра вăл мурпа пĕр шухăшлă çын та, мурпа кĕрешекен те пулма пултарать (Библи сюжетĕнчи пек). Йăла-йĕркере Самсун ятне ыт ахальтен асăнман. Çак икĕ сăнарăн (мур тата Самсун) пĕрпеклĕхĕсем пурри курăнать: пысăк хăват, вăрттăнлăх, хăвăртлăх, харăсах нумай çынна пĕтерсе хума пултарни, вĕсен асамлă вăйне илемлĕ, çамрăк арăма «качча парса» хавшатни.

[47] Çын кĕлеткине пукане пек тунă.

[48] *Пусчикĕ* — çĕр, ана чикки (межа).

[49] *Перчешет* — причасти (причащение).

[50] *Папка* — папак, ача.

[51] Ача ят пани. Унăн варианчĕсем нумай. Автор каласа кăтартни — çăлкуçсенче сайра тĕл пулакан тĕслĕхсенчен пĕри. Авалхи вариант, паллах, автор вăхăтĕнче легенда вырăнĕнче çеç пулнă.

[52] Çырусенче асăнакан ятсем, паллах, çĕнĕ тĕне пăхăнса панисем (Андрей, Сидор, Игнатий, Леонти, Айкка Левентей (Айкин Леонтий пулĕ), Кушак ачи Алексей Степанов (Кошкинсен йăхĕнчен пулĕ), Самсун, Ахпике), анчах тĕрлĕ «усал» çамрăк çемьесене аптрата пуçласан çĕнĕ тĕнĕн вăйне шанмасăр усалсене авалхи чăваш йăли-йĕркипех, нумай ĕмĕр хушши усă куракан хăватпах табу шайĕнчи чăваш ячĕсенех параççĕ. Общество хутшăнăвĕнче православи ячĕсемпе, кил-йышри, пĕр çемьери çынсемпе хутшăнма вара хушма ятсемпе усă курнă. Тĕплĕнрех: *Андреев И.А.* Çын ячĕсем. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви. 1983. 62 с.

[53] *Саклаç* — килĕшни (согласие).

[54] Венчете тăнине автор ячĕшĕн çеç туса ирттернине палăртать: *çăкăр-яшка кăна çинĕ тет.*

[55] По-матерному – намăс сăмахсемпе (вăрçнă чух) усă курни пирки. Халăхра вырăс сăмахĕсемпе усă курма тытăннă, ĕлĕкрех ун пекки пулман.

[56] *Поряткалă* – йĕркипе.

[57] *Пекунт* — опекун.

[58] *Волостной суд* — вулăс сучĕ.

[59] *Сутит* — суд туни, приговор йышăнни.

[60] *Çĕлĕкме ан курам* — пуçа ан курам.

[61] Чăвашсем вилене кункăра туса вырттарнă. Юманран кункăра туса пытарасси XVIII ĕмĕрте пулнă.

[62] *Тилкепе вырăнне пир хунă* — йăла-йĕрке. Шурă пирпе тилхепе вырăнне усă курни — ытларах хĕрарăма пытарнă чухнехи йăла-йĕрке. Кайран пир тилхепене пытарма пынă çынсене касса панă.

[63] *Çерçи учӳк* — çумăр чӳкĕ. Автор çумăр хуллисене асăнать, вĕсене çăмарта хуппи тăхăнтартса шыв хĕррине лартнă, çерçисене çав патаксенчен çыхнă. Ват çынсем пашалу, юсман пĕçернĕ, хĕвел тухăçнелле тăрса турăсенчен çумăр ыйтса кĕлтунă.

[64] *Çавра çил* — мифологире усал сывлăш, шуйттан. Автор юлашки тапхăрта сарăлнă ăнлантарупа паллаштарать. Ку вариантра усал сывлăш вырăнне чăн персонажа кăтарнă.

[65] *Вăйă* — çамрăксем ирттерекен йăла-йĕрке, вăйă карти, вăйă юррисем. Вĕсене Çимĕкрен Питравччен вылянă. Автор уй чӳкне киремет чӳкĕпе арпаштармасть-ши тесе шутлама пулать. Çăлкуçсем учукра вăйă выляни çинчен пĕлтереççĕ. Киремете чӳк тăвас вăхăт ытларах тырă-пулă пуçтарса кĕртсен пулнине палăртаççĕ.

[66] *Сĕрен* — усал сывлăшсене, чир-чĕре кил-çуртран, ялтан хăваламалли йăла-йĕрке. Ăна Мункунта (авалхи Çĕнĕ çул) туса

ирттернĕ. Автор сĕрене киремет чӳкĕпе çыхăнтарать. Кунта автор арпаштарни е ку тăрăхри йăла-йĕрке татса калама йывăр.

[67] Хытă *суха* — çĕртме (паровая пахота), çак вăхăтпа çĕртме (июнь) уйăхĕ çыхăннă.

[68] *Вăпăр* — вупăр, усал сывлăш, тухатмăш чунĕ, вампир. Вупăр çынна çывăрнă вăхăтра пусать тесе ĕненнĕ, вăл, имĕш, алă-урине çывратса ярать, юнне ĕмет.

[69] *Вĕре çĕлен* — усал. Хытă хуйхăракан çын патне юратнă çын пек пулса пырать тесе ăнлантарнă.

[70] *Пиришти* — пирĕшти. Этем чунне сыхлакан турă, вăл кашни çыннăнах пур, унăн хулпуççи çинче ларать тесе ăнлантарнă. Çывăракан çынна хытă кăшкăрса вăратсан пирĕшти таврăнма ĕлкĕреймест тесе ĕненнĕ.

[71] *Мадяр, ходяр, булгар, бешене, биляр.* Мадяр — мадьяр, венгр; ходяр — хазар; бешене — паллă мар сăмах; биляр — Биляр хули.

## ИЛЛЕ ТĂХТИ «ВЫÇЛĂХ ÇУЛ» ПОЭМĂНА ХАЙЛАНИН ИСТОРИЙĔ

*И.Ю. Кириллова*

Илемлĕ хайлавсен пултару историне тĕпченин пĕлтерĕшне вырăс критикĕсем XX ĕмĕр пуçламăшĕнчех палăртнă (В.В. Вересаев, А.И. Белецкий, Н.К. Пиксанов т.ыт.те). Вĕçленнĕ хайлава тишкернĕ чух эпир çыравçăн тем чул вăхăт хушши ăсталанă ĕçĕн результатне çеç куратпăр пулсан, автор архивне тĕпченĕ май хайлав мĕнле майпа тата хăçан çырăннине, хăш тапхăрта еплерех улшăну кĕртнине асăрхатпăр. Çакă чăваш литература пĕлĕвĕшĕн те çĕнĕ пулăм мар. Уйрăмах ку ĕçре В.Г. Родионов тĕпчевçĕн пайти пысăк пулнине палăртас килет. Илемлĕ хайлавсене тишкернĕ чух вĕсен пултару историне пĕлни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине ĕнентерет вăл: «...пултарулăхлă историне пăхса тухни çыравçă мĕн калас тенине тĕрĕсрех ăнлантарса пама май парать. Хайлав поэтики аталанса-улшăнса пынине сăнама пулать...»[1]

Çапла вара, И. Тăхти «Выçлăх çул» поэмăна хайланин историне тĕпчесе çыравçăн çав тапхăрти шухăш-кăмăлĕ, тавра курăмĕ аталанса, ӳссе, хайлав поэтики çырăннăçемĕн улшăнса, анлăланса пынине курма пулать. Ку тĕпчев ĕçĕнче пире автор хайлав сюжетне, сăнарсен прототипĕсене ăçтан илнине тишкернинчен ытларах поэма темиçе вариантлă пулни кăсăклантарать.

И. Тăхти «Выçлăх çул» поэмăра Атăл тăрăхĕнчи 1921 çулти синкере сăнланă. Унти ĕç-пуç *выçлăх мотивĕ* аталаннипе çыхăннă. «1921-мĕш çулта выçлăх пулчĕ. Çавă çула хăшĕ чăтаймарĕç, нумайăшĕ вилсе пĕтрĕç. Хăшĕ-хăшĕ кунти çĕр-шыва пăрахса Çĕпĕре куçнă. Вăл выçлăха аран-аран тӳснисем халĕ те пурăнкалаççĕ. Пĕри-пĕри выçлăх çулне ташла-ташла, юрла-юрла иртттерни те пур. Турă ячĕпе тыră пухакансем выçлăх

çулне выçă ларман. Вĕсенчен пĕри пĕр тăлăх матканне ик çăкăртан пĕр çăкăрне аллинченех тытса илсе кайрĕ тет. Эпир выçлăх çулне хура халăх хурлăх курни шурă хут çине хуралса ÿктĕр тесе поэма çырнăччĕ. Çавă поэмăран вырăнăн-вырăнăн илсе çакăнта çырас терĕмĕр»[2], — ăнлантарать автор поэмăн тĕп шухăшне кĕскетнĕ вариантăн ум сăмахĕнче.

И. Тăхтин ал çырăвĕсен пысăк пайĕ ЧПГĂИ архивĕнче упранать. Унта «Выçлăх çул» поэмăн тулли тата кĕскетнĕ варианчĕсем тĕл пулчĕç. Поэмăна çырма автор темиçе те тытăнса пăхнă пулас. Пире пуçламăш пайĕн икĕ вариантне тупма тÿр килчĕ. Иккĕшĕ те тулли тата кĕске вариантсен пуçламăш пайĕсем шутланаççĕ, архивра вĕсем тĕрлĕ управ единицисенче. Тулли вариант 15-мĕш страницăран пуçланать те вĕçне çитиччене. Вăл пĕр вариантлă çеç. Кĕскетнĕ вариант 1925 çулхи кун кĕнекинче тата пичете янă хыççăн тавăрса панă экземплярта упранать.

Поэмăна автор выçлăх пулнă çулах (1921), декабрь уйăхĕнче, çырма пуçланă тесе çирĕппĕнех калама пулать. Пуçламăш пайĕн пĕр варианчĕн 18-мĕш листин вĕçĕнче çапла çырни пур: «11/XII 21. Янрашать урай шăлнă чух, пĕртак ĕçлес тесен те невозможно сосредоточиться. Для работы нужен покой и тишина. И. Ефимов»[3]. Тулли вариантăн пичĕ çине те «Выçлăх çул. 1921 ç. 22 декабрь» тенĕ. Кĕскетнĕ варианта «„Выçлăх çул” поэмăран çырса илнĕ вырăнсем» тесе ят панă, вĕçĕнче «1921 çул, 21 декапер» тесе палăртнă. Варианчĕ 1925 çулхи кун кĕнекинче çырăннă[4]. Çапла вара тулли варианта 1921 çулхи декабрьте, кĕскетнĕ вариантне 1925 çулта çырнă тесе калама пулать.

Архивра поэмăн чи пĕрремĕш черновикĕсем V уйрăмра, 7-мĕш управ единицин 212–221-мĕш листисенче упранаççĕ. Вĕсене кăранташпа çырнă, кайран ручкăпа тÿрлетнĕ. Тăхти поэмăна чи малтан «Çĕр сасси» ят пама палăртса хунă пулнă. Чăнах та, поэма çĕр ĕçченĕ çуркунне акана хатĕрленнине сăнланипе пуçланать. Тепĕр хут

редакциленӗ хыҫҫӑн туртса хурса «Выҫлӑх ҫул» тенӗ. Шанать хресчен тулӑх пурнӑҫ ҫитессе, тырӑ-пулӑ ӑнасса. Теме систерсе унӑн ака тӑвас «хушка пуҫлӑ» лаши те пуҫне усса тӑрать. Ҫумӑрӗ ҫумасть. «Хӗвел пӑхать, ҫунтарать, // Ҫӗре-шыва типӗтет». Кивӗ йӑлапа чӳк туса ирттереҫҫӗ, аптранӑ енне пупа кӗлтутарса пӑхаҫҫӗ.

Тулли вариантпа кӗскетнӗ вариантӑн малтанхи пысӑк уйрӑмлӑхӗ – тулли вариантӑн пуҫламӑш страницисенче Ҫитук (Тяпук)-Ваҫук «чаплӑ ҫын» ҫинчен калани пур. «Салтакран тӑна-пуҫа пуҫтарса» килнӗскер, ҫумӑра машинӑпа ҫутарма пулать тет. Ял халӑхӗ тархасласа ыйтсан та пултараймасть. «Аслатие авӑтма, / Ҫиҫӗмсене ҫиҫтерме / Ӑспа-тӑнпа тумалла» ҫав ӑна. Тӗнче курнӑ пулин те ҫав вӑхӑтшӑн вӑл вӑйсӑр пулнӑ. Кӗскетнӗ вариантра ку сыпӑксем ҫук. Пуян Сатур Сантӑрӗ (Якур Хветӗрӗ) «тахшин ҫине ҫилленсе»:

Кӑҫал тырӑ ан пултӑр...
Ик ҫул тырӑ пулмасан
Эпӗ ҫапах вилес ҫук, –

тенисем те вырӑн тупайман тулли вариантра.

Пулнӑ-пулман тыр-пулла
Иртнӗ хӗлле Советсем
Хӑвармарӗҫ нормине,
Отряд салтак ярса пуҫтарчӗҫ.

Паллах, Совет самани вӑй илсе пынӑ тапхӑрта ҫакӑн пек йӗркесене пичете яма ниепле те май килмен Тӑхтин, вӗсене «кӗскетмеллех» пулнӑ.

Тулли варианта пӗтӗмӗшле илсен те ҫакнах калама пулать. «Выҫлӑх ҫул» поэма автор хӑй пурӑннӑ чух кун ҫути курайман. И. Тӑхтин 1979 ҫулта тухнӑ ҫырнисен пуххине те «Выҫлӑх ҫул» поэмӑн кӗскетнӗ вариантне кӑна кӗртнӗ. Кӗнекене пухса кӑларакансем ҫакӑнпа сӑлтавланӑ: «Автор туллирех вариант ҫырма тытӑннӑ,

анчах ăна вĕçлеймен. Çырма пуçланă сыпăксенче И. Тăхти 1921 çулхи Мускаври лару-тăрăва, чикĕ леш енче капиталистсем иксĕлми мулпа иртĕхсе пурăннине сăнлать»[5]. Чăнах та, поэма вĕçĕнче шухăш ăнсăртран татăлнă пек туйăнма пултарать. Анчах юлашки йĕркесем автор хайлава вĕçленĕ тесе палăртсах калама май параççĕ:

Çапла пулчĕ самана
Пин те тăхăр çĕр çулта
Çирĕм пĕрре кайсассăн.

Ку йĕркесенчен чи малтанах поэма пуçланнă пулнă:

Пин те тăхăр çĕр çултан
Çирĕм пĕрре кайсассăн,
Тĕнче курман япала
Пирĕн куçа курăнчĕ,
Ĕнтĕ çапла пулчĕ вăл.

Анчах пуçламăш пайне тӳрлетсе улшăнусем кĕртнĕ хыççăн ку çаврана кĕртмен. Авторшăн унпа поэмăна вĕçлеме вырăнлăрах пулса тухнă.

«Выçлăх çул» поэмăн тулли варианчĕ 2009 çулта çыравçă çуралнăранпа 120 çул çитнĕ ятпа кăларнă «Суйласа илнисем» кĕнекере тинех кун çути курчĕ.

**Литература**

---

1 *Родионов В.Г.* Чăваш литератури (1917–30-мĕш çулсем), вĕрентӳ пособийĕ. Шупашкар: Чăваш ун-чĕн изд-ви, 2005. С. 171.

2 ЧПГĂИ ĂА. V пай. 210 упр. ед. 1354 инв. №.

3 Çавăнтах.

4 Çавăнтах.

5 *Тăхти И.* Поэзи, проза, публицистика. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1979. С. 356.

*А.В. Кузнецов*

# ЧĂВАШ ХАЛĂХ ХУТШĂНУ КУЛЬТУРИН АВАЛХИ ПАЛĂРĂМĔСЕМ

Чăваш халăхĕн йăли-йĕрки, сăвви-кĕвви, пуян сăмахлăхĕ, хăйне евĕрлĕ чĕлхи тĕпчевçĕсене XVIII ĕмĕр пуçламăшĕнченех кăсăклантарать. Нисепĕ, хутшăну уйрăмлăхĕсем, калаçу пуçарнă тата уйрăлнă чух калакан çаврăмсем те XIX ĕмĕртенпех тĕрлĕ çăлкуçсенче çырăнса юлнă. Чăваш çыннисем хутшăнăвĕнче авалах усă курнă, паянхи вăхăта çитнĕ паллăсене çак ĕçре тишкерсе тухас терĕмĕр.

Паллă ĕнтĕ, «кашни çын кулленхи пурнăçра тĕрлĕ çынсемпе – пĕчĕк ачасемпе те, хăйĕнчен кĕçĕнрех е аслăрах çынсемпе те, ватăсемпе те – хутшăнать... Обществăра çынсем пĕр-пĕринпе хутшăнмасăр пурăнма пултараймаççĕ»[1]. Кун каçа, ĕмĕр тăршшĕнче этем урампа утса пынă чухне е пĕр-пĕр вырăнта вăй хунă вăхăтра, канма кайсан е вĕреннĕ тапхăрта яланах çынсемпе хутшăнать: вăл е ыйтса пĕлет, е ыйту çине хуравлать, е йăнăшшăн каçару ыйтать, е тепĕр çынна йĕркесĕр пулнăшăн асăрхаттарса калать[2]. Кирек мĕнле пулсан та, çынсен хутшăнăвĕ, хутшăну культури нисепрен (этикетран) пуçланать. Этикет (< фр. *etiquette* «ярлык, этикетка») – çынсен ыттисемпе хутшăннă вăхăтра хăйсене тыткаламалли правилăсен пĕрлĕхĕ[3]. Çак пĕрлĕхри пире кăсăклантаракан ыйту – хутшăнура çынсем нисеп лексикин единицисемпе мĕнле лару-тăрусенче усă курни, пуплевре вĕсем мĕнле вырăн йышăнни. А.А. Акишина, Н.И. Формановская тата ытти вырăс чĕлхеçисем çирĕплетнĕ тăрăх, нисеп лексикин çаврăмĕсене çак лару-тăрусенче усă куракан ушкăнсем çине уйăрма пулать: 1) чĕнӳпе çын тимлĕхне хăвăр çине куçарни (обращение и привлечение внимания);

2) сывлăх сунни е саламлашу (приветствие); 3) паллашу (знакомство); 4) йыхрав (приглашение); 5) кăмăл ыйтни, ыйтни, канаш, сĕнӳ (просьба, совет, предложение); 6) кăмăл ыйтнине, ыйтнине тивĕçтернипе тивĕçтерменни, йыхрава йышăннипе йышăнманни (согласие или отказ в ответ на просьбу, приглашение); 7) çын шухăшĕпе килĕшнипе килĕшменни (согласие или несогласие с мнением собеседника); 8) каçару ыйтни (извинение); 9) ӳпкелешни е ӳпкелешӳ (жалоба); 10) йăпату, хĕрхенӳ, пĕрле куляннине пĕлтерни (утешение, сочувствие, соболезнование); 11) кăмăлласа калани, ырлани (комплимент, одобрение); 12) ырламанни, кăмăлламанни, ӳпкев, ӳпкелешӳ (неодобрение, упрек); 13) саламлани, ырă сунни (поздравление, пожелание); 14) тав туни (благодарность); 15) сывпуллашни (прощание)[4]. Çапла вара, нисеп çаврăмĕсемпе эпир кунне вун-вун хут усă куратпăр. Апла пулсан пирĕн пуплевре вăл питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Хальхи вăхăтри нисеп пĕр-пĕрне паллакан çынсене çеç мар, пачах палламан çынсене те сывлăх сунма хистет. Çынсем çапла майпа таврари çынсен тĕлĕшпе ырă, кăмăллă пулнине, вĕсемпе хутшăнăва кĕме хатĕррине, малашне те хутшăнса пурăнма хирĕç маррине палăртаççĕ.

Тĕрлĕ халăхăн нисепĕнче хăйне анчах тивĕçлĕ наци уйрăмлăхĕсем пулаççĕ. Çав уйрăмлăхсене сывлăх сунса каламалли сăмахсемпе сăмах çаврăнăшĕсем лайăх кăтартса параççĕ[5]. Кирек мĕнле чĕлхере те ырлăх-сывлăх сунмалли сăмах çаврăнăшĕсемпе уйрăм сăмахсем пур, вĕсем пуплевре çирĕпленсе ларнă клишесем. Чăвашăн халăхра сарăлнă нисеп сăмахсемпе сăмах çаврăнăшĕсем темиçе ушкăна пайланаççĕ: пĕлĕш-тантăшпа чăваш пĕр тĕрлĕ саламлашать, ют çынпа — урăхларах, ахаль çӳрекен çынпа — пĕр тĕрлĕ, мĕн те пулин ĕçлекен çынпа тепĕр тĕрлĕ, урамра — пĕр тĕрлĕ, киле пырса кĕрсен тепĕр тĕрлĕ сывлăх ыйтаççĕ.

«Энциклопедия этикета» ĕçре сывлăх суннин уйрăмлăхĕсем темиçе сăлтавран килнине палăртнă. Асăннă

энциклопедире палăртнă шухăшпа килĕшес пулсан, мĕнле сăмахсемпе саламлашасси арçын е хĕрарăм, çамрăк е ватă пулнинчен, çавăн пекех калаçакансем мĕнлерех хутшăнура (çывăх юлташсем е вăрçса-харкашса пурăнакансем, пĕлĕш-тантăш е пĕр-пĕрне палламан, ют çынсем) пулнинчен нумай килет, талăк вăхăчĕ те хăйне тивĕçлĕ сăмах е сăмах çаврăнăшĕ суйласа илме хистет[6].

Л.Т. Бабаханова çирĕплетнĕ тăрăх, уншăн тăван узбек чĕлхинче саламлашу сăмахĕсемпе сăмах çаврăнăшĕсем çирĕм ытла ушкăна пайланаççĕ[7].

Çӳлерех асăннă шухăшсене пĕтĕмлетсе эпир çакна çирĕплетме пултаратпăр: чăвашăн ытти нумай халăхăнни пекех (уйрăмах, Тухăç халăхĕсенни пек) сывлăх сунса каламалли сăмахсем нумай ушкăна пайланаççĕ, вĕсем пуплевре пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ, çынсен хутшăнăвĕнче пĕлтерĕшлĕ пулаççĕ.

Тухăç халăхĕсен (çав шутра чăвашсен те. – *А.К.*) пуплев нисепĕнче эмоцилли, туйăмли тĕп вырăнта тăнине кулленхи сывлăх сунăм кĕлеписем уçăмлăн кăтартса параççĕ[8]. Пĕр-пĕр çын килне пырсан чăваш *Сывă-и? Аван пурăнатăр-и-ха?* тесе сывлăх сунать, кил хуçисем ăна *Аван-ха, килех...* тесе саламлаççĕ[9]. Чăваш пурнăçĕнче пĕрне-пĕри çапларах сывлăх сунни час-часах тĕл пулать:

– *Сывă пурăнатăр-и?*

– *Аван-ха, хăвăрăн сывă пурăнаççĕ-и?*

– *Аван-ха, шĕкĕр турра!*[10];

– *Чиперех-и?*

– *Чиперех-ха! / Аптрамастпăр-ха! / Лайăхах пурăнатпăр-ха! / Йĕркеллех-ха!;*

– *Килес-и?*

– *Килес терĕм(ĕр)-ха! / Килсе курас терĕм(ĕр)-ха! / Килетĕп-ха!*[11]*;*

– *Ларатпăр?*

– *Ларатпăр-ха!;*

– *Килетпĕр?*

– *Килетпĕр-ха!*[12]

Çĕнĕ пӳрте пĕрремĕш хут хăнана пырсан чăваш *Никĕс питĕ (*çирĕп. – *А.К.) пултăр!* тет[13]. Ĕçкĕ-çикĕ пуçтарнă чух чăваш малтан килекен хăна-вĕрлене урама е картишне тухса кĕтсе илет. Хапха умне çитсе чарăнсан е «уçса хунă хапхаран картишне кĕрсен»[14] хăни *Аван пурăнатăр-и, пурте сывă çӳреççĕ-и-ха?*» – тет, хуçисем картишĕнче е «хапха умĕнче: *Аван-ха, кĕрер пӳрте...*» – теççĕ, пӳрте кĕрсен кил хуçисем, хăнисем пурте *Килĕрех! Килĕрех!*[15] тесе сывлăх сунаççĕ. Çак лару-тăрура узбексем хăнасене *Хуш келибсиз!* (тӳрĕ куç. „Ырă килĕр!” – *А.К.*) „Добро пожаловать!” тесе сывлăх сунаççĕ. Кил хуçи пӳртрен тула тухса кĕмессерен хăнисене çак сăмахсемпе саламлать, вĕсене вăл вĕçĕ-хĕррисĕр нумай хут калама пултарать»[16]. Тутарсем хăнасене, вĕсен килне пырса кĕрекене *Хуш итегез!* е *Рәхим итегез!* (тӳрĕ куç. «Ырă (лайăх) килĕр!») «Добро пожаловать!»[17]; «Пожалуйста!», «Будьте любезны!»[18] сăмахсемпе кĕтсе илеççĕ. Пӳрте кĕрсен кил хуçине, кил-йыша çакăн пек сывлăх сунни чăвашăн кунсеренех тĕл пулать: *Çӳретĕр-и? Çӳреççĕ-и? Лайăхах чупаççĕ-и?*[19], *Ырă хуçисене тайма пуç!* «Почтенным хозяевам низкий поклон!» (приветствие гостя)[20], *Салам алейккĕм!* «Мир вам!» (традиционное начало приветственного слова гостя)[21], *Сывă-и?* «Здравствуйте!»[22] (тӳрĕ куç. «Здоровы ли?»), *Syvă-i?* «Добрый день!»[23] (тӳрĕ куç. «[Ты есть] здоров?»). Чăвашсемпе кӳршĕллĕ пурăнакан тĕрĕк халăхĕсен чăвашсеннипе пĕр килекен çаврăмсемпе сăмахсемех анлă сарăлнă: тут. *Саумы!* «Здравствуй!»[24] (тӳрĕ куç. «Сывă-и?»), пушк. *Наумы(һыгыҙ)?* «Здравствуй(те)!»[25] (тӳрĕ куç. «Сывă-и (Эсир)?»), *Сывлăх[сем] мĕнле?* «Как [ваше] здоровье?»[26], *Сывă пурнатăр-и? Мĕнле пурнатăр?* т.ыт.те[27], пушк. *Наулығығыҙ нисек?* «Как Ваше здоровье?»[28] (тӳрĕ куç. «Сывлăхăр мĕнле?»), *Сәләмәтлегегеҙ нисек?* «Как Ваше здоровье?»[29]; тутар. *Сәламәтлегегез ничек?* «Как здоровье?» (тӳрĕ куç. «Сывлăхăр мĕнле?»)[30]. *Саламалик, сарă хĕр!*[31]. Н.И. Золотницкий çырса хăварнă тăрăх,

тепĕр чăваш пырса кĕрсенех *Саламалик! чипер (*е *лайăх) пурнать-и?* «Мир вам! Хорошо ли поживаете?» тет. Çак çаврана чăваш пӳрте кĕнĕ чухне анчах калани уйрăмах кăсăк. Чăваш ăна пасарта та, çул çинче те, урамра та каламан. Çак йăла авалтан килмелле, ăна чăваш пĕр харăс еврей, христиан, мохаммед, çут çанталăк тĕнĕсемпе пурăннă хазарсенчен йышăнма пултарнă[32].

Кунта илсе панă *Саламалик!* сывлăх сунăм единицин тулли кӳлепи арабла *Äс салäму галяйка (*е *галяйкум)* – «Мир тебе!» е «Мир вам!», хуравĕ *Уа галяйка (*е *галяйкум) Äс салäм* – «И тебе мир!» е «И вам мир!»[33]. Вăл ытти тĕрĕксен те анлă сарăлнă. Тутарсем хальхи вăхăтра *Әссәламе галәйкем* «Здравствуйте!»[34] (тӳрĕ куç. «Да будет мир над вами!»); *Әссәләмгаләйкем! — Вәгаләйкем әссәләм!* «Мир вам! — И вам мир!» («Здравствуйте!» пĕлтерĕшпе)[35]; *Әссәламәгаләйкем! — Вәгаләйкемәссәлам!*[36] кӳлепесемпе, узбек чĕлхинче вара кун каçа кирек мĕнле лару-тăрура та *Ассалому алайкум!* (тӳрĕ куç. «Мир над вами!») формулăпа усă кураççĕ[37].

Б. Шернер шучĕпе, *саламанник, саламальник, саламалит* тутар чĕлхинчи *sälam ᶜaläyk* единицăран [< араб. *Salatun ᶜalayka* «мир тебе!» > çĕнĕ перс. *salam(un) ᶜalayk*] пулса кайма пултарнă. Вĕсем **salamalikkăm* (<< араб. *salatun ᶜalaykum*) тĕслĕхĕн кĕскетĕвĕсем пулмасан та пултараççĕ[38].

Н.И. Золотницкий шухăшĕпе килĕшӳллĕн, тутарсемпе пушкăртсем пуплев юхăмĕнче сасăсене сиктерсе хăвараççĕ, çавна пула арабсен икĕ сывлăх сунăм единици те (*äс салäму галяйка* (е *галяйкум*) тата *уа галяйка* (е *галяйкум*) *äс салäм. – А.К.*) кĕскелеççĕ, çакăн пек кӳлепеллĕ пулаççĕ: *салям алик'м* тата *ва-алик'м-салям ...* (*äс салäму галяйкум* > *салям алик'м* > *саламалик*, *саламальник*, *саламалит*. – *А.К.*).

Тутарти крешĕн чăвашсемпе çав тăрăхри чăн чăвашсем (Теччĕ уесĕн хĕвел анăç тата Çĕрпӳ уесĕн кăнтăр-хĕвел анăç пайĕсенче) сывлăх сунăм единицине *саламалик* таран, çармăссем *саламальник* таран кĕскетнĕ[39].

Вăхăт иртнĕçемĕн çак сывлăх сунăм тĕслĕхĕ туйсенче çеç тĕл пулма пуçлать. Ăна каччă туйĕ хĕр кил-çуртне пырса çитсен калакан такмак пуçламăшĕнче мăн кĕрӳ (е туй пуçĕ) асăнать. Salamalik – туй мешехинче мăн кĕрӳ калакан такмакри пĕрремĕш сăмах пулать[40]. Халĕ мăн кĕрӳ (е туй пуçĕ) такмакне *саламалик* теççĕ. «*Саламалик* – это отдельная, вполне самостоятельная часть комплекса приговоров дружки жениха, приуроченная к самому важному эпизоду свадебного ритуала – приезду жениха к родителям невесты»[41], «собственно *саламалик* начинается с традиционного стихотворно-ритмизованного приветствия, являющегося своеобразным прологом последующего эпического повествования»[42]. Чăваш туйĕнче саламаликăн çак тĕслĕхĕсем тĕл пулаççĕ:

1) *Е, саламальник, тав сире!*
*Ĕçетре-çиетре?*
*Вылятра-кулатра?*
*Эсир пире кĕтетре?*[43]

2) *Саламалик, тав сире!*
*Ĕçсе-çиме вăй сире!*
*Юр юрласа, таш ташлама,*
*Хапăл тумăр-ши пире?*[44]

3) *Саламалик, тав сире! Ĕçетри, çиятри, вылятри, кулатри, пире кĕтсе тăратри?*[45]

4) *Саламалик поянзанэ, аслынэ бось, кизиньне тава...* «Богатым (вернее высшим) привет, старшему голова (покорность), младшему похвала (ласка)»[46] т.ыт.те.

Маларах каланăччĕ ĕнтĕ, *саламалик; аликкăм салам* саламлашу сăмахĕсем туйра тата юмахсенче çеç тĕл пулма пуçланă. Чăваш пурнăçĕнче çапла сывлăх сунни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине Г.Н. Волков академик та палăртнă[47], Н.И. Ашмарин ăсчах та словарьне чăваш юмахĕсенчи сăнарсен пурнăçĕ çак салам сăмахĕнчен килнине палăртакан тĕслĕхсене кĕртнĕ:

1) «...Лашине аяккарах кăкарать те (ача), стариксам патне пырса, ĕçлĕке илсе: “Аласăм-хай”, – тет. Стариксам: “Апла каламан полсан епĕр сан поçна çиса

йараттăмăрччĕ”, – теççĕ»[48] (Н.И. Ашмарин ку тĕслĕхе *алакким-салам* сывлăх сунмалли сăмахăн пăсса каланă варианчĕ пулма пултарать (*алакким-салам* > *аласăм-хай*. – *А.К.*) тесе шутлать[49]);

2) «“*Алеккĕм-салам*, асанне!” – тесе калат тет. “*Алеккĕм-салам*”, – темен пулсан пĕр хыпăттăм”, – тесе калат тет»[50].

Эпир пурнăçра час-часах çын апатланакан вырăна, вăхăта пырса лекетпĕр. Чăваш йăлипе пӳрте кĕнĕ çынна апатлантармасăр кăларса яма юрамасть. Н.И. Ашмарин çырса хăварнă тăрăх, апат çинĕ вăхăтра пӳрте кĕрсе тăнă кирек мĕнле çынна та сĕтел хушшине лартасси чăвашăн йăлара: «У чуваш есть обычай сажать за стол всякого вошедшего в избу во время обеда или ужина»[51]. Çак лару-тăрура чăвашăн сывлăх сунмалли ятарлă сăмахсем пур:

1) *Апат тутлă пултăр! — Эс калареш пек пултăр!* «Да будет вкусен ваш обед!» — «Да будет так, как ты сказал!» (так отвечают пришедшему, если не хотят пригласить его пообедать)[52]. Ку, паллах, кайран пулса кайнă тĕслĕх. Çынна сĕтел хушшине ларма чĕнменни чăвашăн пулманпа пĕрех. Çакна историн икĕ тапхăрĕнче пурăннă, чăвашăн авалтан килекен йăли-йĕркине аван пĕлнĕ П.Н. Осипов çыравçăн «Икĕ каччăн пĕр шухăш» пьесинчи самант лайăх кăтартса парать:

*Крахвине.* ...Сăрине ăшăтма çакам.

*Михаля.* Килнĕ çынна хăналасах пулать: апатне те хатĕрле!

*Петĕр.* Апат терĕ... Килте çук-и-мĕн апат? Ĕç лайăх пулсан ман пата кайăпăр хăналанма.

*Михаля.* Пирĕнне лартсан та çиместĕн пулĕ те-ха эсĕ. Çапах та хăнана апат лартмасăр яракан марччĕ чăвашсем»[53].

Апат çинĕ вăхăтра пырса кĕнĕ çын *Апат* (е *апачĕ*) *тутлă пултăр!* тесе сывлăх сунни çине тĕрĕс хуравлама пĕлмелле, унсăрăн килнĕ çын кӳренет. Ю. Петров «Юратупа наркăмăш» хайлавĕнче шăпах çак лару-тăрăва сăнласа кăтартнă:

«*– Апат тутлă пултăр, – терĕ вăл, пуçĕнчи çĕтĕк карттусне хывса. – Апат тутлă пултăр!*

*– Тавтапуç, – тесе çиме пуçларăмăр. – Çемен, сан апат çиес килмест-и?*

*– Килет.*

*– Ма каламастăн?*

*– Ара, апат тутлă пултăр тесе икĕ хут каларăм вĕт. Ăнланакан çынсем «кил апата» тесе хуравлаканччĕ...*»[54]

Малалла илсе паракан тĕслĕхсенче чăваш нисепне пĕлсе усă курни палăрать:

2) *Апат çима вăй патăр! – Тавах, апата кил!* «Хлеб да соль!» – «Милости просим!»[55];

3) *Апат тутлă пултăр! – Апат çиме кил!* «Хлеб да соль!» – «Милости просим (с нами пообедать)!»[56];

4) *Апачĕ тутлă пултăр!* (тур. *Afiyet olsun!*) «Приятного аппетита!»[57];

5) *– Ачасем, уй-хир кулачĕ*
*Тутлă пултăр! – тетĕп те:*
*– Кил-килях! – тесе калаççĕ*
*Çамрăк тусăмсем пурте.*
*– Ларăрах! – тесе пĕр вырăн*
*Пушатаççĕ тăванла...*[58]

Апатланнă вăхăтра тепĕр тутар килне-çуртне пырса кĕрсен тутар апатланакана (е апатланакансене) *Тәмле булсын!* (тӳрĕ куç. *Техĕмлĕ (тутлă) пултăр!)* «Пусть будет вкусным!»; *Ашларыгыз (чәйләрегез) тәмле булсын!* (тӳрĕ куç. *Апатăрсем (чейĕрсем) техĕмлĕ (тутлă) пулччăр!*) «Пусть будет вкусной ваша еда (чай)!»[59] пуплев единицисене усă курса саламлать.

Çын ĕçкĕ-çикĕре, туйра анчах ĕмĕрлемест: вăл пурнăçне ытларах ĕçре ирттерет, çавăнпа чăвашăн ĕçлекен çынна сывлăх сунмалли ырă сунăм кĕлепиллĕ ятарлă çаврăмсем пур. Çаранта курăк çулакана курсан чăваш *Вăй патăр!* тенисĕр пуçне *Çарану илпеклĕ пултăр, утту тухăçлă пултăр!* тесе сывлăх сунать, тыр-пул акакана тĕл пулсан *Вăй патăр! Пĕр пĕрчĕрен – пин пĕрчĕ!* тесе саламлать, вутă-шанкă е утă-улăм тиесе килекен

çынна тĕл пулсан *Перекет пултăр!* тесе, мĕнле те пулин ыйтăва татса парас тĕллевпе тавлашакан е мĕне те пулин сӳтсе явакан ушкăна тĕл пулсан *Канаш пĕрле пултăр!* тесе сывлăх сунать[60].

Пирĕн тăрăхра тата ĕçлекен çынна талăкăн тĕрлĕ вăхăтĕнче тĕрлĕрен сывлăх сунаççĕ: кăнтăр апатчен *Вăй патăр!,* апат хыççăн *Турă пулăштăр!* тесе саламлаççĕ. Кăнтăрла иртсен кама та пулин *Вăй патăр!* çаврапа сывлăх суннине илтсен сăпайлăрах çынсем *Хăвна кунта патăр!* теççĕ, чĕлхеллĕреххисем вара *Upa tytsa hyllatăr!* «Пусть (тебя) поймает и изнасилует медведь!» тесе «саламлаççĕ»[61]. Ку, паллах, хальтерех пулса кайнă йăла, анчах талăк вăхăтне пăхса тĕрлĕрен сывлăх сунни – хăй кăсăк пулăм.

Тутарсем ĕçлекен çынна *Алла куәт бирсен!* (тӳрĕ куç. *Турă (Аллах) хăват патăр!*); *Алла ярдәм бирсен!* «Аллах пулăшу патăр!»; *Куәтегез куп булсын!* «Хăватăр нумай пултăр!»; *Әшләр уңсын!* «Ĕçсем ăнччăр!»[62] пуплев нисепĕн çаврăмĕсемпе саламлаççĕ.

Пĕр-пĕр ĕç хыççăн е уяв умĕн мунчана каякана курсан чăваш *Ăшши тутлă пултăр! Мунчи кĕленче, милĕкĕ пурçăн, чулĕ мерчен, ăшши шерпет пултăр!* тесе саламлать[63].

Чăвашăн, ытти нумай Тухăç халăхĕнни пекех, сывлăх сунăм тĕслĕхĕсем нумай (сăмах май, узбек чĕлхинче çирĕм ытла тĕрлĕ формăллă саламлашу единицисем тĕл пулаççĕ[64]). XIX ĕмĕрте, XX ĕмĕр пуçламăшĕнче çырса хăварнă тĕслĕхсем питĕ кăсăклă. XIX ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринче пичетленсе тухнă пĕр ĕçре «здравствуй(те)» пĕлтерĕшпе çак сывлăх сунăм çаврăмĕсене усă курнă:

1) *вый-бадыръ* «Бог в помощь». Прислове, употребляемое при встрече с работающим[65];

2) *сывга* «здравствуй»[66];

3) *тава-сана* «здравствую тебе»[67].

Н.В. Никольский ку енĕпе ытларах ĕçленĕ. Унăн пуплев нисепĕн тĕслĕхĕсем нумайрах, тата унăн архивĕнчи

çырусенче чăвашăн *пур(ă)нăç ыйт, сывлăх ыйт* саламлашу единицисем тĕл пулаççĕ. Н.И. Егоров шухăшĕпе, чăваш ĕлĕкрех *Сывлăх сунатăп!* йышши çаврăмсемпе усă курман, вăл *Сывлăх ыйтатăп!* (*Турăран сана валли сывлăх ыйтатăп!*) тенĕ. Унăн сăмахĕсене çак тĕслĕхсем çирĕплетеççĕ:

1) *пурнăç ыйт* «здороваться» («просить жизнь»)[68];

2) *сывлăх ыйт* «здороваться»[69].

Н.В. Никольский словарĕнче çавăн пекех *тав* сăмах «привет, приветствие» пĕлтерĕшпе тĕл пулать. Хальхи вăхăтра чăваш чĕлхинче ăна «спасибо, благодарю, благодарность» пĕлтерĕшсемпе усă кураççĕ. Çак тĕслĕхсем маларах каланă шухăша çирĕплетеççĕ:

1) *тав* «поклон, привет»; *Тав ту ăна* «Поклонись ему»; *Тав сире, хăна-вĕрле* «Привет вам, добрые гости»[70];

2) *тав ту* «здороваться»[71];

3) *Вăл çын вара ĕречĕпе тав туса ĕрет пуçласа ярать* «А тот человек по порядку приветствует другого и таким образом начинает ряд (приветствий)»[72].

Асăннă ăсчахăн словарĕнче чăваш хальхи вăхăтра анлă усă куракан саламлашу сăмахĕсем те йышлă. Тĕслĕхрен: *Сывă-и?* «Здоров ли?»[73], *Лайăх-и?* «Здоров ли?», «Здравствуй»[74], *салам* «поклон; привет»; *салам яр* «послать привет»; *салам кала* «сказать, говорить приветствие»[75], *Вăй патăр!* «Бог на помочь!»[76].

ЧПГĂИ архивĕнче Н.В. Никольский пухнă материал питĕ йышлă. Унта В.П. Вишневский «здравствуй(те)» пĕлтерĕшпе усă курнă сывлăх сунăм тĕслĕхĕсем те вырăн тупнă: *сывга* «здравствуй», *тава-сана* «здравствуй тебе»[77].

Çав вăхăталлах çырса хăварнă тепĕр тĕслĕхе те асăрхамасăр иртме çук. Кунта «кланяться, приветствовать» пĕлтерĕшпе *калазя послась, ирласъ*[78] пуплев единицисене усă курнă. Хальхи чăваш чĕлхинче вĕсене «здравствуй(те)», «привет» пĕлтерĕшсемпе пачах та усă курмаççĕ. Тен, çав вăхăтра та вĕсен пĕлтерĕшĕ урăхла пулнă, корреспондентсем йăнăш пĕлтернĕ — халĕ ку ыйтăва татса пама йывăртарах.

Н.И. Егоров профессор специализаци занятийĕсенче чăваш йăли-йĕркипе паллаштарнă чухне çак шухăша каланăччĕ: чăваш ĕлĕк салам каласа янă чух хальхи пек *салам кала* тенипе çеç çырлахман, вăл *саламне* те, шурă пир тăрăхĕпе чĕркенĕ кучченеçе, парса янă. Николай Иванович сăмахĕпе килĕшӳллĕн, вĕсен ялĕнче (Вăрмар районĕ, Çӳлти Кинчер) кинемейсемпе мучисене: «Сана салам каларĕç», — тесен, вĕсем тӳрех: «Саламĕ ăçта вара?» – тесе ыйтаççĕ пулать. Чăваш «саламĕ» кучченеçлĕ пулнине удмурт калаçу чĕлхинчи тĕслĕх çирĕплетет. Ун пирки каярах калаçăпăр.

Ку пулăма Н.И. Егоров «Ялавра» пичетленĕ статйинче те сăнласа кăтартнă. «Калаçма вĕренмелле» ĕçĕнче вăл çапла çырать: «Эпĕ килнĕ çĕре ялтан анне çитсе ларнă. Алăкран кĕтĕм те аннене: „Салам, – тетĕп. – Мĕнле çиткелерĕр вара эсир?” – тетĕп. Анне мана: „Саламĕшĕн спаççипă та, саламĕ камран вара? – тесе тĕпчет. – Ара, эпĕ кунта килнине никам та пĕлтермерĕ пуль-çке?” – тет. Унтан татах: „Улталанă пуль сана. Эс „Эсир” те „эсир” тетĕн те, пĕчченех килтĕм-ха эп”, – тет.

...Чăваш нисепĕ-йĕркипе калас пулсан, темле хисеплекен çынна та „эсĕ” тени вырăнлă. Кил хушшинче вара „эсир” тенин пачах та латти çук. „Эсир” вăл – кантур сăмахĕ, пуçлăхсемпе пуçа тайса калаçмалли сăмах. Çавăнпа кил хушшинче пĕрне-пĕри „эсĕ”, „эпĕ” тени вырăнлăрах. „Эсир” тени — чăнсăр сăмах... Чăвашăн пĕр-пĕрне „эсĕ” тени илемлĕ, ку сăмах... çынпа çын хутлăхĕнчи хушша çывăхлатать. „Эсир” тени вара пĕр çынна тепринчен уйăрса ярать.

Анне умĕнче „салам” сăмах та вырăнсăр пулчĕ. Чăвашсем салама çын урлă каласа яраççĕ, çырупа... çырса яраççĕ. Пĕрне-пĕри тĕл пулсан вара сывлăх ыйтаççĕ: „Аван-и?”, „Лайăх-и?”, „Чупатăр-и?”, „Çӳретĕр-и?”, „Сывă пурăнатăр-и?» Çĕр те пĕр сăмах пур пирĕн сывлăх ыйтма»[79].

Чăваш «саламĕ» кучченеçлĕ пулнине тата ăна камран та пулин çеç парса янине удмурт калаçу чĕлхинчи тĕслĕхсем çирĕплетеççĕ: ĕлĕк чăвашпа нумай ĕмĕр

хушши хутшăнса пурăннă çак финн-угр халăхĕн чĕлхинче «гостинец, подарок» пĕлтерĕшпе *салам* сăмах[80].

XIX ĕмĕрĕн юлашки чĕрĕкĕнче пичетлесе кăларнă ĕçĕнче Гр. Верещагин этнограф «Женскiя грамотки» сыпăк кĕртнĕ. Çак сыпăкра вотяк (удмурт) хĕрарăмĕсем пĕр-пĕрин патне сала́м янине сăнласа панă. Гр. Верещагин çырса хăварнă тăрăх, сала́м – сăмах (хыпар) е посылка – функцийĕсене çитсă е пир татăкĕ пурнăçланă. Пусма татăкне сала́м çитермелли хĕрарăма паллакан çын урлă пĕр-пĕр пысăк пĕлтерĕшлĕ, хаваслă ĕç пирки пĕлтермелле чухне парса янă. Çав çыннăн пусма татăкне сала́м парса янă хĕрарăмăн тăванĕсем патне çитерсе тăванĕсем хăнана чĕннине пĕлтермелле пулнă. Пусма татăк грамоткăсем ытларах чухне пулас хăнасем маларах курнисем евĕр пулнă. Çакă салама пысăкрах пĕлтерĕшлĕ тунă. Йыхравлакансен сăмахĕсемпе саламне çитерекен çынна чаплă хăна пек хакласа чысланă, кумышкăпа (килти эрехпе) сăйланă. Пусма татăкне тăванран е лайăх пĕлĕш-тантăшран парса янă пулсан, çак салама (ырă хыпара) çитерекене ятарлă ĕçме-çимепе сăйланă-хăналанă. Çав ятарлă апат-çимĕçшĕн хăнасем яланах кил хуçи арăмне укçа панă[81].

Литература хайлавĕсенче тĕрĕк халăхĕсен анлă сарăлнă, хальхи вăхăтра калаçу чĕлхинче чăваш сайра усă куракан *Аван-и?* форма час-часах тĕл пулать:

1) *...Курак инке. Аван-и?*[82];

2) *Атте, аван-и? Сывă-и?*[83];

3) *Усал сăмах тула! Ăшши – сире! Аван-и, ватăсем?*[84];

4) *Аван-и?* – илтех кайрĕ старик. – *Вăй патăр, асатте!..*[85];

5) *Аван-и?* – сывлăх сунчĕç ăна ачасем. – *Тур пулăштăр, кинемей!*[86];

6) *Аван-и?* – терĕ шур сухалсене. – *Ман килес-ха. Епле пурăнаççĕ?*[87].

Çак сывлăх сунăм çаврăмĕ казахсен те *Амансыз ба!* «Здравствуйте!»[88] (тӳрĕ куç. *Аван-и эсир?*), *Кош, аман болынсыз!* «Будьте здоровы!» (тӳрĕ куç. *Чипер* (*ырă, кăмăллă*),

*аван пул*[*ăн*]*ăр!*), кăркăссен те *Аманбы* «здравствуй(те)!» (тӳрĕ куç. *Аван-и?*), тутар диалекчĕсенче те *аван* «хорошо» (тӳрĕ куç. *лайăх, ырă, аван*) [89], «*аван, аwан* – яхши, әйбәт (хорошо)» (тӳрĕ куç. *лайăх, ырă, аван*)[90] тата крым тутарĕсен, турккă, азербайджан, уйгур чĕлхисенче *аман* формăпа тĕл пулать. В. Радлов, М.Р. Федотов тата ытти чĕлхеçĕсем ăна араб чĕлхинчи *аман* «здорово, в хорошем здравии; безопасность, защита, пардон»[91] пĕлтерĕшлĕ сăмахпа çыхăнтараççĕ.

М.Р. Федотов асăннă чĕлхесенче *аван* сăмах çак пĕлтерĕшсемпе тата кӳлепесемпе çӳрет: уйгур. [аман] (тӳрĕ куç. *аван, сывă, лайăх, тĕрĕс-тĕкел, йĕркеллĕ, ăнăçлă*) «здоровый, благополучный, невредимый, сохранный»; [аманму] (тӳрĕ куç. *Аван-и? Сывă-и?*) а) Здравствуйте! б) *здоров ли?*[92]; тур. *атап* (тӳрĕ куç. *хĕрхенӳ, хĕрхенни, шеллени*) «пощада, милость; жалость»[93]; азерб. *аман* (тӳрĕ куç. *хĕрхенӳ, хĕрхенни*) «пощада»[94].

В.В. Радлов ăсчах М.Р. Федотовран пĕр ĕмĕр маларах хальхи чăваш чĕлхинче *аван* формăпа çӳрекен сăмах тĕрĕк чĕлхисенче XIX ĕмĕрте мĕнле кӳлепесемпе тата пĕлтерĕшсемпе çӳренине палăртнă: «*аман* [Kir. Kas. Krm. آمان *αμαν* (Osm. Ad.), (Uig.), = arab. امان] 1) здорово, в хорошем здравии... (тӳрĕ куç. *аван, сывă, лайăх сывлăхлă*); *Аман бол!* (Kir.) (тӳрĕ куç. *Аван (сывă) пул!*) прощай!.. *амансызмы?* (тӳрĕ куç. *Аван-и (сывă-и) эс(ĕ)?*) Здоров ли ты?» (Kir.); *Салам ол кiжiдiн кiжiгä аман* (Uig.) (тӳрĕ куç. С*алам вăл çынтан çынна сывлăх сунни*); 2) (Osm. Ad.) безопасность, защита, пардон... (тӳрĕ куç. *хăрушсăрлăх, хӳтлĕх, хӳтĕлев*); *äl-атап* милость; пардон... (тӳрĕ куç. *кăмăл туни, хĕрхенни*)[95].

Б. Шернер шухăшĕпе, чăваш чĕлхинчи *аvап* «лайăх, ырă» сăмаха **атап* «сывă, тĕреклĕ; усăллă; тĕрĕс-тĕкел, аманман» сăмахăн варианчĕ пек пăхаççĕ. Ку хăюллă шухăш... «Сывă, тĕреклĕ; усăллă; тĕрĕс-тĕкел, аманман» пĕлтерĕш чăваш чĕлхинче çынсем çинчен япаласем çине куçнă, сарăлнă: «сывă, тĕреклĕ; усăллă (çын)» → «çирĕп,

тĕреклĕ, чăтăмлă, нумайлăха пыракан (япала)». Ислам йышăннă тĕрĕк халăхĕсен (тутар, кумык, казах, нухай, каракалпак, кăркăс, (туркмен), узбек, уйгур) чĕлхисенче ытларах чухне çав араб чĕлхинчи япала ячĕ паллă ячĕ пек çӳрет. Çакă ăнсăртран пулман, вăл çĕнĕ перс чĕлхинчи пурте усă куракан паллă ятĕнчен пулнă: çĕнĕ перс. *атап «хăрушă мар; шанчăклă, чунĕпе парăннă; чăн, чăннипех пур; хăйне хăй шанакан; лăпкă, тăнăçлă; сывă, çирĕп, тĕреклĕ; усăллă; тĕрĕс-тĕкел, тĕкĕнмен, аманман» (< çĕнĕ перс. атап «хăрушсăрлăх, шанчăклăх; хăйне хăй шанни; тăнăçлăх, лăпкăлăх, килĕшӳ; хĕрхенӳ, хĕрхенни, шеллени» < араб.)[96].

Х. Паасонен чăваш чĕлхинчи *avan* «лайăх, ырă» сăмах чагатай, туркка (*abadan* «чавнă-сухаланă, халăх пурăнакан; кирлĕ пек, юракан; лайăх, ырă»[97]), кăркăс (*abdan* «вăйлă, хытă, çирĕп, тĕреклĕ, питĕ, сĕре, шутсăр»[98]) чĕлхисенче *abdan, abadan* кӳлепесемпе çӳренине палăртнă[99]. В.Г. Егоров 1964 çулхи ĕçĕнче *аван* сăмахăн этимологийĕ паллă маррине, çак сăмах перс чĕлхинчи *абадан* «халăх пурăнакан, чавнă-сухаланă»; «чечекленекен»; «хăтлă», уйгур чĕлхинчи *обдан* «лайăх, ырă», кăркăс чĕлхинчи *абыдан* «питĕ», «сĕре», «пач», «шутсăр»[100] сăмахсемпе хурăнташлă пулма пултарнине палăртнă.

Кулленхи пурнăçра чăваш *Ăçта каятăн-ха? Пурнăçсем мĕнле? Мĕн ĕçлетĕр? Ĕçлетпĕр-и?* çаврăмсемпе усă курать. Çакăн йышши тĕслĕхсем çыравçăсен хайлавĕсенче те çырăнса юлнă: *Мĕнле пурăнатăр?.. Мĕнле çӳретĕр? Ачăрсем мĕнле чупаççĕ?*[101]; *Атьăр, иртĕр. Ларăр-ха тĕпелерех, тем çăмăлпаччĕ ĕнтĕ?; Хисеп те хапăл!*[102]; «Ырă ир пултăр!» пĕлтерĕшпе «Тăхăрьялта» *Чипер çывăртăр-а? — Килех, килех! аван çывăртăмăр-ха...*[103] тĕслĕх тĕл пулать. Чăвашăн çак сывлăх сунăм тĕслĕхĕсем евĕр пуплев единицисем алтай чĕлхипе диалекчĕсенче те пур. Вĕсем «сывлăх сунатăп» пĕлтерĕшпе *Эзендер! jакшы ба! jакшылар!*, çавăн пекех *jакшы ба...* (теленгит варианчĕ *jакшы тураар ба...*) *«Лайăх тăратăр-и (пурăнатăр-и)?, «Мĕнле тăратăр (пурăнатăр)?»* сăмахсенчен пуçланакан саламлашу

диалогĕсене усă кураççĕ[104], куманд. *Эзеннер!* (*Эзен ок тар!*) «Сывă-и эсир?», *Эзен!* «Сывă-и?»[105]. Хальхи вăхăтра тутарсен чи анлă сарăлнă сывлăх сунăм сăмахĕсем алтай халăхĕсенни пекех пулаççĕ: *Исәнме!* «Сывă-и?»[106], *Исәнмесез! Исәннәрмесез!* «Сывă-и эсир?»[107]; пушкăртсен çак пĕлтерĕшпе *Иçәнме(һегеҙ)!*[108] (тӳрĕ куç. «Чĕрĕ-и?») çаврăма усă кураççĕ. Узбексен те лару-тăруран килекен, эмоци сĕмĕллĕ *Яхшимисиз! Тузукмисиз!* (тӳрĕ куç. «Лайăх-и эсир?») кӳлепесем тĕп вырăнта тăраççĕ[109]. Шăп та лăп Г.Т. Тимофеев ăсчахăн маларах илсе панă тĕслĕхĕ евĕр «ырă ир (пултăр)» пĕлтерĕшлĕ сывлăх сунăм сăмахĕсем алтай чĕлхинче те вырăн тупнă: *Јакшы кондоор бо?* (тӳрĕ куç. «Лайăх (чипер) çывăртăр-и?», «Мĕнле çывăртăр?»), хуравĕ — *Јакшы. Слер јакшы кондоор бо?* «Лайăх. Хăвăр мĕнле çывăртăр?»[110]. Пире халĕ *Ырă кун (пултăр)! Ырă каç (пултăр)!* тесе сывлăх сунма вĕрентеççĕ. Вырăссем пĕр-пĕринпе çапла саламлашнипе чăвашсен те вĕсен евĕр пулма тăрăшмаллине пĕлтермест. Алтай халăхĕн чĕлхинче хăйĕн *Ырă кун!* (*Не табыш!* (тӳрĕ куç. «Мĕнле хыпар!»), хуравĕ — *Јок. Слерде не табыш?* «Çук. Сирĕн мĕнле хыпар?»), «Ырă каç!» (*Не јӱрет? Байагы кийнинде не јӱрет?* (тӳрĕ куç. «Мĕн çĕнни? Иртни хыççăн мĕн çĕнни?»), хуравĕ — *Јок. Слерде не јӱрет.* «Çук. Сирĕн мĕн çĕнни?»[111]) пур. Л.Т. Бабаханова та çак шухăшах палăртать: «Во многих восточных языках, в том числе и в турецком, в речевом этикете приветствия отсутствует такое клише, как „Доброе утро!” Соответственно, используется приветствие „Пусть будет успешно Ваше утро!”, то же самое в отношении „Добрый день!” – „Хорошие Вам дни!”»[112]. Чăвашăн та халиччен *Ырă ир (пултăр)!* йышши клише пулманнине, вăл юлашки çирĕм-вăтăр çулта çеç халăхра сарăлма тытăннине ытти чĕлхеçĕсем те[113] çирĕплетеççĕ. Ку халăх чаплăрах, ку чĕлхе паллăрах тесе алтай чĕлхипе тата унăн диалекчĕсемпе калаçакан халăх сывлăх сунăм çаврăмĕсене тӳррĕн те, калькăласа та йышăнма тăрăшмасть, хăйĕн авалтан

килекен йăлине пăсмасăр мăн аслашшĕ-асламăшĕсем пекех сывлăх сунать.

Сывлăх сунăм тĕслĕхĕсем çинчен калаçнă вăхăтра çыру жанрĕнчи пуплев нисепĕн тĕслĕхĕсене те асăрхамасăр иртсе кайма çук. Чăвашăн çырура та питĕ кăсăклă саламлашу тĕслĕхĕсем тĕл пулаççĕ. Ытти нумай Тухăç халăхĕсенни пекех чăваш чĕлхи сăнарлă чĕлхе пулать. Çавна май пирĕн халăх çынни вырăссем пек *Здравствуй, мама!* е *Привет, Наташа!* евĕр çаврăмсемпе анчах сывлăх сунмасть, вăл час-часах çырăвне çакăн пек тытăмлă йĕркесенчен пуçлать:

1) *Сывă-и, кил-йыш? Çырăвăн пирвайхи йĕркисенченех йышăнса илсемĕр манран (пирĕнтен) хĕрӳллĕ салам!*

2) *Ырă-сывă-и, тăвансем(ĕр)? Çак çырăвăн пĕрремĕш йĕркисенченех йышăнса илсемĕр пирĕнтен хĕл сивви хыççăн пĕтĕм тĕнчене ăшăтса вăратакан хĕвел пек вĕри, тĕнче пек аслă, уçлăх пек вĕçĕ-хĕррисĕр пысăк салам!*

3) *Сывă-и, Надя? Йышăнса илсем манран хĕрӳллĕрен те хĕрӳллĕ, Çĕр чăмăрĕ пек пысăк салам!*

4) *Сывă-и, Марина? Йышăнсам манран пысăкран та пысăк, хĕрӳллĕрен те хĕрӳллĕ салтак саламне!*

5) *Сывах-и, чирлеместĕн-и, Люда? Ырă кун, пушă вăхăт тĕлне пултăр ман çак çыру! Чи малтанхи йĕркеренех пулмарĕ пулсан та йышăнса илсем инçетри юлташунтан пысăк та хĕрӳллĕ, нимле ытама вырнаçми салам!*

6) *Чунтан юратмалла пирĕн ырă çыннăмăр Николай Васильевич! Сирĕн пурăнăç пирĕншĕн ашшĕ-амăшĕсем ачисемшĕн тăрăшнă майлă*[114].

7) *Салам çырап сан патна ырă çыннăм, Николай Васильевич. Эпĕ халĕ çырăп хам сывлăх çинчен*[115].

8) *Ей вĕçĕмсĕр нумай ырă кăмăллă çын Николай Васильевич*[116] т.ыт.те.

Тăван халăх нисепĕнчен писсе, ăна манса кӳршĕ халăхсен йăли-йĕркине йышăнни тата авалтан килекен мешехесем, нисеп ытла та кăткăс пулнипе хальхи тапхăр çыннисем вĕсене ансатлатни чăвашăн çеç мар, ытти нумай халăхăн тĕл пулать. Чăваш халăх нисепĕн, пуплев

нисепĕн хальхи вăхăтри лару-тăрăвне узбек чĕлхеçисем хăйсемпе пулса иртекен пулăмсем пирки каланă шухăшĕ уçăмлăн кăтартса парать. Л.Т. Бабаханова çырнипе килĕшӳллĕн, саламлашун пуплеври кӳлеписем, пĕтĕмĕшле илсен, Тухăçри пуплев нисепĕ, яланах уйрăммăн тимленĕ япала пулнă тата вăл йăлана кĕни нумай ĕмĕр. Апла пулсан та хальхи обществăра коммуникаци тĕллевĕсене часрах пурнăçлас шутпа коммуникантсем пуплев нисепĕн наци формисене усă курассинчен пăрăнаççĕ, çавна пула пуплев тыткаларăшĕн наци правилисене пăсаççĕ. Хутшăнăва кĕрекен чĕлхесем пĕр-пĕрин çине витĕм кӳни наци пуплев нисепне пăснин тепĕр сăлтавĕ пулса тăрать. Наципе культура уйрăмлăхĕсене пĕр чĕлхе пĕрлĕхĕнчен илсе тепĕр чĕлхе пĕрлĕхне кĕртни чĕлхе традицийĕсене пăсни тата культурăпа чĕлхе личноçĕ (индивидăн когнитивлă серепи) «куçни» патне илсе çитерет. Пĕр социаллă контекстра харăсах икĕ чĕлхе культури пурнăçа кĕрсе пынине пула пуплеври клишесен нацисен хушшинче усă курмалли кӳлеписем йĕркеленеççĕ[117].

Л.Т. Бабаханова шухăшне аталантарса çакна çирĕплетме пултаратпăр:

1) хальхи чăваш чĕлхинче тĕрĕк чĕлхисемшĕн кăтартуллă пулакан сывлăх сунмалли çаврăмсемсĕр пуçне Вăтам ĕмĕрсенче тăван чĕлхемĕре араб, перс, монгол, ытти тĕрĕк чĕлхисенчи çаврăмсем (*салам, салам алейкум, аван-и, чипер...*) кĕрсе çирĕпленнĕ, вĕсене эпир халĕ те час-часах усă куратпăр;

2) нисеп лексикине тĕпченĕ чух чăваш чĕлхи çине XX ĕмĕрте уйрăмах вăйлă витĕм кӳнĕ вырăс чĕлхинчен тӳррĕн (*здравствуйте, привет...*) е калькăласа (*ырă кун! ырă каç! ырă ир!..*) йышăннă çаврăмсене те асăрхамасăр иртме пултараймастпăр.

Чăваш чĕлхинчи сывлăх сунăмăн пур тĕсĕсене те пăхса тухса, тытăмне, усă курас вырăнĕпе вăхăтне кура эпир çапла çирĕплетме пултаратпăр:

1) хальхи чăваш çыннисем пĕр-пĕринпе авалтан килекен çаврăмсемпе, лару-тăрупа эмоци палăрăмĕллĕ сăмахсемпе сывпуллашма пăрахман-ха. Çакна куллен тĕл пулакан тĕслĕхсем çирĕплетеççĕ: *Сывă-и? Ларас-и? Васкас-и? Ĕçлетпĕр-и? Каятпăр-и? Килсе курас-и? Вăй патăр! Тур(ă) пулăштăр! Салам! Саламалик! Салам алейкĕм! Апачĕ тутлă пултăр! Чипер пурнатăр-и? Никĕс питĕ пултăр! Никĕс çирĕп пултăр! Мĕнле пурнатăр? Мĕнле çӳретĕр? Сывлăхсем мĕнле? Пурнăçсем мĕнле? Чиперех-и? Сывах-и? Ман килес! Пирĕн килес! Ăшши тутлă пултăр! Килех! Килĕрех! Иртех! Иртĕрех! Килсем! Килсемĕр! Иртсем! Иртсемĕр! Чипер çывăртăр-и?* т.ыт.те;

2) глобализаципе культурăсен диалогĕ витĕмĕпе, хутшăну тĕллевĕсене часрах пурнăçлас тĕллевпе чăваш çыннисем те вырăс чĕлхинчи, вырăс чĕлхи урлă Анăç чĕлхисенчи нисеп çаврăмĕсемпе тӳррĕн е калькăласа анлăн усă курма пуçларĕç: *Ырă кун! Ырă каç! Привет! Салют!* т.ыт.те.

Çакăн пек пулăмсем чăваш халăхĕшĕн анчах мар, тĕнчери, Раççейри ытти халăхсемшĕн те кăтартуллă. Пирĕн кампа (ватăпа е çамрăкпа, хĕрарăмпа е арçынпа...) тата хăçан (пушă вăхăтра е ĕçленĕ тапхăрта, кăнтăрла е каçхине...) калаçнине шута илсе усă курмалли çаврăмсене май килнĕ таран сыхласа хăвармалла. Çакăнта палăрать те чăвашăн наципе культура хăйне евĕрлĕхĕ, пуянлăхĕ, ĕмĕрсем урлă пирĕн вăхăта çитнĕ хутшăну культури.

**Литература**

---

1 *Горшков А.Е.* Чăваш чĕлхи: лексика, фразеологи, пуплев культури: вĕренӳ пособийĕ. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1997. С. 75.

2 Çавăнтах.

3 Словарь по этике / под ред. И.С. Кона. Изд. 4-е. М.: Изд-во полит. лит., 1981. С. 416–417.

4 *Формановская Н.И.* Русский речевой этикет: лингвистический и методический аспекты. М.: Наука, 1982. 126 с.

5 Энциклопедия этикета. М.: Рипол-классик, 2001. С. 114.

6 Çавăнтах. С. 114–115.

[7] *Бабаханова Л.Т.* Ситуативные модели национальной культуры в речевом общении народов Востока // Языки, духовная культура и история тюрков: традиции и современность: Труды международной конференции: в 3 т. Т. 1. Казань, 1992. С. 28.

[8] Çавăнтах.

[9] *Тимофеев Г.Т.* Тăхăрьял (Сĕве тăрăхĕнчи чăвашсем): этнографи очеркĕсемпе халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар: Чăваш АССР кĕнеке изд-ви, 1972. С. 158.

[10] Çавăнтах. С. 169.

[11] Кузнецов А.В. 2001 çулта Тăвай районĕнчи Тăрмăш ялĕнче пухнă материал.

[12] Кузнецов А.В. 2001 çулта Патăрьел районĕнчи Çĕньял ялĕнче пухнă материал.

[13] *Волков Г.Н.* Этнопедогогика чувашского народа. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1966. С. 208.

[14] *Тимофеев Г.Т.* Кăтартнă ĕç. С. 175.

[15] Çавăнтах. С. 175–176.

[16] *Бабаханова Л.Т.* Кăтартнă ĕç. С. 30.

[17] *Сафиуллина Ф.С., Галиуллин К.Р.* Русско-татарский разговорник. Казань: Татар. кн. изд-во, 1986. С. 4.

[18] Татарско-русский словарь. М.: Сов. энциклопедия, 1966. С. 458.

[19] *Тимофеева В.П.* Чăваш чĕлхин пуплев сăпайлăхĕ. Шупашкар; Етĕрне, 2001. С. 32.

[20] Чăвашла-вырăсла словарь / М.И. Скворцов ред. М.: Русский язык, 1982. С. 629.

[21] Çавăнтах. С. 340.

[22] Çавăнтах. С. 388.

[23] *Scherner B.* Arabische und neupersische Lehnwörter im Tschuwaschischen: Versucht e. Chronologie ihrer Lautveranderungen. 1. Aufl. Wiesbaden: Steiner, 1977. S. 113.

[24] *Сафиуллина Ф.С., Галиуллин К.Р.* Асăннă ĕç. С. 272; Русско-татарский словарь: ок. 47 000 слов / Э.М. Ахунзянов, Р.С. Газизов, Ф.А. Ганиев [и др.] / под ред. Ф.А. Ганиева. 3-е изд., испр. М.: Русский язык, 1991. С. 183; *Султанов Ф.Ф.* Некоторые особенности коммуникативного поведения татар и башкир // Национально-культурная специфика общения народов СССР. М.: Наука, 1982. С. 107; *Сафиуллина Ф.С.* Татарский язык (самоучитель). Казань: Татар. кн. изд-во, 1990. С. 8.

[25] Русско-башкирский словарь: 46 000 слов. М.: Сов. энциклопедия, 1964. С. 250.

[26] Чăвашла-вырăсла словарь / М.И. Скворцов ред. С. 388.

[27] *Горшков А.Е.* Кăтартнă ĕç. С. 80.

[28] Русско-башкирский словарь. С. 286.

[29] Çавăнтах. С. 250.

[30] *Сафиуллина Ф.С., Галиуллин К.Р.* Кăтартнă ĕç. С. 4.

[31] *Васильев Е.В.* Сăпайлăх шкулĕ. Шупашкар: Чăваш Республикин Вĕрентӳ институчĕн изд-ви, 1994. С. 16.

[32] *Золотницкий Н.И.* Корневой чувашско-русский словарь, сравненный с языками и наречиями разных народов тюркского, финского и других племен. Казань: Тип. Императ. ун-та, 1875. С. 211.

[33] Çавăнтах. С. 205.

[34] Арабско-татарско-русский словарь заимствований (Арабизмы и фарсизмы в языке татарской литературы) / сост. К.З. Хамзин, М.И. Махмутов, Г.Ш. Сайфуллин. Казань: Татар. кн. изд-во, 1965. С. 745.

[35] *Султанов Ф.Ф.* Кăтартнă ĕç. С. 107.

[36] *Сафиуллина Ф.С., Галиуллин К.Р.* Кăтартнă ĕç. С. 271.

[37] *Бабаханова Л.Т.* Кăтартнă ĕç. С. 28.

[38] *Scherner B.* Кăтартнă ĕç. С. 113.

[39] *Золотницкий Н.И.* Кăтартнă ĕç. С. 210.

[40] *Scherner B.* Кăтартнă ĕç. С. 113.

[41] *Егоров Н.И.* Чувашский саламалик // Чувашский фольклор: специфика жанров. Чебоксары, 1982. С. 108.

[42] Çавăнтах. С. 109.

[43] *Тимофеев Г.Т.* Кăтартнă ĕç.

[44] *Патмар И.А.* Пурнăç илемĕ. Паянхи чăвашсен туй йĕрки. Канаш, 1992. С. 24.

[45] Gebrauche und Volksdichtung der TSCHUWASSEN / Gesammelt von HEIKKI PAASONEN; Herausgegeben von EINO KARAHKA und MARTTI RÄSÄNEN. Helsinki, 1949. S. 15; 32.

[46] *Золотницкий Н.И.* Кăтартнăĕç. С. 210–211.

[47] *Волков Г.Н.* Кăтартнă ĕç. С. 207.

[48] *Ашмарин Н.И.* Чăваш сăмахĕсен кĕнеки: 17 томлă. Хусан: Таполиграф, 1928. Т. 1. С. 109.

[49] Ашмарин Н.И. Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. Т. 1. С. 109.

[50] Çавăнтах. С. 110.

[51] Çавăнтах. С. 272–273.

[52] Çавăнтах. С. 273.

[53] *Осипов П.Н.* Пьесăсем. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1980. С. 36.

[54] *Тимофеева В.П.* Кăтартнă ĕç. С. 35–36.

[55] Çавăнтах. С. 273.

[56] Çавăнтах. С. 273; *Никольский Н.В.* Краткий чувашско-русский словарь. Казань: Типолитогр. ун-та, 1919. С. 16.

[57] *Дегтярев Г.А., Лебедев Э.Е.* Чувашско-турецко-русский разговорник. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1996. С. 122.

[58] *Ухсай Я.Г.* Суйласа илнисем. Кĕлпук мучи: поэма. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1977. Т. 3. С. 127.

[59] *Сафиуллина Ф.С., Галиуллин К.Р.* Кăтартнă ĕç. С. 274.

[60] *Волков Г.Н.* Кăтартнă ĕç. С. 208.

[61] Кузнецов А.В. 2001 çулта Тăвай районĕнчи Тăрмăш ялĕнче пухнă материал.

[62] *Сафиуллина Ф.С., Галиуллин К.Р.* Кăтартнă ĕç. С. 274.

[63] *Волков Г.Н.* Кăтартнă ĕç. С. 208.

[64] *Бабаханова Л.Т.* Кăтартнă ĕç. С. 28.

[65] *Вишневский В.П.* Начертание правил чувашского языка и словарь, составленный для духовных училищ Казанской епархии. Казань: Тип. Казан. ун-та, 1836. С. 85.

[66] Çавăнтах. С. 154.

[67] Çавăнтах. С. 163.

[68] *Никольский Н.В.* Кăтартнă ĕç. С. 148.

[69] Çавăнтах. С. 182.

[70] Çавăнтах. С. 206.

[71] Çавăнтах. С. 234.

[72] Çавăнтах. С. 54.

[73] Çавăнтах. С. 182.

[74] Çавăнтах. С. 107.

[75] Çавăнтах. С. 160.

[76] Çавăнтах. С. 35.

[77] Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ăслăлăх архивĕ (ЧПГĂИ ĂА). I п. 40 (182) т. С. 610.

[78] Слова, взятые из французских разговоров, российские с чувашскими, расположенные по урокам (Переводили Григорий Рожанский и Иван Руслановский) // Научный архив Чувашского государственного института гуманитарных наук. Кн. п. 512. Инв. № 5187. Л. 1.

[79] *Егоров Н.И.* Калаçма вĕренмелле // Ялав. 1988. № 12. С. 8.

[80] Русско-удмуртский словарь: ок. 40 000 слов. М.: Гос. изд-во иностр. и нац. словарей, 1956. С. 188; Удмуртско-русский словарь: ок. 35 000 слов / под ред. В.М. Вахрушева. М.: Русский язык, 1983. С. 381.

[81] *Верещагин Г.* Вотяки Сосновского края. СПб.: Тип. М-ва внутр. дел, 1886. С. 199.

[82] *Ухсай Я.Г.* Тутимĕр: трагеди. 2-мĕш кăл. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1975. С. 80.

[83] Çавăнтах. С. 90.

[84] Çавăнтах. С. 182.

[85] *Юхма М.Н.* Термен: роман. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1990. С. 45.

[86] Çавăнтах. С. 208.

[87] Çавăнтах. С. 393.

[88] Русско-казахско-немецкий разговорник / К.В. Эрлих, Г.А. Сорокин [и др.] М.: Русский язык; Алма-Ата: Казахстан, 1990. С. 41.

[89] *Федотов М.Р.* Этимологический словарь чувашского языка: в 2 т. Чебоксары: ЧГИГН, 1996. Т. 1: А-Р. С. 25.

[90] Диалектологический словарь татарского языка / под ред. А.Т. Махмутова. Казань: Татар. кн. изд-во, 1969. С. 19.

[91] *Федотов М.Р.* Кӑтартнӑ ӗҫ. С. 25.

[92] Уйгурско-русский словарь: ок. 33 000 слов / сост. Э.Н. Наджип / под ред. Т.Р. Рахимова. М.: Сов. энцикл., 1968. С. 51.

[93] Турецко-русский словарь: ок. 48 000 слов / под ред. Э.М.-Э. Мустафаева и Л.Н. Старостова. М.: Русский язык, 1977. С. 53.

[94] Азербайджанско-русский словарь / сост. Х.А. Азизбеков ; под. ред. Б.Т. Абдуллаева, З.Р. Тагиева. Баку: Азерб. гос. изд-во, 1985. С. 33.

[95] *Радлов В.В.* Опыт словаря тюркских наречий: в 4 т. СПб.: 1893. Т. 1, ч. 1. С. 643−644.

[96] *Scherner B.* Кӑтартнӑ ӗҫ. С. 144.

[97] *Радлов В.В.* Кӑтартнӑ ӗҫ. С. 624.

[98] Ҫавӑнтах. С. 634.

[99] Gebrauche und Volksdichtung der TSCHUWASSEN … S. 9.

[100] *Егоров В.Г.* Этимологический словарь чувашского языка. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1964. С. 19.

[101] *Юхма М.Н.* Кӑтартнӑ ӗҫ. С. 225.

[102] *Ухсай Я.Г.* Тутимӗр ... С. 37.

[103] *Тимофеев Г.Т.* Кӑтартнӑ ӗҫ. С. 157.

[104] Как это сказать по-алтайски: русско-алтайский разговорник / сост. А.А. Сабашкин. Горно-Алтайск: Горно-Алтайское отд-ние Алтайского кн. изд-ва, 1990. С. 14−15.

[105] Учитесь говорить по-кумандински: русско-кумандинский разговорник / сост. Е.И. Тукмачева, Л.М. Тукмачев. Горно-Алтайск: Горно-Алтайская тип., 1990. С. 13.

[106] Русско-татарский словарь. С. 183; *Султанов Ф.Ф.* Кӑтартнӑ ӗҫ. С. 107; *Сафиуллина Ф.С.* Кӑтартнӑ ӗҫ. С. 8.

[107] *Сафиуллина Ф.С., Галиуллин К.Р.* Асӑннӑ ӗҫ. С. 3; *Сафиуллина Ф.С.* Асӑннӑ ӗҫ. С. 8.

[108] Русско-башкирский словарь. С. 250.

[109] *Бабаханова Л.Т.* Кӑтартнӑ ӗҫ. С. 28.

[110] Как это сказать по-алтайски ... С. 15.

[111] Ҫавӑнтах. С. 15.

[112] *Бабаханова Л.Т.* Кӑтартнӑ ӗҫ. С. 28.

[113] *Васильев Е.В.* Кӑтартнӑ ӗҫ. С. 17; *Горшков А.Е.* Кӑтартнӑ ӗҫ. С. 81.

[114] ЧПГӐИ ӐА. I п. 271 т. С. 75.

[115] Ҫавӑнтах. 246 т. С. 301.

[116] Ҫавӑнтах. С. 327.

[117] *Бабаханова Л.Т.* Кӑтартнӑ ӗҫ. С. 31.

*Э.Е. Лебедев*

# ЧĂВАШ ТАТА ТУРККĂ ЧĔЛХИСЕНЧИ ПĔР ЕВĔРЛĔ ГЛАГОЛ КӲЛЕПИСЕМ

Ку статьяра тĕпчекен чĕлхесем пĕртăван чĕлхе ушкăнне кĕреççĕ, тĕрĕк чĕлхисем пулаççĕ. Апла пулин те чăваш тата турккă чĕлхисенче лексикăра та, грамматика тытăмĕнче те нумай уйрăмлăх пур. Çавăнпа чăвашпа турккă кашни хăй чĕлхипе калаçнă чух пĕр-пĕрне ăнланмаççĕ. Çакăн тĕп сăлтавĕ – икĕ чĕлхере сăмахсен фонетика сăпачĕ тĕрлĕ пулни. Унсăр пуçне грамматика кӳлеписен уйрăмлăхĕсем те пĕр-пĕрне ăнланма чăрмантараççĕ. Тĕслĕхрен, *Паян эпĕ университета каятăп* предложение турккălла куçарсан вăл *Bugün ben üniversiteye gidiyorum* пулать. Кунта *кая-т-ăп* сăмахăн икĕ грамматика кӳлепи пур: *-ат-* хальхи вăхăтăн тата *-ăп* сăпат кӳлеписем. Турккălла вара ку кӳлепесем пачах урăхла – *-iyor-* тата *-um.*

Пирĕн тĕллев – икĕ тăван чĕлхен пĕр евĕрлĕ кӳлеписене тĕпчесси, çакăн пек танлаштарулла тĕпчени чăваш тата турккă чĕлхисем мĕнле аталаннине лайăхрах ăнланма пулăшать. Унсăр пуçне, турккă чĕлхине вĕренекен чăвашсем валли те ку статья усăллă пуласса шанас килет.

Турккă тата чăваш чĕлхин морфологи кӳлеписене танлаштарсан ку чĕлхесем епле пулса кайнине те шута илмелле. Турккă чĕлхи хăйĕн тĕп морфологи палăрăмĕсене кура – чăн-чăн огуз чĕлхи. Çав палăрăмсем ку ушкăна кĕрекен ытти чĕлхесенче те пур, тĕслĕхрен, азербайджан, гагауз, туркмен чĕлхисенче. Чăваш чĕлхи вара пăлхар ушкăнне кĕрет. Пĕтĕмĕшле каласан, эпир чăваш тата турккă чĕлхисен пĕр пек морфологи кӳлеписене танлаштарса пăлхар тата огуз чĕлхисен морфологи пĕрпеклĕхĕсене палăртатпăр.

Тюркологире огуз тата пăлхар чĕлхе пĕрешкеллĕхĕсене Раççейри тата ют çĕр-шывсенчи темиçе ăсчах та тĕпченĕ.

Çав шутра А.Н. Самойлович, Н.Н. Поппе, Л.С. Левитская, М. Рясянен, Г. Дёрфер, М. Адамович, М.Р. Федотов, Э. Джейлан, Н. Йудже т.ыт.те.

Тĕслĕхрен, Раççей паллă ăсчахĕн Л.С. Левитскаян «Имеются ли в чувашском языке огузские элементы?» ятлă статйи пур[1]. Ку ыйтупа, хăй калană тăрăх, тюркологи тĕнчи тахçанах тивĕçлĕ хурав пană пулсан та, çапах тĕпчемелли нумай. Пĕрремĕшĕ: хăш грамматика элеменчĕсене татăклăн огуз е пăлхар чĕлхин теме пултаратпăр? Мĕншĕн тесен темиçе чĕлхере тĕл пулакан пĕрпеклĕхсем урăх чĕлхесенчен кĕнĕ йышăнусем е пĕтĕм тĕрĕк элеменчĕсем пулма пултараççĕ. Тюркологи ку ыйтупа хальччен те татăклă хурав паман[2]. Л.С. Левитская статйинче морфологипе лексика пĕрпеклĕхĕсене тĕпчет. Пĕр пек морфологи кӳлеписенчен вăл тухăçлисене тата тухăççăррисене илсе парать. Тухăçлисен шутĕнче *-ан /-ен*, *-мĕл /-мĕш*, *-ас*, *-малла /-мелле* чăваш кӳлеписем пур. Статьян иккĕмĕш пайне чăваш тата огуз чĕлхисенчи лексика пĕрпеклĕхĕсене халаллана. Вĕсен хушшинче тĕрлĕ лексика ушкăнĕсем пур: çын ӳт-пĕвĕ (*тута, кăвапа, хыс* т.ыт.те), кайăксем (*çерçи*), ытти ушкăнсене кĕрекен сăмахсем те: *ăс*, *вĕрен*, *кут*, *тӳлек*, *сылтăм*, *кĕççе*, *кала*[3].

М.Р. Федотов профессор ку темăпа статья çырнă: «О некоторых огузских чертах чувашского языка»[4]. Унта чăваш тата огуз чĕлхисен хушшинчи морфологи пĕрпеклĕхĕсене май килнĕ таран тĕплĕн тишкернĕ. Ку пĕрпеклĕхсен ушкăнне, М.Р. Федотов шучĕпе çак кӳлепесем кĕреççĕ: пулмалли наклонени, çителĕксĕр глаголĕн аффиксĕ (чăваш чĕлхинче *-чĕ* (*-ччĕ*) аффикс), *-ан /-ен* причасти аффиксĕ, хăш-пĕр падеж аффиксĕсем. Вĕсенчен чи кăсăкли, паллах, пулмалли наклонени аффиксĕ *-малла /-мелле*, мĕншĕн тесен урăх тĕрĕк чĕлхисенче ку аффикс пачах та тĕл пулмасть. Ăсчах ку кӳлепен пулăвне, ăна мĕнлерех усă курнине огуз чĕлхисемпе танлаштарса тĕплĕн тишкерет. Тĕрĕк чĕлхисемсĕр пуçне çармăс чĕлхин факчĕсене те илсе кăтартать, тĕрлĕ ăсчах шухăшĕпе паллаштарать[5].

Эпир вара хамăр статьяра чăваш тата туркă чĕлхисенче тĕл пулакан пĕр евĕрлĕ глагол кӳлеписене тишкерĕпĕр. Паллах, вĕсен хушшинче огуз тата пăлхар чĕлхисенче анчах мар, ытти тĕрĕк чĕлхисенче пуррисем те тĕл пулма пултараççĕ. Пирĕн шутпа, тĕпчевшĕн ку пачах та чăрмав мар, мĕншĕн тесен ку кӳлепесем пире пулăвĕ енчен кăна мар, вĕсен функцийĕ тĕлĕшĕнчен те интереслентереççĕ. Апла пулин те, ку кӳлепесене тĕпченĕ май эпир вĕсен пулăвне те пăхса тухма тăрăшăпăр.

Тюркологсем каланă тăрăх, тĕрĕк чĕлхисенче сăмах улшăнăвĕ шайĕнчи темиçе глагол категорийĕ пур[6]. Вĕсен шутне статус (пирĕн шутпа, нумай ăслăлăх ĕçĕсенче ку категорие йăнăшпа «аспект» теççĕ), залог, наклонени, вăхăт, сăпат, номинализаци (ĕç ячĕсем, причастисем тата деепричастисем) категорийĕсем кĕреççĕ. Малалла вара кашни глагол категорине уйрăммăн пăхса тухăпăр.

С т а т у с к а т е г о р и й ĕ

Ку категорине яланхилле тăвату форма кĕртеççĕ: çирĕплетӳ статусĕ, хирĕçлев статусĕ, пулаюлăх тата пулаюсăрлăх статусĕсем. Çирĕплетӳ статусĕн нимле форма палăртăвĕ (аффиксĕ) те çук. Çавăнпа эпир ку статуса тишкермĕпĕр. Урăх статуссен вара хăйсен аффиксĕсем пур.

а) Хирĕçлев статусĕн кӳлепи туркă чĕлхинче икĕ вариантлă *-ma /-me* е тăвату вариантлă *-mı /-mi /-mu /-mü* аффикссемпе палăрать. Унсăр пуçне хальхи-пулас вăхăтĕнче *–maz /-mez* пулма пултарать. Тĕслĕхрен: *gel**me**dim* «килмерĕм», *git**mi**yorsun* «каймастăн», *al**maz*** «илмест». Чăваш чĕлхинче те *-ма /-ме* тата *-мас /-мес* хирĕçлев аффиксĕсем пур: *кил**мер**ĕм*, *кай**мас**тăн* т.ыт.те. Анчах чăваш чĕлхинче унсăр пуçне тата икĕ хирĕçлев кӳлепи тĕл пулать. Хирĕçлев статусĕ хушу наклоненийĕнче пĕрремĕш сăпатра *мар* татăкпа, иккĕмĕш тата виççĕмĕш сăпатсенче *ан* препозитивлă татăкпа палăрать: *каям* ***мар, ан*** *вула,* ***ан*** *килтĕр* т.ыт.те. *Мар*

татăка туркkă чĕлхинче *değil* хирĕçлев сăмахĕ тӳр килет. Туркkă чĕлхинче *ан* татăка пĕр килекен е тӳр килекен татăк пачах çук.

Паллă тюркологсем каланă тăрăх, ку кӳлепе пĕтĕм тĕрĕк кӳлепи çеç мар, урал-алтай кӳлепи. Ăна пĕтĕм тĕрĕк чĕлхисенче усă кураççĕ[7].

б) Пулаюлăх статусĕ чăваш чĕлхинче *-ай /-ей* аффикс хушăннипе пулать: *кил**е**етĕп* (*кил-**ей**-етĕп*), *пар**ая**тăп* (*пар-**ай**-ат-ăп*). Анчах ку кӳлепепе пуплевре сайра усă кураççĕ. Çак пĕлтерĕше палăртакан тата нумайтарах усă куракан аналитикăлла кӳлепе *-ма /-ме* инфинитивпа *пултар* глагол çыхăнăвĕпе пулать: *калама пултар*, *тума пултар*, *тĕл пулма пултар* т.ыт.те.

Туркkă чĕлхинче пулаюлăх пĕлтерĕшне палăртмашкăн *-(у)а /-(у)е* аффикспа усă кураççĕ. Чăваш чĕлхипе танлаштарсан тата тепĕр уйрăмлăх пур. Ку аффикс çумне хăйĕн тĕп пĕлтерĕшне çухатма пуçланă тата аффикс пулса тăнă *bilmek* «пĕл-» пулăшу глаголĕ хушăнать. Тен, ĕлĕкрех ку аналитикăллă кӳлепе *-(у)а /-(у)е* аффикслă деепричастипе *bilmek* пулăшу глаголĕ çыхăннипе пулнă, халĕ вăл уйрăм аффикс. Тĕслĕхсем: *gel**ebil**mek* «килме пултар», *oku**yabil**mek* «вулама пултар», *sor**abil**mek* «ыйтма пултар» т.ыт.те.

Чăваш тата туркkă чĕлхинчи ку икĕ кӳлепе пĕр кăкран тухни е тухманни пирки халĕ калама йывăр. Пирĕн шутпа, ку кӳлепесен пулăвĕ тĕрлĕрен, мĕншĕн тесен урăх тĕрĕк чĕлхисенче ку пĕлтерĕше, тĕпрен илсен, аналитикăлла кӳлепесем палăртаççĕ. Сăмахран, тутар чĕлхинче *-а /-й* деепричастипе *алу* «ил» пулăшу глаголĕ пĕрлешĕвĕпе усă кураççĕ[8].

Чăвашсен пуплевĕнче пулаюлăх кӳлепи пулаюсăрлăх кӳлепинчен сайрарах[9].

в) Пулаюсăрлăх статусĕн кӳлепине чăваш чĕлхинче пулаюлăх кӳлепипе хирĕçлев кӳлепи майлашăвĕ тăвать: *çыр**аймас**тăп*, *кул**аймас**тăп*, *кĕт**еймер**ĕм* т.ыт.те. Туркkă чĕлхинче вара *bilmek* пулăшу глаголĕ вырăнĕнче *-ma /-me*,

*-mı/-mi/-mu/-mü* е *-maz/-mez* аффикссемпе усӑ кураççӗ: *oku**yamaz*** «вулаймасть», *gel**emi**yor* «килеймест», *gör**eme**di* «кураймарӗ» т.ыт.те.

З а л о г к а т е г о р и й ӗ

Çакӑн пек сӑмах улӑштаракан категори чӑваш чӗлхинче пулнине тӗпчевçӗсенчен нумайӑшӗ йышӑнмасть. Ӑсчахсем вӗсене сӑмах тӑвакан аффикссен ушкӑнӗ тесе шутлаççӗ[10]. Туркка чӗлхине тишкерекен ӑсчахсем вара пачах урӑхла хаклаççӗ: залогсене сӑмах улӑштаракан категори пек шута илеççӗ[11]. Халӗ чӑваш чӗлхинче залог аффиксӗсем сӑмах улӑштаракан е сӑмах тӑвакан ушкӑнсене кӗни пирки тавлашмӑпӑр, мӗншӗн тесен çакӑ пирӗн статьян темипе çыхӑнман, тӗллевӗмӗр ку аффикссен пӗрпеклӗхӗсене кӑтартасси çеç. Сӑмах май каласан, чӑваш тата туркка чӗлхисенчи залог аффиксӗсем хушшинче кӳлеписем енчен те, функци-пӗлтерӗш енчен те пӗрпеклӗхсем питӗ нумай.

Тӗпрен илсен, тӗрӗк чӗлхисенче тӑватӑ залог ушкӑнне палӑртаççӗ:

а) хистев залогӗ;

б) пассивлӑ залог (страдательный);

в) хире-хирӗçлӗх залогӗ;

г) таврӑну залогӗ.

Тӗрӗссипе, пассивлӑ тата таврӑну залогӗсене чӑваш тата туркка чӗлхисенче пӗр пек аффикспа палӑртаççӗ, çавӑнпа та эпир вӗсене пӗр залог – пассивлӑ-таврӑну залогӗ – пек пӑхса тухӑпӑр. Тӗп залогне те эпир ку ушкӑна кӗртмерӗмӗр, мӗншӗн тесен ӑна палӑртмалли аффикс çук.

а) Хистев залогӗ туркка чӗлхинче *-dır* (*-tır*), *-ır*, *-ar*, *-t*, *-ıt* аффикссемпе палӑрать. Тӗслӗхрен: *durmak* «тӑр» – *dur**dur**mak* «чар», *pişmek* «пӗç» – *piş**ir**mek* «пӗçер», *çıkmak* «тух-» – *çık**ar**mak* «кӑлар», *okumak* «вула» – *oku**t**mak* «вулаттар», *korkmak* «хӑра» – *kork**ut**mak* «хӑрат» т.ыт.те.

Чăваш чĕлхинче усă куракан ку залогăн аффиксĕсем çакăн пек: *-тар /-тер* (*-ттар /-ттер*), *-т*, *-ар/-ер*. Тĕслĕхсем: *сӳн**тер***, *кул**тар***, *ĕçле**ттер***, *кала**ттар***, *çи**тер***, *ӳк**ер***, *вĕрен**т***, *выля**т*** т.ыт.те. Эпир асăрханă тăрăх, турккă чĕлхин хистев залогĕн аффиксĕсем чăваш чĕлхин евĕрлех.

Пĕлтерĕшĕ тĕлĕшĕнчен те пĕрпеклĕхсем кунта уçăмлăн палăраççĕ. Пĕр çын урăх çын тăвакан ĕçе е мĕнле те пулин япалан тăрăмне хиствепе хутшăнать. Сăмах май, ку кӳлепесем куçăмсăр тĕпсенчен иккĕмĕш куçăмлă тĕпсем тăваççĕ. Акă турккă чĕлхинчи тĕслĕхсем: *Avrupalılar, kendi ülkelerinde görmedikleri bu hamamları ilgi ve hayranlıkla **değerlendirmişler** ve bu hamamlara «Türk hamamı» adını vermişlerdi* (Temel Britannica) – Европа çыннисем çĕр-шывĕнче пачах курман ку мунчасене кăмăллăн, тĕлĕнсе **палăртрĕç** те вĕсене «турккă мунчи» тесе ят пачĕç; *İstediği kadar altın, para, en güzel kızları vererek, veliahtı **susturmak, uyutmak** istermiş...* (Несин). – Вăл ыйтнă чухлĕ ылтăн, укçа тата чи илемлĕ хĕрсене парса принца **шăплантарас** тата **çывăрттарас** тенĕччĕ... Чăваш чĕлхинчи тĕслĕхсем: *Çеçке пек çепĕç, чипер хĕрача, мана **хаваслантарнă** хушăрах, чĕремре темле ачаш хĕлĕхе сĕртĕнсе хускатрĕ* (Артемьев); *Çавăнпа вăл ывăннă тăванĕсене аялалла **антармасăр** Çавал тăрăх темиçе çухрăм вĕçтерет* (Кипек).

б) Пассивлă-таврăну залогĕн кӳлепи те турккă чĕлхинче темиçе вариантлă: *-ıl, -n /-ın, -nıl* – *yazmak* «çыр» – *yaz**ıl**mak* «çырăн», *yıkamak* «çу» – *yıka**n**mak* «çăвăн», *bulmak* «туп» – *bul**un**mak* «тупăн», *saklamak* «пытар» – *sakla**nıl**mak* «пытарăн» т.ыт.те.

Чăваш чĕлхинчи пассивлă-таврăну залогне те çакăн пек аффикссем палăртаççĕ: *-ăл /-ĕл*, *-ăн /-ĕн*; *çăр**ăл***, *çĕмр**ĕл***, *чар**ăл***, *çап**ăн***, *ӳк**ĕн***, *мухт**ан***. Чăннипе каласан, *-ăл /-ĕл* аффикс хальхи чăваш чĕлхинче анлăн сарăлман[12].

Семантика тĕлĕшĕнчен ку кӳлепен икĕ тĕп пĕлтерĕшне палăртма пулать: пассивлăх тата таврăнулăх. Пĕрремĕшне ăнлантарма йывăртарах, мĕншĕн тесен вăл грамматика пĕлтерĕшĕ çеç, ĕç-хĕлĕн объекчĕ пуплевре подлежащи пулнине кăтартать. Таврăну пĕлтерĕшĕ вара ĕç-хĕле субъект хăйĕн валли е хăйĕн уссишĕн тунине палăртать. Темиçе тĕслĕх илер: *Ve bir köşede birbiri üstüne* ***yığılmış*** *buğday, mısır, çavdar, her çeşitten ekin çuvalları. Karşıda beyaz torbalara* ***doldurulmuş*** *unlar...* (Али). – Пĕр кĕтесре – пĕр-пĕрин çине **купаланнă** тулă, пăрçа, ыраш, тĕрлĕ вăрлăх тултарнă михĕсем, тепĕр енче – шурă михĕсене **тултарнă** çăнăх...; *Birdenbire, dershanenin kapısı* ***vurulmadan****, şiddetle* ***açılmış****...* (Адывар). – Ăнсăртран класс алăкĕ **шаккамасăр**, вăйпа **уçăлчĕ**... Чăваш чĕлхинчи тĕслĕхсем: *Раис ял еннелле* ***çаврăнса*** *тăчĕ те куççульне шăлма* ***тытăнчĕ*** (Гордеев); *Президиума* ***суйланнă*** *çынсем вырнаçса ларсан вулăсри Совет исполкомĕн председательне Изотова сăмах пачĕç* (М. Ухсай); *Модест Кондратович çăлтăр* ***татăлса*** *аннине курсан ача чухнехи пек, хăй сисмесĕрех: «Манăн çăлтăр çӳлте», – тесе ярать* (Ефимов).

в) Хире-хирĕç залогĕ.

Тăван пĕлтерĕшлĕ икĕ (хире-хирĕçлĕх тата пĕрлелĕх) залог турккă чĕлхинче *-ış, -ş* аффикссемпе, чăваш чĕлхинче вара *-ăç /-ĕç*, *-ăш /-ĕш* (*-ш, -ç*) аффикссемпе палăрать: *sevmek* «сав» – *sev**iş**mek* «савăш», *vurmak* «çап» – *vur**uş**mak* «çапăç», *kaçmak* «тар» – *kaç**ış**mak* «пĕрле тар», *oynamak* «выля» – *oyna**ş**mak* «пĕрле выля»; *тыт**ăç***, *кала**ç***, *пупле**ш***, *ытала**ш***, *саламла**ш***, *çуйх**аш***, *шӳтле**ш*** т.ыт.те.

Эпир асăрханă тăрăх, хире-хирĕçлĕх пĕлтерĕшне куçăмлă глаголсем, пĕрлелĕх пĕлтерĕшне куçăмсăр глаголсем палăртаççĕ.

Турккӑ чӗлхинчи тӗслӗхсем: *«Bizim hisarımız at sırtıyla yalın kılıç» diye* ***gülüşür*** *bu Türkmenler...»* (Тахир). – «Пирӗн кермен – лаша купарчипе ҫивӗч хӗҫ», – тесе **кулаҫҫӗ** ку туркменсем...; *Daha geçenlerde Kolesseum'da çok tanınmış bir gladyatörle* ***dövüştü*** (Несин). – Ӗлӗкхи вӑхӑтра вӑл пӗр питӗ чаплӑ гладиаторпа Колизейра **ҫапӑҫнӑ**. Чӑваш чӗлхинчи тӗслӗхсем: — *Ман ҫывӑх туспа* ***паллашма*** *ыйтатӑп,— юлташне ҫурӑмӗнчен лӑп-лӑп-лӑп тутарса калаҫрӗ Кируш* (Григорьев); *Пулма та пултарать. Социализм вӑйӗсемпе* ***тытӑҫнӑ*** *чух* ***пӗрлешме*** *те пултарӗҫ вӗсем* (Вутлан).

Чӑваш чӗлхинче ку залогӑн тата тепӗр пӗлтерӗшне палӑртнӑ – вӑйлӑлӑх (интенсивость). Сӑмахран: – *Тухса кай, тухса кай ман ҫуртӑмран, кӗлӗмҫӗ, хӑртӑк, саплӑк!* – *сурчӑкне сирпӗтсе* ***кӑшкӑрашрӗ*** *вӑл* (Илпек).

Ҫак пӗлтерӗш сайра тӗл пулать пулсан та, урӑх тӗрӗк чӗлхисенче те пур[13].

Тӗпрен илсен, залог аффиксӗсем ытти тӗрӗк чӗлхисенче те (тутар, якут, узбек, пушкӑрт, тува, шор, кӑркӑс т.ыт.те) ҫакӑн пек. Ҫавӑнпа эпир ку кӳлепесене пӗрлехи тӗрӗк кӳлеписем тесе калама пултаратпӑр.

Н а к л о н е н и   к а т е г о р и й ӗ

а) Ку категорин кӳлеписенчен пирӗншӗн чи кӑсӑкли – *-малла/-мелле* пулмалли наклонени кӳлепи. Мӗншӗн интереслӗ-ха вӑл? Мӗншӗн тесен ку кӳлепе чӑваш тата огуз чӗлхисӗр пуҫне нихӑш тӗрӗк чӗлхинче те ҫук. Вӗсенче ку пӗлтерӗше урӑх мелпе, тӗпрен илсен, аналитика мелӗпе, палӑртаҫҫӗ. Тӗслӗхрен, тутар чӗлхинче: *Кемгә таян****ырга тиеш*** *мин?* – «Кама вара таянмалла манӑн?»[14] Кунта пулмалли пӗлтерӗшӗ инфинитив тата *тиеш* «тивӗҫ» модальлӗ сӑмах майлашӑвӗпе палӑрнӑ. Чӑваш чӗлхинче те аналитика мелӗпе усӑ кураҫҫӗ. Тӗслӗхрен, *-ас /-ес* аффикслӑ сӑмах тата *пул* пулӑшу глаголӗн майлашӑвӗ: – *Итл****ес*** ***пул****ать каланине!* – *хӑй*

*лутра пулсан та сасси хăлхана çурас пек илтĕнет Михалян* (Илпек).

Чăваш чĕлхи грамматикинче ку кӳлепене ытларах чух пулмалли пайташ (причасти) пек ăнлантараççĕ[15]. Паллах, вăл пайташ функцийĕпе çӳреме пултарать: *Вара пире ĕмĕрлĕхе каторгăна* ***ямалла*** *суд турĕç* (Мранькка). Анчах ку *-малла /-мелле* кӳлепен пĕртен-пĕр функци мар. Урăх функцисене кăшт каярах пăхса тухăпăр.

Эпир вара ку кӳлепене наклонени ушкăнне кĕртетпĕр, мĕншĕн тесен туркă чĕлхинче ăна чăн наклонени кӳлепи пек усă кураççĕ. Чăваш чĕлхинче те çак функци пур. Анчах вĕсен хушшинче икĕ тĕп уйрăмлăха палăртма пулать.

Пĕрремĕшĕ, чăваш чĕлхинчи кӳлепе туркă чĕлхинчи пек сăпат аффиксĕсене йышăнмасть те улшăнмасть: – *Siz bu işi bugün* ***bitirmelisiniz*** чăвашла: *Сирĕн ку ĕçе паян* ***пĕтермелле*** пулать. Кунта *-siniz* – иккĕмĕш сăпатăн нумайлă хисепĕн аффиксĕ. Паллах, ку кӳлепе пĕрремĕшпе виççĕмĕш сăпатсен аффиксĕсене те йышăнма пултарать (*-yim, -yiz, -sin, -leri* т.ыт.те).

Иккĕмĕш уйрăмлăх – чăваш чĕлхинче сăпат местоименийĕсем (ят ылмашĕсем) *-малла / -мелле* кӳлепепе камăнлăх падежĕнче пулаççĕ: *манăн вуламалла, санăн вуламалла, унăн вуламалла* т.ыт.те. Тепĕр майлă каласан, ку кӳлепепе камăнлăх ят ылмашĕсем усă кураççĕ.

Маларах каланăччĕ ĕнтĕ, пулмалли наклонени кӳлепине чăваш чĕлхинче туркă чĕлхипе танлаштарсан нумайрах майлашусенче тата ытларах функцисемпе усă кураççĕ. Вĕсене пăхса тухар:

– причасти функцийĕнче *-малла /-мелле* кӳлепепе тăтăшах *-и* е *-скер* палăрту аффиксĕсемпе усă кураççĕ: *Кĕтесре маччана çити* ***улăхмалли*** *çавра пусма пур...* (Илпек).

– ĕç-хĕлĕн пулмалли наклонени функцийĕнче: *Паян-ыранах хĕрӳ ĕç вăхăчĕ – утçи* ***пуçланмалла*** (Артемьев);

– наречи пек усă кураççĕ: *Пит-куçĕ такама* ***илĕртмелле*** *илемлĕччĕ* (Мранькка);

– хушăран палăрту аффиксĕпе ĕç-хĕл ячĕн функцине те пурнăçлать: *Хальлĕхе урăх* ***çырмаллиех*** *çук* (Мранькка).

Палăрту аффиксĕпе ку кӳлепе темиçе урăх (тĕпрен илсен, падеж) аффикссене йышăнма пултарать: *-маллипе /-меллипе, -маллине /-меллине* т.ыт.те. Иртнĕ вăхăтăн *-ччĕ* çителĕксĕр аффиксне йышăнать: *Кайран та пулин* ***систермеллеччĕ*** (Вутлан). Унсăр пуçне унпа хăш-пĕр сăмах майлашăвĕнче (аналитика кӳлеписенче) те усă кураççĕ: *Енчен Тухтар хăйех Элентей патне куçма шут тытсан мĕн* ***тумалла пулать****?* (Илпек); *2014 çултан вара ăна (каналне) пĕтĕм республикипех* ***курмалла тăвасшăн*** (Хыпар).

Пирĕн ума халĕ тепĕр ыйту тухса тăрать: мĕншĕн ку кӳлепе чăваш тата огуз чĕлхисенче анчах тĕл пулать? Вăл чăваш чĕлхине огуз чĕлхисенчен е огуз чĕлхисене пăлхар чĕлхинчен кĕнĕ йышăну мар-ши? Ку ыйтăва хурав пама йывăр. Л.С. Левитская чăваш чĕлхинчи *-малла /-мелле* тата туркăлла *-malı* кӳлепесене «псевдосовпадения – результаты параллельного развития» тесе хаклать. «Функционально тождественные формы складываются из структурно подобных, а иногда и материально схожих элементов», – тесе çырать вăл[16]. Енчен те çак икĕ кӳлепен пĕрпеклĕхне параллельлĕ аталану пек шута илсессĕн, пирĕн вĕсен пайĕсене чăваш чĕлхинчи *-ма /-ме* тата *-лла /-лле* аффикссемпе, турккă чĕлхинчи *-ma /-me* тата *-lı /-li* аффикссемпе танлаштарас пулать. Вĕсене танлаштарсан пĕр çураçусăрлăх тухать, мĕншĕн тесен турккă чĕлхинчи *-lı /-li* аффикс чăваш чĕлхинчи *-лă /-лĕ* аффикспа тӳр килет. Апла пулсан пулмалли наклонени (е пайташ) *-маллă /-меллĕ* аффикслă пулмалла, анчах çавăн пек кӳлепе чăваш чĕлхинче çук. Л.С. Левитская тепĕр ĕçĕнче ку çураçусăрлăха çавăн пек ăнлантарать: «Чувашскую форму на *-malla /-melle* можно рассматривать как контаминацию южнотюркской формы на *-mallï > *-malə, -mallə* и угро-финской модели типа марийских *-man, -məla.* Возможно, имела место контаминация двух тюркских

аффиксов с локальным значением *-la* и *-lï*»[17]. Пирĕн шутпа, ку ăнлантару кăштах иккĕленӳллĕ. Урăхла каласан, «*-малла/-мелле* тата *-malı* кӳлепесем мĕншĕн чăваш тата огуз чĕлхисенче анчах тĕл пулаççĕ?» текен ыйту хальччене уçă.

Вăхăт категорийĕ

Тĕрĕк чĕлхисенче вăхăт категорийĕ яланхилле питĕ анлă иккенне калама пултаратпăр, мĕншĕн тесен ку категорине кĕрекен формаллă палăртусем ытла та нумай, сăлтавĕ – вăхăт кӳлеписем тĕп вăхăт пĕлтерĕшĕсене кăна мар, хушма пĕлтерĕшсене те палăртни. Вĕсен хушшинче иккĕленӳпе иккĕленӳсĕрлĕх, яланлăх, тахçан пулса иртни т.ыт.те. Чăваш тата туркка чĕлхисенче те вăхăчĕсен шучĕ пысăк. Юлашки вăхăтра хăш-пĕр ăслăхçăсем тĕрĕк глагол вăхăт системине икĕ е виçĕ пысăк пая пайлаççĕ: хальхи саманта тĕлленĕ кӳлепесем (вырăсла каласан: формы первичной ориентации), иртнинче пулнă саманта тĕлленĕ кӳлепесем (формы вторичной ориентации), пуласлăхра пулакан саманта тĕлленĕ кӳлепесем (формы третичной ориентации)[18].

Туркка чĕлхинче глаголăн вăхăт кӳлеписен хушшинче çаксене палăртма пулать: хальхи саманта тĕлленĕ кӳлепесем – хальхи вăхăт (*-yor* аффикс), татăклă иртнĕ вăхăт (прошедшее категорическое, *-dı* аффикс), субъективлă иртнĕ вăхăт (прошедшее субъективное, *-mış* аффикс), хальхи-пулас вăхăт (настоящее-будущее, *-ar*, *-ır* аффикссем), пулас вăхăт (*-acak* аффикс) т.ыт.те; иртнинче пулнă саманта тĕлленĕ кӳлепесем – паллă имперфект (определенный имперфект, *-yordu* аффикс), паллă мар имперфект (неопределенный имперфект, *-ardı* аффикс), тахçанах (малтан) иртнĕ вăхăт (давнопрошедшее, *-mıştı* аффикс) т.ыт.те; пуласлăхра пулакан саманта тĕлленĕ кӳлепесем – пуласлăхра пулакан хальхи вăхăт (настоящее в будущем, *-yor* аффикс + *olacak* пулăшу глаголĕ) т.ыт.те[19].

Чăваш чĕлхинчи глаголăн вăхăт кӳлеписем: хальхи саманта тĕлленĕ кӳлепесем – хальхи вăхăт (*-ат/-ет* аффикс), иртнĕ вăхăт (*-рĕ*, *-чĕ* аффикссем), пулас вăхăт; иртнинче пулнă саманта тĕлленĕ кӳлепесем – темиçе иртнĕ вăхăт (*-атчĕ/-етчĕ* аффикс), малтан иртнĕ вăхăт (*-сатчĕ/-сетчĕ*) т.ыт.те[20].

Икĕ чĕлхен глагол вăхăчĕсен системисене танлаштарсан пĕлтерĕшĕ тата тытăмĕ енчен нумай пĕрпеклĕх пур пулин те, кӳлепи енчен вара эпир пĕрне çеç пĕр евĕрлĕ тесе палăртма пултаратпăр – иртнĕ (е татăклă иртнĕ) вăхăт кӳлепи. Б.А. Серебренниковпа Н.З. Гаджиева шухăшĕ тăрăх, ку кӳлепе пĕтĕм хальхи тĕрĕк чĕлхисенче пур[21]. Турккă чĕлхинче ку иртнĕ вăхăта *-dı* (янăраман хупă сасă хыççăн *-tı*) аффикспа палăртаççĕ. Чăваш чĕлхинче кăшт уйрăмлăх пур: иртнĕ вăхăт кӳлепи кунта виçĕ алломорфлă: *-тă /-тĕ*, *-рă /-рĕ* тата *-чĕ*. Чи нумай усă кураканни – *-рă /-рĕ* алломорф; *-тă/-тĕ* алломорф *л, н, р* сасăсенчен хыççăн хушăнать, *-чĕ* алломорфа *л, н, р* хыççăн виççĕмĕш сăпатра усă кураççĕ. Кунта çакна асăрхаттарасшăн: чăваш чĕлхинчи иртнĕ вăхăт аффиксĕ сыпăкланни икĕ майпа пулма пултарать: е *ил-**т**-ĕм*[22], е *ил-**тĕ**-м* пек сыпăкланса[23]. Эпир вĕсенчен иккĕмĕш вариантне суйларăмăр, тĕрĕссипе каласан, кунта пĕрремĕш вариант та пулма пултарать. В.И. Сергеев хăй иккĕмĕш варианта суйланине ытти тĕрĕк чĕлхисенче çакăн пек сыпăкланнипе ăнлантарать[24]. В.Г. Егоров вара иртнĕ вăхăт кӳлепи ĕлĕкрех япала ячĕ пулнă тесе *ил-**т**-ĕм* сăмаха «манăн илни» пек ăнлантарать, апла пулсан *-ĕм* аффикс кунта камăнлăх аффиксĕ пулса тăрать[25]. Икĕ ăнлантарура та, пирĕн шутпа, логика пур. Тĕпрен илсен, диахрони тĕлĕшĕнчен кунта икĕ уçă сасăн *стяжени* пулса тухма пултарнă: *илтĕ + ĕм = илтĕм*. Анчах хальлĕхе пĕр тĕрĕс варианта суйлама питĕ йывăр.

Тĕслĕхсем: ***Yürüdü***. *Merdivenleri* ***geëti***. *Sola* ***saptı***. *Ve* ***durakladı*** (Энис). «**Кайрĕ**. Пусмапа **хăпарчĕ**. Сулахай енне

**пăрăнчĕ**. Вара **чарăнчĕ**»; *Ankaraya niçin geldiğinizi hâlâ* ***söylemediniz*** (Али). «Эсир Анкарана мĕншĕн килнине хальччен те **каламарăр**»; *Кăкшăма эпĕ кăнтăрлахи апат тĕлне тин* ***çитрĕм****. Юлташсем часах канма* ***выртрĕç*** (Орлов); *Кĕслеçĕ нумаях* ***кĕттермерĕ,*** *кивĕ кĕрĕкне тӳмелемесĕрех çенĕхе кăштăртатса* ***тухрĕ*** (Артемьев).

Нумай чухне çак вăхăт ĕç-хĕл вĕçленнине, калаканĕ вăл мĕнле иртнине лайăх пĕлнине кăтартать.

С ă п а т к а т е г о р и й ĕ

Ку категорин те тĕпчекен икĕ чĕлхере пĕтĕм тĕрĕк кӳлеписене усă кураççĕ. Анчах пĕрпеклĕхсемпе пĕрлех уйрăмлăхсем те пур кунта. Эпир вĕсене вăхăт категорисене кура пăхса тухатпăр.

Хальхи тата пулас вăхăтсен пĕрремĕш сăпатра турккă чĕлхинче *-ım* тата *-ız* аффикссем тĕл пулаççĕ, чăваш чĕлхинче вара *-ăп /-ĕп* тата *-пăр /-пĕр*. Эпир асăрханă тăрăх, вĕсем уйрăлса тăраççĕ: *geliyor****um*** (*geleceğ****im***), *geliyor****uz*** (*geleceğ****iz***) – *килет****ĕп*** (*кил****ĕп***), *килет****пĕр*** (*кил****ĕпĕр***) т.ыт.те.

Иккĕмĕш сăпатра та çавăн пекех. Турккă чĕлхинче *-sın* тата *-sınız* аффикссем пулсассăн чăваш чĕлхинче *-ăн /-ĕн*, *-ăр /-ĕр* аффикссем: *geliyor****sun*** (*gelecek****sin***), *geliyor****sunuz*** (*gelecek****siniz***) – *килет****ĕн*** (*кил****ĕн***), *килет****ĕр*** (*кил****ĕр***) т.ыт.те.

Виççĕмĕш сăпатри аффикссем пирки калаçу та хускатмастпăр, мĕншĕн тесен вĕсен хушшинче кӳлепе пĕрпеклĕхĕсем пачах та çук.

Иртнĕ вăхăтăн пĕрремĕш тата иккĕмĕш сăпатри аффиксĕсем хушшинче турккă тата чăваш чĕлхинче пĕрпеклĕхсем тупма пултаратпăр.

Пĕрремĕш сăпатра турккă чĕлхин пĕрреллĕ хисепĕн *-m* аффиксĕпе чăваш чĕлхинче *-м* аффикс тӳр килет: *geldi****m*** – *килтĕ****м***.

Иккĕмĕш сăпатра та икĕ чĕлхен пĕрреллĕ хисепĕн аффиксĕсем пĕр пек: *geldi****n*** – *килтĕ****н***. Нумайлă хисепе илес пулсан, кунта пĕр фонетика саккунне асра

тытмалла. Турккӑ чӗлхинчи сӑпат аффиксӗсен *z* сассипе чӑваш чӗлхинчи аффикссенче *р* сасӑ тӳр килет (ротацизм). Кӑна шута илсе иккӗмӗш сӑпатри аффикс икӗ чӗлхере пӗр пек курӑнать, анчах вӗсем хушшинче пӗр уйрӑмлӑх пур. Турккӑ чӗлхинче -*z* аффикс çумне -*n* аффикс хушӑнса пырать, çак майпа -*nız* аффикс пулса тухать: *geldi**niz***. Чӑваш чӗлхинче вара -*р* аффикс пӗрреллӗ хисепӗн -*н* аффиксӗ çумне хушӑнмасть: *килтӗ**р***.

Пӗрремӗш сӑпатри нумайлӑ хисепӗн кӳлепине икӗ чӗлхере тӗрлӗрен тӑваççӗ. Чӑваш чӗлхинче ӑна -*мӑр* /-*мӗр* аффикспа палӑртаççӗ, турккӑ чӗлхинче вара – -*k* аффикспа. Тӗслӗхсем: *килтӗ**мӗр*** – *geldi**k***.

Н о м и н а л и з а ц и   к а т е г о р и й ӗ

Ку категорине, тӗпрен илсен, чӑваш чӗлхин грамматикинче уйрӑм пӗр категори пек шутламаççӗ. Ӗç ячӗсене, причастине тата деепричастине «глаголӑн сӑпатсӑр кӳлеписем» тесе палӑртаççӗ. Ку тӗрӗсех мар пек, мӗншӗн тесен çак кӳлепесем хушшинче сӑпат аффиксӗсемпе усӑ кураканнисем те тӗл пулаççӗ. Сӑмахран, *манасс**ӑм** çук*, *теесс**ӗм** килет*, *пултарасс**ӑм** пулсан*, *мӗн курасс**у** пулать* т.ыт.те.

В.Г. Гузев профессор хайӗн ӗçӗсенче ку кӳлепесене тахçанах ӗнтӗ уйрӑм – номинализаци – категорине кӗртет[26]. «Номинализаци» термин чӗлхе пӗлӗвӗнче глагол ӗç ятне куçнине пӗлтерет. Тӗрӗк чӗлхисен грамматикисенче виçӗ кӳлепе ушкӑнӗ (ӗç ячӗсем, причастисем тата деепричастисем) валли çак термина усӑ курни тӗрӗсрех пек курӑнать, мӗншӗн тесен, чӑнах та, уйрӑмах тӗрӗк чӗлхисенче вӗсем семантикине кура ӗç-хӗле япала, паллӑ е обстоятельство пек кӑтартаççӗ[27].

1. Ӗç ячӗсем

Ку ушкӑна кӗрекен кӳлепесене палӑртмашкӑн урӑх терминсем те пур: «масдар», «супин» тата «инфинитив». Юлашки термина чӑваш чӗлхи пӗлӗвӗнче нумайрах усӑ кураççӗ. Пирӗн шутпа, «инфинитив» термин пӗтӗмӗшле

илсен выранлӑ курӑнать, анчах чӑваш тата туркӑ чӗлхинче пулакан кӳлепесен инфинитив функцийӗнчен нумайрах функцисенче пулма пултараҫҫӗ. Урӑхла каласан, инфинитив функцийӗ тӗрӗк чӗлхисенче ӗҫ ячӗн функцийӗсен пӗр уйрӑм пайӗ ҫеҫ.

Туркӑ чӗлхинчи ӗҫ ячӗсен ушкӑнӗнче *-mak*, *-ma* тата *-(y)ış* кӳлепесене пӗрлештереҫҫӗ[28]: ***gelmek***, ***gelme***, ***geliş*** «килме, килӳ». Чӑваш чӗлхинче вара ку ушкӑна ҫаксене кӗртетпӗр: *-ма /-ме*, *-машкӑн /-мешкӗн*, *-у /-ӳ*. Тӗслӗхсем: ***килме***, ***килмешкӗн***, ***килӳ*** т.ыт.те.

Эпир асӑрханӑ тӑрӑх, тӗпченекен икӗ чӗлхере *-ma* тата *-ма /-ме* кӳлепесем пӗр пек. Хӑш-пӗр ӑсчахсен шучӗпе, *-машкӑн /-мешкӗн* кӳлепе те диахрони тӗлӗшӗнчен *-mak* кӳлеперен пулса кайнӑ[29]. Ку пулӑма ҫак схемӑпа кӑтартма пулать: **-мак* (авалхи кӳлепе) + *-шӑн* (пирке падежӗ) = *-макшӑн*. Кайран вара, *к* тата *ш* сасӑсем выранӗсемпе улшӑннӑ хыҫҫӑн, хальхи кӳлепе пулса тухнӑ.

Ҫавӑнпа пӗрлех *-ма* тата *-mak* кӳлепесем туркӑ чӗлхинче падеж аффиксӗсене йышӑнма пултараҫҫӗ. Ҫавӑнпа эпир вӗсене инфинитив кӳлеписем ҫеҫ тесе калама пултараймастпӑр. Ку чӑн-чӑн ӗҫ ячӗ. Акӑ тӗслӗхсем: *Kraliçe I. Elizabeth... yılda dört kere* ***yıkanmaktan*** *gurur duyuyordu* (Temel Britannica) – «I. Элизабет патша... ҫулта тӑватӑ хут **ҫӑвӑннӑшӑн** пысӑк мухтав туйрӗ»; *Böyle zamanlarda, dünyaya acıma ve sevgi duyduğu adamın gözüyle* ***bakmaya*** *çalışırdı* (Памук). – «Ҫакӑн пек вӑхӑтра вӑл тӗнче ҫине хӗрхенӳ тата юрату туякан ҫын куҫӗпе **пӑхма** тӑрӑшатчӗ»; *Hiçbir zaman* ***susmayı*** *bilmeyen kalbi hemen her gün sevgilisini, evini, bütün bıraktığı yerleri yavaş fakat keskin bir sesle fısıldardı* (Али). – «Нихҫан та **пӑлханмасӑр пурӑнма** пултарайман чӗри халь те кашни кун савнийӗ, килӗ, хӑй ҫӳреме пӑрахнӑ тавралӑх ҫинчен шӑппӑн, анчах ҫивӗччӗн пӑшӑлтатса калатчӗ».

Чăваш чĕлхинчи *-ма /-ме* кӳлепе час-часах тĕрлĕ аналитикăллă кӳлепесенче тĕл пулать: *Тутар кĕрешнине вăл халь хăйпе тытăçнă хушăра çеç* ***асăрхама пултарать*** (Илпек); *Çапла иртнĕ ĕмĕрĕн 70–80-мĕш çулĕсенче Йĕпреçри сĕтел-пукан фабрики умĕнче çĕр-шывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчен килнĕ машина йышлăн тăнине* ***курма пулатчĕ*** (Хыпар); *Пуянсем кулнине сахал мар курнă та, пурпĕр* ***хăнăхма çук*** (Мранькка) т.ыт.те.

Çак кӳлепесем эпир пăхса тухакан чĕлхесемсĕр пуçне огуз (азербайджан, гагауз, туркмен), узбек тата уйгур чĕлхисенче те тĕл пулаççĕ. Кыпчак чĕлхисенче çавăн пек кӳлепесем çук[30].

2. Причастисем

Причасти кӳлеписенчен эпир турккă чĕлхинчи *-(y)an*, чăваш чĕлхинчи *-ан /-ен* (хальлĕхе тухăçлă усă курман аффикс) е *-акан /-екен* хальхи причасти кӳлепине пĕр евĕрлĕ теме пултаратпăр. Урăх тĕрĕк чĕлхисенче те çак кӳлепепе усă курни вĕсем пĕр кăкран тухнă тесе калама сăлтав парать[31]. Анчах, сăмахран, кыпчак чĕлхисенче *-ган /-гəн* аффикс хальхи причастие мар, иртнĕ причастие палăртать[32].

Тĕслĕхсем: *Göğsünü* ***saran*** *bir sesle kesik kesik: «Yazacağım sevgilim», – dedi* (Али). – «Чуна **тивекен** сасăпа вăл: «Çыратăп, савниçĕм», – терĕ»; *İyi insanı başından savamayacağını* ***anlayan*** *operatör, adama sövüp saymaya başladı* (Несин). «Лайăх çынна хуса яма пултараймассине **ăнланакан** оператор ăна ятлама пикеннĕ»; *Тур çырлахтăр, ман хĕр чыслăхĕ хам кăмăла* ***каякан*** *çынна кирлĕ мар* (Мранькка); *Эрне иртсен çеç Сайте, чунне хĕнесе тенĕ пек, хăй тĕллĕн* ***çӳрекен*** *пулчĕ* (Илпек).

Унсăр пуçне чăваш чĕлхинчи *-ас/-ес* аффикслă пулас причасти турккă чĕлхинче *-ası* кӳлепепе тӳр килет. Анчах вăл кунта тухăçлă мар[33]. Чăваш чĕлхинче вара ку кӳлепе пачах урăхла: вăл питĕ тухăçлă. Ăна причастисĕр пуçне урăх функцисемпе те усă кураççĕ (сăмахран, ĕç

ячĕ пек). Статьян калăпăшĕ пысăк маррипе тĕслĕхсене кунта кĕртмĕпĕр.

Çак причасти кӳлепи ытти тĕрĕк чĕлхисенче те сарăлнă[34].

3. Деепричастисем

Деепричастисем туркка чĕлхинче те, чăваш чĕлхинче те номинализаци категорин чи анлă ушкăнĕ. Енчен те вĕсен функципе пулăмĕ енчен уйрăмлăхсем ытлах тупаймасассăн та, кӳлепесем енчен вара уйрăмлăхсем нумай пулаççĕ. Акă, тĕслĕхрен, туркка чĕлхинчи хăш-пĕр деепричастисен аффиксĕсен списокĕ: *-(y)ıp*, *-(y)arak*, *-madan*, *-(y)ınca*, *-(y)alı*, *-arcasına* т.ыт.те[35]. Чăваш чĕлхинчи деепричастисен кӳлеписем: *-са/-се*, *-сан/-сен*, *-иччен*, *-массерен/-мессерен*, *-нăçем/-нĕçем*, *-нăранпа/-нĕренпе* т.ыт.те[36].

Икĕ чĕлхен деепричасти кӳлеписен хушшинче ытти тĕрĕк чĕлхисенче тĕл пулакан *-а /-е* деепричасти аффиксĕ çеç пĕр евĕрлĕ пулнине палăртма пултаратпăр: турккӑлла: *gel**e** gel**e*** «киле, киле», *kal**a** kal**a*** «юла-юла», чăвашла: *çыр**а***, *вĕрен**е*** т.ыт.те.

Турккăпа чăваш чĕлхисен пĕр пек кӳлепе тепре те пур. Чăваш чĕлхи грамматикинче, тĕпрен илсен, ăна деепричасти кӳлепи пек палăртмаççĕ. Ку кӳлепе *-арах /-ерех* аффикс. Вăл *-а /-е* аффикслă деепричасти тата *-рах /-рех* танлаштару аффиксĕ пĕрлешнипе пулса кайнă: *Палламасан та, ку хĕрарăм пупăн стрепкине чухланипе **кударах** хуравларĕ* (Мранькка). Турккă чĕлхинче вара хальхи вăхăтра ку кӳлепен танлаштару пĕлтерĕшĕ пачах çухалнă: *Örneğin, bankalarda açılan çek hesapları alışverişlerde ödeme yaptakta kullanılabileceği için para **olarak** kabul edilebilir* (Temel Britannica) «Тĕслĕхрен, банксенче уçнă чек счĕчĕсем суту-илӳре тӳлеме хатĕр, укçа пек **пулса** çӳреме пултараççĕ».

Ытти тĕрĕк чĕлхисенче те çавăн пек деепричасти кӳлепи пур[37].

***

Хамăрăн статьяра эпир туркКă тата чăваш чĕлхинчи пĕр пек кӳлепесене кĕскен çеç тишкерме пултартăмăр. Тĕрĕссипе каласан, кашни пĕр пек кӳлепене тĕплĕнрех тата тирпейлĕрех тĕпчемелле, çакă пĕтĕм тĕрĕк чĕлхе пĕлĕвĕшĕн питĕ усăллă пулĕ. Малашне çавăн пек тĕпчев тăвасса шанатпăр.

Шухăша пĕтĕмлетсе çакна калама пулать:

1. Турккă тата чăваш чĕлхисенчи глагол кӳлеписен пĕрпеклĕхсенчен нумайăшĕн пĕтĕм тĕрĕк чĕлхисенчи паллăсем пур. Урăхла каласан, çак кӳлепесем ытти тĕрĕк чĕлхисенче те тĕл пулаççĕ, вĕсемпе авалхи тĕрĕк чĕлхинче те усă курнă тесе çирĕплетме сăлтавсем пур.

2. Глагол кӳлеписен пĕрпеклĕхĕсем хушшинчи чи нумай тĕл пулакан глагол категорийĕсем çаксем: залог категорийĕ, статус категорийĕ тата сăпат категорийĕ.

3. Пулмалли наклонени кӳлепи пĕр пек ытти кӳлепесем хушшинче уйрăлса тăрать, мĕншĕн тесен ку кӳлепе чăваш тата огуз чĕлхисемсĕр пуçне ытти тĕрĕк чĕлхисенче тĕл пулмасть. Вăл пĕр кăкран е параллельлĕ аталанăва пула пулса кайни хальлĕхе паллă мар.

**Литература**

---

[1] *Левитская Л.С.* Имеются ли в чувашском языке огузские элементы? // Chuvash Studies. Wiesbaden: Otto Harrassowitz, 1982. P. 97–104.

[2] Çавăнтах. P. 97.

[3] Çавăнтах. P. 97–104.

[4] *Федотов М.Р.* О некоторых огузских чертах чувашского языка // Советская тюркология. Баку, 1977. № 1. С. 25–32.

[5] Çавăнтах. С. 25–32.

[6] См. напр.: *Гузев В.Г.* Очерки по теории тюркского словоизменения: глагол (на материале староанатолийско-тюркского языка). Л.: Изд-во Ленингр. ун-та, 1990. 166 с.; *Иванов С.Н.* Курс турецкой грамматики. Ч. 2. Грамматические категории глагола. Л.: Изд-во Ленингр. ун-та, 1977. 87 с. и др.

[7] *Левитская Л.С.* Историческая морфология чувашского языка. М.: Наука, 1976. С. 53.

[8] Татарская грамматика. Т. 2. Морфология / *Ганиев Ф.А., Закиев М.З., Тумашева Д.Г. [и др.]* Казань: ИЯЛИ АНТ, 1997. С. 235.

[9] *Андреев Н.А., Егоров В.Г., Павлов И.П.* Материалы по грамматике современного чувашского языка. Чебоксары: Чувашгосиздат, 1957. С. 185; *Федотов М.Р.* Средства выражения модальности в чувашском языке. Чебоксары: Чувашкнигоиздат, 1963. С. 90.

[10] *Сергеев Л.П., Андреева Е.А., Котлеев В.И.* Чӑваш чӗлхи: чӑваш филологи факультечӗн студенчӗсем валли хатӗрленӗ вӗренӳ кӗнеки. Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 2012. С. 250–251.

[11] *Кононов А.Н.* Грамматика современного турецкого литературного языка. М.–Л.: Изд-во АН СССР, 1956. С. 192–205.

[12] *Сергеев Л.П., Андреева Е.А., Котлеев В.И.* Кӑтартнӑ ӗҫ. С. 250.

[13] *Серебренников Б.А., Гаджиева Н.З.* Сравнительно-историческая грамматика тюркских языков. М.: Наука, 1986. С. 202.

[14] Татарская грамматика. Т. 2. Морфология / *Ганиев Ф.А., Закиев М.З., Тумашева Д.Г. [и др.]* С. 245.

[15] См. напр.: *Андреев Н.А., Егоров В.Г., Павлов И.П.* Кӑтартнӑ ӗҫ. С. 227–229; *Павлов И.П.* Хальхи чӑваш литературӑ чӗлхи: морфологи. Шупашкар: Чӑваш АССР кӗнеке изд-ви, 1965. С. 278–280; *Сергеев Л.П., Андреева Е.А., Котлеев В.И.* Кӑтартнӑ ӗҫ. С. 379; *Андреев И.А.* Причастие в чувашском языке. Чебоксары: Чувашгосиздат, 1961. С. 203–221; *Левитская Л.С.* Историческая морфология чувашского языка. С. 95–97 и др.

[16] *Левитская Л.С.* Имеются ли в чувашском языке огузские элементы? Р. 98.

[17] *Левитская Л.С.* Историческая морфология чувашского языка. С. 96.

[18] *Гузев В.Г.* Глагольное словоизменение в турецком языке // Очерки по теоретической грамматике восточных языков: существительное и глагол. СПб.: Изд-во Санкт-Петерб. ун-та, 2011. С. 316–338.

[19] Ҫавӑнтах.

[20] *Сергеев Л.П., Андреева Е.А., Котлеев В.И.* Кӑтартнӑ ӗҫ. С. 357–367; *Андреев Н.А., Егоров В.Г., Павлов И.П.* С. Кӑтартнӑ ӗҫ. 187–202; *Ашмарин Н.И.* Опыт исследования чувашского синтаксиса. Ч. 2. Симбирск: Тип. полиграфсекции С.Н.Х., 1923. С. 171–236; *Павлов И.П.* Кӑтартнӑ ӗҫ. С. 236–248 т.ыт.

[21] *Серебренников Б.А., Гаджиева Н.З.* Сравнительно-историческая грамматика тюркских языков. М.: Наука, 1986. С. 172.

[22] *Андреев Н.А., Егоров В.Г., Павлов И.П.* Кӑтартнӑ ӗҫ. С. 193; *Павлов И.П.* Кӑтартнӑ ӗҫ. С. 242.

[23] *Сергеев В.И.* Морфологические категориальные и некатегориальные формы в современном чувашском языке. Чебоксары: Изд-во ЧГУ, 2002. С. 255; *Федотов М.Р.* Чувашский язык в семье алтайских языков. Ч. 3. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1986. С. 95.

[24] *Сергеев В.И.* Морфологические категориальные и некатегориальные формы … С. 255.

[25] *Андреев Н.А., Егоров В.Г., Павлов И.П.* Кӑтартнӑ ӗҫ. С. 193.

[26] *Гузев В.Г.* Очерки по теории тюркского словоизменения: глагол. Кăтартнă ĕç. С. 115–131.

[27] *Дениз-Йылмаз О.* Категория номинализации действия в турецком языке. СПб.: Изд-во Санкт-Петерб. ун-та, 2006. 227 с.

[28] *Гузев В.Г.* Глагольное словоизменение в турецком языке. С. 309–310.

[29] *Андреев Н.А., Егоров В.Г., Павлов И.П.* Кăтартнă ĕç. С. 214.

[30] *Серебренников Б.А., Гаджиева Н.З.* Кăтартнă ĕç. С. 233.

[31] Çавăнтах. С. 225–226; *Андреев Н.А., Егоров В.Г., Павлов И.П.* Кăтартнă ĕç. С. 218.

[32] Татарская грамматика. Т. 2. Морфология / *Ганиев Ф.А., Закиев М.З., Тумашева Д.Г. [и др.]* С. 201.

[33] *Гузев В.Г.* Глагольное словоизменение в турецком языке. С. 314.

[34] *Серебренников Б.А., Гаджиева Н.З.* Кăтартнă ĕç. С. 226.

[35] *Гузев В.Г.* Глагольное словоизменение в турецком языке. С. 315.

[36] *Андреев Н.А., Егоров В.Г., Павлов И.П.* Кăтартнă ĕç. С. 241.

[37] *Серебренников Б.А., Гаджиева Н.З.* Кăтартнă ĕç. С. 232.

# ЭЛĔК РАЙОННЕ КĔРЕКЕН САТЛАЙККĂ ТАВРАШĔНЧИ МИКРОТОПОНИМСЕМ[1]

*З.И. Леонтьева, Е.Н. Леонтьева*

Кашни ялăн хăйĕн сăн-сăпачĕ, хăйне тивĕçлĕ ячĕ. Паллах, çак ятсене çавăнта пурăннă е пурăнакан халăх панă. Вĕсене тĕпчес ĕç пысăк пĕлтерĕшлĕ, чĕлхе пĕлĕвĕшĕн те пысăк пуянлăх. Хамăр патăмăрти ятсен кирлĕлĕхне туйса «Элĕк районне кĕрекен Сатлайккă тăрăхĕнчи микротопонимсем» тема актуаллă тесе шутлатпăр.

*Сатлайккă*, вырăсла ячĕ *Сатлайкино* – Сурăм шывĕ хĕрринче вырнаçнă пысăках мар чăваш ялĕ.

Эпир географи объекчĕсен тĕсне кура Чăваш Республикинчи Элĕк районне кĕрекен Сатлайккă ял таврашĕнче 50 (алла) яхăн микротопоним тупса палăртрăмăр. Чĕлхе наукинче вĕсене çакăн пек ушкăнлатпăр:

**1. Урам ячĕсем.** Чĕлхе пĕлĕвĕнче эпир вĕсене **годонимсем** терминпа палăртатпăр. Урам ячĕсем хăйсем тĕрлĕ вакрах ушкăнсем çине пайланаççĕ.

1) **Урам ячĕсем**. Ялта пурĕ икĕ вăрăм урам:

а) *Аялти урам* < *аялти* «нижняя» + *урам* «улица», вырăс. тӳр. «нижняя улица», вырăсла ячĕ – *улица Цветочная*. Çак урама тата *Çырма урамĕ* «овражная улица» тесе те калаççĕ;

ă) *Çӳлти урам* < *çӳлти* «верхняя, нагорная» + *урам* «улица», «нагорная улица», вырăсла ячĕ – *улица Николаева.*

2) **Хапха ячĕсем**

*Çырмари урам хапхи (уй алăк),* «ворота, которые находятся в овражном месте»;

*Хăйăр тăвайкки уй алăкĕ* «ворота, которые находятся при выходе на песчаный карьер»;

*Молостов уй алăкĕ (Çӳлти урам уй алăкĕ)* «ворота человека по имени Молоставь» (Магн., 4716), (он

проживал рядом) («ворота, находящиеся на Верхней улице»);

*Касу хапхи* < *касу* «стадо» + *хапха* «ворота»; «ворота, через которые выходит стадо на пастбище».

3) **Пăралук ячĕсем**. Эпир тăватă пăралук ятне тупса палăртрăмăр:

*Емельян пралукĕ* < антр. *Емеля* (Магн., 1905) + *пăралук* «переулок», «переулок человека по имени Емельян» (переулок находится рядом с хозяйством человека по имени Емельян);

*Якку пралукĕ* < антр. *Яков* (Магн., 9945) + *пăралукĕ* «переулок», «переулок человека по имени Якку» (переулок находится рядом с хозяйством человека по имени Якку);

*Сантăр пăралукĕ* < антр. *Сандерь* (Магн., 6669) + *пăралукĕ* «переулок»; «переулок человека по имени Сантăр» (переулок находится рядом с хозяйством человека по имени Сантăр);

*Кăрăç пралукĕ* < *кăрăç* «груздь» + *пăралукĕ* «переулок»; «переулок, где растут грузди» (возможно, Кăрăç – прозвище человека).

**2. Гидронимсем.** Шыв-шур, çырма ячĕсене чĕлхе пĕлĕвĕн ономастика пайĕнче **гидронимсем** тетпĕр (гидро «шыв» + onima «ят»). Шыв-шур ячĕсен çак тĕсĕсене тупса палăртрăмăр:

1) **Шыв ячĕсем**

*Вăрман шывĕ* < *вăрман* «лес» + *шыв* «вода»; «лесная вода». Шыв *Мăн вăрман* патĕнчен юхса анать, *Сурăм* шывне юхса кĕрет. Çак юхан шыва тата *Чикĕнчĕк Сорăм шывĕ* тесе те калаççĕ.

2**) Çырма ячĕсем**

*Сысна çучĕ* < *сысна* «свинья» + *çучĕ* «овраг»; «овраг; где живут дикие свиньи» (Юлăш вăрманĕ патĕнчи çырма);

*Тарăн çырма* < *тарăн* «глубокий» + *çырма* «овраг»; «глубокий овраг» (Туçи уйĕ хыçĕнчи çырма);

*Хăйăр çырма* < *хăйăр* «песок» + *çырма* «овраг»; «песочный овраг»;

*Хĕрлĕ çырма* < *хĕрлĕ* «красный» + *çырма* «овраг»; «красный овраг, где добывают красную глину»;

*Чăрăш вар çырми* < *чăрăш* «ель» + *вар* «овраг» + *çырма* «овраг», «еловый овраг».

3) **Варсен ячĕсем**

*Аманик варĕ* ик çырма патĕнчен иртсен пуçланать. Н.И. Ашмарин словарĕнче *Аманик* сăмах ял пĕлтерĕшĕпе çырăнса юлнă: «Аманик, назв. чув. деревни Картлуевой Никольской вол. Чебокс. у.» (Ашм. Т. 1. с. 199). Название дано по имени человека Аманей (Магн., 509);

*Кăшкăракан вар* < *кăшкăр* «кричать» + *вар* «овраг»; «кричащий овраг» (çак вырăнта туй халăхĕ анса кайнă);

*Кашкăр варĕ* < *кашкăр* «волк» + *варĕ* «овраг»; «волчий овраг». Кашкăрсем çӳренĕ вар. Пысăк шăтăк чавса унта вилнĕ выльăха пăрахнă. Кашкăр çав шăтăка сикнĕ. Çапла майпа кашкăра тытма май пулнă. Çавăн хыççăн çак вырăна *Кашкăр варĕ* теме тытăннă;

*Курак варĕ* < *курак* «грач» + *варĕ* «овраг»; «овраг, связанный с именем человека Курак»;

*Сысна варĕ* < *сысна* «свинья» + *варĕ* «овраг»; «овраг свиней» (возможно, здесь был скотомогильник, первым была захоронена свинья);

*Урина варĕ* < антр. *Оринь* (Магн., 5222) + *варĕ* «овраг»; «овраг, связанный с именем человека Урина»;

*Шăнкăрч варĕ* < антр. *Шăнкăрч* + *варĕ* «овраг»; «овраг, связанный с именем человека Шăнкăрч»;

*Илпе кĕпер варĕ* < антр. *Илпе* + *кĕпер* «мост» + *варĕ* «овраг»; «овраг, расположенный у моста Илпе».

3. **Оронимсем** (сăрт-туллă вырăн ячĕсем):

1) **Тăвайкки ячĕсем**

*Макар тăвайкки* < антр. *Макарь* (Магн., 4232) + *тăвайкки* «возвышенность»; «возвышенность, связанная с человеком по имени Макар»;

*Янтай тăвайкки* < антр. *Яндай* (Магн., 10101) + *тăвайкки* «возвышенность»; «возвышенность, находящаяся рядом с хозяйством человека по имени Янтай»;

*Хушка тăвайкки* < *хушка* «лысина, лысый» + *тăвайкки* «возвышенность»; «голая возвышенность» *Хушка* сăмаха Н.И. Ашмарин çапла ăнлантарать: «Хушка, белое пятно на лбу (у лошади: коров, овец). Изамб. т.» (Ашм. Т. 16. С. 277).

2) **Çут ячĕсем**

*Левенти çочĕ* < антр. *Левендей* (Магн., 4146) + *çут* «возвышенность»; «возвышенность, находящаяся рядом с хозяйством Левенти»;

*Лутра çут* < *лутра* «низкий» + *çут* «возвышенность»; «нижняя возвышенность»;

*Мăн çут* < *мăн* «большой» + *çут* «возвышенность»; «большая возвышенность».

**4. Дромонимсем**

1) **Çулсем:** *Йĕтем çулĕ* < *йĕтем* «ток» + *çулĕ* «дорога»; «дорога, которая ведет на ток»;

*Кĕтӳ çулĕ* < *кĕтӳ* «стадо» + *çулĕ* «дорога»; «дорога, по которой проходит стадо»;

*Çăва çулĕ* < *çăва* «кладбище» + *çулĕ* «дорога»; «дорога, которая ведет к кладбищу»;

*Янтай çулĕ* < антр. *Яндай* (Магн., 10101) + *çулĕ* «дорога»; «дорога, связанная с человеком по имени Янтай». Э.М. Мурзаев хăй словарĕнче (С. 649) халăх географи терминĕсен шутĕнче *ян* тени те тĕл пулать, тĕрĕкле «сторона, бок» узб. *ен* «сторона», «край», «бок»; туркм. *ян* «нижняя часть горного склона с плодородными почвами серозема, с густой растительностью, где богатые посевы дают хороший урожай» тесе ăнлантарать. М. Гельдыханов *тай* географи терминĕ ханты чĕлхинче тата диалектра «вершина» пĕлтерĕшпе çӳренине палăртать (Э.М. Мурзаев ĕçĕнчен илнĕ. С. 538).

2) **Кĕпер ячĕсем**

*Илпе кĕперĕ* < антроп. *Илбей* (Магн., 2482) + *кĕпер* «мост», «мост, связанный с человеком по имени Илпе»;

*Матьăк кĕперĕ* < антр. *Матик* (Магн., 4341) + *кĕпер* «мост»; «мост, связанный с человеком по имени Матьăк». Элĕк районĕнче *Матьăк* (*Мадиково*) ятлă ял пур. Н.И. Ашмарин словарĕнче те *Матьăк* сăмах тĕл

пулать: «Матьăк çырми, назв. оврага Лобашк. (Алик. р.)» (Ашм. Т. 8. С. 214);

*Улăх кĕперĕ* < *улăх* «луг» + *кĕперĕ* «мост»; «луговой мост».

**5. Агроонимсем**

1) **Уй ячĕсем:**

*Талуй* < *пысăк уй* шутланать. Н.И. Ашмарин словарĕнче те çак сăмах çырăнса юлнă: «Талуй, назв. селения Ядр. р.» (Ашм. Т. 13. С. 166);

*Туçи*. Çăва патне хăпарнă вырăнти уй. Сăрт çамки евĕрлĕ уй. Туçи ял ячĕ те пур;

*Услăх* < *ăвăслăх* (осинник), лит. *ăвăслăх*, диал. *услăх* «осинник» + *çырма* «овраг»; «овраг, где росло много осин».

2) **Улăх-çарансем.**

Сатлайккă тăрăхĕнче тĕл пулакан пĕр улăх ятне кăна тупса палăртрăмăр. Ял таврашĕнче улăхсем тата та пур, анчах вĕсен ячĕсем сыхланса юлман.

*Măн улăх* < *măн* «большой» + *улăх* «луг»; «большой луг».

**6. Дримонимсем**

Сатлайккă ялĕ вăрман ăшнех кĕрсе вырнаçнă. Çак вăрмана Сатлайккă çыннисем *Măн вăрман* теççĕ, çывăхри ялсем вара *Сорăм вăрманĕ* тесе калаççĕ. *Матьăк кĕперĕ* урлă каçсан тепĕр пĕчĕк вăрман – *Эрекĕ вăрманĕ* кашласа ларать. Çав вăрманта ĕлĕк эрех вăрттăн юхтарнă тет;

*Пĕчĕк вăрман* < *пĕчĕк* «маленький» + *вăрман* «лес», «маленький лес».

**7. Некронимсем**

Сатлайккă ял çывăхĕнче икĕ çăва. *Сатлайккă çăви* кивĕ çăва шутланать. Çак çăвапа юнашарах çĕн(ĕ) çăва вырнаçнă: ăна *Паччан çăви* тесе те калаççĕ. Çăвана пуçлаканĕ Паччан ятлă арçын пулнă (ăна çакăнта пĕрремĕш пытарнă). Çак çăва çине Сатлайккă, Самушкă, Вырăс Сурăм тата Пиçенер ялĕсен çыннисене пытараççĕ.

**8. Асăннă ушкăнсене кĕмен объектсен ячĕсем** (уйрăм ларакан йывăç е çурт ячĕсем):

*Лесник çурчĕ*. Сурăм вăрман хĕрринче лесник пурăнмалли çурт вырнаçнă.

***

Сатлайккӑ ял таврашӗнче тӗл пулакан 50 (алла) яхӑн топоним тупса палӑртрӑмӑр, географи вак объекчӗсен ячӗсене ӑнлантарса тухрӑмӑр. Вӗсенчен: одонимсем – 10, гидронимсем – 13, оронимсем – 6, дромонимсем – 7, агроонимсем – 4, дримонимсем – 3, некронимсем – 2, асӑннӑ ушкӑнсене кӗмен объект – 1.

Несӗл тытӑмӗ енчен тишкерсен Сатлайккӑ тӑрӑхӗнчи топонимсем ытларах чӑваш сӑмахӗсенчен пулнӑ. Чӑваш сӑмахӗ ҫумне арҫын ячӗ (хушамат, хушма ят) (*Емельян пралукӗ, Матьӑк кӗперӗ, Шӑнкӑрч варӗ*), е пӗр-пӗр географи терминӗ (*Чӑрӑш вар, Мӑн вар, Аялти урам, Ҫӳлти урам*), е тепӗр топоним (*Чӑрӑш вар ҫырми, Ҫӳлти вар уй хапхи, Илпе кӗпер варӗ*) хушӑнма пултараҫҫӗ.

Чӗлхе пӗлӗвӗшӗн кирек хӑш тӑрӑхри кашни вак географи объекчӗ хӑйне май интереслӗ, вӗсене тӗпчесе ӑслӑлӑха кӗртни вырӑнлӑ. Ҫак географи вак объекчӗсен ячӗсене пӗлни, вӗсене ӑнлантарса пама пултарни тӑван тавралӑха юратнине, чӑваш халӑх историне пӗлме тӑрӑшнине кӑтартать. Ҫак ятсем ӗмӗрлӗхех пурӑнасса шанас килет. Вӗсенче Сатлайккӑ тӑрӑхӗнче пурӑнакан ҫынсен шӑпи, йӑли-йӗрки, хуйхи-суйхи, ӗлӗкхи тата паянхи пурнӑҫӗ сӑнланнӑ.

**Ӑнлантарусем**

---

[1] Топонимсене 1937 ҫулхи майӑн 30-мӗшӗ Элӗк районӗнчи Анаткас Сурӑм ялӗнче ҫуралнӑ, халӗ Вырӑс Сурӑм ялӗнче пурӑнакан Людмила Ивановна Ивановӑран ҫырса илнӗ, вӗсен пӗлтерӗшне ӑнлантарма ҫак ҫӑл куҫсемпе усӑ курнӑ: *Ашмарин Н.И.* Словарь чувашского языка = Чӑваш сӑмахӗсен кӗнеки: в. 17 т. Казань; Чебоксары, 1928–1950; *Магницкий В.К.* Чувашские языческие имена. Казань: Тип. Императ. ун-та, 1905. 102 с.; *Мурзаев Э.М.* Словарь народных географических терминов. М.: Мысль,1984. 653 с.

*Е.Н. Леонтьева*

# СĔТ ЮР-ВАРĔ ТАТА УНРАН ХАТĔРЛЕНĔ АПАТ-ÇИМĔÇ[1]

Пирĕн мăн асаттесен хуçалăхĕ çĕр ĕçĕ çинче никĕсленсе тăнă пулин те, вĕсен апат-çимĕçĕ шутĕнче выльăх-чĕрлĕх юр-варĕ те паллă вырăн йышăннă. Вăл шута, тĕпрен илсен, сĕт-турăх кĕнĕ.

Сĕтрен хатĕрленĕ пĕрремĕш апат-çимĕç ĕне ырри шутланать. Ĕне анчах пăрулану хыççăн сĕт сарăрах тĕслĕ, çăра. Ăна *ĕне ырри* (вырăсла «молозиво») тенĕ. Малтан сунă сĕте уйрăм савăта пуçтарса пынă. Тепĕр темиçе кунтан сăвакан сĕт шуралсан тата тутлансан (çичĕ хутчен сунă хыççăн сĕт шуралать теççĕ) ĕне ырри йăлине иртттернĕ. Тутланнă сĕте вĕреме кĕртнĕ, унта савăтри сĕте ярса майĕпен пăтратса тăнă, тăпăрчланма пуçласан ĕне ырри пиçсе çитнине пĕлтернĕ.

Ĕне ыррине çиме кӳршĕсене, тăван-пĕтене чĕннĕ, ачасене те сĕтел хушшине лартнă. Турăпа ырăсене, Пихампара кĕл тунă, ваттисене асăннă. Хĕрт-сурта «хăналанă» (пĕр татăк çăкăр çине пĕр кашăк ĕне ырри хурса хĕрт-сурт ас тивтĕр тесе кăмака каланкки çине хурса паратчĕ ват кукамай).

Ĕне ырри çинĕ хыççăн çапла каланă:

– Эй, Турă! Эсĕ çак çĕнĕрен çуралнă чуна ырлăх-сывлăх пар. Амăшĕн шыв юхни пек сĕчĕ пултăр, хăй пуçĕ пек çăвĕ пултăр, ялан пĕрререн иккĕ пар, çуралнине пăхма пар, çуралманнине çуратса пар, çуллен ĕне ырри çиме пар!

Ĕне сĕт нумай патăр тесе пĕр-пĕрне шывпа е сĕтпе сирпĕтнĕ, кашăкпа пуç тăрăх шыв янă. Çак йăла паянхи кунччĕнех упранать.

Ĕлĕк ĕне ыррине Пихампар турăран ырлăх-сиплĕх ыйтса пĕçерсе çинĕ. Çавăнтан ĕне сĕт нумай парасси килет тенĕ. Ĕне ырри, ĕне ырлăхĕ ача-пăча апачĕ

шутланнӑ. Унпа ҫиме ятарласа урпа ҫӑнӑхӗнчен пашалу пӗҫернӗ.

Чӑвашсем тин ҫеҫ сунӑ сӗте ӗҫмен, ӑна ачасене ҫеҫ ӗҫтернӗ. Ӗне усраканӑн тӑм чӳлмексем пулнӑ. Сӗте ытларах ҫавӑнта тытнӑ. Вӗсене нӳхрепе лартнӑ. Сивӗ ҫӗрте хӑйма лайӑх тӑрӑлнӑ. Тимӗр кашӑкпа усӑ курман. Тимӗр кашӑка чӳлмекри сӗте чиксен хӑйма лармасть тенӗ. Йывӑҫ кашӑкпа усӑ курнӑ. Йывӑҫ кашӑка тулли хӑйма лекме тытӑнсан нӳхрепри сӗт чӳлмеккисене пӳрте илсе кӗнӗ. Пӗр талӑк лартнӑ вӗсене ӑшӑ вырӑнта. Талӑкран хӑйма уйран уҫлама юрӑхлӑ пулнӑ.

Хӑймана уйран ҫӳпҫинче уҫланӑ, уйран хурҫипе (ҫӳпҫене ярса уҫлакан хатӗр) ҫавӑрттарнӑ. Вӗсене ҫӑка йывӑҫран ӑсталанӑ. Хӑймана тӳрех ҫӳпҫене яман, ӑна малтан вӗри шывпа ҫу ҫыпӑҫасран чӳхенӗ, хыҫҫӑн шывне тӑкнӑ. Кӑштах уҫланӑ хыҫҫӑн ҫӳпҫене куркапа лӗп шыв яраҫҫӗ, ҫу пухӑнма е пӗрчӗленме тытӑнсан — сивӗ шыв. Сивӗ шыв пӗрчӗленнӗ ҫӑва пӗр ҫӗре пухӑнма май парать. Ҫӑва пухса илнӗ хыҫҫӑн уйрана чӗресе, е чӳлмеке, е эмальленӗ витрене янӑ. Уйрана ҫӗр улмипе, пӑтӑпа, кукӑльпе, ҫӑкӑрпа ҫиеҫҫӗ. Тӑрӑлса ларсан ӑскӑчпа пӑтратаҫҫӗ. Сивӗрех ҫӗрте упраҫҫӗ. Йывӑр ӗҫ туса ывӑнсан уйрана ӗҫмен, шӑм-шак хытать тенӗ.

Тин уҫланӑ ҫӑва (ӑна *услам ҫу* тенӗ) сайра хутра ҫеҫ ҫӑкӑр ҫине сӗрсе е пӑтӑ ҫине ярса ҫинӗ. Вут хутсан, кӑмакаран ҫӑкӑр пӗҫерсе кӑларнӑ хыҫҫӑн, услам ҫӑва шӑратма лартнӑ. Шӑратнӑ ҫӑвӑн кӑпӑкне пӑрахман, унпа ачасене ҫу тӗп пӗҫерсе ҫитернӗ. Ҫӑва нӳхрепе антарса лартнӑ. Хытнӑ хыҫҫӑн ӑна уйранран уйӑрмалла пулнӑ. Шӑннӑ шӑратнӑ ҫӑва нӳхрепрен илсе тухнӑ, ҫӗҫӗпе асӑрханса уйранӗнчен уйӑрнӑ (уйран чашӑк тӗпне ларать). Шӑратнӑ ҫу хатӗр, ӑна чӗресе ярса пухса пынӑ. Пирӗн патра ӑна сив ҫу, сар ҫу тесе те калаҫҫӗ.

Сӗт йӳҫсен турӑх пулнӑ. Пӗр-пӗр савӑта ярса турӑха вут хутса кӑларсан кӑмакана лартса е вучахра хуранпа ӑшӑтнӑ, хыҫҫӑн тӑпӑрч хутаҫҫине (ӑна шӑла пиртен ҫӗленӗ) янӑ. Тӑпӑрч шывӗпе чуста хунӑ, хӑшӗсем ӗҫнӗ

те, выльăх-чĕрлĕхе панă, ĕлĕк унпа мунчара пуçа çунă. Тăпăрчă шывĕпе çусан пуç лайăх тасалнă, çӳç çемĕçнĕ, йăлтăртатса тănă.

Тăпăрчăран хуран кукли, тăпăрч икерчи, тăпăрч кукли пĕçернĕ. Тăпăрча тăварпа хутăштарса хăйне тĕллĕн те çинĕ.

Чăвашăн тăпăрчăран тунă чи сумлă апат-çимĕç чăкăт шутланнă. Чăкăт пĕçерме ывăс, чăкăт кăшăлĕсем кирлĕ пулнă. Чăкăт кăшăлĕсене ятарласа çăка хуппинчен, ывăсне çăка йывăçран тунă.

Чи малтанах хутаçри тăпăрча чашăка пушатнă. Унта тăвар, услам çу, çăмарта ярса лайăх çăрнă. Ăна ывăс çинчи чăкăт кăшăлĕсем çине тултарнă, тăпăрч хутаççипе якатса пусарнă. Чăкăта хатĕрлеме тăпăрча çăкăр пĕçерсе кăларнă хыççăн ăшă кăмакана лартнă. Ăна кăмакара нумай вăхăт тытман, пичĕ саралсан кăларнă.

Чăкăтпа йăла-йĕркере те анлă усă курнă. Ачана ят хунă чухне ятарласа ача чăкăчĕ пĕçернĕ. Салтак ăсатнă чухне шăрттанпа чăкăт парса янă.

Парса ямалли туй çимĕçне — çăкăра, çӳхĕве, чăкăта — шурă тутăрпа çыхнă (тасалăх палли, пурнăç ăнĕ). Хĕр çураçнă чух та, туй-шилĕкре те чăкăт тĕп çимĕç, тăпăрч — пурнăç ырри, çу — килĕшӳ. Вăрăм çула кайнă чух пĕрле чăкăт илнĕ. Хăрушă, хăратакан вырăна çитсен виçĕ татăк çăкăрпа чăкăт хурса хăварнă, ваттисене асăннă.

**Ăнлантарусем**

---

[1] Юр-варпа апат-çимĕç ячĕсене 1937 çулхи майăн 30-мĕшĕнче Элĕк районĕнчи Анаткас Сурăм ялĕнче çуралнă, халĕ Вырăс Сурăм ялĕнче пурăнакан Людмила Ивановна Ивановăран çырса илнĕ.

# Г.И. КОМИССАРОВ (ВАНТЕР) – ХАЛĂХĂМĂРĂН АВАЛЛĂХНЕ ТĔПЧЕКЕНĔ

*В.Г. Родионов*

Раççейре чăваш аваллăхĕпе XVIII ĕмĕрте кăсăкланма пуçланă. В.Н. Татищев чăваш халăхĕ пăлхарсенчен пулса кайнă тесе шутланă. Атăлçи пăлхарсем çинчен сăмахланă май вăл çапла çырса хунă: «Оные видятся были рода и языка сарматского, что нам оставшие их поселянства чуваша удостоверяют». Çак вырăс тĕпчевçи Атăлпа Урал тăрăхĕнче Пăлхар кĕпĕрни тăвас ĕмĕтпе çунатланнă. Унти пиллĕкмĕш провинци (вăл Чĕмпĕр, Карсунь, Саратов, Самар таврашĕнчи çĕрсене пĕрлештерсе тăмалла пулнă) «Чăваш провинцийĕ» ята тивĕçнĕ.

XIX ĕмĕрĕн 30–40-мĕш çулĕсенче чăваш халăхне хасарсемпе (А. Фукс) тата пăртассемпе (В. Сбоев) çыхăнтарнă. В. Лебедев та чăвашсен ватă аслашшĕсем Атăл çине кăнтăр енчен килнĕ тесе шухăшланă, хăйĕн «Пирĕн телей» сăввин пуçламăшĕнче çавăн çинчен çапла çырать:

Чăваш эпĕр полтăмăр,
Атăл патне килтĕмĕр,
Онта тăтăх лартăмăр.
Халь тияксем ыйтаççĕ:
«Штан чăвашсем каяççĕ?»

Çак 1852 çулта пичетленнĕ сăвăра чăваш халăхĕ йышлă (тăтăх) пулнине палăртнипе пĕрлех унăн чĕлхи тĕрĕк чĕлхисен ушкăнне кĕни çинчен те пĕлтернĕ:

Эпĕр чăваш – тăтăх чăваш.
Тотар пирĕн хорăнташ;
Пирĕн чĕлхи – чăваш чĕлхи.
Хăш чухне пулать хойхи...

Çав çулсенче чăвашсен паллă çыравçи тата тĕпчевçи С. Михайлов (Янтуш) та чăвашсем ăçтан пуçланни çинчен тăтăшах шухăшлать. 1853 çулта пичетленнĕ «Краткое этнографическое описание чувашей» очеркĕнче вăл çапларах гипотеза кăларса тăратать: «Для открытия происхождения чувашей недостаточно одной древней их письменности... Я могу лишь предположительно сказать, что чуваши происходят от разных племен, так же как и все народы царства Болгарского: конечно, в них есть и болгары, и финны, и монголы, но отличились они уже после падения, сопровождавшегося кровопролитием; тогда они стали самыми беднейшими жителями, утратив первоначальное свое могущество...»

Чăваш историне XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче те тĕпченĕ. И.Я. Яковлев халăхăмăра хасарсемпе çыхăнтарнă. 1902 çулта Н.И. Ашмарин «Болгары и чуваши» ятлă кĕнекере чăвашсем пăлхарсенчен пулса кайнине ăслăлăх енчен çирĕплетсе ĕнентерет, чул палăксенчи чăваш сăмахĕсене пăхса тухать, халăхăмăрăн ятне тишкерет. Çав çул Гурий Иванович Комиссаров (Вантер, 1883–1969) Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче ăс пухнă-ха, Н.И. Ашмарин кĕнекипе те паллашма ĕлкĕреймен. 19 çулхи çамрăк çын пуçне ун чухне çапларах шухăшсем канăç паман (кун кĕнекине çырса хунинчен): «Чуваши как будто с неба упали или из земли выросли: кто знает, откуда произошли и долго ли они живут здесь? Или то верно, что они были культурным народом, у них была и история, но книгу их съела проклятая корова? Конечно, и они пришли из Азии, но когда, в какое время? Неужели они отрасль знаменитых гуннов? Ничего не известно. Жаль! Очень жаль!»

Чĕмпĕрте вĕреннĕ çулсенче (1899–1903) Патăрьел каччи сăвăсем хайлать, пьесăсем çырать, Н.И. Ашмарина халăх юрри-сăввисене, халап-юмахĕсене пухса парать. Çапах та историпе этнографи енне вăл чылай каярах, Хусанти тĕн академийĕнче вĕреннĕ çулсенче кăна (1908–1913) туртăнма пуçлать. 1910 çулхи нарăсăн 6-мĕшĕнче чăваш студенчĕ Археологи, истори тата этнографи

обществин пĕтĕмĕшле пухăвĕнче «Чуваши Казанского Заволжья» темăпа доклад тăвать, ăна тепĕр çултан пичетлесе кăларать. Унта тĕпчевçĕ чăвашсем пулса кайни пирки чи малтанхи сыпăкрах çырать. Вăл хасар, пăртас тата пăлхар теорийĕсене пĕр-пĕринпе çураçтарма тăрăшать. Çав хушăрах пăлхар культурине чăвашсем йĕркелесе аталантарнă тесе çирĕплетет тĕпчевçĕ. Хусан тутарĕсен тĕп пайĕ чăвашран пулса кайнине те тĕслĕхсемпе ĕнентерме тăрăшать автор. Çапла вара Г.И. Комиссаров (Вантер) пăлхар теорине çĕнĕ фактсемпе çирĕплетсе çитерет.

Чăваш аваллăхĕ çинчен Г.И. Комиссаровăн 1917 çулта хайланă «Чăваш халăхĕ малалла кайĕ-ши, каймĕ-ши?» очеркĕнче те вуласа пĕлме пулать. Çак публицист хĕрӳллĕхĕпе çырнă ĕçе вăл ăслăлăх факчĕсемпе çирĕплетсе пырать, хăйĕн калас шухăшне татăклăн ĕнентерме пултарать. Чăваш халăхĕ чапа тухассине кăтартакан ырă паллăсен шутне тĕпчевçĕ тăван халăхăмăрăн авалхи мăнаçлă пурнăçне кĕртет. «Чăвашăн патшалăх пулман теççĕ. Вăл тĕрĕс мар: чăвашăн та патшалăх пулнă, ăна вырăссем „Болгар патшалăхĕ” тенĕ», – Н.И. Ашмаринăн тĕпчев ĕçĕсем çине таянса пĕтĕмлетет публицист. Кунах вăл чăвашсен çырулăхĕ пулни, ăна араб саспаллисемпе йĕркелени пирки те калать. «Кайран çав вĕреннĕ чăвашсем Мухаммед тĕнне тытнă пирки чăвашран уйрăлса тутар пулса кайнă, – питĕ уçăмлăн ăнлантарса çырать тĕпчевçĕ. – Кайран Пăлхар патшалăхĕ вырăнне Хусан патшалăхĕ пулнă. Ку патшалăх та чăвашăн хăйĕн патшалăхех пулнă, анчах ку патшалăхра Мухаммед тĕнне тытакансем анчах аслă вырăнсене кĕнĕ».

Малалла автор «тутар» тата «чăваш» ятсем пĕр-пĕринпе тачă çыхăннине, малтанхипе хула мăсăльманĕсене, кайранхипе ялсенчи çĕр ĕçченĕсене чĕннине тĕрĕс палăртать. Чăнах та çапла пулнине «чăваш» этнонима тарăннăн тĕпчени те лайăх палăртать. «Çу чăваш» тесе чăн чăваш тĕнĕпе пурăнакансене каланă, мăсăльман пăлхарсене

вара «пĕсĕрмен» (пăсăрман) тенĕ. Каярах çав ята «тутар» этноним хĕссе кăларнă.

Çу чăвашсем çу уйăхĕнче «çăва» ятлă ваттисене асăнмалли йăла (XVIII ĕмĕрте ăна «çимĕк» теме пуçланă) ирттернĕ, çав йĕркене пăхăнакан пăлхарсем хăйсене «эпир çăваçăсем» (çăва йĕркине уякансем) тенĕ, кыпчак тутарсем вара çав сăмаха хăйсем евĕрлĕ (чуваш) калама пуçланă. Çапла вара «чăваш» тесе мăсăльман тĕнне куçман, ваттисене асăнмалли уява çирĕп уяса пурăнакан пăлхарсене калани тӳрре килсе тухать. Çакна Г.И. Комиссаров та тĕнпе çыхăнтарса ăнлантарнă. Чăваш аваллăхне пăхса тухнă хыççăн тĕпчевçĕ çапла ыйту лартать: «Çапла вара, чăваш хăй тĕллĕн пурăннă, хăйĕн суйланă çыннисене пăхăнса, итлесе пурăннă. Халĕ мĕншĕн пултараймасть пулĕ вăл çавăн пекех пурăнма?» Тĕрĕссипе çак паха очеркра лартнă ыйтусем пире паян кун та канăç памаççĕ.

Г.И. Комиссаровăн «Чăваш халăхĕн историйĕ» кĕнеки Хусанта 1921 çулта пичетленсе тухать. Унти ум сăмахран эпир çав историлле ĕçе 1918 çултах çырнине пĕлетпĕр. Çав тапхăрта чăваш халăхĕ политика нацине чăмăртанса çитес çулпа пынă, унăн интеллигенцийĕ вара халăхăмăрăн ăнне çĕнĕ шая çĕклесшĕн çуннă. Акă еплерех çырать автор вулавçăн наци ăнне вăратас тĕллевпе: «Хамăр халăхăн иртнĕ пурнăçне пĕлмесĕр ют халăхсем мар, эпир хамăр та хамăр камне пĕлместпĕр, сĕм вăрманти пек пурăнатпăр. Хамăр халăхăн авалхи пурăнăçне пĕлмесĕр эпир хамăра нимĕн вырăнне те хуми пултăмăр, хамăршăн хамăр çынсен умĕнче вăтанса „чăваш” тесе чĕнесрен хăраса çӳрекен пултăмăр».

Наци ăнĕ вăйлантăр тата ӳссе пытăр тесен халăха унăн аваллăхĕ çинчен каласа памалла, унăн историне пĕлтермелле. Эппин, чи малтан тăван чĕлхепе çырнă истори кĕнеки кирлĕ. Çак тĕллеве чăваш тĕпчевçи тата çыравçи çапла ăнлантарать: «Малалла пирĕн те чăваш историне пĕлсе тăмалла пултăр, хамăр чăваш халăхĕн истори кĕнеки пултăр тесе эпĕ çак кĕнекене çырас терĕм». Автора çак тĕпчев ĕçне çырма никам та хистемен, тен,

хавхалантарман та пулӗ. 1918 ҫулта чӑваш интеллигенцийӗ виҫӗ пысӑк ушкӑна пайланса каять. Пӗрремӗшсем, Раҫҫейӗн Аслӑ пухӑвне пилӗк депутат-чӑваш суйлаттарма пултарнӑ эсерсем, Комучӑн Халӑх ҫарӗнче хӗрлисемпе ҫапӑҫаҫҫӗ. Иккӗмӗшӗсем, сулахай социалист-революционерсен партийӗнчен тарса коммунистсен ҫумне ермешнисем, пӗтӗм тӗнчери чухӑнсен пӗрлешӗвне тума хатӗрленеҫҫӗ, чӑваш е урӑх халӑх таврашӗ ҫук тесе ҫухӑрашаҫҫӗ. Виҫҫӗмӗшӗсем вара чи малтан чӑваш халӑхӗ, унӑн шӑпи пирки шухӑшлаҫҫӗ. Шӑпах ҫавӑн йышшисен хушшинче пулнӑ Гурий Иванович Комиссаров, чӑвашсен пултаруллӑ тӗпчевҫи тата сӑвӑҫипе драматургӗ.

«Чӑваш халӑхӗн историйӗ» кӗнеке вӗҫӗнче автор чӑваш халӑхӗ пӑлхарсенчен пулса кайнине татӑклӑнах ҫирӗплетет. Вӑл «чӑваш» ят пӑлхар-мӑсӑльмансем тутара тухнӑ майӑн ҫирӗпленсе-палӑрса пыни ҫинчен ӗнентерӳллӗ ҫырать. Чӑн та, Хусан ханлӑхӗнче пӑлхар чӗлхин престижӗ пӗтнӗ, тутар-кыпчаксен (нухайсен) чӗлхи ҫӗкленнӗ тапхӑрта йӗркеленсе ҫитнӗ пӑлхар чӗлхиллӗ, ҫӗр ӗҫ культуриллӗ тата йӑли-йӗркиллӗ чӑваш халӑхӗн этнос ӑнӗ. «Чӑваш» текен ҫӗнӗ этноним, Г.И. Комиссаров шухӑшӗпе, «пирӗн ват аттесене ҫухаласран сыхласа хӑварнӑ... ялта ҫӗр ӗҫлесе пурӑнни, мулласен айне пулманни, хамӑр тӗп пӑлхар чӗлхине пӑрахманни, хамӑр авалхи ват асаттесен йӑлисене тытни чӑваш халӑхне пӗтесрен сыхласа хӑварнӑ». Юлашкинчен тӗпчевҫӗ ҫав ҫӑлӑнушӑн чи малтан ялсенче пурӑннӑ пӑлхар хура халӑхне пуҫ тайса тав тумаллине палӑртать.

Ҫапла вара, Г.И. Комиссаров чӑваш халӑхӗ чӑмӑртанса пынӑ тапхӑра XIV–XV ӗмӗрсене вырнаҫтарать, мӑсӑльман-пӑлхарсем (пӗсӗрменсем) кыпчакланса кайнипе ҫыхӑнтарать. Халӑхӑмӑршӑн чи хакли ҫавӑн чухне унӑн ҫепӗҫ чӗлхи тата йӑли-йӗрки пулни халӗ никама та иккӗлентермест. В. Лебедев «Чӑваш эпӗр полтӑмӑр» тенӗ. «Чӑваш пулсах юласчӗ, йӑхташӑмӑрсем», — теер паян. Ҫапла пултӑр тесе хуравлаканӗсем йышлӑлансах пыччӑр.

## УЯВ (ВĂЙĂ) ЙĂЛИ-ЙĔРКИН ЧĂВАШ ХАЛĂХ ПУРНĂÇĔНЧИ ПĔЛТЕРĔШĔ

*Т.И. Семенова*

Чăваш халăхĕн сăвă-юрă пултарулăхне паянхи кунччен упранса юлма пулăшнă йăласенчен пĕри – уяв (вăйă). Ăна çурхи ĕçсем вĕçленнĕ хыççăн, çуллахисем пуçланиччен, ятарласа ирттернĕ. Çурхи уявсем авалхи чăваш календарĕпе çуркунне кун таврăнсан (пуш уйăхĕн 21-мĕшĕнче) пуçланнă та утă çине е вырма тухиччен тăсăлнă. Чылай вырăнта вĕсем Çимĕкрен пуçласа Питравччenех пынă. Çак йăла Н.И. Ашмарин словарĕнче те çырăнса юлнă, «Çимĕкрен чăваш хĕрĕсем вăййа тухаççĕ»[1], – тенĕ унта. Тутарстан тăрăхĕнчи хăш-пĕр ял çамрăкĕсем уява кăшт каярах, çуллахи Микулара (май уйăхĕн 22-мĕшĕнче), тухма пуçлаççĕ.

*Вăйă* сăмахăн пĕлтерĕшĕсем темиçе те. Ытларах ăна «уяв» пĕлтерĕшпе усă кураççĕ. В.К. Магницкий палăртнă тăрăх, çинçепе уяв пĕр япалах. «Хăш-пĕр вырăнта çинçене уяв теççĕ», – тесе çырнă вăл[2]. Н.И. Ашмарин «Чăваш сăмахĕсен кĕнекинче» «уяв» сăмаха ăнлантарнă май çапла каланă: «Уяв – çинçе-çимĕкпе утă çи хушши, ĕççĕр вăхăт. <...> Уяв тени уяс тени пулать; уяв тесе ахаль ирттернĕ вăхăта калаççĕ. Уяв вăхăтĕнче ним ĕç те ĕçлемеççĕ. Уява виç эрнерен ытла тумаççĕ; виç эрне тусан хыт сухана тухаççĕ. <...> Петрав кунĕ çитерехпе çамрăк ачасем уяв калама чарăнаççĕ»[3].

*Вăйă* сăмахăн тепĕр пĕлтерĕшĕ вăхăта хаваслă ирттернипе çыхăннă. «*Вăйă* тесе пĕр-пĕр урам кĕтессине вылямa-кулма, кĕвĕ-сăвă калама пуçтараннине калаççĕ»[4]. Ялсенчи хĕрсемпе каччăсем юрă юрласа, ташласа савăнма, хавасланма, пĕр-пĕринпе паллашма яланхи пĕр вырăна пуçтараннă. Çур аки хыççăн яш-кĕрĕм ĕçрен кăштах пушанать, çуллахи хĕрӳ тапхăр

пуçланиччен канать. Çамрăксен вăййисен тĕп тĕллевĕ вăйă-кулăпа савăнăçра кăна мар, вăл чылай тарăнрах пытарăннă. Чăвашсем тырă-пулă, пахча çимĕç ӳстерсе паракан çĕре чĕрĕ чунпа, Амапа, танлаштарнă. Çурхи вăйăсене Çĕре, Амана, пĕтĕленсе юлма пулăшма тесе ирттернĕ. Нумай чĕлхере *вăйă, выля* сăмахсен шалта вырнаçнă шухăлăх (эротика) пĕлтерĕшĕ пур. Вырăс чĕлхинчи «игра» сăмахра та пур çав пĕлтерĕш сĕмĕ[5].

*Çинçе* уявĕ акатуйсем иртсен çитнĕ. Ку вăхăтра çĕре хускатма, тĕкĕнме хушман. «Çĕр пĕтĕ», тепĕр майлă каласан, унăн «çире пур» тесе шухăшланă, çавăнпа та халăх пысăк ĕçе кӳлĕнмен. Çамрăксем каçсерен вăййа тухнă. Г.И. Комиссаров тĕпчевçĕ кун пирки çапла çырать: «Анатри чăвашсем çĕр пĕттине уявласа ирттернĕ праçнике „уяв” (почитание), тури чăвашсем „çинçе” („çийĕнче”, „çие юлни” тесен тĕрĕсрех пулать) тенĕ. Вăхăт иртнĕçемĕн „уяв” сăмаха куçăмлă пĕлтерĕшпе „çамрăксен вăййисем” теме пуçланă»[6].

Çинçе – çуркуннерен çăва кĕнĕ вăхăт. Ăна икĕ эрне уявлаççĕ. Çинçе йăли *уяв-вăйă-тапă* йăлисемпе тӳреммĕн çыхăнман. Ыраш шăркана ларнă чухнехи чи вăрăм кунсене чăвашсем çĕр пĕтĕ пулнă вăхăт тесе шутланă, çавăнпа та «çийĕнче пур», «пĕтĕ çĕре кансĕрлес мар» тесе асăрханса, уяса тăнă, çĕре хускатман.

Чăваш чĕлхеçисем В.Г. Егоров тата М.Р. Федотов *уяв* термина вырăсла «соблюдение» тесе куçараççĕ, вăл *уя* «блюсти» сăмахран пулса кайнă тесе ăнлантараççĕ[7].

Анатри чăвашсем ур[8] тăрăхĕсенчи вырăссемпе хутшăнса пурăнма тытăнсан вĕсен уявĕсене йышăнма пуçланă. Ку тăрăхри çамрăксем вырăссенчен вăйă карти (хоровод) йăлине йышăнса юлнă. Хирти (анатри) чăвашсем вырăс «хоровочĕсене» те хăнăхнă йăлапа «вăйă» теме тытăннă, Кама леш енчи чăвашсем ăна «уяв» теççĕ.

Е.А. Ягафова Самар хутлăхĕнчи тата Тутарстанри Çарăмсан тăрăхĕнчи чăвашсен уяв йăли-йĕркине тарăннăн тишкернĕ. Вăл хăйĕн ĕçĕнче çак шухăша палăртать: «Уяв, пĕр енчен, çинçепе пĕр пĕлтерĕшлĕ, тепĕр енчен – вăйăпа. Асăннă термин икĕ ăнлава палăртнă. „Уяв” сăмахпа усă

курнă тăрăхра „çинçе” тата „вăйă” сăмахсем тĕл пулмаççĕ. Самар тăрăхĕнчи Тăварма (Тăварăм), Ухинккел, Питтăпаль, Ăрсиел ялĕсенче çинçе умĕн юн кун Акатуй е Сапантуй ирттереççĕ. Çав вăхăтрах Çарăмсан тăрăхĕнчи ялсенче Акатуй пирки пĕлмеççĕ, кунта йăлана кĕнĕ вăйăсене, утпа чупассине уяв вăхăтĕнче ирттереççĕ. Унта каçчен юрласа савăнаççĕ, вăйă картине тăраççĕ. Унсăр пуçне тĕрлĕ ăмăрту та ирттереççĕ»[9].

*Çинçе тата уяв* терминсем пĕр пĕлтерĕшлĕ пулнине В.П. Никитин (Станьял) та çирĕплетет[10]. Пĕр тăрăхра ăна *çинçе*, тепĕр çĕрте *уяв* ятпа каланине те палăртать вăл.

Уяв (вăйă) юррисене Сĕве тăрăхĕнчи чăвашсем *уяв юррисем*, *вăйă юррисем*, *карталанса тăрса утса çӳресе юрланисем* теççĕ[11]. Илемлĕ литературăпа кулленхи калаçура вĕсене вырăнăн-вырăнăн «çинçе», «Çимĕк», «Çимĕк сăввисем», «Çимĕк сăвви-юррисем», «Микулапа Троица» е «весна юррисем» тени те тĕл пулать. Чăвашсен çак йăли пур çĕрте те хăйне евĕр иртнĕ, тĕрлĕ ятсемпе çӳренĕ. Вирьялсем (турисем) «вăйă» е «похă» тенĕ, анат енчисем «вăйă», анатрисем ытларах «уяв» теççĕ.

Чăваш Республикинчи районсенче çамрăксем савăнма пухăнакан уява тĕрлĕрен ятпа палăртаççĕ: *похă, тапă, ейĕн*. Тĕпчевçĕсем *тапă* сăмахăн пĕлтерĕшĕпе пулăвне тĕрлĕрен ăнлантарнă. Н.И. Ашмарин словарĕнче çапла каланă: «*Тапă* – çуркунне, çурхи ака пĕтиччен. Тапă кунĕ аксан, тырă пулмасть. Унта каччăсем, хĕрсем, ватă çынсем, ватă арăмсем курма тухаççĕ. Сăра, эрек сутаççĕ. Пĕремĕк, кăнафит, хĕвел-çармăш сутма кăлараççĕ. Апат çисе, тумланса тухаççĕ, кăнтăрлара, кăнтăрла иртсен саланаççĕ. Хĕрсем ĕретпе ăрампа тăраççĕ, пĕр-пĕринпе калаçаççĕ, каччăсемпе паллашаççĕ...»[12].

К.В. Эллен ЧПГĂИ архивĕн фондĕнче упранакан ал çырăвĕнче *тапă* сăмахăн пĕлтерĕшне çапла уçса панă: „Тапă” сăмах, преданисем тăрăх, „тапăр” сăмахран пуçланса кайнă. Тапăра та кăнтăрла выльăхсем ĕçсе канма анаççĕ, таппа та». Урăхла ăнлантарни те пур.

Тапă – вăлах *похă, ейĕн*, *хупах* – çулталăкра пĕрре пулакан аслă вăйă. Ĕлĕкхи вăхăтра çурхи ĕçсем вĕçленсен кашни община (пĕр кăкран хунаса тухнă ялсем) пĕр ялĕнче *пухă*

(«собрание, съезд») irttернĕ. Унта ял пуçĕсем, ватăсем община пурнăçĕнче тухса тăнă пысăк ыйтусене сӳтсе явнă, кайран тăвансем патĕнче кĕрекере ларнă, тĕпри ватăсене асăннă.

Тапăра ял пуçĕсене суйласа лартнă. Суйлав йĕрки авалах çирĕпленнĕ, вăл чăвашсен мăн аслашшĕсем юркăн пурнăçпа пурăннă вăхăтранах килет. Тапăра Акатуй irttернĕ (тĕрĕссипе, тапă та, ака туйĕ те – пĕр япалах) – çынсем чупса, сиксе, кĕрешсе, тĕл персе, ут ярса ăмăртнă, çĕнтерӳçĕн вăй-халне çеç мар, ăс-тăн çивĕчлĕхне те сăнанă. Мала тухнине пуçлăха лартнă. Çамрăксем çак хушăра аслă вăйă irttернĕ. Ку уяв каçсерен иртекен вăйă пекех, анчах таппа таврари ялсенчи çамрăксем те пуçтарăннă[13].

Чăвашсене Христос тĕнне йышăнтарнă хыççăн ĕлĕкхи вунсем[14] вырăнне прихутсем пулса тăнă. Вара тапăсене чиркӳ (престол) уявĕсем вăхăтĕнче irttерме тытăннă. Ĕлĕк таппа пухăнсан тĕпре выртакансене хывнă. Çавăнпа тĕне кĕнĕ хыççăн тапăсем нумай çĕрте Çимĕкпе, Троицăпа пĕрлешсе кайнă. Авалхи тапă вырăнĕсенче каярахпа пасарсем, ярмăрккăсем irttерме пуçланă.

Çамрăксен уявĕсене тĕрлĕ вырăнта тĕрлĕ ятпа палăртнă. Тĕслĕхрен, Куславкка районĕнчи Чăнкасси тăрăхĕнчи яш-кĕрĕм Энĕш улăхĕнче кушар irttернĕ, Вăрмар районĕнчи Пăртас çамрăкĕсем сала çумĕнче вăййа пухăннă. Çĕрпӳ районĕнчи Кĕсер шывĕ урлă хывнă Дворник кĕперĕ çинче иртекен уява Тварник таппи тенĕ.

ХХ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсен иккĕмĕш çурриччен Çĕрпӳ тăрăхĕнчи мĕн пур Туçа (Хурамал Туçа, Кĕлейкасси Туçа, Çирĕккасси Туçа, Чечейкасси Туçа, Упнер Туçа, Чăрăш Туçа, Ĕмпĕрт Туçа) ялĕсенчи çамрăксем Çимĕк умĕн *хупах таппине* пуçтарăннă. Халăхра тапă вырăнне те, вăхăтне те *хупах* тенĕ. Çав уяв Чечейкасси ялĕ çумĕнчи Тиснер тăвайккинче *Хĕр киремечĕ* текен вырăнта иртнĕ. Таппа пынă яш-кĕрĕм пĕр-пĕринпе паллашнă, туслă пулма сăмах татнă. Çакă тапăн тĕп пĕлтерĕшĕ пулнă. Авланман каччăсем хăйсем валли хĕр куçласа хунă. Çамрăксем пĕр-пĕринпе паллашса çемье çавăрма тĕв тунă, кĕр мăнтăрĕпе туй irttернĕ. Çак шухăша В.Г. Родионов çапла палăртать: «Анализ обрядового

текста *тапă* показывает, что основной функцией данного обряда являлось знакомство молодых людей с целью брака»[15].

Халăх çĕре хисеплесе чару (табу) йĕркине хытă пăхăннă. Çав тапхăрта ача-пăчана ашкăнма çеç мар, выляма та чарнă. «Ватăсем çинçе чухне вылясан, кулсан, шăхăрсан, купăс-мĕн каласан тырă пулмасть тенĕ»[16]. Çинçере арçынсемпе хĕрарăмсем пурте шурă тум тăхăннă, ниçта та çӳремен, килте, кил таврашĕнче вăхăта ирттернĕ. Арçынсем урама тухса ларса юмах-халап çапнă. Кăнтăрла юрлама та чарнă, çавăнпа вăйă картине çамрăксем каçхине çеç тухнă. Уяв пуçлансан пĕтĕ çĕре вăйăсем вĕçленмесĕр те хускатма, амантма юраман. Çакăн çинчен В.К. Магницкий хăйĕн ĕçĕнче тĕплĕн çырса кăтартнă[17].

Чăвашсем ирттерекен вăйăпа тӳр килекен йăла-йĕрке Атăл тăрăхĕнчи ытти тĕрĕксен те пур: тутарсен вăл «джиен», пушкăртсен – «йыйын». Ку йăлана ислам тĕнне йышăннă пăлхарсем те тытса пынă. Хальхи *тапă, похă, ейĕн* («собрание») *акатуй, вăйă (*тутарсен *джиен, «джăйăн»* тесе вуламалла, вырăсла «собрание, сборище»), *сапантуй* тенисем пурте пĕр пулăма пĕлтереççĕ.

Чăвашсемпе тутарсем йăлисене пĕр вăхăталла ирттернĕ. Тутарсем вĕсене пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем йĕркеличченех тытса пынă. Каярахпа джиен пĕчĕккĕн сӳнме пуçланă. Юлашки вăхăтра сапантуй ирттересси вăя кĕрсе пырать.

Кӳршĕллĕ пурăнакан çармăс халăхĕн хĕрĕсемпе каччисем те ĕлĕк пĕр-пĕринпе Çимĕк эрнинче паллашнă. Çимĕк йăлине вĕсем чăвашсенчен йышăннă тесе калама пулать. Чăвашсем авалтанпах мăн асаттесемпе асаннесене асăнса Çимĕкре кивĕ масар çумĕнчи çаран çинче вăйă йĕркеленĕ. Чăваш тата çармăс çамрăкĕсем ку йăлана ваттисем (мăн асаттесем) леш тĕнчере савăнса пурăнччăр тесе ирттернĕ. Çимĕкре ваттисен чунĕсем çĕр çине, ку тĕнчене килеççĕ тесе ĕненнĕ, вĕсене савăнтарма уяв пуçланă, юрăсем юрланă.

«Чăваш энциклопедийĕнче» М.Г. Кондратьевпа В.А. Милютин тĕпчевçĕсем уяв йăлин тытăмне кĕскен те уçăмлăн çырса кăтартнă: «Пуçланнă кун, аслă уяв (аслă уяв, чи пысăк, савăнăçлă кун, аслă уява хутшăнакансем таврари

пĕтĕм ялсенчен пуҫтаръннă), уяв ăсатни (каярах саслă уявпа пĕрлешсе кайнă). Хĕвел ансан Питравра уява ăсатнă»[18]. Вăйă пуҫламăшĕпе вĕҫĕнче тата аслă уявра ятарлă юрăсем янăратнă.

Малалла анатри, анат енчи, тури чăвашсен уяв (вăйă) йăли-йĕркине этнографи ушкăнĕсем тăрăх пайласа тишкеретпĕр. Классикăлла уяв Саккам (Атăлăн сулахай енче вырнаҫнă) анатри чăвашсем хушшинче чăннипех те анлă сарăлнă, чаплă иртнĕ.

**Анатри чăвашсен вăййи (уявĕ)**

Тутар Республикинчи Элкей районĕнчи Сиктĕрме ялĕнче 1976 ҫулта фольклор экспедицийĕнче пулнă Е.С. Сидорова уяв йăли-йĕркин уйрăмлăхĕсене тĕплĕн ҫырса илнĕ[19]. Кунта хĕрсем ҫурхи каҫсенче урама тухса юрă юрланине (хоровода) *уяв* тесе каланă. Хĕрсем уява ҫуллахи Микулара, май уйăхĕн 22-мĕшĕнче, тухнă, вăйă картине тăрса юрăсем юрланă. Питрав умĕн пĕр эрне малтан, вырсарни кун (*тунти каç* теççĕ вĕсем) уява ăсатнă, ун хыççăн вара уява тепĕр ҫулччен те тухман, уяв юррисене юрламан, юрлама юрамасть тенĕ.

Уява ăсатмалли ҫирĕпленнĕ йĕрке пулнă. Кăнтăрла иртсен яш-кĕрĕм ҫирĕк йывăççи касса килнĕ, уяв иртттерекен вырăна чавса лартнă, хĕр упраҫ ăна капăрлатнă. Каҫалапа хĕрсем илемлĕ тумланса тухнă, ҫав йывăç тавра тытăнса уяв юррисем юрланă. Унтан уява ăсатмалли «Хура пусăри тунката» юрра шăрантарнă. Пурте йывăç тураттисене хуҫса илсе ваклаca ҫĕре пăрахнă. Ҫав вăхăтрах «Шакилюк» юрра юрласа тапăртатнă (ку ĕнтĕ ҫумран чир-чĕр кайтăр, тепĕр ҫулччен сывă пурнар тенине пĕлтернĕ).

Ҫакăн хыççăн йĕкĕтсем йывăҫа ҫĕклесе илнĕ, ăна тăратсах тытса пынă. Урампа иртнĕ чух пĕр ҫĕрте чарăнса тăрса каллех ун тавра тапăртатнă, турачĕсене хуҫса пăрахса «Шакилюк» юрра юрланă та малалла кайнă, ял вĕҫне ҫитсе уй хапхинчен тухнă. Ял хыҫĕнче те ҫавăн пекех тунă, унтан йывăҫа пăрахнă та пурте ял еннелле чупса тарнă. Яла кĕрсен урăх юрăсем юрласа килĕсене саланнă.

Тутар Республикин Нурлат тăрăхĕнче хальхи вăхăтра та хĕрсемпе пĕрле ватăрах хĕрарăмсем ял хĕрринчи уҫă вырăна

тухса вăйă картине тăраççĕ, уяв юррисем юрлаççĕ, ташлаççĕ. Вĕсен уявĕ Çимĕкре пуçланать.

Тарăн варта хур пусрăм,
Вăрă тесе ан калăр.
Вăй(ă) пуçласа каларăм,
Шухă тесе ан калăр[20].

2008 çулта Раççей гуманитари наука фончĕпе Чăваш Республикин правительстви пулăшнипе Тутарстан Республикинчи Нурлат районĕнчи чăвашсен фольклорне тĕпчеме экспедици йĕркеленĕ (08-04-22760 е/В). Ун вăхăтĕнче Е.В. Федотова (Ермилова) пуçтарнă уяв йăли-йĕркипе юррисен материалĕсем халĕ ЧПГĂИ ăслăлăх архивĕнче упранаççĕ[21].

Уява кӳршĕ ялсенчен те килнĕ. Çамрăксем урам тăрăх утнă та виçĕ çĕрте чарăннă: малтан ял варринче, унтан ял вĕçĕнче, юлашкинчен уяв юпи патĕнче. Унта тĕп уяв йăлисене пурнăçланă та ăсатма кайнă. Ăсатнă чух виçĕ хут пĕр май, виçĕ хут тепĕр май çаврăннă та килĕсене саланнă. Уяв картине урăх тăман. Каялла килнĕ чухне те уяв юрри мар, урам юрри юрланă.

Уява ăсатнине те çирĕп асăрхаса тăраççĕ. *«Уяв карчăкне* ăсатмалла ăна, яла хăвармалла мар», – теççĕ. Ăна тумасан хĕрсене йывăр килет имĕш. Питрав кунĕнче кăна юрламалли ятарлă «Уяв ăсатнă чухнехи юрă» пулнă.

Ах, мăнтарăн куккукĕ,
Ах, мăнтарăн куккукĕ,
Питрав кунĕ чарăнать те
Питрав кунĕ чарăнать.
Ах, мăнтарăн уявĕ,
Ах, мăнтарăн уявĕ
Паянхи кун чарăнать те
Паянхи кун чарăнать.
Çулталăкран çаврăнать,
Çулталăкран çаврăнать.
Пахчи-пахчи сар чечек,

Пахчи-пахчи сар чечек,
Епле ашса тухмалла,
Епле ашса тухмалла?
Сар чечек пек уявне,
Сар чечек пек уявне
Епле (ă)сатса ямалла?

П.К. Андреевăн «Юррăмсем-çунатăмсем» кĕнекинче уяв йăлипе çыхăннă чару çинчен каласа хăварни пур: «Тутар Республикинчи пĕр ялта çакăн çинчен чăн пулнă пек калаçаççĕ. Тахçан авал, тем сăлтавпа, уява ăсатман. Ун хыççăн хĕрсем пĕрин хыççăн тепри вилме пуçланă тет. Çынсем вара хĕллехи кун, шартлама сивĕре, кĕрĕк тăхăнса, хирте уяв юрри юрланă пулать. Паллă ĕнтĕ, кун пек юмаха ваттисен йăлине тытчăр тесе, çамрăксене ăс парас шутпа кăларнă»[22].

Уява чаплă ăсатаççĕ. Вăйă пĕтнĕ кун хĕрсем хурлăхлăрах юрăсем юрлаççĕ. Хаваслă вăхăт иртсе кайсан ĕçе кӳлĕнме (утă çулма, тырă вырма) тивет.

Кунтан уяв иртсессĕн,
Лартаççи-ха сулхăнра?
Лармăпăр-ха сулхăнра,
Кайăпăр-ха тыр вырма[23].

Утă уйăхĕнчи пысăк уявсенчен пĕри – Питрав, вăйă вĕçлемелли кун. Çурхи вăйă виçĕ-тăватă, тепĕр чухне пилĕк эрнене пырать. Анчах кирек мĕнле пулсан та Питравччен вăйăсем вĕçленеççĕ. Юрласа-ташласа пĕтерсен аслисем килĕсене саланаççĕ. Çамрăк яш-кĕрĕм уява ăсатма юлать. «Питрав кунхине ял çыннисем пурте уяв ăсатма пуçтарăннă. Каç пулса тĕттĕмленсен ялăн хĕвел анăç енчи вĕçне тухнă та кăвайт тавра карталанса юлашки хут уяв картине тăнă. Çур çĕрте çамрăксем юрласа уяв йывăççине ялтан масар çине йăтса кайнă. Унтан таврăннă чухне юрламан»[24].

Хăш-пĕр çĕрте уява ăсатма ял вĕçне, ыраш пусси патне, тухаççĕ. Кĕрхи ыраш ытти тĕш тырăран маларах, Питрав тĕлнелле, пулса çитет. Уява ăсатма ыраш пусси патне

тухасси, тен, çавӑнпа çыхӑннӑ. Унта вара тӗрлӗ вӑйӑсем выляççӗ, хире-хирӗç карталанса тӑрса юрлаççӗ. Улӑха тухса чечексем татаççӗ, чечек çыххи туса шыва пӑрахаççӗ. Вӑл шывра путманни лайӑха пӗлтерет, çав чечеке татнӑ хӗр тепӗр çулччене сывлӑхлӑ пулать. Ку йӑла вырӑссен те пур[25].

Питрав хыççӑн вӑйӑ ирттерме чаракан йӗрке крешӗнсен те пулнӑ. Молькеево крешӗн тутарсен йӑли-йӗрки анатри чӑвашсемпе пӗр килет. Çакӑн сӑлтавне Н.Ю. Альмеева тата М.Г. Кондратьев тӗпчевçӗсем пӗр евӗр ӑнлантараççӗ: «Известно, что молькеевские кряшены издавна имеют брачные отношения с чувашами-анатри, и эту реалию, несомненно, поддерживают совместные хороводы как место встреч молодежи добрачного возраста, где парни выбирают себе невест. Поэтому молькеевские кряшены говорят, что у многих хотя бы одна бабушка-чувашка. Этим обусловлено сходство песенных жанров в традициях молькеевских кряшен и чувашей-анатри. Музыкальным результатом такого общения являются черты общности хороводного репертуара у кряшен и чувашей. На Троицу и Петров день (пограничные сроки хороводного периода) устраивались самые грандиозные хороводные игрища с участием всех деревень „куста”[26].

Сӗве тата Атӑл тӑрӑхӗнчи чӑвашсем вӑйӑ вӑхӑтӗнчи хӑш-пӗр йӑласене кӑна сыхласа хӑварма пултарнӑ, Кама леш енчи, Урал çумӗнче пурӑнакан тӑванӑмӑрсем вара авалхи уяв мешехисене тирпейлӗрех упранӑ. Ку уяв сӑваплӑ пӗлтерӗшлӗ пулнӑ. Вӗсем вырӑс хоровочӗсене çывӑх. Саккам чӑвашӗсем çурхи уявсене епле ирттернине Н.И. Егоров хӑйӗн статйинче тӗплӗн çырса кӑтартнӑ[27]. Кӗçнерни каç Çимӗк мунчи хутнӑ. Çимӗк мунчи валли вӑрмана кайса милӗк хуçса килнӗ. Милӗк касма çамрӑксем кассӑн-кассӑн пухӑнса кайнӑ. Хӗр упраç вӑрманта çитмӗл те çичӗ тӗрлӗ курӑк татнӑ, çичӗ тӗрлӗ йывӑçран милӗк чӗрнӗ. Каччӑсем уяв йывӑçӗсем шыранӑ. Кӑмӑла каякан йывӑç тупсан хӗрсене йыхӑрса илнӗ те уяв йывӑçӗ тавра кӗвӗ калама тытӑннӑ. Хӗр упраç чечек татса пуç кӑшӑлӗсем çыхнӑ, тухьясем çийӗн чечек кӑшӑлӗсем тӑхӑннӑ. Каччӑсем хӑйсем куçланӑ хӗрӗсене хӗрлӗ пурçӑн хӑюсем,

пухранккалăх[28] сар укасем, çутă шăрçа ярăмĕсем парнеленĕ, уяв ячĕпе пилĕклĕ пĕремĕксемпе, çăпаталлă мăйăрсемпе, хура мăйракасемпе хăналанă... Хăмаççип[29] хăюсене хĕрсем уяв йывăçĕ çине çыха-çыха янă, туратсерен чечек кăшăлĕсем çакса тухнă. Тепĕр тĕлте урăх кассем карталанса кĕвĕ каланă. Кашни кас çамрăкĕ хăй суйласа илнĕ уяв йывăçĕ тавра сăвă каласа вăйă карти çавăрнă. Каçа хирĕç йĕкĕтсем уяв йывăçĕсене çĕре ӳкермесĕр тĕпрен касса янă та яла илсе кайнă. Малта каччăсем йывăç йăтса пынă. Хăшĕсем çимĕк милĕкĕсене мăшăрăн-мăшăрăн майран çакса килнĕ. Хыçалтан хĕр упраç уяв кĕвви каласа карталанса пынă. Аслă улăх варринче пур кас çамрăкĕсем те пĕрле пухăннă та татах пĕр хушă вăйă каланă. Каçа хирĕç çамрăксем юхăм шыв урлă каçса яла таврăннă. Çырма урлă каçнă чухне хĕрсем пуç кăшăлĕсене шыва ярса хăварнă, камăн пуç кăшăлĕ мĕнле ишни-юхнине пăхнă. Пуç кăшăлĕ юхса кайсан «хĕр качча каять» тенĕ, пĕр вырăнта тăп тăрсан «кăçал качча тухмасть» тенĕ.

Яла таврăнсан çамрăксем хăйсен урамĕсене кайнă та вăрмантан касса килнĕ уяв йывăçĕсене урам тăваткăлĕсене лартса пĕрер çавра сăвă каланă, вара Çимĕк мунчи кĕме килĕсене саланнă. Мунча кĕрсе тухсан аслă уяв тапранса кайнă. Ун чухне кашни кас çамрăкĕсем хăйсен йывăçне аслă уява илсе кайнă та палăртса хунă яланхи вырăна чавса лартнă. Аслă уяв Çимĕкрен тытăнса Питрава çитиччен пынă. Уява тухнă чухне яш-кĕрĕм урам тăрăх карталанса юрласа утнă, уявран кĕнĕ чухне те касăн-касăн юрласа саланнă.

Питрав каçĕ çитсен çамрăксем юлашки каç вăйă каланă, юлашки каç ушкăнпа пĕрле пухăнса савăннă. Çур çĕр çитеспе аслă уява ялтан кăларса кай еннелле кайса ăсатса янă. Çамрăксем уяв йывăçĕсене кăларса илнĕ те урлă урам тăрăх йăтса тухса кайнă. Хыççăн хĕр упраç карталанса юрласа пынă. Çамрăксем уяв йывăçĕсене ял хыçĕнчи юхăм шывпа юхтарса янă та яла таврăннă.

Анатри чăвашсен уяв йăлинче çирĕп йĕрке (канон) упранса юлнă. Тĕрлĕ вырăнти чăвашсен йăли-йĕрки расна пулни те курăнать, анчах вĕсен пĕтĕмĕшле тытăмĕ пĕр

евĕрлĕ: уява пуçласан ăна тивĕçлипе ăсатса яраççĕ, çав хушăра тĕрлĕрен йăласем туса ирттереççĕ.

**Анат енчи чăваш çамрăкĕсен вăййисем**

Анат енчи чăвашсем те çуркунне çитсен пĕр-пĕр уçă çеремлĕ вырăнта (аслă улăхра), ял варринче е хĕрринче уяв ирттернĕ. ЧПГĂИ ăслăлăх архивĕнче Чăваш Республикинчи Тăвай районĕнчи Чутей ялĕнчи вăйă йăли-йĕркине çырса кăтартни упранать[30].

Касри хĕрсем пухăнса çитсен ял варринелле, вăйă пуçлакан вырăна, юрласа утнă. Ялта малтан чиркӳ таврашĕнче, унтан палăртса хунă вырăна вăййа пухăннă. Пур урамсенчи çамрăксем те килсе çитсен хĕрсем вăйă картине тăрса алăран-алă тытăнса çаврăнса юрланă. Йыша хутшăнман çамрăксем е айккинче тăнă, е хут купăспа ташланă, е карта тавра çаврăнса утнă. Саланма вăхăт çитсен вăйă картинчи хĕрсем малтан Мăрсай кукри туса юрланă. Кун хыççăн вăйă карти пĕр çĕртен татăлнă та капан (çаврака карта) тума пуçланă. Ун чухне çак сăвăсене каланă:

Итемĕрте капан пур,
Сĕт çине ларнă хăйма пек.
Ун айĕнче пукан пур.
Салантăмăр, тантăшсем,
Пуçтарăнтăмăр, тантăшсем,
Вĕçен кайăк чĕппи пек.

Çак сăвăсене каласа пĕтернĕ çĕре капанĕ те саланнă. Юлашкинчен «утте»[31] каласси пуçланнă. Ун чухне хĕрсем çаврака картарах юлнă, анчах пĕр-пĕрне хулран тытса тачă тăрса юрланă. Вăйă карти саланса кайнă, кашни урамри хĕрсем пĕр-пĕрне хулран тытса, юрласа килелле утнă. Тус хĕрĕсем пур каччӑсем вĕсем хыççăн пынă е хĕрĕпе çеç утнă.

Вăййăн юлашки çĕрĕнче çапла юрланă:

Сыв пул, шĕшкĕ, сывă пул,
Тепĕр мăйăр пуличчен.
Сывă пул, куккук, сывă пул
Тепĕр Питрав çитиччен.

Сывă пулăр, тантăшсем,
Сывă пулăр, тантăшсем,
Тепĕр вăйă çитиччен,
Тепĕр Питрав çитиччен.

Анат енчисен вăййи çапларах иртнĕ.

**Тури (вирьял) чăвашĕсен вăййисем**

Чăвашсен пĕрремĕш этнографĕ С.М. Михайлов тури чăвашсен çамрăкĕсем Çимĕкре пуçласа выляма тухнине, яш-кĕрĕм пĕр-пĕринпе епле паллашнине хăйĕн тĕпчевĕнче сăнланă. Вăл çуркуннен пĕрремĕш «романтикăллă» уявне, «по(л)тран пасарне» – ирттерни пирки «Балдран-базар в Козьмодемьянском уезде» очеркĕнче тĕплĕ çырса кăтартнă[32]. Вăл çуркунне юр кайса пĕтсе çĕр типсен, ана çине ĕçлеме тухиччен, чăвашсемпе çармăссем пултран пасарне пухăнни çинчен асăннă. Пасара виçĕ эрне кун ирттернĕ: пĕрремĕш эрне кун пĕрремĕш, иккĕмĕшĕнче иккĕмĕш, виççĕмĕшĕнче виççĕмĕш пасар пулнă иккен. Икĕ халăх çыннисем çичĕ тӳпе вăрманне пухăннă. Çулран-çул пуху пĕлтерĕшĕ ӳссе пынă, çавна май ăна пасар теме тытăннă. Лавккаçăсем унта пĕремĕк, кулачă илсе пырса сутнă. Пĕтĕм таврари ялсенчен ватти-вĕтти, уйрăмах нумай яш-кĕрĕм пуçтараннă. Халăх кунта кăнтăрлаччен пухăнса тĕттĕмленичченех савăннă-мĕн. Чăваш тата çармăс каччисем килĕшекен хĕре куçласа унпа паллашнă, юманлăхра уçăлса çӳренĕ, ăна пĕремĕкпе е мăйăрпа сăйланă, хĕр чĕрине тыткăнлас тесе çырла эрехĕпе хăналани те пулнă. Хĕрсем пулас мăшăрне хăйсем суйланă. Çамрăксем шăпăр кĕввипе ташланă. Пасар пĕтсен, каçалапа, çынсем ушкăнăн-ушкăнăн пуçтаранса шăпăр каласа тата юрласа килĕсене саланнă.

Чăваш Республикинчи Муркаш–Шупашкар хутлăхĕнчи çамрăксем ака-суха ĕçĕсене пĕтерсен Çимĕк хыççăн «хравути (ыхра ути) поххине» пуçтараннă. Унти юрă картинче хĕрсемпе каччăсем ретĕн-ретĕн, умлă-хыçлă утса юрланă. Юрă карти варринче ташă, камит валли пушă вырăн юлнă.

Кăнтăрлахи вăхăтра хĕрсемпе арăмсем пир çапнă, каччăсем чуччу çакнă, ача-пăча вăйă хăваланă. Юриех калаçса татăлса е калаçса татăлмасăр хĕр вăрланă тĕслĕхсем пулнă. Хравути поххи хĕвел аниччен иртнĕ. Хĕвел ансан çамрăксем килĕсене саланнă.

Пĕр тăрăхри ялсен (сăмахран, Муркаш районĕнчи Мăн Сĕнтĕрти пултран пасарĕпе Шупашкар районĕн Станьял, Анат Кĕнер ялĕсенчи хравути поххисем) вăйă йăли-йĕркисем пĕр килнине, уяв ячĕсем ӳсен-тăран ячĕпе çыхăннине куратпăр.

Тури чăвашсен вăйă юррисем сахал. Вирьялсен вăййи анатри чăвашсенни пекех аталанманни тата упранса юлайманни курăнать. Тури чăвашсен вăййи манăçа тухма пуçлани пирки Г.И. Комиссаров та çырнă: «У чуваш-анатри хороводы устраивают и теперь, у верховых чувашей (вирьял) они отошли в прошлое, чему нельзя радоваться»[33]. Çак уйрăмлăха М.Г. Кондратьев та асăрхать: «Çакна палăртмалла: çуркунне карталанса юрланă-вылянă юрăсен жанрĕ паянхи кунччен шăпах анатри чăвашсем хушшинче упранса юлнă, вăл турисен çукпа пĕрех, анат енчисен ку жанр халăх музыкин урăх стилĕпе йĕркеленнĕ»[34].

Яш-кĕрĕм вăййин илемĕ – вăйă карти (хоровод). Унта юрă-ташă, такмак, вăйă-кулă, шӳт, питлев, тăрăхлав янăранă. Пурнăçри хуйха-суйха çамрăксем унта пусарнă. Ĕçре маттур пулни вăйăра та курăннă. Вырăссен вăйă картине (хоровода) «карагод» (круг) тенĕ. Вăйă картин пĕлтерĕшне «Чăваш энциклопедийĕнче» ăнлантарни пур[35].

Пысăк урамсенчи яш-кĕрĕм малтан хăйне уйрăм картасене пуçтарăннă, кайран тĕрлĕ урамри картасем пĕрле пухăнса юрланă. Пĕр карти хĕвеле май, тепĕр карти хĕвеле хирĕç çаврăннă. Хĕрсем питĕ йышлă пухăннă чухне пысăк вăйă картинче каччăсем тепĕр пĕчĕкрех карта туса çаврăннă. Яш-кĕрĕмпе çул çитмен ачасем савăнса юрланă-ташланă вăхăтра аслисем масар çинче ваттисене (вилнисене) асăннă, ытти йăла-йĕркене туса ирттернĕ. Пĕчĕккисем аслисене кура тĕрлĕ вăйă выляса вĕсене евĕрленĕ.

Яш-кĕрĕм вăййăра карта туса çаврăннинче хĕвел сăнарне куратпăр. Çак йăла урлă чăвашсем тĕнче уçлăхĕнчи хăватсемпе çыхăнни те палăрать. Кун пирки В.Г. Родионов çапла çырать: «Участники *вăйă* имитировали „сотворение мира", что хорошо сохранилось и в вербальных текстах. В них можно вычленить две последовательные части: первая связана с описанием мирового древа, т.е. с актом творения мира, а вторая отражает те непосредственные действия участников *вăйă,* которые в конечном итоге восходят к действиям любовного содержания. Действие этих двух частей объединено одной, более общей темой: продолжение жизни в опасный период, а именно в период смены сезонов»[36].

Йăлара вăйă карти варрине кăвайт чĕртни те пулнă. Аслă вăййа пуçличчен мăн асаттесем çӳлти хăватсенчен ирĕк ыйтса вута пуç çапса юрланă. Вут кульчĕ пирки А.А. Трофимов тĕплĕ ăнлантарать[37]. Чăвашсен вут-кăвар чĕртни таса мар вăйсене тĕп тунине пĕлтерет. Хĕвелпе вут чăвашсемшĕн сăваплă шутланнă.

Ака-суха ĕçĕсене пĕтернĕ хыççăн яш-кĕрĕм хаваслă вăйă-кулăра савăнать. Вĕсем хăйсен чун хавалне юрă-кĕвĕ урлă уçса параççĕ: çамрăк çын çурхи илемпе киленсе юрлать, чунне уçать.

Уяв кунĕсенче ваттисем кӳршĕ ялсенчи тăванĕсене, хурăнташĕсене хăнана чĕннĕ, килĕсенче юрă юрласа, ташласа савăннă. Çак йăлара çĕр пулăхне ӳстерес пĕлтерĕш те пур. Çапах та ют яла качча кайнă хĕрсем хăйсен кил-йышĕпе тăван ялĕнче хăналанни пĕлтерĕшлĕрех пулнă. Тутарсен джиенне те çапла иртнерне.

Вăййа пынă яш-кĕрĕм пĕр-пĕринпе паллашнă, туслă пулма сăмах татнă, çемье çавăрма мăшăр суйланă. Çакăн çинчен А.К. Салмин тĕпчевçĕ çапла çырнă: «Хороводы *вăйă* – это более близкое общение. Как правило, здесь каждый парень и девушка старались создать пару. Парни без девушек старались знакомиться с ними в ходе игр. Большинство парней с хоровода провожало девушек до дома. А некоторые пары коротали ночь до

утра. У девушек в обыкновении было дарить любимому вышитый носовой платок. У русских, наоборот, в обыкновении было дарить платочек девушке. Видимо, для вышивания. Она взамен дарила кисет, сшитый из лент. А у чувашей дарение платочка девушкой – это признание этого парня любимым»[38].

Анат енчи, анатри тата тури чăвашсен вăйă (уяв) йăли-йĕркисем пĕр-пĕринчен хăш-пĕр пайрăмсемпе (детальсемпе) уйрăлса тăраççĕ. Уява (вăййа) ирттернĕ вăхăчĕ те тĕрлĕрен. Унăн йĕркийĕ, хутшăнаканĕсем, пĕлтерĕшĕ те пĕр-пĕринчен урăхларах. Çамрăксем пухăннин тĕп тĕллевĕ – хăйсем валли çемье çавăрма мăшăр тупасси, çамрăклăх вăхăчĕпе киленсе савăнасси, тус-тантăшсемпе хутшăнса калаçасси. Вăййа (уява) ятарлă юрăпа пуçланă (кашни ялăн хăйĕн юрри пулнă), ятарлă юрăпа вĕçленĕ.

Вăйă вăхăтĕнче çамрăксем вылянă, кулнă, юрланă, ташланă. Вĕсем ырлăх панăшăн çут çанталăка çапла тав тунă. Чăваш вăййин пуянлăхне йĕркипе сыпăнтарса пырсан тĕлĕнмелле балет та, опера та пулса тухĕччĕ. Халăхăн çурхи уяв вăййи-куллине этнографсем пысăка хурса хакланă. Вырăс çыравçи Н.Г. Гарин-Михайловский 1900 çулта хальхи Пушкăрт Республикине кĕрекен Парашино (Аксаково) ялĕнчи чăваш çамрăкĕсем çуркунне юмахри пек илемлĕ, асамлă уяв картинче вăйă ирттернине, юрăсем юрланине оперăсенчен мала хурса хаклать. Акă мĕнле çырса хăварнă вăл уяв пирки: «...Хĕрсем алла-аллăн тытăнчĕç те пысăк вăйă карти туса юрла пуçларĕç: вĕсен юрри те, вăййи те тĕлĕнмелле илемлĕ-мĕн, ун пеккине эпĕ ĕмĕрне илтмен те, курман та. Ĕнтĕ сцена çинче, балетра, оперăра куркаланă. Анчах ку балет та, опера та мар, ку вăл – пурнăç. Пысăк вăйă карти тикĕссĕн те хуллен шăвать; хĕрсем пĕр-пĕрин хыççăн çурма айăккăн çаврăнса утаççĕ. Пĕр утăмне пысăккăн ярса пусаççĕ, вара тăп чарăнса тăраççĕ те тепĕр урине ерипен сиктереççĕ. Сцена çинче вăл, тен, пуçран шухăшласа кăларнă япала пек туйăннă пулĕччĕ – кунта вара çав çамрăк весталкăсен[39] вăййи калама çук илемлĕ те чăннăн курăнчĕ»[40]. Автор çырнă тăрăх, чăвашсем

çурхи вăйăра Çӳлти Турра, çĕр-аннемĕре тата вĕсен хĕрне мухтаса юрланине палăртаççĕ. Çак шухăша вырăс çыравçи «Зора» (Сарпи) драмăра та калать[41]. Çав кăмăл паллисем хăш-пĕр юрă текстĕнче хальчченех упранса юлнă.

Анатри чăвашсен куççуль тухиччен чуна хускатакан вăййине И.Я. Яковлев та курнă, вăл ăна авалхи эллинсен театрĕпе танлаштарнă.

Ӳнерçĕсем ĕлĕк те, халĕ те вăйă картине сăнлама юратаççĕ. Картинисенче чăваш çамрăкĕсен чысĕ, тирпейлĕхĕ, нумай енлĕ ăсталăхĕ курăнса тăрать. Уяв (вăйă) чăваш халăхĕн авалтан килекен культури. Вăл пуриншĕн те паха тĕслĕх, пултарулăх çыннисемшĕн – хавхалану çăл куçĕ. А. Миттов, В. Агеев, Н. Енилин ӳнерçĕсен ĕçĕсенче вăл чăваш тĕнчи пек уççăн курăнать.

Хальхи вăхăтра пурнăç, çынсен шухăш-кăмăлĕ улшăннă май ĕлĕкхи йăласемпе уявсенчен чылайăшĕ манăçа тухса пыраççĕ пулин те чăваш яш-кĕрĕмĕн вăййи сӳнмен-ха. Авалхи юрăсемпе кĕвĕсем, вăйă-уяв паянхи кунччене хăйсен ытарайми поэзине, илемне çухатмаççĕ.

Совет тытăмĕ авалхи йăласене ирттерме чарса тăнă. Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçи хыççăн çурхи-çуллахи вăйă йăли-йĕрки сӳнсе пыма тытăннă. Çакă нумай йĕкĕт вăрçă хирĕнчен таврăнайманнипе те çыхăннă-тăр. Хальхи вăхăтра З.А. Козлова ертсе пыракан «Уяв» ушкăн уяв (вăйă) юррисене илемлетсе юрлать. Чăваш Республикин Елчĕк районĕн Çирĕклĕ Шăхалĕнче Питравра вăйă ăсатас йăлана паянхи кун та ирттереççĕ. Хĕрсене сурăх кĕтĕвĕ витĕр кăлараççĕ. Ку йăла-йĕркене хĕрсем качча тухсан йышлă ача-пăчаллă пулччăр тесе тăваççĕ. Йĕпреç районĕнчи Пучинке ялĕнче те вăйă йăли-йĕркине çĕнĕлле чĕртсе ярас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Тутарстанри Нурлатра кашни çулах пĕтĕм Раççейри чăвашсен уявĕ иртет. Кашни ял хăйĕн пултарулăх ушкăнĕпе сцена çине тухать. Авалхи йăла-йĕркене пăхăнса çĕре чавса хурăн туни лартаççĕ, ун тавра çаврăнса юрăсем юрлаççĕ.

Уяв йӑли-йӗрки чӑваш халӑхӗн культура, наци хӑй евӗрлӗхне ламран лама парса пыма пулӑшать. Ҫухатас марччӗ пирӗн ҫак пысӑк пуянлӑха.

#### Литература, ҫӑлкуҫсемпе ӑнлантарусем

---

[1] *Ашмарин Н.И.* Чӑваш сӑмахӗсен кӗнеки. Шупашкар, 1994. Т. 11–12. С. 158.

[2] *Магницкий В.К.* Материалы к объяснению старой чувашской веры. Казань, 1881. С. 34.

[3] *Ашмарин Н.И.* Чӑваш сӑмахӗсен кӗнеки. Шупашкар, 1994. Т. 3. С. 172.

[4] Ҫавӑнтах. Т. 5 С. 292.

[5] *Хейзинга Й.* Опыт определения игрового элемента культуры. СПб.: Изд-во Ивана Лимбаха. 2011. С. 36.

[6] *Комиссаров Г.И.* О чувашах: исследования, воспоминания, дневники, письма. Чебоксары, 2003. С. 93.

[7] *Егоров В.Г.* Этимологический словарь чувашского языка. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1964. С. 208; Федотов М.Р. Этимологический словарь чувашского языка. В 2-х т. Т. 2. С–Я. Чебоксары: Чуваш. гос. ин-т гуманит. наук, 1996. С. 298.

[8] *Ур* – авалхи тӑшманӑн утлӑ ҫарӗ тапӑнса кӗресрен чавнӑ вӑрӑм та тарӑн канав, чармалли лини.

[9] *Ягафова Е.А.* Самарские чуваши (историко-этнографические очерки), конец XVII – начало XX в. Самара, 1998. С. 219–221.

[10] *Димитриева Н.И., Никитин В.П., Кудрявцева С.М.* Мир чувашской культуры (древняя история и духовное наследие этноса): учеб. пособие для образовательных учреждений Самарской области с полиэтнокультурным компонентом обучения. Чебоксары: ЧГИГН, 2002. С. 136.

[11] *Федотова Е.В.* Игровые и хороводные песни чувашей Присвияжья (по материалам экспедиции 2002 г.) // Нематериальное культурное наследие тюркских народов как объект сохранения: сб. материалов Международной научно-практической конференции (16–19 июля 2014 г.). Казань: Ихлас, 2014. С. 394.

[12] *Ашмарин Н.И.* Чӑваш сӑмахӗсен кӗнеки. Шупашкар, 1994. Т. 13–14. С. 194.

[13] ЧПГӐИ ӐА. I п. 619 т. 9043 упр. ед. 95–96 л.

[14] Вун – ӗлӗкхи администраци-территори тытӑмӗнчи вулӑса тата уеса кӗрекен ялсен ушкӑнӗ (вунӑ ял).

[15] *Родионов В.Г.* О системе чувашских языческих обрядов // Чувашская народная поэзия: сб. ст. Чебоксары, 1990. С. 13.

[16] *Ашмарин Н.И.* Чӑваш сӑмахӗсен кӗнеки. Шупашкар, 1994, Т. 12. С. 163.

[17] *Магницкий В.К.* Материалы к объяснению старой чувашской веры. Казань, 1881. С. 35.

[18] *Кондратьев М.Г., Милютин В.А.* Хоровод // Чувашская энциклопедия: в 4 т. Т. 4. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2011. С. 405.

[19] ЧПГĂИ ĂА. VI п. 263 т. 18 л.

[20] *Федотова Е.В.* Современное состояние традиционного фольклора чувашей Нурлатского района Республики Татарстан (по материалам экспедиции 2008 г.) // Чувашский гуманитарный вестник. Чебоксары, 2012. № 7. С. 104–105.

[21] ЧПГĂИ ĂА. III п. 2921 упр. ед. С. 92–93.

[22] *Андреев П.К.* Юррăмсем-çунатăмсем. Шупашкар, 1978.

[23] ЧПГĂИ ĂА. III п. 340 т. 138–139 л.

[24] *Егоров Н.И.* Культура Чувашского края. Ч. 1. Чебоксары, 1994. С. 203.

[25] Русские народные песни / сост. и вводн. тексты В.В.Варгановой. М.: Правда, 1988. С. 9.

[26] *Альмеева Н.Ю.* Песенная традиция молькеевских кряшен // Песни татар-кряшен. Вып. 2: Молькеевская группа / под общ. ред. И.И. Земцовского. СПб.; Казань: 2012. С. 13–14.

[27] *Егоров Н.И.* Çурхи уявсем // Пике. 1991. 4 №. С. 24–25; Пике. 1991. 5 №. С. 25.

[28] Хĕрарăмсен кĕпе аркине илемлетмелли хăю.

[29] Хăмаç çиппи, пасар çиппи.

[30] 1960 ç. ЧР Тăвай р-чи Чутейре Д.Н. Филипповăран Н.М. Яклашкин çырса илнĕ. (ЧПГĂИ ĂА. III п. 787 т. 72–76 л.).

[31] Паллă мар сăмах.

[32] *Михайлов С.М.* Труды по этнографии и истории русского, чувашского и марийского народов. Чебоксары, 1972. С. 21–23.

[33] *Комиссаров Г.И.* О чувашах: исследования, воспоминания, дневники, письма / сост. и примеч. В.Г. Родионова; предисл. Л.П. Куракова. Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2003. С. 93.

[34] *Кондратьев М.Г.* Песни низовых чувашей. Кн. 2. (Сб. песен). Чебоксары, 1982. С. 9.

[35] *Кондратьев М.Г., Милютин В.А.* Хоровод. С. 405.

[36] *Родионов В.Г.* О системе чувашских языческих обрядов. С. 13.

[37] *Трофимов А.А.* Зороастризм: суваро-болгарская и чувашская народная культура. Чебоксары: ЧГИГН, 2009. С. 120.

[38] *Салмин А.К.* Система религии чувашей. СПб.: Наука. 2007. С. 219.

[39] Авалхи Римри килти тирпей, кил управçи шутланнă хĕрарăм, Турра пуç çапакан.

[40] *Гарин-Михайловский Н.Г.* В сутолоке провинциальной жизни // Русские писатели о чувашах: сб. произведений. Чебоксары, 2009. С. 150–151.

[41] *Гарин-Михайловский Н.Г.* Зора // Там же. 156–160 с.

*В.И. Сергеев*

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИНЧЕ ТĂВАНЛĂХА ПАЛĂРТМАЛЛИ МЕЛСЕМ

Тăванлăха кăтартакан терминсене çак мелсемпе палăртма пулать:

а) уйрăм сăмахсемпе: ă) сăмахсене мăшăрлатса; б) сăмах майлашăвĕсемпе; в) хутлă сăмахсемпе.

**А. Уйрăм сăмахсемпе тата камăнлăх-сăпат кӳлеписемпе тăванлăха, ăру-тăванлăха, тăванлăх-хăталăха, хурăнташлăха палăртни:**

1 сăп. *атте* (диалектра *ати*), *аттем* (пĕр. х.), *аттемĕр* (нум. х.);

2 сăп. *аçу,* анат е хиртек калаçăвĕ: *аçăр (аçăвăр);*

3 сăп. *ашшĕ* < *аçшĕ* < *аçăшĕ* < *аçа+шĕ.*

1 сăп. *анне* (диал. *аннев, ани, анни, анней, апи, апай*), *аннем* (1 хис.), *аннемĕр* (нум. х.);

2 сăп. *аннӳ* (диал. *апу, аму*), *аннĕр* (нум. х.);

3 сăп. *амăшĕ, амăш.*

2 тата 3 сăпат кӳлеписем авалхи *аçа* тата *ама* сăмахсемпе çыхăннă, вĕсем *атте, анне* тенинех пĕлтернĕ.

*Атте* сăмах ытти тĕрĕк чĕлхисенчи *ата, ада, ача, ота, аба* сăмахсене тӳр килет. Ытти тĕрĕк чĕлхисенче *ата (ада)* сăмах нумай пĕлтерĕшлĕ: «*тятя,* мой свёкор, мой тесть, крестный отец, дед, дед по отцу, старик, старец, дядя, старший брат (и даже старшая сестра!), самец»[1].

Слова *апи, апай* сходны с татарским *абей* «мамак», тур. *эбе* ~ чув. *эпи*, морд., мар. *ава* «мать», *аба, ӓвӓ, ӓбӓ* < общемар. **ӓвӓ*, заимствовано из булг. (др.-чув.)[2].

*Пичче* (диал. *пичи, пичей*) «старший брат», «дядя (младший брат отца)»:

1 сăп. *пиччем* «мой старший брат» (пĕр. х.); «мой дядя со стороны отца»;

2 сăп. *пиччӳ* «твой старший брат» (пĕр. х.); «твой дядя со стороны отца»;

3 сăп. *пиччĕш* «его, её старший брат» (пĕр. х.); «его (её) дядя со стороны отца»;

1 сăп. *пиччемĕр* «наш старший брат» (нум. х.); «наш дядя со стороны отца»;

2 сăп. *пиччĕр* «ваш старший брат» (нум. х.); «ваш дядя со стороны отца».

*Акка, аппа* (диал. *аки, акай*):

1 сăп. *аккам, аппам* «моя старшая сестра» (пĕр. х.); «моя золовка, тетя»;

2 сăп. *акку, аку, аппу* «твоя старшая сестра» (пĕр. х.); «твоя золовка, тетя»;

3 сăп. *аккăшĕ, аппăшĕ* «его, её старшая сестра» (пĕр. х.); «его (её) золовка, тетя»;

1 сăп. *аккамăр, аппамăр* «наша старшая сестра» (нум. х.); «наша золовка, тетя»;

2 сăп. *аккăр, аппăр* «ваша старшая сестра» (нум. х.); «ваша золовка, тетя».

Чув. *пичче* ~ азерб. *бачы,* хак. *пиче* «сестра».

Из *бей, пăч, би* «князь, начальник, господин» и тюрк. *ăчи* (алт. В. *ача*) «старший родственник», «старший брат», «дядя» образовалось слово *пичче*[3].

*Мучи* (диал. *мочи, мучей, мочок*) «старший брат моего отца»; «дядя» (почтительное обращение к старшим).

2 сăп. *мучу* «старший брат твоего отца» (пĕр. х.);

3 сăп. *мучăшĕ, мучăш* «старший брат его, её отца».

«Исторически слово *мучи* было композитным образованием, составленным из *мăн, мун* «старший» + др.-тюрк. *ăчи, ичи* «старший родственник»: *мун* + *ичи* > *мучи*»[4].

*Кукка* (диал. *кукки, кокки*)

1 сăп. *куккам* «мой дядя по матери» (пĕр. х.); «мой брат по матери»;

2 сăп. *кукку* «твой дядя по матери» (пĕр. х.); «твой брат по матери»;

3 сăп. *куккăшĕ, куккăш* «его, её дядя по матери» (пĕр. х.); «его, её брат по матери»;

1 сăп. *куккамăр* «наш дядя по матери» (нум. х.); «наш брат по матери»;

2 сăп. *куккăр* «ваш дядя по матери» (нум. х.); «ваш брат по матери».

Этимологи тĕлĕшĕнчен *кукка* сăмах çапла пулнă: от *кăк* + *ака* (др.-тюрк. *аγа* ~ *аба* «старший брат»)[5].

Паллах, хальхи чӗлхере *пичче, мучи, кукка* сăмахсем пайланми лексика единицисем шутланаҫҫӗ. Вӗсен ретнех тата ҫак сăмахсене кӗртме пулать:

*кукаҫи* «дедушка по матери» < *кăк* + *аҫа* > *кук* + *аҫа;*

*кукамай* «бабушка по матери» < *кăк* + *ама*; *кук-ама-ай* – чӗнӳ кӳлепи;

*асатте* «дед» < *аслă* + *атте;*

*хуняҫа* «свекор» < *хунь* + *аҫа;* узб. *кайната;* тут. *каената;*

*хуняма «теща»* < *хунь* + *ама;* тут. *каенана;* азерб. *гайната;*

*пăяхам* «деверь», букв. «мой старший брат мужа» < *пăй* «муж» + *аха* ~ тюрк. *аɣа* «старший родственник» + *-м* 1 сăп. пӗр. х. камăнлăх аффиксӗ[6]; *пăянам* < *пăй* + *ана-м;*

*асатте (аслатте)* «дедушка по отцу» < *аслă* + *-атте;* казах. *улы ата.*

Камăнлăх-сăпат аффиксӗсене туллин йышăнакан сăмахсен шутне эпир *хӗр* (*хӗрӗм, хӗрӳ, хӗрӗ, хӗрӗмӗр, хӗрӗр*), *ывăл* (*ывăлăм, ывăлу, ывăлӗ, ывăлăмăр, ывăлăр*), *тăван* (*тăванăм, тăвану, тăванӗ, тăванăмăр, тăванăр),* анчах та *арăм, упăшка* сăмахсем туллин сăпатланмаҫҫӗ: *арăмăмăр, упăшкамăр* сăмахсем йӗркеллӗ ҫемьеллӗ, арлă-арăмлă ҫынсемшӗн килӗшӳсӗр.

*Асатте* сăмах камăнлăх-сăпат аффиксӗсене ҫапла йышăнать: *асаттем* (*ман асатте*), *аслаҫу, аслашшӗ, асаттемӗр, аслаҫăр, вӗсен аслашшӗ*[7].

*Кӗрӳ* «зять»:

1 сăп. *кӗрӗвӗм* «мой зять» (муж моей дочери, муж моей младшей сестры и вообще муж моей родственницы), «жених» (пӗр. х.); «дружка (жениха)»;

2 сăп. *кӗрӗвӳ* «твой зять» (пӗр. х.); «твой жених; твой дружка»;

3 сăп. *кӗрӳшӗ, кӗрӗвӗ* «его, её зять» (пӗр. х.); «её жених»;

1 сăп. *кӗрӗвӗмӗр* «наш зять» (нум. х.); «наш жених, дружка»;

2 сăп. *кӗрӗвӗр* «ваш зять» (нум. х.); «ваш жених, дружка».

*Йысна «зять»* (муж моей старшей сестры или тети); ср. башк. *езнэ*, тат. *жизнэ*:

1 сăп. *йыснам, йыснаҫăм* (ачашлав кӳлепи; пӗр. х.); «мой зять»;

2 сăп. *йысну* «твой зять» (пӗр. х.); «твой муж родной сестры»;

3 сăп. *йыснăшĕ* «его, её зять» (пĕр. х.); «его (её) муж родной сестры».

1 сăп. *йыснамăр* «наш зять» (нум. х.);

2 сăп. *йыснăр* «ваш зять» (нум. х.).

*Инке* «жена моего старшего брата»; башк. *енгэ*, кирг. *җеңе,* тат. *жиңгэ;*

1 сăп. пĕр. х. *инкем,* 2 сăп. *инкӳ,* 3 сăп. *инкĕшĕ*;

1 сăп. нум. х. *инкемĕр*, 2 сăп. *инкĕр.*

*Хĕрсем* «золовка»: *хĕрсемми, хĕрсемĕш, хĕрсеммӳ;* тата *хĕрсеммӳсем мĕнле?*[8]

*Хунякам* (*хунь* + *агам*) «моя свояченица». *Кин, килен* «сноха», «невестка» (жена сына или младшего брата) ~ тат., башк. *килен,* хак. *килин,* тув. *келин,* азерб. *кăлин.*

1 сăп. *кинĕм* «моя сноха, невестка» (пĕр. х.);

2 сăп. *кинӳ* «твоя сноха, невестка» (пĕр. х.);

3 сăп. *кинĕ* «его, её сноха, невестка» (пĕр. х.);

1 сăп. нум. х. *кинĕмĕр* «наша сноха, невестка»;

2 сăп. нум. х. *кинĕр* «ваша сноха, невестка».

Чăваш чĕлхинче хăш-пĕр тăванлăха палăртакан сăмахсем камăнлăх-сăпат категорийĕн пĕрреллĕ хисепри сăпат аффиксĕпе кăна ҫӳреҫҫĕ: *шăллăм, пăянам, пăяхам, хунчăкам, хунякам* т.ыт.те, ку сăмахсенчен *шăллăм, шăнкăлăм* < ав. тĕрĕк *сиңил* «кĕҫĕн йăмăк», *сиңлим* «манăн кĕҫĕн йăмăкăм», «йăмăк» пĕлтерĕшпе ҫӳренĕ. Авалхи чăваш чĕлхинче ку сăмахăн тымарĕ *шăл* пулнă пулас, ку сăпат аффиксĕсене йышăннинчен те курăнать: *шăл(л)-ăм*; *шăл(л)-у, шăл(л)-ĕ.*

М.Р. Федотов ытти тĕрĕк чĕлхисенче *сиңил, сиңңи, сиңли* сăмахсем «кĕҫĕн йăмăк» пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртать[9]. В.Г. Егоров чулым тутарĕсен чĕлхинче кăна *сингним* «упăшкан пиччĕшĕ» пĕлтерĕшпе ҫӳренине кăтартать[10].

Камăнлăх-сăпат кӳлеписене уйрăммăн илсе кăтартни пире шухăша ярать: ҫав аффикссен грамматика пĕлтерĕшĕ кăна мар, вĕсен сăмах пĕлтерĕшне улăштарас хевти пур, апла пулсан вĕсен сăмах тăвас сĕмĕ те палăрать. Ахальтен мар вĕсене Н.И. Ашмарин словарĕнче уйрăм реестра кăларнă:

*шăллу* «твой младший брат»;

*шăллур* (~ *шăллăр*) «ваш младший брат»;

*шăллăм* «мой младший брат»;

*шăллăмçăм*, то же, что *шăллăм,* а в нижеследующем предложении в смысле «жених»: *Ах, шăллăмçăм, шăллăмçăм,* ытам тулли хĕр ыйтать;

*шăллĕ* «его младший брат»;

*шăлнăм*, то же, что *шăллăм;*

*шăлнĕ* «его (её) младший брат»[11].

М.И. Скворцов редакциленĕ «Чăвашла-вырăсла словарьте» сăпат кӳлеписене *шăллăм* словарь статйинче панă: *шăллу* «твой младший брат», *шăллĕ* «его, её младший брат»[12].

Ку пулăм *атте, анне* сăмахсене уйрăм реестра кăларнипе кăна мар, сăпат формисене те: *аçу, ашшĕ, амăшĕ* уйрăм статьяна панинче те курăнать»[13]. Анчах та *аннӳ* 2 сăпат кӳлепине *анне* словарь статйинче панă[14].

*Аппа* словарь статйине *аппу, аппăшĕ* сăпат кӳлеписене кĕртнĕ. Словарь тăвакансене сăпат аффиксĕсен икĕ пĕлтерĕш: сăмаха улăштаракан тата сăмах тăваслăх пĕлтерĕшсем – пурри кăсăклантарнă пулас, анчах та словарь статйисене вĕсем пĕр пеклĕх кӳртеймен.

Тăванлăха палăртакан сăмахсене вĕсен камăнлăх-сăпат кӳлеписемпе чи малтан Н.И. Ашмарин çырса кăтартнă. Ку списокра пурĕ çирĕм сăмах, эпир хăшĕ-пĕрне халиччен те илтмен:

*ЋоЋЋИ* (чит. *čoččи*) – мой дед со стороны отца или матери, 2 лицо – *ЋоЋЋУ* (чит. *čoččу*), 3 лицо – *ЋоЋЋ+Ш, ЋоЋЋ+Ш+* (чит. *čoččыш*); горн. черем. *тьотьа,* ср. тат. *тути, тутай* «уважаемая родственница» ~ монг. *тоотай* «княжна»[15].

*Паппи* – моя бабушка со стороны отца или матери, 2 лицо – *паппу,* 3 лицо – *паппăш;* горн. черем. *папа.*

Н.И. Ашмарин словарĕнче 3 сăпат кӳлепиллĕ *хăтăш* «родители жениха, а также невесты» сăмах тĕл пулать, вăл каччăн тата хĕрĕн ашшĕ-амăшне пĕлтерет[16].

*Аңи* (у нек. чув. *апай, пăйанам, хонеме*) – моя теща, *хоңаму* (*хонемӳ*) – твоя теща; *хуңамăшĕ* (*хонемĕшĕ*) – его теща. *Аңи* (*апай, пайанам*) – моя свекровь; 2 лицо – *хуңаму* (*пăйанаму*), 3 лицо – *хуңамăшĕ* (*хонемĕшĕ, пăянамăшĕ?)*[17].

Н.А. Андреев ĕçĕнче те ку пулăм-туртăм сисĕнет, анчах та автор тăванлăх терминĕсен (вĕсен хисепĕ – 15) пур сăпат формине те паман[18].

Ă. Сăмахсене мăшăрлатса тăванлăха палăртни

Мăшăр япала ячĕсем пирки И.П. Павлов çапла çырнă: «Икĕ япала ячĕ сыпăнуллă çыхăнса мăшăр япала ячĕ тума пултарать. Мăшăр япала ячĕсем мĕнле кирлĕ апла пĕлтерĕшлĕ сăмахсем çыхăннипе пулмаççĕ, кунта семантика законĕсене шута илни кирлĕ. Мăшăр япала ячĕсем тăвакан сăмахсем пĕр-пĕриншĕн е синонимсем, е антонимсем пулмалла, е тата пĕлтерĕшĕ тĕлĕшĕнчен япаласем вырăнĕпе, евĕрлĕхĕпе т.ыт.те çыхăнса тăнине кăтартмалла. Сăмахсем мăшăрланнипе пулнă япала ячĕсем пĕр пĕтĕмлĕхе, ушкăнлăха палăртма пулăшаççĕ»[19].

И.П. Павлов сĕннипе чăваш чĕлхи пĕлĕвĕнче мăшăр сăмахсене пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен çапла ушкăнламалла:

– синонимлă мăшăр сăмахсем: *ăслă-тăнлă, терт-асап, аш-какай;*

– антонимлă мăшăр сăмахсем: *ир-каç, суту-илӳ, лару-тăру;*

– пĕр йышши япаласене пĕлтерекен мăшăр сăмахсем: *çăкăр-тăвар*.

Вырăсла çырнă «Парные слова в современном чувашском языке» статйинче И.П. Павлов мăшăр сăмахсен ушкăнĕсене пиллĕке çитерни[20].

И.П. Павлов вĕрентнине Г.Н. Семёнова хăйĕн монографийĕсенче тĕпе хунă[21].

Тăванлăха палăртаканнисем хушшинче антонимлă тата пĕр йышши япаласене пĕлтерекен мăшăр сăмахсем ытларах тĕл пулаççĕ, синонимлисем çукпа пĕрех. Хушăран антонимлисене пĕр йышши япаласене пĕлтерекен мăшăр сăмахсенчен уйăрса илме те йывăр. Тĕслĕхрен, *атте-анне* «родители» – «çуратакансем»; çак пĕлтерĕшех *аçа-ама, ама-аçа* мăшăр сăмахсем те палăртаççĕ[22]. Çав ретрех словарьте *аçаллă-амаллă, аçасăр-амасăр*[23] мăшăр сăмахсене те панă; танл.: *аçу-аннӳ, ашшĕ-амăшĕ*, диал. *апу-аçу*. Вĕсем антоним мăшăр сăмахсем-и е пĕр евĕрлĕ ăнлава хирĕçлетсе кăтартаççĕ?

Чĕлхе пĕлĕвĕнче *атте* «отец» – *анне* «мать» сăмахсене антонимсем пек пăхас мар туртăм та пур. Паллах, ку сăмахсем несĕл е несĕллĕх тĕлĕшĕнчен хирĕçле пĕлтерĕшпе çӳреççĕ.

Çавăн пекех ку рете *ывăл-хĕр* (*ар ывăлĕ-хĕрĕ* «люди вообще»[24], *этем ывăлĕ-хĕрĕ* тени «род людской» пĕлтерĕшлĕ)

*ывăллă-хĕрлĕ, ывăлсăр-хĕрсĕр, ывăл-хĕрсĕр* мăшăр сăмахсене те кĕртмелле[25]. Словарьте панă *хĕр-ар* мăшăр сăмахăн пĕлтерĕшне, пирĕн шутпа, тĕрĕс мар панă: «девушки и женщины»[26]. Ку йăнăша, паллах, А.Л. Лукин Н.И. Ашмарин словарĕн XVII кăларăмне кĕртсе янă. Асăрхăр: словарьте *ар* «мужчина, муж, супруг» пĕлтерĕшсемпе панă[27]; *арлă-арăмлă* «супружеская чета» (т.е. «муж с женой»[28]; *ар-ывăл* «взрослые сыновья»[29].

Н.И. Ашмарин словарĕнче те *ар* сăмахăн «хĕрарăм» пĕлтерĕшне палăртни çук[30]; *арлă-йышлă* мăшăр сăмах *упăшкаллă-арăмлă* тенине пĕлтерет[31].

*Арçынĕ-хĕрарăмĕ* мăшăр сăмаха Г.Н. Семёнова «обоего пола» тесе куçарать[32], анчах кун пек кӳлепеллĕ мăшăр сăмах Н.И. Ашмарин словарĕнче те, М.И. Скворцов редакциленĕ словарьте те çук. Несĕл тĕлĕшĕнчен хирехирĕçле пĕлтерĕшпе çӳрекеннисем шутне *хăта-тăхлач* «сватья» сăмаха та кĕртмелле. Вырăс чĕлхинчи пек ăнланмалла мар ăна: *сватья* – мать одного из супругов по отношению к родителям другого супруга, вырăс чĕлхинче *сва́тья* сăмахра пусăм пĕрремĕш сыпăкри [á] сасă çине лекет; чăваш чĕлхинчи *хăта-тăхлач* вырăсла куçарсан пусăм юлашки сыпăкра [йá] пулать: *сватья́*. Пĕтĕмлетӳ пĕлтерĕшĕпе *хăта-тăхлачă* каччин те, хĕрĕн те ашшĕ-амăшне ушкăнлатса кăтартать.

Н.И. Ашмарин словарĕнче *хăта-тăхлачă* мăшăр сăмах çук (вăл Тăхăрьял калаçăвĕнче пур), анчах та *тăхлач, тăхлачă* словарь статйинче çакăн пек ăнлантарни пур: *тăхлач – хĕр амăшĕ* (мать невесты); *тăхлач – каччă амăшĕ* (мать жениха)[33]. Çапла вара, пĕтĕмлетсе каламалла: *хăта – хĕр ашшĕ* (отец невесты), *хăта – каччă ашшĕ* (отец жениха). Н.И. Ашмаринăн тĕслĕхĕнче *Çак хăтапа тăхлачăн çичĕ хĕл каçнă вăкри пур тет* «Говорят, что у этих сватов есть семигодовалый бык» *хăтапа тăхлачă* сăмах майлашăвĕ шайне ларать. Антоним мăшăр сăмахсен ретне Г.Н. Семёнова *кĕрӳшĕ-хĕрĕ* тенине те кĕртет[34], анчах хăш кĕнекерен, словарьтен илнине палăртман. Н.И. Ашмарин словарĕнче *хĕрĕпе кĕрӳшĕ* сăмах майлашăвĕ пур: *Апи, маншăн куккăль пĕçер хĕрĕпе кĕрӳшĕ* (её муж) *килнĕ чух*! Кунта, паллах, *хĕрӳпе кĕрĕвӳ* тени килĕшӳллĕрех[35].

Синоним мăшăр сăмахсен йышĕ пысăках мар:

– *ратне-тăван* «родня»; паллах, *ратне* вырăс чĕлхинчен калаçу чĕлхи урлă кĕнĕ. Н.И. Ашмарин словарĕнче *ратне* «порода, родня» тата çапла ăнлантарни те пур: *Ратне*, родственники по мужской линии[36];

– *тăван-хурăнташ* е *хурăнташ-тăван; хурăнташ-ăру, хурăнташ-вĕрле;*

– *тăван-пĕлĕш* «близкие, родные и знакомые»: *Унăн ялта тăван-пĕлĕш нумай* «У него в деревне много родных и друзей»[37];

– *кĕрӳ-каччă, кĕрӳ-каччи* «жених»[38].

Аяларах панă мăшăр сăмахсене хăш ушкăна кĕртмелли паллă мар:

– *тăван-пĕтен* «родня, родственники»; *тăван-тукан* < тут. *туган; тăван-йыш*; *хурăнташ-тĕрĕш* «родственники, родня».

Л.А. Покровская тĕрĕк чĕлхисенче синонимла тата антонимла мăшăр сăмахсем пуррине палăртать: *ана-ата, огул-кыз, карындаш-уруг* т.ыт.те. Анчах та *qız-oγul, qız оглан* тенисене автор сăмах майлашăвĕсем тесшĕн[39].

Чăнах та, тăванлăх терминĕсене уйрăм сăмахсемпе (таса лексика мелĕпе) кăна мар, мăшăр сăмахсемпе те палăртма пулать. К.М. Любимов тĕрĕк чĕлхинчи мăшăр сăмахсене ирĕклĕ сăмах майлашăвĕсем тесе шутлать[40]. И.П. Павлов К.М. Любимов шухăшне хирĕçлесе мăшăр сăмахсем сăмах пулăвĕн пĕр тĕсĕ пулнине ĕнентерет[41].

Паллах, мăшăр сăмахсем иккĕмĕшле лексика единицисем шутланаççĕ – ку тĕрĕсех. В.И. Цинциус тăванлăх терминĕсем сăмах тĕпĕпе сăмах тĕпĕ пĕрлешнипе пулнине ĕнентерсе алтай ушкăнне кĕрекен чĕлхесенче антонимла, синонимла мăшăр сăмахсем пуррине çырса кăтартать, анчах мăшăрланнă япала ячĕсем дефиспа е дефиссăр çӳренине уямасть, дефиссăр çырнисене те мăшăр сăмахсен ретĕнчех пăхать: тут. *ата-ана* (дефиспа), башк. *ата эсэ* (дефиссăр) анчах темĕншĕн *атте анне* тенине дефиссăр панă[42].

Тутар чĕлхинче тăванлăх терминĕсене тĕпченĕ май С.А. Бурнашева пĕтĕмлетӳ пĕлтерĕшлĕ мăшăр сăмахсен списокне парать: *ата-бабалар* «предки»; *ата-ана* «родители»; *кардэш-ыру // туган-тумачи* «родня»; *агай-ене* «родственники», «братья».

В.И. Цинциус та, С.А. Бурнашева та, Л.А. Покровская та тăванлăха палăртма сăмах майлашăвĕсемпе усă курнине

кăтартаççĕ. «Значительную роль в обогащении родственной номенклатуры в алтайских языках играло словосочетание...»[43] «В татарском языке обращает на себя внимание большое количество описательных терминов...»[44]

Чăваш чĕлхе пĕлĕвĕнче тăванлăха сăмах майлашăвĕсемпе палăртнине туллин çырса кăтартнă ĕççем çук. Н.И. Егоров ĕçĕсенче кăна кĕскен каласа иртнисем пур[45].

**Б. Тăванлăха ирĕклĕ сăмах майлашăвĕсемпе палăртни**

Чăваш чĕлхин тĕпчевçисем сăмах майлашăвĕ пирки çапларах çырса хăварнисем пур: «Сăмах майлашăвĕ пĕр-пĕр япалана, пулăма сăнлать, ăнлава анлатса, пайăрлатса палăртать»[46].

Пирĕн темăпа çыхăнтарса эпир çапла хушнă пулăттăмăр: «япалана кăна мар, çынна та».

М.Ф. Чернов, В.В. Виноградов академик каланине шута илсе, çапла çырать: «Ирĕклĕ сăмах майлашăвĕсем ирĕклĕ е çыхăнман пĕлтерĕшлĕ (тӳрĕ е номинативлă пĕлтерĕшлĕ) сăмахсем пĕрлешнипе йĕркеленеççĕ»[47].

С.П. Горский шухăшĕпе, икĕ е темиçе хăй пĕлтерĕшлĕ, ирĕклĕ сăмахсенчен пулнă грамматикăлла пĕрлĕхе сăмах майлашăвĕ теççĕ[48].

Сăмах майлашăвĕсен ят параслăх (номинативлă е номинациллĕ) функцине яланах асра тытса тăмалла. Тĕслĕхсене Н.И. Ашмарин словарĕнчен илсе ăнлантарăпăр, вырăсла куçарнине çав хальлĕнех хăварăпăр, тĕш (тĕп) сăмахне уйрăммăн илсе парăпăр. Чăваш чĕлхинче тăванлăха палăртакан чылай тĕп сăмах (доминанта) сăмах майлашăвĕн йăвине йĕркелет.

*Анне* «моя, наша мать»: *Анне Кепе* (1-мĕш изафет), *унпа вăрçма юрамасть* «Моя мать для меня священна (как Кааба), с нею браниться нельзя». *Анне ама çурри пулсассăн та пит аван пăхса ӳстерчĕ пире* «Хотя у нас и не родная мать, а мачеха, но она воспитала нас очень хорошо».

*Аслă анне* «бабушка» (т.е. мать моего отца), кайрантарах → *асанне, асланне.*

*Çĕнĕ анне, хальхи анне* «моя мачеха»; *ама çур(р)и*;

*Анне çури, анне çурри* «моя мачеха»[49], ама *çур(р)и.*

*Атте* «отец», «мой отец»[50]:

– *аслă атте* (*аслă аттем, аслă аçу, аслă ашшĕ, аслă аттемĕр, аслă аçăр → асатте, аслаçу, аслашшĕ* (кунта тулли лексика единицисем те, сăмах майлашăвĕсем те пур). Хăй вăхăтĕнче И.П. Павлов вĕсене *кĕскелсе пулнă хутлă сăмахсем* тенĕ[51]; Н.А. Андреев вĕсене *сложносокращенные слова* тесе палăртать[52]. В.Г. Егоров пушкăрт чĕлхинчи *олатай* «дед» («старший отец») ~ чăв. *асатте*; пушк. *олэсэй* «бабушка» («старшая мать») ~ чăв. *асанне* йышши сăмахсене «определенииллĕ хутлă сăмахсен» шутне кĕртнĕ[53].

– *мăн аслă атте* «прадед»; *мăн асатте* «прадедушка»;

– *ват асатте* «старик, отец, праотец»; *ват аслаттесем* «предки»[54].

*Пирĕн ват атте Адам* «Наш праотец Адам»;

– *тĕп аттемĕр*, auctor genezis nostri (Н.И. Ашмаринăн чăвашла куçарăвĕ çук);

*Ывăл* «дитя мужского пола, сын»[55]:

– *ама çури (çурри) ывăл, ывăл çури (çурри)* «пасынок»;

– *ывăлĕн ывăлĕ* «его, её внук»; пушк. *улныҥ улы*;

– *ывăлĕн хĕрĕ* «внучка»; *ывăлтан тăван* «внук, внучка» (от сына); пушк. *улныҥ кызы;*

– *чипер ывăл* «второй деверь» (букв. «пригожий сын»);

– *вăталăх ывăл* «средний, третий деверь» (букв. «средний сын»);

– *сарă ывăл* «четвертый деверь» (букв. «русый сын»);

– *шур ывăл* «пятый деверь» (букв. «белый, светлый сын»);

– *кĕçĕн ывăл* «младший деверь» (букв. «младший сын»)[56].

Н.И. Ашмарин словарĕнче *хура ывăл* тени те пур, анчах та автор кун пек сăмах майлашăвĕ пурри пирки иккĕленет, мĕншĕн тесен чăвашсен *хура* сăмах лайăх мар пĕлтерĕшлĕ[57];

*Хĕрсем* «золовка» (старшая из золовок):

– *вăталăх хĕрсем* (средняя из золовок, третья золовка);

– *чипер хĕрсем* «вторая золовка», букв. «пригожая золовка»;

– *сарă хĕрсем* «четвертая золовка» (букв. «русая»);

– *пĕчĕк хĕрсем, кĕçĕн хĕрсем* «младшая золовка».

*Хĕр* «дочь», *хĕрĕм* «моя дочь»; *хĕрӳ, хĕрĕ, хĕрĕмĕр, хĕрĕр.*

– *тăван хĕр* «родная дочь»;

– *хĕр çури (çурри)* «падчерица» (неродная дочь); *тăван мар хĕр*;

– *хĕр пултăр(ĕ)* «свояченица», «золовка»[58], «младшая сестра мужа». *Инкĕшĕн упăшкин йăмăкĕ хĕр пултăр пулать*[59].

*Пултӑр* «шурин» (младший брат жены); «деверь» (младший брат мужа);

– *арҫын пултӑр, ывӑл пултӑр* «младший шурин или деверь»;

– *пултӑр кин* «жена младшего шурина или деверя»;

– *пултӑр кӗрӳ* «муж свояченицы или младшей золовки»;

– *кӗҫӗн хӗр* «вторая младшая сестра мужа»[60].

*Пичче* «старший брат», «дядя» (брат отца)[61].

Н.И. Егоров *пичче* сӑмах ҫакӑн пек сӑмах майлашӑвӗсенче тӗл пулнине палӑртать:

– *аслӑ пичче* «старший из старших братьев» (< *аслӑ* «старший» ← ар. *асл.* «корень, основа», «начало, происхождение»; *асли* «коренной, основной, первоначальный, первичный, родной, настоящий»);

– *вӑталӑх пичче* «средний из старших братьев» (~ тюрк. *орта* «середина», *орталык* «средний»);

– *кӗҫӗн пичче* «младший из старших братьев» (~ тюрк. *кечен, кеченек* «маленький, младший, меньший»);

– *пысӑк пичче* «дядя, старший брат отца» (~ тюрк. *базык* «большой, крепкий, толстый» → перс. *buzurg* «большой, великий»);

– *пӗчӗк пичче* «дядя, младший брат отца, но старше говорящего» (~ каз. *бетигине* «немножко», якут. *бычык* «малость», монг. *бичиан* «маленький» ← иран.?)[62].

*Хӑта, хӑти* «сват»[63]; *хӑту, хӑти, хӑтӑшӗ, хӑтамӑр*;

– *ватӑ хӑта, тӗп хӑта* «отец свата» (букв. «старый сват, основной сват»);

– *ҫамрӑк хӑта* «сын свата, брат жениха или невесты» (букв. «молодой сват»);

– *ҫӗнӗ хӑта* «сват» (так называют свата до приема близких родственников жениха родителями невесты)[64].

Пушкӑрт чӗлхинче хӑта ~ *коҙа* «сват»; *ҙур, оло, илкән коҙа* (досл. «большой, старший сват»), *уртансы коҙа* «средний сват», *кесе коҙа* «младший сват»[65].

*Кин* «сноха», «невестка», «жена моего сына», «жена моего брата, который моложе меня», вообще так называют жену родственника, который моложе говорящего; обращение к младшей посторонней женщине[66].

– *кӗҫӗн кин* «младшая сноха» (жена младшего сына); *кин пӗрчӗк* (*ачашлав кӳлепи*);

– *ватă кин* «средняя сноха» (жена среднего сына); *кин-хĕр* «снохи»;

– *аслă кин* «старшая сноха» (жена старшего сына); *кин-хĕр* «снохи».

*Тăван* «родственник, родня» (*ту* ~ *доғ* / *тн* глагол «çурат» пĕлтерĕшлĕ);

– *арăм тăванĕ* «родня жены, родственник по женской линии»;

– *упăшка тăванĕ* «родня мужа, родственник по мужской линии»;

– *аякри тăван* «дальний родственник»;

– *çывăх (тач) тăван* «близкий родственник»;

– *тăван атте* «родной отец»; азерб. *доғма ата;*

– *тăван мар атте* «отчим»; *аçа çур(р)и;*

– *тăван анне* «родная мать»;

– *тăван мар анне* «мачеха»; *ама çур(р)и;*

– *тăван аппа* «родная сестра»; *тăван аппа хĕрĕ*; азерб. *доғма бачы;*

– *тăван ывăл* «родной сын»; алт. *тууган бала, улы*;

– *тăван мар ывăл* «пасынок»; *ывăл çур(р)и, ама çур(р)и ывăл*;

– *тăван хĕр* «родная дочь»; *тăван пичче хĕрĕ* «племянница»;

– *тăван мар хĕр* «падчерица»; *ама çур(р)и хĕр; ерчĕней*;

– *хĕртен тăван* «внук, внучка от дочери»; *мăнук;*

– *ывăлтан тăван* «внук, внучка от сына»; *мăнук;*

– *ютран тăван* «чужой человек, чужак» (букв. «родившийся от чужого»)[67];

– *шурă тăван*: *Шурă тăван кăвак куçлă пултăр, куçран куçа пăхса йăл култăр*[68] – перевода нет, в словарной статье *шур(ă)* даны следующие сочетания:

– *шурă хĕр* (без перевода);

– *Шур акайăн шăлĕсем хура* (хурткуççи – ужовка); сочетание *хура тăван* (*хора туан*) сохранилось лишь как название киремети[69];

– *тăвантан тăван* «близкий родственник»; *тач тăван, çывăх тăван;*

– *хамăртан тăван* «свой человек, родня»; *тăвантан тăван;*

– *кĕçĕн тăван* «младший родственник» (ср. *Кĕçĕн Тăван* – назв. деревни Малые Туваны Вурнарского района)[70];

– *ют çын тăванĕ* «чужая родня»; *ютран тăван.*

**а) тăванлăх терминĕсенчи *кĕçĕн* «младший, младшая» сăмахăн пĕлтерĕшĕ:**

– *аслинчен кĕçĕнни* (хĕр, ывăл) «вторая дочь, сын»;

– *кĕçĕн ывăл* «второй или четвёртый младший брат мужа»; «младший брат мужа»;

– *кĕçĕн инке (йинке)* «жена младшего из моих старших братьев»;

– *кĕçĕн кин* «младшая сноха» (жена младшего сына);

– *кĕçĕн кукка* – младший из дядей (дядьёв) со стороны матери;

– *кĕçĕн çын* «новобрачная», «молодушка»; çĕнĕ çын;

– *кĕçĕн хĕр* «вторая младшая сестра мужа»[71];

– *чи кĕçĕнни* «самый младший» (из сыновей), самая младшая (из дочерей);

– *аслинчен кĕçĕнни* «второй сын» или «вторая дочь».

**ă) тăванлăх терминĕсенче тĕл пулакан *аслă* сăмахăн пĕлтерĕшĕ:**

– *аслă хĕр* «старшая дочь» (*ашшĕ-амăшĕн аслă хĕрĕ*);

– *аслă ывăл* «старший сын» (*ашшĕн аслă ывăлĕ*);

– *аслă акка, аслă аппа* «старшая сестра»;

– *аслă инке* – жена старшего брата, жена старшего из старших братьев моего мужа;

– *аслă кин* «старшая сноха»: *Аслă кин! Кил-ха кунта!* «Старшая сноха, иди-ка сюда» (так говорят свекор или свекровь);

– *аслă хĕрсем* – старшая из младших сестер мужа[72].

**б) тăванлăх терминĕсенчи *вăталăх* сăмахăн вырăнĕ:**

– *вăталăх* «средний» (из братьев или сыновей);

– *вăталăх инке (йинке)* – тетка, жена среднего из моих старших братьев;

– *вăталăх кин* – сноха, жена среднего из моих сыновей;

– *вăталăх кукка* – средний брат моей матери;

– *вăталăх тете* – старший брат моего отца[73].

**в) тăванлăх терминĕсенчи *мăн(ă)* «старший, старшая» сăмахăн валентлăхĕ:**

– *мăн аппа* (*акка, акай, аки*) 1. «старшая сестра»; 2. тетя, тетка (со стороны отца или матери);

– *măн асанне* «прабабка, прабабушка» (со стороны отца);
– *măн асатте* «прадед, прадедушка» (со стороны отца);
– *măн асаттесем* «предки»;
– *măн кукамай* «прабабка, прабабушка» (со стороны матери);
– *măн кукаçи* «прадед, прадедушка» (со стороны матери)[74];
– *măн аçи* «мой дед»; *măн ами* «моя бабушка»;
– *măн кукаçей* «прадед» (по матери);
– *măн кокки* «старший брат матери»;
– *măн маçи* – «прадед» (со стороны отца)[75].

**г) тăванлăх терминĕсенчи *пĕчĕк, пĕчик* сăмахăн валентлăхĕ:**

– *пĕчĕк атте* «крестный отец»; тури калаçура: *пысăк атте* (*атти*): пускатти ~ пыскатти – хреснатте;
– *пĕчĕк инке* (*йинке*) – жена младшего из старших братьев;
– *пĕчĕк кукка (кокки)* – дядя, младший брат матери;
– *пĕчĕк пичи* – младший из моих нескольких старших братьев; дядя, младший брат отца;
– *пĕчĕк теte* – дядя, младший брат отца[76];
– *пĕчĕк инке* «младшая сноха»;
– *пĕчĕк ывăл* – младший брат мужа; младший деверь[77].

Çапла вара, вăтăр ытларах уйрăм сăмахсенчен (тăракан) йĕркеленекен тăванлăх терминĕсене мăшăрлатса тата сăмах майлашăвĕлесе вĕсен хисепне виçĕ е тăватă хут ӳстерсе хунатма май пур.

**В. Хутлă сăмахсем пирки**

А.И. Иванов хăйĕн орфографи правилисемпе çыхăннă «Пĕрле е уйрăм çырасси çинчен шухăшлани» статйинче пилĕк хутчен çакăн пек ыйту лартать: «Мĕн вăл хутлă сăмах?» Автор ку ыйтăва çакнашкал хуравлать: «Çапла вара, мĕн вăл хутлă сăмах тесе ыйтсан уçăмлă ответ пама май пулмасть»[78].

А.И. Иванов ку статьяра сăмахсене пĕрле е уйрăм çырас ыйтăва хутлă сăмахсен проблемипе çыхăнтарнă. Хутлă сăмахсем чылай чухне сăмах майлашăвĕсенчен пулнине тĕрĕсех палăртать те автор хутлă сăмахсен пĕрлехи пилĕк паллине кăтартать: 1) пĕр ăнлава пĕлтерни; 2) предложенире пĕр член пулни; 3) сăмах пĕлтерĕшĕ улшăнни; 4) форми улшăнни; 5) пĕр ударенипе пĕрлешни.

Анчах кун пек пиллĕк паллă та мĕн вăл мăшăр сăмах пулнине татса параймасть, хутлă сăмахсене пĕрле çырмалла тени те ыйтăва татса пама пулăшмасть. Хутлă сăмахсем çинчен хăш-пĕр тĕпчевçĕсем калани тĕрĕс маррине, вăл чĕлхе пĕлĕвĕпе килĕшсе тăманнине, чăваш чĕлхин системăлăхне шута илменнине палăртать автор[79].

Хутлă сăмахсене тĕпченин тепĕр тапхăрĕ Г.Н. Семенова ячĕпе çыхăннă. Автор «сложное слово» тенине çапла ăнлантарать: (пĕр пĕтĕмĕшле пĕлтерĕшлĕ) пĕрлĕхлĕ (цельнооформленная) лексика единици пĕр пусăмлă (ударениллĕ), пĕр пуплев пайне кĕрекен, час-часах пĕлтерĕшлĕ икĕ сăмах пĕрлешнипе пулнă, вĕсен хушшинчи грамматика çыхăнăвĕсем палăрмаççĕ...[80]. Анчах та ку палăртăмра (дефиницире, определенире) «пĕрлĕхлĕ лексика единици» тенине «пĕрлĕхлĕ чĕлхе единици» темелле, мĕншĕн тесен автор композитăсен (хутлă сăмахсен) шутне сăмах майлашăвĕсене, икĕ хут каланă тата мăшăр сăмахсене кĕртет[81].

Г.Н. Семенова монографийĕнче «Тăванлăх (ăру-тăванлăх, тăванлăх-хăталăх) терминĕсем» текен пай пур[82]. Кунта автор композитăсен шутне сăмах майлашăвĕсене (*аслă атте, аслă анне*), «кĕскелсе пулнă хутлă сăмахсене» те кĕртет: *кукаçи*, *куками*[83].

Хутлă сăмахсем çинчен вĕрентекен чĕлхе пĕлĕвне Г.Н. Семёнова «композитологи» тесе ят пама, ăна сăмах пулăвĕпе çыхăнтарма сĕнет[84], çав вăхăтрах хутлă сăмахсемпе сăмах майлашăвĕсем хушшинчи пĕр пеклĕхсемпе уйрăмлăхсене те кăтартать[85].

Чĕлхе пĕлĕвĕнче тăванлăх терминĕсене компонент анализĕ туса тĕпчени паллă, вăл чĕлхе единицисене пĕлтерĕш структурипе (семăсемпе, семемăсемпе, семантемăсемпе) çыхăнтарса çырса кăтартнипе çыхăннă, тĕрĕсрех каласан, сememăсене семăсемпе çыхăнтарса тĕпчемелли меслет XX-мĕш ĕмĕрĕн 50-мĕш çулĕсенче тĕнчери тĕрлĕ чĕлхесенчи тăванлăх терминĕсене çак меслете тĕпе хурса тĕпченĕ[86].

Çапла вара композита тени хутлă сăмах тениех пулать[87]. Хутлă сăмахсен шутне Г.Н. Семенова мăшăр сăмахсене, икĕ хут каланă сăмахсене, сăмах майлашăвĕсене кĕртет.

Юлашки вăхăтра тăванлăх (ăру-тăванлăх, тăванлăх-хăталăх, тач тăван, аякри тăванлăх) терминĕсене «виçĕ пĕр

танлăх пĕрлĕхне» (вырăсла: триединство) тĕпчес ĕç пуçăнчĕ. Вăл пĕлтерĕш виç кĕтеслĕх принципĕ çинче никĕсленнĕ. Сăмахсене пĕлсе вырăнлă усă курас тесен вĕсене пĕрлĕхлĕ вилĕ шайра пăхмалла: чăнлăх шайĕнче, шухăшлав шайĕнче тата сăмахсен кӳлеписен шайĕнче.

Çак виçĕ шая тĕпе хурса тĕпчевçĕсем «семантика (пĕлтерĕш) виç кĕтеслĕхне» çапла ӳкерчĕкленĕ:




Анчах та çакăн пек ӳкерчĕклесе ăнлантарнинче пĕр пысăк çитменлĕх пур: унта «çын ĕлки» çук. Çакна шута илсе семантика виç кĕтеслĕхĕн никĕсне «çын» текен ăнлава хумалла, трапеци никĕсĕнче те «çын» тениех выртать:




Çак виç кĕтеслĕхе тăванлăх терминĕсене ăнлантарнă чух та усă курма пулать:

Eltern
parents
parents
родители
атте-анне

ача
ребенок
enfant, child, Kind









Ют чĕлхерен илнĕ сăмахсем виç кĕтеслĕх тĕпĕнче хывăннă, вĕсем – *арçын ача – хĕрача; ывăл(ăм) – хĕр(ĕм)* хирĕç тăрусене куç кĕрет кăтартма кирлĕ.

Виçĕ пĕр танлă пĕрлĕх виç кĕтеслĕхре питĕ курăмлă пулса пырать. Ку тĕпчев меслечĕпе усă курса пĕтĕм тăванлăх терминĕсене виç кĕтеслĕхе вырнаçтарса тухма пулать.

**Литературăпа ăнлантарусем**

[1] *Севортян Э.В.* Этимологический словарь тюркских языков (Общетюркские и межтюркские основы на гласные). М.: Наука, 1974. С. 200–201; *Егоров Н.И.* Опыт этимологизации чувашских терминов родства и свойства. II. Отец: (родитель) // Исследования по этимологии чувашского языка. Чебоксары, 1981. С. 3–46.

[2] *Гордеев Ф.И.* Этимологический словарь марийского языка. Т. 1. А-Б. Йошкар-Ола, 1979. С. 35; *Егоров Н.И.* Опыт этимологизации чувашских терминов родства и свойства. I. Мать (Родительница) // Вопросы лексикологии и фразеологии чувашского языка. Чебоксары, 1979. С. 41–46.

[3] *Егоров В.Г.* Этимологический словарь чувашского языка. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1964. С. 163; *Егоров Н.И.* Опыт этимологизации чувашских терминов родства и свойства. III. Старший брат // Этимологические исследования по чувашскому языку. Чебоксары, 1984. С. 3–32.

[4] *Егоров В.Г.* Этимологический словарь чувашского языка. С. 136; *Федотов М.Р.* Этимологический словарь чувашского языка: в 2 т. Чебоксары, 1996. Т. 2. С. 365; *Егоров Н.И.* Опыт этимологизации чувашских терминов родства и свойства. III. Старший брат. С. 24; *Егоров Н.И.* Опыт этимологизации чувашских терминов родства и свойства. II. Отец: (родитель). С. 21.

[5] *Егоров В.Г.* Этимологический словарь чувашского языка. С. 115; *Федотов М.Р.* Этимологический словарь чувашского языка: 1996. Т. II. С. 303.

[6] *Егоров Н.И.* Опыт этимологизации чувашских терминов родства и свойства. II. Отец. С. 12–26.

[7] *Ашмарин Н.И.* Чăваш сăмахĕсен кĕнеки: 17 томлă. Хусан: Татполиграф, 1929. Т. 2. С. 101.

[8] *Çавăнтах*. Шупашкар: Чăваш патш. изд-ви, 1950. Т. 17. С. 36.

[9] *Федотов М.Р.* Этимологический словарь чувашского языка. Т. 2. С. 441.

[10] *Егоров В.Г.* Этимологический словарь чувашского языка. С. 333.

[11] *Ашмарин Н.И.* Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. Т. 17. С. 288.

[12] Чăвашла-вырăсла словарь / М.И. Скворцов ред. М.: Русский язык, 1982. С. 609.

[13] Çавăнтах. С. 33, 45, 49.

[14] Çавăнтах. С. 35.

[15] *Ахметьянов Р.Г.* Сравнительное исследование татарского и чувашского языков. М.: Наука, 1978. С. 140

[16] *Ашмарин Н.И.* Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. Шупашкар, 1941. Т. 16. С. 369–370.

[17] *Ашмарин Н.И.* Материалы для исследования чувашского языка. Ч. 1: Учение о звуках (фонетика). Ч. 2: Учение о формах (морфология). Казань: Типолитогр. Император. ун-та, 1898. С. 139–140.

[18] *Андреев Н.А.* Имя существительное // Материалы по грамматике современного чувашского языка. Ч. I : Морфология. Чебоксары: Чуваш. гос. изд-во, 1957. С. 39–40.

[19] *Павлов И.П.* Хальхи чăваш литература чĕлхи: морфологи. Шупашкар: Чăваш АССР кĕнеке изд-ви, 1965. С. 65–66.

[20] *Павлов И.П.* Парные слова в современном чувашском языке // Исследования по этимологии и грамматике чувашского языка. Чебоксары, 1988. С. 56–77.

[21] *Семенова Г.Н.* Именные композиты в чувашском языке. Чебоксары, 2002. С. 34–42; *Семенова Г.Н.* Композитообразование в чувашском языке и его национальная специфика. М.: Прометей, 2005. С. 44–61.

[22] Чăвашла-вырăсла словарь / М.И. Скворцов ред. С. 32, 45.

[23] Çавăнтах. С. 45.

[24] *Ашмарин Н.И.* Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. Хусан: Татполиграф, 1928. Т. 1. С. 304.

[25] Чăвашла-вырăсла словарь / М.И. Скворцов ред. С. 627.

[26] Çавăнтах. С. 554.

[27] Çавăнтах. С. 397.

[28] Çавăнтах. С. 41.

[29] Çавăнтах. С. 42.

[30] *Ашмарин Н.И.* Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. Т. 1. С. 302–303.

[31] Çавăнтах. С. 305.

[32] *Семенова Г.Н.* Композитообразование в чувашском языке и его национальная специфика. М.: Прометей, 2005. С. 49.

[33] *Ашмарин Н.И.* Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. Шупашкар: Чăваш патш. изд-ви, 1941. Т. 15.

[34] *Семенова Г.Н.* Композитообразование в чувашском языке ... С. 49.

[35] *Ашмарин Н.И.* Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. Шупашкар: Чăваш патш. изд-ви, 1934. Т. 7. С. 284.

[36] Çавăнтах. 1936. Т. 10. С. 283–284.

[37] Чăвашла-вырăсла словарь / М.И. Скворцов ред. С. 451.

[38] *Ашмарин Н.И.* Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. Т. 7. С. 285.

[39] *Покровская Л.А.* Термины родства в тюркских языках // Историческое развитие лексики тюркских языков. М., 1961. С. 16.

[40] Любимов К.М. Об одной группе словосочетаний в тюркских языках (на материале турецкого языка) // Вопросы языкознания. 1969. № 5. С. 104–105.

[41] *Павлов И.П.* Парные слова в современном чувашском языке. С. 57.

[42] *Цинциус В.И.* К этимологии алтайских терминов родства // Очерки сравнительной лексикологии алтайских языков. Л.: Наука, 1972. С. 19.

[43] Çавăнтах. С. 19.

[44] *Бурнашева* С.А. Термины родства и родственных отношений // Исследования по сравнительной грамматике тюркских языков. Ч. 4: Лексика. М.: Изд-во АН СССР, 1962. С. 117.

[45] *Егоров Н.И.* Опыт этимологизации чувашских терминов родства и свойства. III. Старший брат. С. 7.

[46] *Андреев И.А.* Хальхи чăваш чĕлхи: синтаксис. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2005. С. 36.

[47] *Чернов М.Ф.* Хальхи чăваш литература чĕлхи сăмах майлашăвĕн синтаксисĕ. Шупашкар, 2005. С. 111.

[48] *Горский С.П.* Хальхи чăваш литература чĕлхин синтаксисĕ. Шупашкар: Чăваш АССР кĕнеке изд-ви, 1970. С. 16.

[49] *Ашмарин Н.И.* Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. Т. 1. С. 253–254.

[50] *Ашмарин Н.И.* Çавăнтах. Т. 2. С. 149–150.

[51] *Павлов И.П.* Хальхи чăваш литература чĕлхи: морфологи. С. 32.

[52] *Андреев Н.А.* Имя существительное // Материалы по грамматике современного чувашского языка. Ч. 1. Морфология. Чебоксары: Чуваш. гос. изд-во, 1957. С. 61.

[53] *Егоров В.Г.* Словосложение в тюркских языках // Структура и история тюркских языков. М.: Наука, 1971. С. 102.

[54] *Ашмарин Н.И.* Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. Т. 5. С. 185.

[55] Çавăнтах. Т. 3. С. 46–48.

[56] Чăвашла-вырăсла словарь / М.И. Скворцов ред. С. 627.

[57] *Ашмарин Н.И.* Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. Т. 3. С. 47.

[58] Чăвашла-вырăсла словарь / М.И. Скворцов ред. С. 553.

[59] *Ашмарин Н.И.* Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. Т. 17. С. 36.

[60] Çавăнтах. Т. 7. С. 310.

[61] *Çавăнтах*. Т. 10. С. 250–251.

[62] *Егоров Н.И.* Опыт этимологизации чувашских терминов родства и свойства. III. Старший брат. С. 7.

[63] *Ашмарин Н.И.* Чăваш сăмахĕсен кĕнеки Т. 16. С. 368–369.

[64] Чăвашла-вырăсла словарь / М.И. Скворцов ред. С. 549.

[65] *Юсупов Х.Г.* Термины родства в башкирском языке (из наблюдений над лексикой башкирских говоров) // Вопросы башкирской филологии. М.: Изд-во АН СССР, 1959. С. 131.

[66] *Ашмарин Н.И.* Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. Т. 6. С. 223.

[67] Чăвашла-вырăсла словарь / М.И. Скворцов ред. С. 450.

[68] *Ашмарин Н.И.* Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. Т. 14. С. 236.

[69] Çавăнтах. Т. 16. С. 207.

[70] Çавăнтах. Т. 7. С. 310.

[71] Çавăнтах. С. 307–310.

[72] Çавăнтах. Т. 2. С. 109–113.

[73] Çавăнтах.Т. 5. С. 333.

[74] Чăвашла-вырăсла словарь / М.И. Скворцов ред. С. 234.

[75] *Ашмарин Н.И.* Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. Т. 8. С. 305–309.

[76] Çавăнтах. Т. 10. С. 258–259.

[77] Чăвашла-вырăсла словарь / М.И. Скворцов ред. С. 294.

[78] *Иванов А.И.* Пĕрле е уйрăм çырасси çинчен шухăшлани // Вопросы чувашской литературы и языка. Чебоксары, 1966. С. 171. (Ученые записки / ЧНИИ; вып. 32).

[79] Çавăнтах. С. 176.

[80] *Семенова Г.Н.* Композитообразование в чувашском языке ... С. 25–26.

[81] Çавăнтах. С. 91–147.

[82] Çавăнтах. С. 196–200.

[83] Çавăнтах. С. 198.

[84] Çавăнтах. С. 5.

[85] Çавăнтах. С. 214–225.

[86] *Стариченок В.Д.* Большой лингвистический словарь. Ростов н/Д, 2008. С. 254; Лингвистический энциклопедический словарь. М.: Сов. энцикл. 1990. С. 233–234.

[87] *Стариченок В.Д.* Большой лингвистический словарь. С. 254, 590.

*Е.В. Сергеева*

# ЧĂВАШСЕН ЧУСТАРАН ХАТĔРЛЕНĔ АПАТ-ÇИМĔÇ ЯЧĔСЕМ

Чăвашсем ĕлĕкренех хăйсен апат-çимĕçĕпе паллă пулнă. Чи паха апатсен шутĕнче шӳрпе, шăрттан, хуплу т.ыт.те калама пулать.

Чăвашсем ĕлĕк хатĕрленĕ апат-çимĕç рецепчĕсем хăшĕ-пĕрисем хальхи вăхăтченех упранса юлнă, хăшĕ-пĕрисем манăçа тухнă. Çак пĕчĕк статьяра анатри чăвашсен чустаран хатĕрленĕ апат-çимĕçĕ пирки калаçу пулĕ. Вĕсен рационĕ ытларах ӳсен-тăранран тата выльăх-чĕрлĕх юр-варĕнчен хатĕрленĕ апатран тăнă.

XIX ĕмĕр вĕçĕнче – XX ĕмĕр пуçламăшĕнче чăвашсем чустаран пĕçермелли çимĕçсене ытларах ыраш çăнăхĕнчен хатĕрленĕ. Унран çăкăр, пашалу евĕрлĕ çимĕçсем, икерчĕ, кукăльсем пĕçернĕ. Чустине каçранах лартнă, хальхи вăхăтра вара хăвăрт пулакан чустапа усă кураççĕ. Анатри чăвашсем хушшинче «çăкăр» сăмаха икĕ майлă калаççĕ: Йĕпреç районĕнчи хĕвел тухăç енче вырнаçнă ялсенче *çăккăр* теççĕ, Елчĕк, Патăрьел, Комсомольски районĕсенче вара *çăкăр* теççĕ. Çак япалана «кукăль» сăмахра та тĕл пулма пулать – *куккăль* Йĕпреç районĕнче, *кукăль* Патăрьел, Комсомольски, Елчĕк енче *кукли* (сăмахран, *купăста кукли, çăмарта кукли*) тесе каланине те тĕл пулатпăр.

Кунсăр пуçне анатри чăвашсем *пашалу, капăртма, икерчĕ, йăва* пĕçернĕ. Çакна каласа хăварас пулать: Патăрьел районĕнче *икерчĕ,* Елчĕк районĕнче вара *кульмак* сăмах ытларах сарăлнă. *Куймак* тесе Тутарстан Республикинче Чулман Атăл (Кама) тăрăхĕнче пурăнакан чăвашсем калаççĕ[1].

М.Р. Федотов этимологи словарĕнче *икерчĕ* сăмаха темиçе пĕлтерĕшлĕ кăтартать. Çак сăмахпа чăвашăн пӳремеч евĕрлĕ çимĕçе те – *улма/омма икерчи, тăпăрч икерчи* – тата çăмартаран пĕçернĕ апата та – *çăмарта икерчи* – палăртнă[2].

*Икерчĕ*, е *кульмак* (Елчĕк р-нĕ) пирки такмак та пур:

Куля кульмак пĕçерет,

Арăм çисе пĕтерет[3].

Анатри чăвашсем тепĕр тĕрлĕ ăшсăр çимĕç пĕçернĕ, ку вăл – *йăва. Йăвана* ытларах чухне йăла-йĕрке ирттернĕ вăхăтра хатĕрленĕ. Сăмахран, Сурхури, Çăварни вăхăтне, хĕр килĕшме кайнă чух хĕрĕ патне илсе кайнă.

В.Г. Егоровпа[4] М.Р. Федотов[5] *йăва* сăмаха çапла ăнлантараççĕ: «кушанье из пресного теста – шарики в виде птичьего гнездышка с двумя ямочками рядом посередине», «колобок», «пряникообразное печенье».

Хальхи вăхăтра *йăва / йăвача* Сурхури вăхăтĕнче çеç пĕçерещсĕ[6]. Тĕслĕхрен, тури чăвашсем çак çимĕçе *çу мыри (мăйăрĕ)* теççĕ[7], *йăва* е *павăрсак* (тат. «баурсак») тесе саккам чăвашĕсем калаççĕ[8].

Чăвашсен тепĕр пысăк пĕлтерĕшлĕ чустаран пĕçернĕ çимĕç вăл – *пӳремечĕ*. Ĕлĕкхи вăхăтра пӳремечĕ ăшне тăпăрчăран е çĕр улминчен тунă. Пĕçермелли йĕрки çапла: малтан чустине хатĕрленĕ, ун çине тăпăрчăран е улмаран хатĕрленĕ ăшне сĕрсе хунă та кăмакана лартнă. Шăмăршă районĕнче çак çимĕçе урăхларах хатĕрленĕ: малтан чустине пĕçернĕ – *капратма* ятлă, ун хыççăн хатĕр ăшне сĕрсе тепĕр хут кăмакана лартнă. Йĕпреç районĕнчи информантсем каланă тăрăх, ĕлĕкхи вăхăтра çак апат валли *кăвак улма* усă курнă. Мĕншĕн кăвак ятлă пулнă, респондентсем каласа ăнлантараймарĕç, çĕр улми питĕ шывак та тутлă пулнă тесе хуравларĕç[9].

Елчĕк енче *пӳремеç* ятпа тепĕр çимĕç те хатĕрленĕ: «Кантăра тӳнĕ, çăкăр çемçи янă, чăмакка туса кантăр чусти тунă. Çĕр улмипе хутăштарнă. Çавă пӳремеç пулнă. Кăмакара пĕчĕк пашалу евĕр пĕçернĕ»[10]. Ку апата, тен, çăнăх пулманнипе, вăрçă вăхăтĕнче е хыççăн хатĕрленĕ.

Танлаштарма тури чăвашсен *пӳремечĕ* пирки те каласа хăварма пулать. Рецепчĕ анатри чăвашсеннинчен уйрăлсах тăман, анчах та ячĕсем урăхларах: *тăпăрчă икерчи, умма икерчи*[11], *патаккасси (пăрça) икерчи*[12]. *Хăйма икерчине* кăмакара мар, çатма çинчех хатĕрленĕ (малтан икерчине пĕçернĕ, ун çине симĕс суханпа пăтратнă хăйма е турăх хунă)[13].

В.Г. Егоровпа[14] М.Р. Федотов[15] словарĕсенче ку сăмаха пĕр пĕлтерĕшпе çырнă – «ватрушка», анчах та ытти халăхсен çимĕçĕсемпе танлаштарнине куратпăр. Çапла,

тутарсен *пәрәмәч*, пушкăртсен *бәрәмәс*, мари чĕлхинче *перемеч* пĕлтерĕшĕсем тĕл пулаççĕ.

Чи пĕлтерĕшлĕ те сумлă чăваш апачĕ – *хуплу (пелĕш)*. Пысăк кукăль темиçе тĕрлĕ ăшран тăнă. Тĕслĕхрен, хуплу ăшне кĕрперен (тулă, пăри, вир, каярахпа рис) е улмаран тунă, паллах, аш-какай янă (кăвакал, хур).

*Хуплу (пелĕш)* касасси чăвашсен уйрăм йăла-йĕрке пулнă. Ăна касма чи пĕлтерĕшлĕ тăвана е хурăнташа шанса панă. Хăш-пĕр чух хуплу ăшне пĕр штоф та чиксе хума пултарнă. Каснă хыççăн сăйламалла пулнă[16]. Хуплăва касмалли йĕрке: малтан тăррине çаврака касса илеççĕ, анчах та касаканĕ калама пултарнă: «Пелĕш хуппи уçăлмасть», çак сăмахсем хыççăн ăна пĕрер черкке ярса памалла пулнă. Çакăн хыççăн хуплăва çын шучĕпе каснă[17].

В.Г. Егоров[18] этимологи словарĕнче «хуплу» сăмаха «хупла» ĕç-хĕлтен пулнă тесе ăнлантарнă, çавăнпа та «пелĕш хуппи уçăлмасть» тени тĕрĕсех пулать.

Хуплăва анатри чăвашсем, ытларах тутарсемпе юнашар пурăнакансем, *пелĕш* тесе калаççĕ. Ятне, тен, тутарсенчен илнĕ. Тутарсем ăна *бәлиш* теççĕ[19].

Чăвашсем чустаран тепĕр тĕслĕ ăшлă çимĕç хатĕрленĕ – хуран кукли. Ăшне тăпăрчăран, какайран, çĕр улминчен, çуллахи вăхăтра симĕс суханпа çăмартаран, çырларан та тунă[20]. Хальхи вăхăтра хуран куклине вырăсла май «пельмен» теççĕ, ăна пельмен формипе вĕтĕрех хатĕрлеççĕ.

Тĕслĕхрен, Комсомольски районĕнче, вăрманлă çĕрте, *хуран кукли* ăшне хура çырлапа тултараççĕ. Ытларах ку апата Питрав кунĕнче пĕçереççĕ[21]. Ахаль чухне чăвашсем пельмене аш-какайпа хатĕрлеççĕ.

Анатри чăвашсен чустаран хатĕрленĕ апат-çимĕçĕ хушшинче тутарсенчен илнĕ çимесем те тĕл пулаççĕ. Сăмахран, Шăмăршă районĕнче *кăстрăмпи* ятлă кукăль евĕрлĕ çимĕç хатĕрлеççĕ. Ку çимене хальхи «сочень» текен вырăс апачĕпе танлаштарма пулать. Чустине çӳхе сарнă, ăшне ытларах чухне çĕр улми нимри хунă. Чуста хĕррисене чĕпĕтмен, уçă хăварнă[22]. Тутарсем хушшинче ку çимĕç *кыстыбый* ятпа тĕл пулать[23].

Ку апат Н.И. Ашмарин словарĕнче – *кăстăмпи (кăстипи, кăстăпи)* – чустаран хатĕрленĕ ăшлă çимĕç, ытларах саккам чăвашĕсем (Чистай уесĕ, Хусан кĕпĕрни)

тата Ик юхан шыв тăрăхĕнче пурăнакан чăвашсем (Пелепей уесĕ, Ĕпхӳ кĕпĕрни) хушшинче тĕл пулать тесе ăнлантарнă[24].

Пĕтĕмлетсе каласан, чăвашсен чустаран хатĕрленĕ çимĕçĕсем нумай: тĕрлĕ ăшлă кукăльсем, икерчĕ, пашалу, капăртма, йăва т.ыт.те. Хăшĕ-пĕрисене халĕ те хатĕрлеççĕ, анчах та вĕсем трансформациленнĕ пирки рецепчĕсем улшăннă, хăшĕсем манăçа тухнă. Малтанхи вăхăтра, XX ĕмĕр вĕçĕччен ех, маларах каланă çимĕçсене кăмакара пĕçернĕ, хальхи вăхăтра ытларах чухне – духовкăра. Информантсем каланă тăрăх, духовкăра пĕçернĕ çимĕçсен тути кăмакара хатĕрленинне çитмест. Анатри чăвашсен тутарсенчен (сăмахран, кăстрăмпи, чак-чак), ют çĕр-шыври халăхсенчен (сăмахран, пицца, хот-дог) илнĕ апат-çимĕç те самаях тĕл пулать.

### Литературăпа ăнлантарусем

---

[1] *Ягафова Е.А.* Чуваши Урало-Поволжья: история и традиционная культура этнотерриториальных групп (XVII – нач. XX в.). Чебоксары: ЧГИГН, 2007. С. 264.

[2] *Федотов М.Р.* Этимологический словарь чувашского языка. В 2 т. Т. 1. Чебоксары: ЧГИГН, 1996. С. 162.

[3] Автор экспедицире пухнă материалсем (малалла АЭМ), 2008–2012 çулсем, Чăваш Республикин (малалла ЧР) Елчĕк районĕнчи Тăрмăш ялĕнче 1929 çулта çуралнă О.А. Павловăран çырса илнĕ.

[4] *Егоров В.Г.* Этимологический словарь чувашского языка. Чебоксары: Чувашиздат, 1964. С. 73.

[5] *Федотов М.Р.* Этимологический словарь чувашского языка. Т. 1. С. 176.

[6] АЭМ, ЧР Патăрьел районĕнчи Пăлапуç-Пашьел ялĕнче 1937 çулта çуралнă К.Ф. Сакмаровăран, Тури Тăрмăш ялĕнче 1924 çулта çуралнă А.И. Сергеевăран тата Туçа ялĕнче 1924 çулта çуралнă Л.С. Сугутскаяран; ЧР Шăмăршă районĕнчи Анат Чаткас ялĕнче 1928 çулта çуралнă А.Н. Воробьевăран, 1936 çулта çуралнă О.И. Зиновьевăран, Пăчăрлă Пашьел ялĕнче 1926 çулта çуралнă М.С. Молуфеевăран, 1935 çулта çуралнă Р.М. Савельевăран; ЧР Елчĕк районĕнчи Вырăскасси ялĕнче 1932 çулта çуралнă Ф.Н. Аввинăран, Тăрмăш ялĕнче 1949 çулта çуралнă А.П. Дудкинăран, Таяпа Энтри ялĕнче 1923 çулта çуралнă Ф.Е. Убасевăран çырса илнĕ.

[7] АЭМ, ЧР Етĕрне районĕнчи Лапракасси ялĕнче 1935 çулта çуралнă З.И. Аполлоновăран, Эмеккасси ялĕнче 1934 çулта çуралнă Л.П. Васильевăран, Хучаш ялĕнче 1924 çулта çуралнă А.Я. Суворовăран, Пушкăрт ялĕнче 1947 çулта çуралнă О.П. Шмелевăран çырса илнĕ.

[8] Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ăслăлăх архивĕ (малалла ЧПГĂИ ĂА). III пай. 182 управ ед. 1469 инв. №. 99–100 л. (Тутар АССРĕ, Октябрь (халĕ Нурлат) районĕ, Якаел ялĕ, 1961 ç.); Ягафова Е.А. Чуваши Урало-Поволжья. С. 263–264; Яковлева И.Г. Терминология культуры питания в чувашском языке. Чебоксары: Чуваш. гос. пед. ун-т им. И.Я. Яковлева, 2006. С. 32.

[9] АЭМ, ЧР Йĕпреç районĕнчи Хурамал ялĕнче 1916 çулта çуралнă М.А. Кузиковăран, Пучинке ялĕнче 1934 çулта çуралнă Д.И. Брагинăран, Чăрăшкасси ялĕнче 1930 çулта çуралнă Н.Г. Фокинăран, Тури Кĕлешкасси ялĕнче 1936 çулта çуралнă К.П. Айдидатовăран; ЧР Шăмăршă районĕнчи Анат Чаткас ялĕнче 1928 çулта çуралнă А.Н. Воробьевăран, 1936 çулта çуралнă О.И. Зиновьевăран, Пăчăрлă Пашьел ялĕнче 1926 çулта çуралнă М.С. Молуфеевăран, 1935 çулта çуралнă Р.М. Савельевăран çырса илнĕ.

[10] АЭМ, ЧР Елчĕк районĕнчи Вырăскасси ялĕнче 1932 çулта çуралнă Ф.Н. Аввинăран, Тăрмăш ялĕнче 1949 çулта çуралнă А.П. Дудкинăран, 1929 çулта çуралнă О.А. Павловăран, Таяпа Энтри ялĕнче 1923 çулта çуралнă Ф.Е. Убасевăран çырса илнĕ.

[11] АЭМ, ЧР Çĕмĕрле районĕнчи Хутар ялĕнче 1932 çулта çуралнă Н.К. Ногаевăран, 1959 çулта çуралнă Е.Е. Тарасовăран, Тури Кăмаша ялĕнче 1941 çулта çуралнă Е.А. Уфилкинăран, 1920 çулта çуралнă О.Н. Фоминăран çырса илнĕ.

[12] Оринино: дорогие сердцу имена и образы. Чебоксары: Новое время, 2007. С. 140.

[13] АЭМ, ЧР Етĕрне районĕнчи Эмеккасси ялĕнче 1934 çулта çуралнă Л.П. Васильевăран, Тукас ялĕнче 1926 çулта çуралнă О.Т. Никитинăран, Пушкăрт ялĕнче 1947 çулта çуралнă О.П. Шмелевăран çырса илнĕ.

[14] *Егоров В.Г.* Этимологический словарь чувашского языка. С. 171.

[15] *Федотов М.Р.* Этимологический словарь чувашского языка. Т. 1. С. 461.

[16] АЭМ, ЧР Патăрьел районĕнчи Начар Упи ялĕнче 1939 çулта çуралнă А.И. Зиминăран, 1931 çулта çуралнă В.А. Петровăран, Пăлапуç-Пашьел ялĕнче 1937 çулта çуралнă К.Ф. Сакмаровăран çырса илнĕ.

[17] *Никольский Н.В.* Собрание сочинений. Т. I. Труды по этнографии и фольклору чувашского народа. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2004. С. 287.

[18] *Егоров В.Г.* Этимологический словарь чувашского языка. С. 305.

[19] АЭМ, ЧР Патăрьел районĕнчи Тутар Сăкăчĕ ялĕнче 1930 çулта çуралнă С.С. Сулеймановăран (тутар), 1940 çулта çуралнă С.Я. Азмухановăран (тутар) çырса илнĕ.

[20] ЧПГĂИ ĂА. I пай. 325 упр. ед. 6257 №-лĕ инв. С. 97–98 (Пăрăслан уесĕн Пăрăслан вулăсĕнчи Чăваш Саркамăш(ĕ) ялĕ); *Матвеев Г.Б.* Хуран кукли // Чувашская энциклопедия. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2011. Т. 4. С. 419; *Наумов Н.Е.* Халăх çӳпçинчен: этнографи ăнлавĕсен пуххи. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2010. С. 213.

[21] АЭМ, ЧР Каҫал районӗн Кӗҫӗн Ҫӗрпӳел ялӗнче 1929 ҫулта ҫуралнӑ П.Р. Карповӑран, Ҫӗнӗ Мӑрат ялӗнче 1952 ҫулта ҫуралнӑ А.Г. Пасниковӑран ҫырса илнӗ.

[22] АЭМ, ЧР Шӑмӑршӑ районӗнчи Анат Чаткас ялӗнче 1928 ҫулта ҫуралнӑ А.Н. Воробьевӑран, 1936 ҫулта ҫуралнӑ О.И. Зиновьевӑран, Пӑчӑрлӑ Пашьел ялӗнче 1926 ҫулта ҫуралнӑ М.С. Молуфеевӑран, 1935 ҫулта ҫуралнӑ Р.М. Савельевӑран ҫырса илнӗ.

[23] АЭМ, ЧР Патӑрьел районӗнчи Тутар Сӑкӑчӗ ялӗнче 1930 ҫулта ҫуралнӑ С.С. Сулеймановӑран (тутар), 1940 ҫулта ҫуралнӑ С.Я. Азмухановӑран (тутар) ҫырса илнӗ.

[24] *Ашмарин Н.И.* Чӑваш сӑмахӗсен кӗнеки. Шупашкар: Руссика, 1999. Т. 7. С. 190.

# ИЛЛЕ ТӐХТИ ПУЛТАРУЛӐХӖНЧЕ ТАВРАЛӐХ ХАЛАПӖСЕМ СӐНЛАННИ

*О.Н. Терентьева*

Илле Тӑхти пултарулӑхне пӗтӗмӗшле тишкерсе Ю.М. Артемьев, Г.Ф. Юмарт, В.Г. Родионов, Г.И. Федоров, И.Ю. Кириллова тата ытти тӗпчевҫӗсем пысӑк хак пачӗҫ. Эпӗ тавралӑх халапӗсемпе интересленнӗ май Тӑхти пултарулӑхӗ ҫине те ҫав енчен пӑхрӑм. Мӗнле вырӑн ячӗсем тата вӗсемпе ҫыхӑннӑ халапсем ҫырӑнса юлнӑ-ши ун хайлавӗсенче текен ыйту ҫуралчӗ.

Паллах ӗнтӗ, тӑван ҫӗр-шыв кирек кам ҫине те витӗм кӳрет. Ача-чухне чупса ҫӳренӗ улӑх-ҫаран, ҫырма-ҫатра, сӑрт-ту ӗмӗр тӑршшӗпех чунра, асра юлать. Поэтсем вара тавралӑха, ҫут ҫанталӑка уйрӑмах ҫывӑх туяҫҫӗ.

1907 ҫулта ҫырнӑ «Эпӗ ҫуралнӑ ҫӗр-шыв» калавне Тӑхти ҫак йӗркесенчен пуҫлать: «Вӑрман хӗрринче пӗчӗк ял ларать. Кӗлел тӑв текен сӑрт ҫинчен ҫав ял ҫине пӑхса тӑратӑп. Ах, илемлӗ-ҫке ку ял!..»[1] Мӗн асӑрхатпӑрха ҫак йӗркесенче? Хайлаври калавҫӑ аялтан ҫӳлелле мар, ҫӳлтен аялалла пӑхать. В.Г. Родионов тӗпчевҫӗпе калаҫнӑ пӗр самант аса килчӗ. Пӗринче эп ӑна: «Пӗчӗкрех чухне мана хамӑр таврари сӑртсем, ҫырмасем ҫав тери пысӑккӑн курӑнатчӗҫ», – терӗм». Вӑл вара: «Мана ун пек мар, эп хам ҫӳлтен, йывӑҫ тӑрринчен пӑхаттӑмччӗ», – терӗ. Эп ун чухне чӑннипех те тӗрлӗрен курӑм пулма пултарнине ӑнкарса илтӗм. Тӑхти шӑпах ҫӳлтен пӑхса пӗчӗк детальсене асӑрхама пултаракан ҫыравҫӑ.

Ҫак асамлӑ янракан «Кӗлел тӑв» Тӑхти каярах, 1921 ҫулта, ҫырнӑ «Выҫлӑх ҫулсем» поэмӑра та ӳкерӗнсе юлнӑ:

Халӑхпала шут туса,
Кӗрпе-ҫӑвсем пуҫтарса,
Кӗлел тӑва пухӑнса

Така тытса пусаççĕ,
Çумăр чӳкĕ тăваççĕ.
Хĕрлĕ Хветĕр кукша пуç
Кĕлел тăва халăха
Пуха-пуха чӳк турĕ,
Çумăр çавах çумарĕ[2].

«Эпĕ çуралнă çĕр-шыв» калавра тепĕр паллă вырăн – Элкӳл, Элкӳл сăрчĕ – сăнланса юлнă: «Пирĕн ялтан икĕ çухрăмра, хамăр çĕр çинче, пĕр пысăк Элкӳл ятлă кӳлĕ пур. Вăл пулни çинчен ак мĕн калаççĕ. Çулла чăвашсем утă çулнă чух икĕ лашапа утаман пынă та çулакансене çаран çинчен сирĕлме хушнă; çынсем сирĕлсен çаран вырăнне шыв палкаса тухнă та, вара утаманĕ те çĕтнĕ. Çавăнтан вара шыв тăрса юлнă»[3]. Çак халап варианчĕ Н.А. Ашмаринăн «Чăваш сăмахĕсен кĕнекинче» пур[4]. Уйрăмлăхсем çаксем: «чăвашсем утă çулнă» вырăнне словарьте «аякри чăвашсем çаран çулнă» тенĕ тата «икĕ лашапа утаман пынă» вырăнне словарьте «утаманĕ виçĕ лашапа пычĕ» тенĕ.

Элкӳл халапĕ хыççăн калавçă малалла Элкӳл сăрчĕ пирки сăмах хускатать: «Пирĕн асаттесем выльăх чĕрлĕхлĕ чух, мул пур чух Элкӳл сăртĕнче çулне икшер хут тихасемпе хурсем, вăкăрсем пусса чӳк тунă. Унта темиçе ял пухăннă. Пурте эрмексемпе, маткасем талĕрлĕ, нухратлă, хурт пуççилĕ хушпусем, хĕрсем хаклă тухьясем тăхăнса пынă. Каччăсем лаша пуçлă тура пиçиххи çумне çакса пухăннă. Пыллă сăра ĕçсе, сăрнай купăс каласа савăннă»[5].

Куç умне тухса тăракан тата асра юлакан мĕнлерех сăнарлăх! Чĕлхи шăнкăр-шăнкăр шыв пек юхса пырать. Çак Элкӳл сăрчĕ пирки калани «Чăваш халăх пултарулăхĕ: тавралăх халапĕсем» кĕнекере те кун çути курнă[6].

Тăхти Элкӳл çинчен 1927 çулта уйрăм статья та çырнă. Вăл «Элкӳл. Элпуç (курни-илтни)» ятпа пичетленнĕ. Унта та чӳк туни пирки çав тери сăнарлă çырса хăварнă: «Ку таврари чăвашсем иртнĕ ĕмĕрте кашни çул, çăва

тухсан, канлĕ вăхăтра, хура такапа шурă така сĕкĕштерсе, ула пуçлă çичĕ хура вăкăр, виçĕ тимĕр кăвак ăйăр пусса Элкӳл патĕнче, Çăкăр çырма тĕлĕнче, аслă чӳк тунă. <...> Элкӳл – çавракa кӳлĕ, питĕ тарăн пулнă тет. Чул çыхса çичĕ тилхепе ярсан та тĕпне çитмен тет.

Картлă-картлă пашалу –
Карчĕсерен сарă çу.
Кăмака айĕнче карчăксем,
Сак айĕнче хĕрĕсем.
Кашки-чашки çырмара,
Пурте пырăр чӳк тума;
Пăтă çиме пуçтарнăр
Элкӳл хĕрне – катана.

Çапла ялтан-яла ача-пăча юрла-юрла çаврăнсан Элкӳл патне арçын, хĕр, хĕрарăм, ватти-вĕтти – таврари ялсенчен халăх – ĕлĕк чӳк тума пухăннă тет.

Така, вăкăр, ăйăрсем пусса, яшка-пăтă пĕçерсе çисен чӳк халăхĕ кĕпе-йĕмпех, арçынни-хĕрарăмĕ, Элкӳлте шыва кĕнĕ тет авал»[7].

Мĕн авалтан Элкӳл анат енчи чăвашсемшĕн пĕлтерĕшлĕ вырăн шутланнă. Унта виç çулта пĕрре пĕтĕм вулăспа пухăнса чӳк тунă. В.Д. Димитриев «Чувашские исторические предания» кĕнекинче: «Предания и легенды об Алдиарове, основанном Эльтером, и Эль-куле – месте жертвоприношений крестьян почти всей Чувашии наводит на мысль, что селение и связанное с ним озеро в золотоордынское время стали каким-то центром, объединявшим правобережных чувашей», – тесе çырать[8]. «Чăваш халăх пултарулăхĕ: мифсем, легендăсем, халапсем» сборникре те Эл кӳлли пирки тĕрлĕрен халапсем пичетленнĕ[9]. Çавăн пекех «Чăваш энциклопедийĕн» 1 томĕнче Н.И. Егоров Элкӳл пирки пĕтĕмĕшле статья çырнă: «По преданиям, земля поглотила свадебный поезд, так как жених и невеста, в нарушение брачных норм, состояли в родстве. В знак прощения Турă на этом месте сотворил бездонное озеро.

По его милости Эль священное, ему покровительствуют божество Ырă Элкӳлли и его родители...»[10].

Çĕн Элпуçпе Кив Элпуç ялĕсем епле пуçланни пирки калакан халапсене Тăхти «Элихун» поэмăна кĕртнĕ[11]. Таврари ялсене, вырăнсене хăйĕн пултарулăхĕнче çутатмасăр тăма пултарайман Тăхти. Çав юмах-халапсемпе çитĕннĕ-çке-ха вăл.

В.Г. Родионов Илле Тăхти пултарулăхне тĕпченĕ май çапла çырать: «Унăн хайлавĕсенче ĕç-пуç черетленĕвне мар, чи малтан сăмахсен сыпăнăвне сăнамалла»[12]. Çакна çирĕплетекен тĕслĕх илер:

Çăкăрçырма шывĕпе
Кĕçĕнкилĕн шывĕсем
Шăнкăртатса калаçса,
Чунтан-вартан пĕр-пĕрне
Ытарайми юратса
Ытамласа чуптусан
Икĕ çырма пĕр пулса
Анаталла юхтарнă.
Анат енчи чăвашсем –
Тăвай тавраш, ыттисем
Çавă шыва Эл тенĕ.
Унта ларан яла та
Элпуç тесе ят хунă.
Элпуçĕнчен тепĕр ял –
Çĕнĕ Элпуç пулсассăн
Тĕп Элпуçне Кив Элпуç
Тесе пурте каланă[13].

Илле Тăхтин тепĕр халапĕ «Ялсем мĕнле пуçланса кайнă» ятпа 1979 çулхи кăларăмра пичетленнĕ, каярах «Атăлăн сылтăм енчи ялсем епле пуçланса кайнă» ятпа 2007 çулта «Чăваш халăх пултарулăхĕ: истори халапĕсем» кĕнекере пичетленнĕ. Ку халапа вăл 1905 çулсенче Н. Никольские çырса янă пулнă. «Мĕн курнине, мĕн илтнине, мĕн пĕлнине çырам», – тенĕ ал çырура, вĕçĕнче «Пракка Тăхтийĕ» тесе çырнă. «Атăл леш

айккинчен хĕлле пĕчĕк ачана тăлăп çанни ăшне чиксе каçарнă. Çав ача çак пирĕн яла (Элпуçне) лартнă. Ураскассине, Çĕнçырмана, Çĕн Элпуçĕпе Кив Элпуçне ларма пуçланă чух уя вăкăрсем янă пулать вара, вăкăрсем выртнă вырăна ял лартнă»[14].

Халăх сăмахлăхĕнче вăкăрсем выртнă вырăнта ял пуçласа янă тени – анлă сарăлнă сюжет, анчах та «Атăл леш айккинчен хĕлле пĕчĕк ачана тăлăп çанни ăшне чиксе каçарнă» тенине эпир урăх çĕрте тĕл пулман.

Пĕтĕмлетсе çапла калама пулать: Илле Тăхти хăйĕн произведенийĕсенче топонимсемпе, тавралăх халапĕсемпе вырăнлă усă курнă. Ку унăн çырас ăсталăхĕ пысăк шайрине тепĕр хут çирĕплетет. Вăл чăннипех те анлă тавра курăмлă çыравçă. Ун пултарулăхĕнче кашни вулаканах хăйне валли мĕн те пулин çĕнни, кăмăла тултараканни тупма пултарать.

**Литература**

[1] *Тăхти И.* Суйласа илнисем: сăвăсем, поэмăсем, калавсем, статьясем, çырусем / пухса йĕркелекенĕсем тата ăнлантарусене çыраканĕсем Г.Ф. Юмарт, И.Ю. Кириллова; ум сăмахне çыраканĕ В.Г. Родионов. Шупашкар: ЧГИГН, 2009. С. 142.

[2] Çавăнтах. С. 64.

[3] Çавăнтах. С. 142.

[4] *Ашмарин Н.И.* Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. Шупашкар: Руссика, 1994. Т. 3. С. 9.

[5] *Тăхти И.* Суйласа илнисем ... С. 142–143.

[6] Чăваш халăх пултарулăхĕ: тавралăх халапĕсем / пухса хатĕрлекенĕ, ум сăмахпа ăнлантарусене çыраканĕ О.Н. Терентьева. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви. 2013. С. 324.

[7] *Тăхти И.* Суйласа илнисем ... С. 308–309.

[8] *Димитриев В.Д.* Чувашские исторические предания. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1993. С. 65.

[9] Чăваш халăх пултарулăхĕ: мифсем, легендăсем, халапсем / пухса хатĕрлекенĕ Е.С. Сидорова, ум сăмахне çыраканĕсем А.А. Трофимов, В.П. Станьял. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви. 2004. С. 105–107.

[10]. Чувашская энциклопедия: в 4 т. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2006. Т. 1: А – Е.

[11] *Тăхти И.* Суйласа илнисем ... С. 84–85.

[12] *Родионов В.Г.* Илле Тăхти прози // Хыпар. 2014. Çурла, 27.

13 *Тăхти И.* Суйласа илнисем ... С. 86.

14 *Тăхти И.* Поэзи. Проза. Публицистика – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1979. С. 303; Чăваш халăх пултарулăхĕ: истори халапĕсем / ум сăмахне çыраканĕ Г.Ф. Юмарт, ăнлантарусене çыраканĕ О.Н. Терентьева, пухса хатĕрлекенĕсем О.Н. Терентьева [т.ыт.те]. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви. 2007. С. 52; ЧПГĂИ ĂА. I пай. Т. 153. 4623 упр. ед. С. 47–48.

*Е.В. Федотова*

# ИЛЛЕ ТӐХТИН «МАТЮК АППА» КАЛАВĔНЧИ ТĔЛĔК СӐНАРЛӐХĔ

Илле Тӑхти биографине, хайлавӗсене Ю.М. Артемьев[1], Г.И. Федоров[2], В.Г. Родионов[3], И.Ю. Кириллова[4] тӗпчевҫӗсем тарӑн тӗпченӗ. Вӗсем Илле Тӑхтин пултарулӑхне, ҫырас ӑсталӑхне туллин уҫса панӑ, вулакан умне ҫитернӗ. Пирӗн ӗҫӗн тӗллевӗ – Илле Тӑхти ҫырнӑ «Матюк аппа» калавӗнчи тӗлӗк сӑнарлӑхӗпе паллаштарасси.

«Матюк аппа» калава Илле Тӑхти 1927 ҫулта, Мускаври Пӗрремӗш патшалӑх университечӗн этнологи факультечӗн литература уйрӑмӗнче вӗреннӗ вӑхӑтра ҫырнӑ. Хайлав 1930 ҫул «Калавсемпе сӑвӑсем» кӗнекере пичетленнӗ. Ӑна унта «ҫырса пӗтермен повесть» тесе кӑтартнӑ.

Калав пуҫламӑшӗнче автор хӗллехи каҫ вӑхӑтӗнчи чӑваш ҫемйин пурнӑҫне кӑтартса панӑ. Хӗллехи каҫа мӗнле ирттернине тӗплӗн кашни детале ҫырса кӑтартнӑ. Пӗрре пӑхсан вак-тӗвек пек, пӗлтерӗшлех те мар пек япаласене вӑл тимлӗ асӑрхаса пӗрер пӗрчӗн пухса ҫырнӑ. Акӑ, тӗслӗхрен: *«Ман арӑм та кӗнчелине картиш енчи тӑрӑх сак ҫине пӗрене ҫумне таянтарса хучӗ. Ман арӑм ваттисене ҫӗрле тула тухса кӗме кирлӗ пулӗ тесе аттепе-анне валли кӑмака ҫинчен типӗ кӑҫатӑ антарса путмар ҫумне лартрӗ»*[5]. Тӑхтин калавӗнчен эпир вӑл вӑхӑтри этнографи материалӗсене, халӑх пӗлӗвне лайӑх курма пултаратпӑр. Тӗслӗхрен, юн юхса тӑракан сурана вӑрманта мӗнле сиплемеллине куратпӑр: *«Тӑхти, часрах пуртӑ вӗҫне виҫҫӗ сур, пуртта виҫӗ хут пуҫ тавра ҫавӑр, часрах кӗпене ухтарса пуртӑ ҫивӗчӗшпе юн юхакан вырӑнсене сӗркеле, – терӗ Макҫӑм йысна»*[6]. Хайлавран вӑл вӑхӑтри чӑваш ар ҫыннисем ҫӑпата хуҫнине, ҫӑпата кантри явнине, хӗрарӑмсем кӗнчеле тытса ҫӑм арланине пӗлетпӗр.

«Матюк аппа» хайлавăн пичетленнĕ пайĕнче Тăхти ятлă калавçă хĕллехи каç çемйипе çывăрма выртать те тĕлĕк курать. Вăрăм тĕлĕк. Сюжетлă. Хайлавра Тăхти ятлă калавçăпа унăн йыснăшĕн калаçăвĕ те, ĕмĕчĕ те, мĕн-мĕн тăвас тени те, илес тени те пур. Çав тĕлĕке çырса кăтартнипе калав малалла тăсăлать. Калавçă хăйĕн тĕлĕкĕнче тискер кайăксем пурăнакан вăрман курать. Тĕлĕкре вăрман курни вăл чăваш халăх сăмахлăхĕнче – ют ен, çын сăмахĕ, халăх, халăх хушшинче аван мар пулни[7]. Çавăнпа ĕнтĕ вĕсем вăрмантан тухасшăн. Йыснăшĕн аллинче икĕ пуртă. Пуртă – ывăл, арçын ача[8]. Йыснăшĕн суранĕнчен юн юхать. Юн юхни – тăвана курасси[9]. Хайлава çырса пĕтернĕ пулсан тăвана курасси те пулатчĕ пулĕ. Вăй кĕтĕр тесе майăр тĕшши çиеççĕ. Тĕлĕкре майăр çисен – шатра тухать, çăпан тухать теççĕ[10]. Тата тепĕр пĕлтерĕш те пур халăхра: майăр – лайăх мар, пысăк хуйха, куççуле теççĕ.[11] Чуллă çĕрте утса вĕсен урисенчи çăпатисем шăтаççĕ, унтан тăпăлса тухаççĕ. Çăпатисене хывса вĕсем çара уран утаççĕ. Тĕлĕкре ура салтни – пурнăç каялла каясса теççĕ. Çара уран утни – куççуль, выльăхсăр пулать[12]. Чăпар кайăк вĕсене тăрна куçĕ пек тăрă шыв хĕрне илсе çитерет. Таса, тăрă шыв вăл – çут тĕнче, çутă кун, лайăх кун-çул пуласса, телее[13]. Малалла каяс – çул пĕтрĕ, каялла каяс – хăрушă. Сулă тăваççĕ, тĕрлĕрен чул пуçтараççĕ – хăма пек чулсем, чăмăр пек çаврака çулсем. Çавсене сулă çине пуçтарса хурас теççĕ. Чул пуçтарни – хуйăх[14]. «Шалча пек хырсем касрăмăр», – тенĕ. Сулă çине тăраткаласа хўшĕ тума. Кайран тата хайлав вĕçĕнче: «Пĕр кашта пек тўрĕ хыр касрăмăр...», – тет калуçă. Тĕлĕкре йывăç кассан çын вилет теççĕ[15]. Шалча пек хырсем касни – çамрăксем вилессе. Кашта пек тўрĕ хыр – тĕреклĕ çын, арçын вилессе тенĕ. Калуçă хайлав тăршшĕпе мĕн хыççăн мĕн пулассине тĕлĕк пĕлтерĕшĕ урлă систерсе пырать.

Çапла вара, çак хайлавра тĕлĕк сăнарлăхĕ урлă чăваш халăхĕн мифологилле шухăшлавĕ, аваллăхĕ курăнать. Мĕншĕн тесен, тĕлĕк пĕлтерĕшĕн символĕ, сăнарлăхĕ ĕмĕрсем хушши сĕм авалтанах паянхи куна çитнĕ халăхăн генетикăллă астăвămĕ.

**Литература тата асăрхаттарусем**

---

[1] *Артемьев Ю.М.* Илья Ефимович Ефимов (Тăхти) (Критикăпа биографи очеркĕ) // Тăхти (Ефимов) Илья Ефимович. Поэзи, проза, публицистика. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1979. С. 6–16.

[2] *Федоров Г.И.* Сăнарлă сăмах шыравĕ: тĕпчев ĕçĕ. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1996. С. 224.

[3] *Родионов В.Г.* Чăваш литератури (1917–30 çç.): Вĕренӳ пособийĕ. Шупашкар: Чăваш ун-т изд-ви, 2005. 352 с.; *Родионов В.Г.* Илле Тăхти (Пурнăçĕпе пултарулăхĕ) // Илле Тăхти. Суйласа илнисем: сăвăсем, поэмăсем, калавсем, статьясем, çырусем. Шупашкар: ЧПГĂИ, 2009. С. 5–31.

[4] *Кириллова И.Ю.* Своеобразие художественного мира Илле Тхти: учеб. пособие / И.Ю. Кириллова. Чебоксары: изд-во Чуваш. ун-та, 2009. С.156.

[5] *Тăхти И.* Суйласа илнисем: сăвăсем, поэмăсем, калавсем, статьясем, çырусем. Шупашкар: ЧПГĂИ, 2009. С. 219.

[6] Çавăнтах. С. 221.

[7] Чăваш халăх пултарулăхĕ. Сăнавсемпе ĕненӳсем. Тĕлĕксем / пухса хатĕрлекенĕ, ум сăмахпа ăнлантарусене çыраканĕ *Е.В. Федотова.* Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2009. С. 285.

[8] Çавăнтах. С. 312.

[9] Çавăнтах. С. 353–354.

[10] Çавăнтах. С. 305.

[11] Çавăнтах.

[12] Çавăнтах. С. 337.

[13] Çавăнтах. С. 349–352.

[14] Çавăнтах. С. 346.

[15] Çавăнтах. С. 292–293.

*Е.В. Федотова*

# ТУПМАЛЛИ ЮМАХСЕНЕ ПУХНИ, ПИЧЕТЛЕНИ ТАТА УШКĂНЛАНИ

Тупмалли юмахсем ача-пăчана, çамрăксене ăс-тăн енчен çивĕч пулма, аталанма питĕ кирлĕ жанр шутланаççĕ. Чăваш фольклорисчĕ Е.С. Сидорова «Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Вак жанрсем» кĕнеке ум сăмахĕнче тупмалли юмахсене кам, хăçан, мĕн сăлтавпа каланине акă мĕнле ăнлантарать: «Тупмалли юмахсене чăвашсем ытларах улахра, выртмара, арманта, чăпта çапнă çĕрте тата ытти ĕçре ыйхă пусасран каланă. Улахсенче шӳтлесе „сутмалла" выляна. Вĕсене çавăн пекех каçсерен, ашшĕ-амăшĕ ĕçрен пушă вăхăтра е ал ĕç тунă чухне ачи-пăчине тавçăрулăха вĕрентес тĕллевпе каланă. Çапла майпа ватăрах çынсем çамрăксене пĕлӳ панă, харпăр хăй таврашĕнчи япалан илемлĕхне курма вĕрентсе пынă»[1]. Н.И. Ашмарин «Чăваш сăмахĕсен кĕнекинче» тупмалли юмахсене сутмалла вылянă чух каланине çакăн пек ăнлантарса çырать: «**Сутмалла,** назв. игры. *Альш.* Унтан выляççĕ сутмалла. Сутмалла выляс тесе ак мĕне калаççĕ. Хăшĕ те пулин пĕри калать тупмалли юмах (загадка). Ăна ыттисем „тупаççĕ", мĕне пĕлтернине йĕркипе ыйтаççĕ вара мĕн вăл тесе. Леш, пĕлменни, калать: вăл та пулин çавă тет. Унта хăшĕ пĕлмес, ăна вара «сутаççĕ»: арçынна пĕр килмен-кайман карчăк таврашĕ арăм параççĕ: сана çавă тесе; хĕрсене те çапла каччă е арçын параççĕ: сана çавă тесе. Унта вара кулаççĕ. Çавна калаç сутас тесе»[2].

Чăвашсен хушшинче çырса илнĕ тупмалли юмахсен тексчĕсем Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ăслăлăх архивĕнче упранаççĕ. Вĕсем питĕ нумай. Тупмалли юмахсен пысăк пайĕ – Н.В. Никольский фондĕнче[3]. Халăх сăмахлăхне пухакансем ытти жанрсемпе пĕрле çырса илнисем тата ятарласа тупмалли юмахсене кăна пухса хатĕрленĕ ал çырусем те пур. Пухса пичете хатĕрлекенсен шутĕнче И.С. Тукташ, Н.В. Васильев[4] т.ыт.те.

Пирĕн ĕçĕн тĕллевĕ — пухса пичете хатĕрленĕ, пичетленсе тухнă тупмалли юмахсене мĕнле ушкăнланине тĕпчесси.

Ытларах чухне тупмалли юмахсене ытти жанрсемпе пĕрле пичетлесе кăларнă.

1853 çулта Хусанти университет типографийĕнче Спиридон Михайловăн (Янтушăн) «Чувашские разговоры и сказки, составленные Спиридоном Михайловым, переводчиком чувашского языка»[5] кĕнеки тухать. Унта чăвашсен тупмалли юмахĕсен пайĕ те пур: «Загадки чувашские» тенĕ. Пурĕ 42 текст чăвашла-вырăсла пичетлесе кăларнă. Текстсене пухнă майăн черетпе вырнаçтарнă. Чăвашла текстсене вырăс саспаллисемпе çырса панă. Вырăсла хитре, тирпейлĕ куçарнă. Тупсăмĕсене те лайăх ăнлантарса панă. Вĕсене текст айĕнче вырнаçтарнă. Тĕслĕхрен: «Ашшĕ чăмăр, амăшĕ лаптак, хĕрĕ хитре, ывăлĕ ухмах. Топă: *ашшĕ авăн йуççи, амăш – итем, хĕрĕ – шăпăр, ывăлĕ – çапоççи.* (Отец толст, мать гладка, дочь красива, сын дурак. Отгадка: *отец – овинный шиш, мать – ток на гумне, дочь – метла, сын – цеп*)»[6]. Текстсенче тури диалект сыхланса юлни сисĕнет.

1907 çулта Хусанта И.Н. Юркин «Юмахсем» (Загадки) кĕнеке кăларнă[7]. Унта пурĕ 134 тупмалли юмах кĕнĕ. Тупмалли юмах тексчĕ мĕнле саспаллирен пуçланать, çав саспалли тăрăх вырнаçтарнă. Тупсăмне текст хыççăн юнашар панă. Сăмахран: «Асаттенĕн аллă арча Турă панă вир пĕрчи? – Вĕлле хурчĕ.» Ку текст «А» саспаллирен пуçланать, ăна «А» патне кĕртнĕ. Ку текст чи малтан тăрать. Саспаллисене çак йĕркепе вырнаçтарнă: А –14 текст, У – 3, Ă – 1, Ӳ – 1, И –7, Й – 7, В – 9, Л – 5, М – 1, Н – 2, К – 13, Х – 12, Ш – 3, С – 5, Ç – 17, Т – 12, Ч – 4, П – 28. Пурĕ 18 саспалли, 134 текст. Саспаллисем тăрăх уйăрнă текстсене шалта та алфавита пăхăнтарма тĕллев лартман пулин те хăй вăхăчĕшĕн лайăх, хальччен пулман кĕнеке пичетленсе тухнă. Кĕнеке хыçĕнче «Кĕнеке кăларакантан» пай та пур. Унта И.Н. Юркин вулакансем патне çакăн пек ыйтса çырнă: «Çак кĕнекене кĕмен юмахсем тĕл пулсан вĕсене çырса илсе ман патма яма тăрăшăр. Тепĕр хут станпа пуçтарса кăларнă чухне вĕсене те çакăнта шăнăçтарăпăр. Юмахсене пуçтарма пулăшнă çынсене пурне те тавтапуç тетĕп»[8]. Кĕнекери тупмалли

юмахсенче Сĕве тăрăхĕнчи ял ячĕсем те тĕл пулаççĕ: «Аслă Кашаран Кĕçĕн Кашана туй килет? – Кăвар»[9]; «Çĕнĕ Мертлĕре архиерей юрлать? – Чан çапни»; «Çĕнĕ Мертлĕре çитмĕл кукша? – Куршанкă»[10]. Ытти тăрăхра çырса илмен, тĕл пулман текстсем те пурри кĕнекен пысăк пахалăхне кăтартать. Тĕслĕхрен: «Йытă вĕрмест, çын сисмест, хăй çынна çыпçăнать? – Сăвăс»; «Вĕт халăх кĕтӳ хăвалать? – Шăпăр»[11]; «Кайнă чух юрласа каять, килнĕ чух хăсса килет? – Шыва кайни»[12]; «Хăвăлта хăнтăр выртать? – Чăлха»[13]. Кашни тупмалли юмах тексчĕ вĕçне ыйту палли лартнă. Çакă «мĕн вăл?» – тесе ыйтнине пĕлтерет. Ахальтен мар пухса хатĕрлекен тире урлă тупсăмне палăртать – ыйту çине хурав парать. Тупмалли юмахсенче халĕ усă курман, кивелнĕ, ĕлĕк ĕçре усă курнă сăмахсем упранса юлнă. Акă, тĕслĕхрен: «Пĕр шӳпкенĕн тăватă куç? – Хивсе»[14]. *Хивсе* – пир тĕртмелли станокăн пайĕ, тĕртнĕ пире хивсе çумне чĕркенĕ[15]. Халь пир тĕртекен çукпа пĕрех, сăмахĕпе те усă курмастпăр. Ку сăмахăн пĕлтерĕшне пĕлекен те питĕ сайра. Тупмалли юмахсенче халăхăн иртнĕ кун-çулĕ, ĕçĕ-хĕлĕ упранса юлнă. Тупмалли юмахсене И.Н. Юркин хăй çуралса ӳснĕ тăрăхра – Чĕмпĕр кĕпĕрнин Пăва уесĕнчи Пӳркелте тата таврари ялсенче – пухни уççăнах курăнать: текстсенче вырăнти калаçу формисем, диалект сăмахĕсем, каларăмăр ĕнтĕ, Сĕве тăрăхĕнчи ял ячĕсем – сыхланса юлнă.

1906–1908 çулсенче Венгри тĕпчевçи Дюла Месарош Хусан тата Чĕмпĕр кĕпĕрнисенчи чăваш ялĕсенче халăх сăмахлăхне пухнă, çав шутра тупмалли юмахсене те. Чăваш халăх сăмахлăхĕн пуххине вăл 1912 çулта Будапештра пичетлесе кăларнă. Унта 205 тупмалли юмах тата вĕсен тупсăмĕсем кĕнĕ[16].

Н.И. Ашмарин тупмалли юмахсен тексчĕсене нумай пуçтарнă[17], вĕсене вăл «Чăваш сăмахĕсен кĕнекине»[18] чылай кĕртнĕ, тĕпчев ĕçĕсенче усă курнă[19].

Тупмалли юмахсен тексчĕсем журналсенче те пичетленсе тухнă[20].

1936–1940 çулсенче И.С. Тукташ ваттисен сăмахĕсемпе тупмалли юмахсене пухса пичете хатĕрленĕ[21]. Тупмалли юмахсен тексчĕсене И.Н. Юркин классификацине тĕпе хурса уйăрнă: тупмалли юмах тексчĕ мĕнле саспаллирен

пуçланать, çав саспалли тăрăх вырнаçтарнă: А – 43 текст, Ă – 5, В – 26, Е – 4, Ĕ – 3, И – 14, К – 42, Л – 9, М – 15, Н – 4, П – 78, С – 17, Ç – 48, Т – 36, Ч – 22, У – 22, Ӳ – 1, Х – 40, Ш – 13, Й – 16. Пурĕ 450 текст. Вĕсен ытларах пайне литература чĕлхипе çырни куçкĕрет. Ĕçĕ Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ăслăлăх архивĕнче упранать.

1941 çулта «Илемлĕ литература» альманах 7-мĕш кĕнеке тухнă[22]. Унта Чăваш Енри Красноармейски районĕнчи Кĕçĕн Шетмĕ тавраш ĕнче М. Нямань пухнă тупмалли юмахсем 76 текст пичетленсе тухнă. Текстсене пухнă май мĕнле çырса пынă, çавăн пек пичетленĕ, ушкăнлама тĕллев лартман. Апла пулин те текстсене çырса илни, кĕнекере пичетлесе кăларни, чăваш халăх сăмахлăхне упраса хăварма тăрăшни паха. М. Нямань пухнă тупмалли юмахсем хушшинче ытти çăлкуçсенче тĕл пулаканнисемпе пĕрлех хăйне евĕрлĕ, урăх тĕл пулман текстсем те пур.

И.Д. Никитин-Юркки 1946 çулта 356 тупмалли юмах пухса йĕркеленĕ. Тупмалли юмах мĕнле саспаллирен пуçланать, çав саспаллипе (алфавит йĕркипе) ушкăнланă[23].

1949 çулта И.С. Тукташ хатĕрленĕ «Чăваш фольклорĕ»[24] кĕнеке тухать. Унта сутмалли юмахсем те кĕнĕ. Вĕсене, тĕпрен илсен, темăсем тăрăх тата камран çырса илнипе уйăрнă. Тĕслĕхрен: «Çутçанталăк», «Культура. Пурнăçри явленисем», «Ĕç хатĕрĕсем», «Кил-çурт, кил-çурт таврашĕ», «Тыр-пулсем, пахча çимĕçĕсем», «Чĕрчунсем» *Пӳркел,* И.Н. Юркин 1902–10 çç. пухнă (88 текст), «М.В. Васильевăран çырса илнĕ сутмалли юмахсем» (29 текст) Ив. Патмар сборникĕ, с. 252–272[25]. Пурĕ 117 текст. Вĕсене литература чĕлхипе çырнă. Хăш-пĕр сăмахсен калаçу формине сыхласа хăварса пичетленĕ (*Аçтăркан, твата* т.ыт.те).

1950 çулта Шупашкарта В. Долгов пухса хатĕрленĕ «Ваттисем çапла калаççĕ. Ваттисен сăмахĕсем, тупмалли юмахсем»[26] ятпа кĕнеке тухнă. Тупмалли юмахсене çак темăсемпе уйăрнă: «Çутçанталăк» – 46 текст, «Йывăç-курăк» – 38, «Çын» – 16, «Кил-çурт, килти япаласем» – 33, «Ĕçпе ĕç хатĕрĕсем» – 44, «Тумтир» – 10, «Апат-çимĕç» – 12, «Кĕнеке–хаçат» – 6, «Чĕрчун» – 38. Кĕнекере тупмалли юмахсем пурĕ 243 текст, вĕсене литература чĕлхипе пур

тĕлти чăваша та ăнланмалла çырса кĕртнĕ. Каярах тухнă пур кăларăмсенче те текстсене литература чĕлхипе çырнă.

1957 çулта В. Долгов пухса хатĕрленĕ тепĕр кĕнеке тухать, вăл «Юмах ярăп, юптарăп»[27] ятлă. Унта тупмалли (сутмалли) юмахсем пичетленсе тухнă. Текстсене, тĕпрен илсен, малтанхи кĕнекинчи пекех ушкăнланă: «Çутçанталăк» – 66 текст, «Йывăç-курăк» – 63, «Чĕрчун» – 56, «Çын, халăх» – 28, «Кил-çурт, килти япаласем» – 102, «Ĕçпе ĕç хатĕрĕсем» – 76, «Тумтир» – 22, «Апат-çимĕç» – 34, «Культура ыйтăвĕсем» – 23. «Тĕрлĕрен» ятпа тепĕр ушкăн хушнă, унта 27 текст. Пурĕ 497 текст. 1950 çулта тухнă кĕнекере те, кунта та текстсене ăçтан çырса илнине кăтартман пулин те хăй вăхăчĕшĕн çак ĕçсем пĕлтерĕшлĕ пулнă. Кĕнекесен ум сăмах пайĕ те пур. Вĕсене пухса хатĕрлекен «ум сăмах вырăнне» тесе палăртнă. Унта чăвашсен тупмалли юмахĕсен уйрăмлăхĕсем çинчен тĕплĕн ăнлантарса пама тăрăшнă. Акă, тĕслĕхрен: «Тупмалли юмахсем тăрăх халăх мĕнле ĕçпе пурăннине, унăн культурине пĕлме пулать. Тупмалли юмахсем, вĕсен форми, вĕсен тупписем халăхăн ăс-хакăлне, шухăш-кăмăлне кăтартса параççĕ.

Чăвашсен тупмалли юмахĕсенче ял пурнăçĕ, хресчен пурнăçĕпе йăлисем, ял хуçалăхĕнчи ĕç хатĕрĕсем, выльăх-чĕрлĕхсем, тыр-пулсем, йывăç-курăксем, пахча çимĕçсем ытларах курăнаççĕ. Çав шутра ĕç хатĕрĕсем: плуг, сӳре, çурла тата ыттисем те; тырă-пулă: тулă, ыраш, сĕлĕ, урпа, пăри, вир, хура тул, пăрçа, ясмăк; выльăх-чĕрлĕх: лаша, ĕне, сурăх, качака, сысна тата ытти те, çаксем çумне тупмалли юмахсенче палăракан ĕçсемпе йăласене хушсан вĕсем халăх пурнăçне кăтартса параççĕ теме пулать. Тупмалли юмахсем тăрăх халăх хăш вырăнта пурăннине те пĕлме пулать»[28].

Пухса хатĕрлекен чăвашсен тупмалли юмахĕсем тата нумайрах пулнине пĕлсе пăшăрханса çакăн пек çырать: «Эпир хамăрăн тупмалли (сутмалли) юмахсене çаплах-ха йĕркеллĕн пухман, тĕпчесе тухман. Вĕсем халăх хушшинче сăмах вĕççĕн пиншерĕн çӳреççĕ, вĕсен шучĕ çак кĕнекеринчен темиçе хут та ытларах („пин çăлтăр сапнă" пекех нумай пулĕ)»[29].

Вулакансем валли асăрхаттару пайĕ те пур: «...Ку кĕнекере пĕр япалана е пулăма пĕлтерекен юмахсем икшер те виçшер тĕл пулаççĕ (ун пек çĕрте иккĕмĕшпе виççĕмĕшне «*» паллăпа асăрхаттарнă)»[30].

Н.В. Васильев та тупмалли юмахсен ал çырăвне темăсем тăрăх ушкăнланă[31].

1960 çулта Шупашкарта Н.Р. Романов пухса йĕркеленĕ «Ваттисен сăмахĕсем, каларăшсем, сутмалли юмахсем» кĕнеке кун çути курнă[32]. Пухса йĕркелекен материала 35 çул хушши пухнă – 1924–1959 çулсенче. Кĕнекери текстсем икĕ чĕлхепе тухнă: чăвашла тата вырăсла. Ку питĕ пĕлтерĕшлĕ: чăваш халăх тупмалли юмахĕсене вырăсла пĕлекен пур халăх та вуласа пĕлме пултарать. Чăвашсен тупмалли юмахĕсемсĕр пуçне пухса хатĕрлекен тата ытти халăхсенне те кĕртнĕ, сăмахран, белорус, латыш, уйгур, хакас, якут, ирçе, удмурт, эвенк, каракалпак т.ыт.те. Н.Р. Романов тупмалли юмахсен пайне «Сутмалли юмахсем» тесе палăртнă. Текстсене темăсем тăрăх 12 пысăк пая пайланă: I. Этем. Человек; II. Пӳрт-çурт. Строения; III. Хатĕрсем, килти япаласем. Орудия труда, домашние вещи; IV. Ĕç-хĕл. Труд; V. Тырпул, пахча çимĕç, ана-çаран. Сельскохозяйственные культуры. Поля и луга; VI. Выльăх-чĕрлĕх. Домашние животные; VII. Çи-пуç. Одежда; VIII. Ĕçме-çиме. Пища и напитки; IX. Çут çанталăк. Вселенная, природа; X. Чĕр чунсем. Животные; XI. Йывăç-курăк. Растения; XII. Тĕрлĕрен. Разное. Темăсем ăшĕнче тата уйрăм пайсем пур. Тĕслĕхрен: «Этем. Человек» тема ăшĕнче çынпа çыхăннă çакăн пек пайсем пур: «Этем. Человек», «Пуç. Голова», «Миме. Мозг», «Куç. Глаз», «Шăлсем. Зубы», «Çӳç. Волосы», «Кукша. Лысина», «Сухал. Борода», «Çăвар. Рот», «Çамка. Лоб», «Сăмса. Нос», «Сăмса юхни. Выделение из носа», «Кăкăр шăмми. Грудная кость», «Чĕлхе. Язык», «Хăлха. Ухо», «Алă. Рука», «Пӳрнесем. Пальцы», «Ал тымарĕ. Пульс», «Чĕрне. Ноготь», «Ура. Нога», «Чĕре. Сердце», «Сула. Селезенка», «Кăвапа. Пуп», «Ача. Ребенок». Кĕнекене питĕ нумай текст кĕнĕ – 1700 ытла тупмалли юмах[33]. Н.Р. Романов ют çĕршыв тĕпчевçисен (Д. Месарош, Х. Паасонен) ĕçĕсемпе те усă курнă, вĕсем чăвашсенчен çырса илнĕ тупмалли юмахсене хăйсен кĕнекисене кĕртнĕ. Тĕслĕхрен, Х. Паасонен кĕнекинчен илнĕ «Урай варринче йĕс пукан ларать (Посреди пола

стоит медный стул). *Паасонен, 1900*»[34]. Кун пек тĕслĕх урăх упранса юлман. Пухса хатĕрлекен текстсене ăçтан илнине пурне те кăтартнă. Çăл куçне кăтартман текстсене Н.Р. Романов 1924–1958 çулсенче хăй пуçтарнă, чăваш çыннисенчен ыйтса çырса илнĕ, Чăваш Ен районĕсенче вăл нумай хутчен пулнă[35]. «Составительтен» пайра пухса йĕркелекен ваттисен сăмахĕсемпе тупмалли юмахсен халăх пурнăçĕнчи пĕлтерĕшне, ытти халăхсеннипе танлаштарнине, хăйĕн ĕçĕн меслетне ăнлантарса панă, текстсене малашне те пухмалла иккенне палăртнă. Кĕнекере «Усă курнă кĕнекесемпе ал çырусем», «Каларăшсенчи тĕп сăмахсемпе сутмалли юмахсен тупписене кăтартни», «Кĕнекере усă курнă илемлĕ произведени авторĕсен ячĕсем» пур. Н.Р. Романов пухса йĕркеленĕ кĕнеке паянхи куна та хăйĕн пĕлтерĕшне çухатман. Ахальтен мар ĕнтĕ 2004 çулта ку кĕнекен 2-мĕш кăларăмĕ тухнă[36].

Тупмалли юмахсен самай туллирех пуххи 1984 çулта «Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Вак жанрсем» кĕнекере тухать[37]. Кĕнекене ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем, сăнавсемпе паллăсем, тупмалли юмахсем кĕнĕ. Пухă пĕр чĕлхепе – чăвашла – тухнă. Пухса хатĕрлекенĕсем: Е.С. Сидорова, В.А. Ендеров. Тупмалли юмахсем пурĕ 3214 текст. Кашни текстăн хăйĕн номерĕ пур. Кĕнекере текстсене талккăшпе, витĕр (сплошь) номерленĕ: кашни текстăн хăйне уйрăм номер. Текстсене çак темăсем тăрăх ушкăнланă: «Çутçанталăкри пулăмсем» – 1–666 текст, «Йывăç-курăк» – 667–789, «Пахча çимĕç» – 790–927, «Тыр-пул» – 928–1011, «Тискер чĕрчунсем» – 1012–1052, «Кайăк-кĕшĕкпе шыври чĕрчунсем» – 1053–1120, «Хурт-кăпшанкă» – 1121–1183, «Килти чĕрчунсем» – 1184–1385, «Этем» – 1386–1603, «Çипуç» – 1604–1771, «Ĕçме-çиме» – 1772–1871, «Çурт-йĕр» – 1872–2112, «Хуçалăхри хатĕр-хĕтĕр» – 2113–2921, «Ĕç-хĕл» – 2922–3165, «Тĕрлĕрен» – 3166–3214. Чи нумай текст хуçалăхри хатĕр-хĕтĕрпе (809), çутçанталăкри пулăмсемпе (666), ĕç-хĕлпе (243) çыхăннă. Текстсене ăçтан, камран çырса илнине май килнĕ таран туллин çырса пама тăрăшнă. Тома хатĕрленĕ чухне хальччен пуçтарнă, пичетленсе тухнă текстсене шута илнĕ. Çав шута Е.С. Сидорова хăй 1969–1980 çулсенче тĕрлĕ çĕрте çырса илнĕ тупмалли юмахсем те кĕнĕ. Кĕнекен ум сăмахĕ,

асăрхаттарусем, кĕскетнĕ ятсем, ăнлантарусем, сайра тĕл пулакан сăмахсем, библиографи, тупмалли юмахсен тупсăмĕсен кăтартмăшĕ пур. Кĕнеке вăтăр çул каялла тухнă пулин те чăваш халăхĕн тупмалли юмахĕсен паянхи куна çакăн пек тулли пухă урăх çук.

1993 çулта Канаш хулинче И.А. Патмар пухнă «Тупмалли юмахсем» кĕнеке тухнă[38]. Текстсене çак темăсем тăрăх вырнаçтарнă: «Çут çанталăк», «Çут çанталăк паллисем», «Вăхăт, пурнăç тата вилĕм», «Çипуç», «Пир-авăр, сӳс-кантăр», «Пӳрт-çурт». Кĕнекере пурĕ 1145 текст. Текстсене хăш ялтан, районтан çырса илнине кăтартнă.

2007 çулта Шупашкарта И.А. Патмар, Э.И. Патмар, С.Э. Патмар хатĕрленĕ «Тупмалли юмахсем» кĕнеке тухать[39]. Кĕнекере пурĕ 3174 текст. Тупмалли юмахсене тупсăмĕсем тăрăх, тупсăмĕсене алфавитпа вырнаçтарнă. Хăш тупмалли юмах ăçта вырнаçнине алфавитпа кăтартнă. Вулакан кирлĕ текста çăмăллăнах тупма пултарать. Текстсене ăçтан илнине кăтартман.

Çапла вара, кашни кĕнеке тухмассерен тупмалли юмахсен тексчĕсен шучĕ вĕсенче ӳссе пырать. 1853 çулта С. Михайлов кăларнă кĕнекере тупмалли юмахсен тексчĕсене пухнă, çырса пынă майăн вырнаçтарнă. 1907 çулта тухнă И.Н. Юркин хатĕрленĕ «Юмахсем» кĕнекере, И.С. Тукташ пичете хатĕрленĕ текстсене, И.Д. Никитин-Юркки йĕркеленĕ тупмалли юмахсене пуçламăш саспаллипе вырнаçтарнă пулсан, каярахри кăларăмсенче (В. Долгов, Н.Р. Романов, Е.С. Сидорова, В.А. Ендеров т.ыт.те) тупмалли юмахсене темăсем тăрăх ушкăнланă. И.А. Патмар, Э.И. Патмар, С.Э. Патмар 2007 çулта хатĕрлесе кăларнă кĕнекере текстсене тупсăмĕсем тăрăх, тупсăмĕсене алфавитпа вырнаçтарнă.

**Литература**

---

[1] Чăваш халăх сăмахлăхĕ. V т. Вак жанрсем / Пухса хатĕрлекенсем Е.С.Сидорова, В.А.Ендеров. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1984. С.16.

[2] *Ашмарин Н.И.* Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. Шупашкар: Чăвашгосиздат, 1936. Т. 11. С. 209.

[3] Фольклор: загадки // Рукописный фонд Н.В. Никольского: путеводитель (научный архив Чувашского государственного института гуманитарных наук). Чебоксары: ЧГИГН, 2005. С. 187–188.

[4] ЧПГĂИ ĂА. III уйр., 311 упр. ед. Н.В. Васильев 1937–1967 çулсенче тĕрлĕ вырăнти çынсенчен тата кĕнекесенчен çырса илсе йĕркеленĕ ваттисен сăмахĕсен пуххи; ЧПГĂИ ĂА. III уйр., 417–420 упр. ед. Н.В. Васильев 1950–1967 çулсенче тĕрлĕ вырăнта пухнă тупмалли юмахсем.

[5] *Михайлов С.М.* Чувашские разговоры и сказки. Казань: В университетской типографии, 1853. С. 62.

[6] *Михайлов С.М.* «Чувашские разговоры и сказки». Казань: В университетской типографии, 1853. С. 58.

[7] *Юркин И.Н.* Юмахсем. (Загадки). Казань: Типолитогр. И.В. Ермолаевой (бывш. Ключникова), 1907. 16 с.

[8] Çавăнтах. С. 16.

[9] Çавăнтах. С. 3.

[10] Çавăнтах. С. 11.

[11] Çавăнтах. С. 6.

[12] Çавăнтах. С. 8.

[13] Çавăнтах. С. 9.

[14] Çавăнтах. С. 15.

[15] Чăвашла-вырăсла словарь: 40 000 сăмаха яхăн // Андреев И.А., Горшков А.Е., Иванов А.И. [т.ыт.те]; *М.И. Скворцов* редакциленĕ. Иккĕмĕш, улăштарман кăларăм. М.: Рус. яз., 1985. С. 557.

[16] Csuvas nerőltesi gyüjtemeny, II kötet. Gyutötte es feldolgosta d-r Meszaros Gyula. Budapest, 1912. Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 2. Д. Месарош пухса хатĕрленĕ. Будапешт, 1912. 540 с.

[17] ЧПГĂИ ĂА. I пай. 7 упр. ед. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче тата тĕрлĕ шкулсенче вĕренекенсем 1900–1901 çулсенче Н.И. Ашмарин патне ярса панă фольклор материалĕсем; ЧПГĂИ ĂА. I пай. 807 упр. ед.; 808 упр. ед.; 24 упр.ед. Тĕрлĕ ялсенчен Н.И. Ашмарин патне ярса панă фольклор материалĕсем т.ыт.те.

[18] *Ашмарин Н.И.* Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. Хусан; Шупашкар, 1928–1950. Т. 1-17.

[19] *Ашмарин Н.И.* Опыт исследования чувашского синтаксиса. Ч. 1. Казань: Типолитогр. В.М. Ключникова, 1903. 570 с.

[20] Сутмалли юмахсем. Маль пухса çырнă (15 текст), Аттай пуçтарнă (8 текст) // Сунтал. 1926. 5–6 №. С. 32; Ваттисен сăмахĕсем. Тупмалли юмахсем / Силиверстов-Актай пухнă (9 текст) // Хатĕр пул. 1940. 2 №. С. 21; Тупмалли юмахсем / Н. Синдимиров пухнă (10 текст) // Хатĕр пул. 1940. 9 №. С. 17. т.ыт.те.

[21] ЧПГĂИ ĂА. I пай. 120 упр. ед. Л. 1–28. И.С. Тукташ 1936–1940 çулсенче пичете хатĕрленĕ ваттисен сăмахĕсемпе тупмалли юмахсем.

[22] *Нямань М.* Тупмалли юмахсем // Илемлĕ литература: альманах. 7 №. Шупашкар: Чăвашгосиздат, 1941. С. 101–102.

[23] Никитин-Юркки И.Д. пухса йĕркеленĕ тупмалли юмахсем // ЧПГĂИ ĂА. I пай. 379 упр. ед. С. 340–365.

[24] Чăваш фольклорĕ / И. Тукташ хатĕрленĕ. Шупашкар: Чăвашгосиздат, 1949. С. 328.

[25] Çавăнтах. С. 156–160.

[26] Ваттисем çапла калаççĕ: Ваттисен сăмахĕсем, тупмалли юмахсем / *В. Долгов* пухса хатĕрленĕ. Шупашкар: Чăвашгосиздат, 1950. С. 78.

[27] Юмах ярăп, юптарăп / В.Долгов пухса хатĕрленĕ. Шупашкар: Чăвашгосиздат, 1957. 92 с.

[28] Çавăнтах. С. 4.

[29] Çавăнтах. С. 8.

[30] Çавăнтах. С. 8.

[31] ЧПГĂИ ĂА. III пай, 311 упр. ед. Н.В. Васильев 1937–1967 çулсенче тĕрлĕ вырăнти çынсенчен тата кĕнекесенчен çырса илсе йĕркеленĕ ваттисен сăмахĕсен пуххи; ЧПГĂИ ĂА. III пай. 417–420 упр. ед. Н.В. Васильев 1950–1967 çулсенче тĕрлĕ вырăнта пухнă тупмалли юмахсем.

[32] Ваттисен сăмахĕсем, каларăшсем, сутмалли юмахсем / *Н.Р. Романов* пухса йĕркеленĕ. Шупашкар: Чăваш АССР патшалăх изд-ви, 1960. С. 360.

[33] Çавăнтах. 1960. С. 191–333.

[34] Ваттисен сăмахĕсем, каларăшсем, сутмалли юмахсем = Чувашские пословицы, поговорки и загадки / Н.Р. Романов пухса йĕркеленĕ. 2-мĕш кăларăм. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2004. С. 185.

[35] При подготовке сборника использовано фольклорное собрание составителя, накопленное им за долгие годы в живом общении с народом во время многократных выездов в районы Чувашии. Все примеры без ссылки на источники записаны составителем в 1924–1958 гг. Цит. по: *Н. Романов.* От составителя / Ваттисен сăмахĕсем, каларăшсем, сутмалли юмахсем. 1960. С. 6–7.

[36] Ваттисен сăмахĕсем, каларăшсем, сутмалли юмахсем = Чувашские пословицы, поговорки и загадки. / 2004. Т. 5. С. 351.

[37] Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 5. Вак жанрсем / пухса хатĕрлекенсем Е.С. Сидорова, В.А. Ендеров. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1984. 352 с.

[38] *Патмар И.А.* Тупмалли юмахсем (1929–1975 çулсенче И.А. Патмар çырса илнĕ-пухнă сутмалли-тупмалли юмахсем). Канаш, 1993. 151 с.

[39] *Патмар И.А., Патмар Э.И., Патмар С.Э.* Тупмалли юмахсем. Т. 1. Шупашкар: Çĕнĕ Вăхăт, 2007. 208 с.

# ЧĂВАШ НАЦИ ШУХĂШЛАВĔ ТУПМАЛЛИ ЮМАХСЕНЧЕ ӲКЕРĔННИ

***Е.В. Федотова***

Тупмалли юмахсенче – пĕр-пĕрин хушшинчи хутшăну, тĕнче курăм, сăнарлăх паллисем, чĕлхе уйрăмлăхĕсем, выльăх-чĕрлĕх усракан, тыр-пул ӳстерекен халăх çут çанталăк пулăмĕсене сăнани – пĕтĕмпе хăйне евĕрлĕ, хăйĕнни пек кăна, халăхăн уйрăмлăхĕ – чăвашăн наци шухăшлавĕ – курăнса тăрать.

Фольклористикăра тупмалли юмахсене виçĕ тĕрлĕ пулнине палăртма йышăннă: метафорăллă, ыйтуллă тата арифметикăллă[1]. Метафорăллисем чи йышлисем шутланаççĕ. Аристотель тупмалли юмах лайăх метафора тесе пĕтĕмлетнĕ. Метафорăллă е аллегориллĕ тупмалли юмахсем чи йышлисем шутланаççĕ, вĕсенче пĕр япала тепринпе улшăнать, танлаштарăнать[2]. Тупмалли юмахри икĕ япалан пĕрпеклĕхĕ ытларах кĕтмен çĕртен пулать, тупмалли юмах (тата пурнăçри япалан пĕрпеклĕхĕ) поэтикăллă парадокс принципĕпе пулса пырать[3]. Тĕслĕхрен: *тĕк – тум*, *кĕпе*; *купăста – Пинпӳ майри, çитмĕл те çичĕ тĕслĕ тум тăхăннă пуп*; *куç – ĕнчĕ, шăрçа*, *ахах*; *пăри – пĕр сăпкара икĕ ача, пĕр хутаçра икĕ мăйăр*; *сĕлĕ – йĕтĕрпи, йĕтĕр тăрри шерепи* т.ыт.те.

Тупмалли юмахсем сăнарлăх паллисемпе уйрăлса тăнине Е.С. Сидорова та палăртать: «Халăх сăмахлăхĕн илемлĕх мелĕсем кунта пурте лайăх палăраççĕ. Çав мелсенчен чи анлă сарăлни – метоними. Тупмалли юмахсенчен чылайăшĕ хăйсен тупсăмĕн метафори пулса тăраççĕ. Халăх сăмахлăхĕнче, каярах литературăра çирĕпленнĕ метафорăсем тупмалли юмахсене илемлĕ сăнар парса тăраççĕ (*сывлăм – куççуль*, *пăр – кĕмĕл*, *çурла*

– *кукăр*, *çулăм – хĕрлĕ автан*, *çулталăк – вун ик туратлă йывăç*, *юр – шур пĕркенчĕк* т.ыт.те)[4].

Тупмалли юмахсене хăйне евĕрлĕ сăнарлăх кӳрекенни вăл – танлаштару. Кăмакара вут çунса пĕтес умĕн кăвар туртнă чухне кăвар мĕнле шăнкăлтатса, сасăпа çунса, çулăмпа йăлкăшса, йăлтăртатса пынине чăваш мĕн авалтан сăнаса пурăннă. Юратса сăнаса пурăннă чăваш çав кăвара туйипа, туй халăхĕпе танлаштарнă. Туй чăваш пурнăçĕнче пысăк тата пĕлтерĕшлĕ пулăм. Чăваш туя кайнă чух чи лайăх тумне тăхăннă. Чи чаплине, кĕмĕл тум, эрешлĕ тум. Туй халăхĕн йăлтăртатса, утнă е ташланă чухне шăнкăртатса тăракан тумĕ туя илем кӳнĕ. Чăваш хĕрарăмĕсем кăмакаран вучаха туртнă кăвара туйипа танлаштарнă. Акă çав илемлĕ текстсем: *Шăнкăр-шăнкăр туй килет, пĕр шăтăка кĕрех каять*[5], *Аслă ялтан кĕçĕн яла туй килет*[6]. Çапла вара, тупмалли юмаха калакан-калăплакан çын текст тупсăмне ăс-тăнпа мĕнле йышăнни, курни, ăнланни курăнать. Тупмалли юмахсенче тата вĕсен тупсăмĕсенче чăваш халăхĕн пурнăçĕ, наци шухăшлавĕ курăнать. Текстсенче чăваш халăхĕ пурнăçри кулленхи ĕçĕн поэтикине, тĕрлĕ пулăмсен пĕрпеклĕхне курни, танлаштарни палăрса тăрать.

Тата тепĕр илемлĕ тĕслĕх: *Тĕп сакайĕнчен çар иртет* (пăр айĕнчен пулăсем иртни). Ку текста каласан куç умне кĕмĕл «тумлă» пулăсем – кĕмĕл тумлă çар тухса тăрать: вĕçĕ-хĕррисĕр. Таçти ĕлĕк-авалхи саманари кĕмĕл тумлă çар. Çав кĕмĕл тумлă çар чăвашăн генетикăллă астăвăмĕнче упранса юлнă теме пулать çак тупмалли юмах тĕслĕхĕпе. Тупмалли юмахсенче халăх кулленхи пурнăçăн, çутçанталăкри пулăмсен тĕлĕнмелле илемлĕ енĕсене курма пĕлни, асăрхани палăрать.

Тупмалли юмахсен тексчĕсене пăхсан чăваш хăйĕнчен аслине вырăна хуни, хисеплени курăнать. Аслисен (асатте, асанне, кукамай, кукаçи, пичче), вĕсен япалисен вăйне, хăватне кăтартни тĕл пулать, вĕсен

япалисем те (вĕрен, хуран т.ыт.те) вăрăмрах, çӳллĕрех, пысăкрах, йывăртарах, вăйлăрах. Акă, тĕслĕхрен, *Асатте вĕренне пуçтарса çитереймĕн* (çул)[7], *Асатте хуранне аллăн йăтаймĕç, Мăн асаттен хуранне çĕр аллăн йăтаймаççĕ* (авăн вучаххи), *Маçак çатми – мăнă çатми, ниепле те тытса илеймĕп, Асанне çатми – мăн çатма, ниçтан тытса ӳпĕнтерме çук* (йĕтем), *Пичче лашине тытса чараймăн* (çил, çавра çил), *Асатте çурчĕ нихăçан та çĕрес çук* (тĕнче) т.ыт.те. Ахальтен мар аслă çулти чăваш çыннисем кĕçĕннисене: «Эпĕр хамăртан аслисене – атте-аннене, асатте-асаннене, кукаçей-кукамая – çитес çук, эсĕр пире çитес çук», – теççĕ чун çирĕплĕхне, ӳт-пӳ вăй-халне, çын пултарулăхне тĕпе хурса[8]. Çакă тупмалли юмахсенче те курăнать.

Тупмалли юмахсенче чăваш çыннишĕн мĕн вăйлă, çӳллĕ, аслă, хиseплĕ пулнине те асăрхама пулать – лаша, пӳрт, çанталăк, юман, вăрман. Тĕслĕхрен: *Тĕнчере пĕр лаша пур, ăна никам та тытса чараймĕ* (çил, çавра çил), *Пăхма çăмăл, пӳрт урлă ывăтса каçарас çук* (хут) т.ыт.те.

Е.Н. Елеонская тĕпчевçĕ палăртнă тăрăх, тупмалли юмаха калакан çынни те, тупсăмне тупаканни те пĕр идея çаврăмĕнче пулмалла, икĕ енĕ те пĕлекен, ĕçлекен ĕç, пулăм пулмалла, пĕр шухăшлаври, пĕр тĕнче курăмри, пĕр ăс-тăн аталанăвĕнчи çынсем пулмалла, унсăрăн тупмалли юмахăн тупсăмĕ тупăнмасть[9]. Е.С. Сидорова та Е.Н. Елеонская шухăшĕн йĕрĕпе пырать: «Тупмалли юмахсем валли халăх хăйне паллă, куç умĕнчи, кил таврашĕнчи, куллен пурнăçра, ĕçре, хуçалăхра кирлĕ пулакан япаласене суйласа илет»[10]. Пурнăç улшăнса, çăмăлланса, лайăхланса пынă май ĕлĕк ĕçленĕ ĕçсем, ĕç хатĕрĕсем манăça тухса пыраççĕ. Çавăнпа хальхи вăхăтра нумайăшĕ (чăвашсемех!) чăвашсен тупмалли юмахĕсен тупсăмĕсене пĕлме йывăр теççĕ.

Чăвашсен тупмалли юмахĕсен-калавĕсен (загадки-повествования) хушшинче ӳсен-тăран пурнăçĕпе çыхăннисем те тĕл пулаççĕ. Тĕслĕхрен: *Чи! турĕ, пи! турĕ, çӳле кайрĕ,*

*йăва çавăрчĕ, çăмарта турĕ* (хăмла), *Чу! кайăп, йăва çаврăп, сакăршар çăмарта тăвăп* (пăрçа), *Ик эрнерен çуралать, сакăр эрне сăпкара выртать, çирĕм пилĕк эрне кипкере çывăрать, тăватă эрне ӳсет, икĕ эрне савăнать, икĕ эрне самăрлать, икĕ эрне саралать, çулталăкра çаврăнать* (ыраш) т.ыт.те. Вĕсен чăваш литературин жанрĕсем аталаннă вăхăтри хăйсен тӳпи пур[11]. Ӳсен-тăрансен пурнăçне кăтартакан тĕслĕхсен проекцийĕ каярах пĕр-пĕр паллă çын пурнăçĕ çинчен хайлас калавсене, унтан – повеçсене пулса кайма, аталанма пулăшнă, халăха çывăх текстсем пулнипе вĕсене чăваш вулаканĕ йышăннă. Ӳсен-тăрансен пурнăçĕ Vita herbae (Н.И. Толстой)[12] ӳкерĕннĕ тĕп шухăш чăваш халăх сăмахлăхĕнче, çав шутра тупмалли юмахсенче те, курăнать.

Çапла вара, чăвашсен тупмалли юмахĕсенче халăх пурăнса ирттернĕ кун-çулăн историйĕпе культура пахалăхĕ, наци шухăшлавĕ упранса юлнă. Тупмалли юмахсем – чăваш халăхĕн иксĕлми пуянлăхĕ, ăслăлăх валли паха тĕслĕхсем, ĕмĕрсем хушши пуçтарăннă сăмахлăхăн ахах-мерчен хайлавĕсем.

**Литература**

---

[1] *Буслаев Ф.И.* Исторические очерки русской словесности и искусства. Т. 1. СПб., 1861. С. 129.

[2] *Чичеров В.И.* Русское народное творчество. М., 1959. С. 322.

[3] *Рыбникова М.А.* Загадки. М.; Л.: Akademia, 1932. С. 57.

[4] *Сидорова Е.С.* Ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем, сăнавсемпе паллăсем, тупмалли юмахсем // Т. 5. Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Вак жанрсем. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1984. С. 19.

[5] Соснова А. 1940 ç. Пушкăрт АССРĕн Ермеккей районĕнчи заготскотра ĕçлекен чăвашсенчен çырса илнĕ тупмалли юмахсем // ЧПГĂИ ĂА. I пай. Т. 116. С. 90.

[6] ЧПГĂИ ĂА. I пай. Т. 807. 12891 упр. ед. Л. 68 (об.). Н.И. Ашмарин патне 1900 ç. Пăва уесĕнчи Раккассинчен (хальхи ТР, Пăва р-нĕ) П.Иванов учитель ярса панă фольклор материалĕсем.

[7] ЧПГĂИ ĂА. I пай. Т. 231. С. 427. Н.В. Никольский патне 1912 ç. Хусан кĕпĕрнин Етĕрне уесĕнчи (халĕ ЧР, Красноармейски р-нĕ) Мăн Шетмĕрен К. Макаров çырса янă.

[8] Авторăн экспедици материалĕсем. Чăваш Республикин Комсомольски районне кĕрекен Юнтапара 1945 ç. А.А. Федотова (Исмукова) (Чăваш Республикин Патăрьел районне кĕрекен Аслă Арапуçĕнчен качча килнĕ) каланине Е.В. Федотова çырса илнĕ.

[9] *Елеонская Е.Н.* Роль загадок в сказке // *Елеонская Е.Н.* Сказка, заговор и колдовство в России: сб. трудов / Вступ. ст. и сост. Л.Н. Виноградовой; подг. текста и коммент. Л.Н. Виноградовой, Н.А. Пшеницыной. М.: Индрик, 1994. С. 79–89. Ссылка на с. 80.

[10] *Сидорова Е.С.* Ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем, сăнавсемпе паллăсем, тупмалли юмахсем // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 5. Вак жанрсем. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1984. С. 17.

[11] *Федотова Е.В.* Истоки и формирование жанров чувашской литературы XVIII–XIX вв. Чебоксары: Чуваш. гос. ин-т гуманит. наук, 2006. С. 66; *Федотова Е.В.* Фольклорные тексты как истоки жанра *житие* в чувашской литературе // Истоки и эволюция литератур и музыки тюркских народов: сб. материалов Международной научно-практической конференции 23–24 сентября 2014 г., г. Казань. Казань: 2014. С. 191–194.

[12] *Толстой Н.И.* Язык и народная культура: Очерки по славянской мифологии и этнолингвистике. М.: Индрик, 1995. 380 с.

# ЮМАХСЕНЧИ ТУПМАЛЛИ ЮМАХСЕМ

*Е.В. Федотова*

Тупмалли юмахсем хăйсен ансатлăхĕпе ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсене çывăх. Вĕсене итлекенĕн ăстăнне, тавçăрулăхне пĕлме ятарласа усă кураççĕ. Тупмалли юмахсенче халăх фантазийĕ, унта таврари япаласемпе пулăмсен паллисем урлă сăнарласа панă[1]. Вырăс тĕпчевçи Е.Н. Елеонская палăртнă тăрăх, юмахсенчи ĕç-пуç малалла епле аталанса каясси, юмаха чĕрĕлĕх кĕртесси тĕрлĕ мелсенчен килет. Вĕсенчен пĕри вăл – тупмалли юмах. Акă мĕнле çырать Е.Н. Елеонская юмахсенчи тупмалли юмахсем çинчен: «Самый характер ее (загадки. – *Е.Ф.*) обусловливает ей прочное пребывание в сказке: тот таинственный элемент (основанный на неясности, неведении и т.п.), который наполняет сказку и любим ею, заключается и в загадке, затем она необыкновенно гибка, неожиданно рождается из сплетения обстоятельств, легко меняет форму, вся держится на образности, возбуждает любопытство и неотложно требует решения, иными словами отвечает стремлению сказки занимать, держать слушателей в напряжении»[2].

Чăваш халăхĕн юмахĕсенче те тупмалли юмахсем пур. Тупмалли юмахсем юмах-халапра, юрă-сăвăра тĕл пулнине чăвашсен фольклорисчĕ Е.С. Сидорова та палăртнă[3]. Тупмалли юмахсен малтанхи тĕслĕхĕсем ытларах мăшăр суйланă е урăх чух ăс виçнине тĕрĕслени çинчен калакан юмахсенче тĕл пулаççĕ. Тĕслĕхрен, 1912 çулта Пăла тăрăхĕнчи ялсенче илтнине çырса илнĕ «Ăслă хĕр»[4] юмах. Юмахра ăслă хĕрпе патша пĕр-пĕрне хурав парса – пурнăçлама май çук ĕçсем хушса – ăс виçеççĕ. Патшапа хĕр вун ик салтак урлă пĕр-пĕринпе хутшăнаççĕ:

*<...> Хай салтаксем патша патне каяççĕ те:*

*– Эсĕ пире чула пусса пар, вара эпир сĕвĕпĕр, – тесе калаççĕ.*

*– Кăна сире кам вĕрентрĕ? – тет патши.*

*– Эпир çул çинче пĕр вун ик çулхи хĕре тĕл пултăмăр та, çав каласа пачĕ, – теççĕ салтаксем.*

*Вăл хĕр пит ăслă пулсан чултан çăпата тутăр, – тесе ярать патши.*

*Хайхи вун ик салтак хай хĕр патне каяççĕ те калаççĕ:*

*– Вăл сана: «Чултан çăпата туса патăр терĕ», – теççĕ.*

*Хĕр пĕр хутаç хăйăр илет те хăйăр тултарса килсе калать:*

*– Патша çакăнтан кантра явса патăр, – тет.*

*Салтаксем çĕклесе каяççĕ те патшана калаççĕ:*

*– Вăл хĕр сана çак хăйăртан кантра явса пама каларĕ, – теççĕ.*

*– Ку хăйăртан епле кантра явмалла? – тет патша кусене.*

*– Чултан епле çăпата тумалла тата? – теççĕ.*

*Патши калать:*

*– Вăл пит ăслă пулсан, ыран ман патма çапла килтĕр: ни çарамас мар, ни кĕпепе мар, ни лашапа мар, ни çуран мар, хапхаран ни кĕтĕр, ни ан кĕтĕр, – тесе ярать.*

*Хай хĕр атма пĕркеннĕ, качака утланнă, мăйракинчен тытнă та сиктерсе пырать тет. Хапхаран икĕ урине кӳртнĕ, икĕ урине кӳртмен тет. Патша тухать те тĕлĕнсе, икĕ пĕççине шарт! çапать, тет. <...>.*

Пĕтĕм юмах сюжечĕ çав йывăр ыйту-ĕç хушнинчен тăрать. Хресчен хĕрĕ патшаран та ăслă. Асăннă юмахра патша вун ик çулхи хĕрĕн ăсĕнчен тĕлĕнет, ăна качча илесшĕн пулать. Анчах илеймест.

«Ăслă ача» юмахра çитĕннĕ, çулланнă çын Анани пĕр тăван пиччĕшĕн ывăл ачине илесшĕн пулнă хăйĕн çуккипе. Илеймен. Ача ăсне çĕнтереймен. Ултă çулхи ачан ăсĕнчен тĕлĕнсе: «Отмăл çолхи старика олталарăм, олт çолхи ачана олталимарăм», – тет. Кунта та юмах сюжечĕ пĕтĕм йывăр ыйту-ĕçрен тăрать. Акă, тĕслĕхрен, пĕр сыпăк:

*<...> Ашшĕ карĕ.*

*– На çак ал хырине*, сан ул атă тутăр çак хыряран, – тет Анани.*

*Хыряна чиксе тавăрнать Кантратти.*

*– Ну, улăм. Пиччу атă тума каларĕ çакăнтан, – тет.*

*– Хам кайса поплям-ха, атти, – тет ачи. Карĕ.*

*– Пичи, хăйăртан çип арласа-и? – тет ача.*

*– Хăйăртан çип епле полать? – тет Анани.*

*– Хыряран атă епле полать тата? – тет ача.*

*– Каях, аçу килтĕр, – тет Анани. <...>*[5]

«Куртейпе Уртемей»[6] юмахра патша пуян Куртейпе чухăн Уртемее ыйтусем парать. Пĕрремĕш ыйтăвĕ: «Тĕнчере мĕн тутлă?» Уртемей хĕрĕ Урине: «Тĕнчере ыйхăран тутли ним те çук», – тесе вĕрентет ашшĕне. Патшан иккĕмĕш ыйтăвĕ: «Тĕнчере мĕн вăйлă?» Уртемей хĕрĕ: «Тĕнчере шывран вăйли çук, вăл теме те хирсе çĕмĕрсе каять», – тесе вĕрентет. Патшан виççĕмĕш ыйтăвĕ: «Тĕнчере кам хытă чупать?» Уртемей хĕрĕ ашшĕне: «Тĕнчере шухăшран хытă чупаканĕ çук», – тесе калама вĕрентет. Урине хуравĕсем патша кăмăлне каяççĕ: «Санăн хĕрӳ Урине манран та ăслă-мĕн», – тет патша.

Йывăр ыйту-ĕç хушни кунта патшапа вун ик çулхи хĕре, çитĕннĕ çынпа ултă çулхи ачан ăс çивĕчлĕхне е йывăр ĕçе пурнăçлаяссине тĕрĕслениние кăтартать. Паллă фольклорист В.Я. Пропп фольклор материалĕсенче «йывăр ыйту-ĕç тымарĕсем пытарăннине» çирĕплетме пулать тесе палăртнă[7]. Шăп çакăн пек юмахсенче ĕнтĕ йывăр ыйту-ĕçсем упранса юлнă.

Юмахсенче йывăр ыйту-ĕç парасси ытти тĕрĕк халăхĕсен те пур[8]. Сăмахран, алтай халăхĕн чăвашсеннипе питĕ пĕр пек.

Вăхăт иртнĕçем тупмалли юмахсен функциййĕ улшăннине пур фольклорист тенĕ пекех палăртаççĕ. Ун çинчен В.В. Митрофанова çакăн пек çырать: «Утратив

* Хăйрине.

одно значение, загадка приобретала другое, но никогда не теряла своей общественной функции, своего назначения – учить. Изменялись цели и задачи обучения, общественная же функция загадки – служить воспитанию в человеке тех или иных качеств – сохранилась до наших дней»[9].

**Литература**


[1] *Сидорова Е.С.* Ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем, сăнавсемпе паллăсем, тупмалли юмахсем // Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Т. 5. Вак жанрсем. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1984. Т. 5: С. 5—21.

[2] *Елеонская Е.Н.* Роль загадок в сказке // *Елеонская Е.Н.* Сказка, заговор и колдовство в России: сб. трудов / вступ. ст. и сост. Л.Н. Виноградовой; подг. текста и коммент. Л.Н. Виноградовой, Н.А. Пшеницыной. М.: Индрик, 1994. С. 79–89. Ссылка на с. 80.

[3] *Сидорова Е.С.* Ватисен сăмахĕсемпе каларăшсем, сăнавсемпе паллăсем, тупмалли юмахсем. С. 16, 20.

[4] Ăслă хĕр // Чăваш халăх сăмахлăхĕ: юмахсем: 6 томпа // пухса хатĕрлекенĕ, ăнлантарусене çыраканĕ Е.С. Сидорова. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1976. I том. С. 153–154.

[5] Ăслă ача // Çавăнтах. С. 154–155.

[6] Куртейпе Уртемей // Çавăнтах. С. 155–159.

[7] *Пропп В.Я.* Фольклор и действительность. М.: Главная редакция восточной литературы, 1976. С. 167.

[8] *Укачина К.Е.* Возникновение и развитие алтайских загадок // *Укачина К.Е.* Алтайские народные загадки. Горно-Алтайск, 1984. С. 18–19.

[9] *Митрофанова В.В.* Русские народные загадки. Л.: Изд-во АН СССР, 1978. С. 36.

*А.Л. Филиппов*

# ÇЫННĂН ШАЛТИ ТĔНЧИНЕ ТАТА ĂС-ТĂН ТĂРĂМНЕ КОНЦЕПТСЕМПЕ ПАЛĂРТАССИ

Мĕн вăл «çыннăн шалти тĕнчи»? Паллах, вăл çыннăн сисĕмлĕхе пула куçа курăнман пулăмсене ăнкарса илмелли шалти тĕнче. Тĕрĕссипе каласан, çыннăн шалти тĕнчи вăл макроконцепт шайĕнче пăхмалли пулăм. *Макро* тенине кунта «пысăк калăплă» тесе ăнланмалла. Макроконцепт пуррине палăртатпăр пулсан, суперконцепт пуррине те палăртмалла. Вĕсене пĕтĕмĕшле çыхса тăраканни «çын» текен суперконцепт шутланать. Макроконцепт шайĕнче çыннăн шалти тĕнчипе çыхăннă *чун, чун-чĕре, кăмăл, кăмăл-туйăм, туйăм-сисĕм* концептсене пăхмалла; менталитет тĕлĕшĕнчен кунта *ăс-тăн, ăс-пуç* концептсем кĕреççĕ, кăмăл çирĕплĕхне палăртма чăваш чĕлхинче *ирĕклĕх* концепт пур, йĕрке тирпейлĕхне палăртма – *ырă* тата *усал* концептсем. Харкам концепт хăйĕн вырăнне макро- е суперконцепт шайĕнче е концептосферăра кăна тупать.

Чĕлхе наукинче *концепт* термина килĕшӳллĕ пĕр пĕтĕмĕшле палăртăм (дефиници) пани çук, анчах вăл сăнарлă-сăнлăхлă материллĕ (чăн пурнăçра пур) тата идеаллă (чăн пурнăçра çук) объект пулнине палăртмалла, пирĕн ăс-тăнра вăл яланах чĕлхе единиципе (сăмахпа) çыхăннă. Сăмах терĕмĕр пулсан унăн тулашĕ (сасă янравлăхĕ) кăна мар, М.В. Никитин каларăшле, «шалашлăхĕ» (пĕлтерĕшĕ) те пулмалла: «Значение – это концепт, связанный знаком»[1].

Хальхи чĕлхе пĕлĕвĕнче концепт тенине лингвокультурологипе тата когниципе çыхăнтараççĕ.

Çыннăн ăс-тăн тăрăмне е çыннăн шалти тĕнчине палăртакан концептсене психика е психологи концепчĕсем

тени те пур. Çыннăн шалти тĕнчине çутатакан психика концепчĕсем шутне *чун, чун-чĕре, кăмăл;* характерне палăртаканнисен ретне *хĕрӳлĕх* (азартность), *тӳсĕмлĕх, ыркăмăллăх, мăнкăмăллăх, чăрсăрлăх, ĕненӳлĕх, телей, хаярлăх, кичемлĕх* (*салхулăх*), *асаплану* (*тертленӳ*), *шанчăклăх, тунсăх, хумхану, юрату* концептсене кĕртеççĕ. Менталлă концептсем çаксем: *пĕлӳ, ăс, ăс-тăн, тăн-пуç, шухăшлав, ăнлану, астăвăм, шухăшларăш* (представление), *ăс-хакăл, пахмат, туйăну* (воображение), *хастарлăх, ăнлану-сĕмленӳ.*

Хамăр ĕçре эпир çыннăн шалти тĕнчине тата ăс-хакăл тăрăмне çутатакан терминсене суйлавлăх принципне пăхăнса, танлаштаруллă тата шайлаштаруллă меслетсене тĕпе хурса çырса кăтартас тĕллев лартрăмăр.

Çыннăн кăмăл пурнăçĕ – чун хусканăвĕ, юратăвĕ, савăнăçĕ. Философире субъективлă тата объективлă тĕнчене йĕркеленĕ чухне эмоци мĕнле витĕм пани çинчен час-часах асăнаççĕ. Философсем, физиологсем, психологсем тата лингвистсем тĕрлĕ шайри теори ыйтăвĕсене пăхса тухнă чухне те пĕтĕм процесс çын эмоцийĕсĕр пулса иртменнине палăртаççĕ.

«Çыннăн ăс-хакăл пурнăçĕ» термина эпир çакăн пек ăнланатпăр: çыннăн ăсĕ пур, вăл шухăшлама пултарать, ăнкарулăх пур, танлаштарма, уйăрма тата ыттине тума пултарать. Çын çĕр çинче пĕлӳ пухас тĕллевпе пурăнать, хăйĕн пĕлĕвне ачисене, тăван халăха парса хăварма тăрăшать.

**Чĕре** (выр. *сердце*, тут. *йөрәк,* пушк. *йерәк*; çарм. *шӳш*; акăлч. *heart*, ним. *Herz*):

1) юн тымарĕсен системинчи тĕп орган, çыннăн кĕлеткин сулахай енче вырнаçнă; чĕре – анатоми органĕ; çыннăн тата чĕрчунсен пĕр пайĕ.

Куçăмлă пĕлтерĕшсем:

2) çыннăн кăмăл-туйăмне палăртакан пай, вырăн. *Чĕре ыратать, савăнать.*

3) çын чунĕн пĕтĕм пахалăх енĕсем. *Унăн чĕри ылтăн* «У него золотое сердце» (лайăх пĕлтерĕшлĕ); *чул чĕре*: *унăн чĕри çук* «каменное сердце, у него нет сердца» (япăх пĕлтерĕшлĕ);

4) чĕре çавăн пекех çыннăн юрату туйăмне палăртакан вырăн;

5) кĕлеткен çак пайĕ тĕрлĕ туйăмсене вырнаçтарса тăракан вырăн, ытларах çилле**.** *Чĕре чăтаймарĕ* «Сердце не выдержало»;

6) тĕп пĕлтерĕшлĕ вырăн: *Париж — Франци чĕри* «Париж — сердце Франции»[2].

Чăвашла-вырăсла словарьте 2-мĕш пунктпа **чĕре** сăмах вырăнне **чун** сăмахпа усă курни тĕл пулать: *Ырă чĕре* «доброе сердце, добрая душа»[3].

Акăл. *heart* «чĕре», «чун». Словарьсенче унăн çак пĕлтерĕшĕсене палăртнă: сердце, душа, мужество, смелость, отвага, чувства, любовь, удалец, плодородие.

Библире **чĕрепе чун** сăмахсем пĕр-пĕрне ылмаштарса тăракан ăнлавсем, анчах та вĕсем пĕр-пĕринчен уйрăлса тăраççĕ. Чĕре вăл чуна йышăнакан вырăн (урăх нимĕнле орган та чуна йышăнма пултараймасть / уйрăмах ку христиансемпе мăсăльмансен тĕнĕнче палăрать). Ытти тĕнсенче, культурăсенче, чĕлхесенче (китай халăхĕн, французсен...) чун сулара (талакра) вырнаçнине палăртаççĕ[4].

В.А. Маслова «Лингвокультурология» ĕçĕнче *чун* тата *чĕре* концептсене пĕр пая уйăрнă. Унăн ячĕ «Душа и сердце как „духовные центры человека"». Ку пайра чĕре çинчен тĕплĕн çырса кăтартнă. Автор Б.П. Вышеславцев ĕçĕ çине таянса çапла çырать: чĕре вăл ăнланса илеймен, тĕпчесе çитереймен, паллă мар япала. Чуна пĕлме çăмăлрах. Евангелире чĕрене тĕн органĕ тесе палăртнă. Турра туйма пулăшакан орган: «Блаженны чистые сердцем, ибо они Бога узрят». Чĕре — Турăпа çыхăнмалли орган. Çав вăхăтрах чĕре — çылăха кĕртекен орган. *Чĕресĕр çын* «бессердечный» (хытă чунлă çын)[5].

Р.Р. Замалетдинов «Татарская культура в языковом отражении» ĕçĕнче чĕре çинчен тарăнрах та тĕплĕнрех çырса кăтартнă. Ĕçĕн *йөрәк* пайĕнче автор çапла çырать: «Исключительно важная роль сердца как органа приводит к осмыслению его в языковой картине мира в качестве

средоточия физической и духовной жизни человека, источника и вместилища этого слова – орган, который заставляет кровь двигаться по телу»[6]: *Йөрәге нормаль эшли* ~ *Чӗре йӗркеллӗ ӗҫлет* «Сердце функционирует нормально»; или *йөрәк тибу* ~ чӑв. *чӗре таппи* «сердцебиение».

Чӗре вӑл ҫыннӑн шалти тӗнчи, чунӗ, асӗ. Вӑл пире курӑнмасть пулсан та эпир ӑна ҫын хӑйне мӗнле тыткалани урлӑ куратпӑр. Акӑлчан тӗнчин чӗлхе ӳкерчӗкӗнче чӗре хӑватлӑха, вӑя, хӑюлӑха палӑртса тӑрать: *to pluck up heart* «хӑюлӑх пуҫтарасшӑн», *to take heart* «арҫынла ӳстересси» т.ыт.те.

Тутар тӗнчин чӗлхе ӳкерчӗкӗнче чӗре вӑйпа, хӑюлӑхпа палӑрать*: Суз куналдә очкын булна көйри, суз арнален этә йөрәкне* «Сӑмах ҫулӑмпа ҫунать чунра, сӑмах арӑслан пулма пулӑшать чӗрене».

Тӗнчен чӗлхе ӳкерчӗкӗнче чылай халӑхсен чӗре кӑкӑрта вырнаҫнӑ, хӑш-пӗрисен вӑл пачах та ҫук: *Чӗри ҫук* ~ *Йөрәге юк* «Сердца нет», *чӗресӗр* «бессердечный». Паллах, чӗресӗр сӑмах куҫӑмлӑ пӗлтерӗшлӗ. Калаҫу хӑравҫӑ е усал, шелсӗр ҫын пирки пырать.

Чӗре куҫма, тӗрлӗ вырӑнта пулма пултарать.

– *Чӗре ура тупанне ҫитрӗ* ~ *Йөрәгем чыга язды* «Сердце чуть не выскочило».

Тӗрлӗ туйӑмсене пула чӗре хӑвӑрт тапма тытӑнать. Хӑрасан чӗре ҫурӑлса тухма пултарать:

– *Чӗре ҫурӑлса тухать* «Сердце кровью обливается»; «Сердце разрывается на части»; тут. *Йөрәгем ярыла язды* «Чӗре чутах ҫурӑлмарӗ» (питӗ хытӑ хӑранӑ чухне).

Чӗре сивӗ, ӑшӑ, вӗри пулма пултарать: *вӗри чӗре* «горячее сердце»; *харсӑр чӗре* «мужественное сердце»; *ырӑ чӗре* «доброе сердце».

– *Чӗрене вут хыпса илчӗ* ~ *Йөрәге ут төту* «Сердце горит огнем».

Чӑваш Республикин гимнӗнче ҫакӑн пек сӑмахсем пур: *Чун савӑнать, чӗрем сикет...* «Душа радуется, сердце волнуется...».

Маларах эпир чĕре чун упрамалли вырăн тесе асăннăччĕ. Фразеологи единицинче ку лексемăсем пĕр-пĕрне ирĕккĕнех ылмаштараççĕ:

– *Чун (чĕре) ыратать* «Душа (сердце) болит».

*Мана кӳрентермеççĕ-ха, анчах та ман чун ыратать: саншăн, пиччешĕн, пуриншĕн те*[7] «Меня-то не обижают, а у меня сердце болит: за тебя, за брата, за всех» (А. Островский).

– *Чун (чĕре) выртмасть* «Душа (сердце) не лежит».

– *Чун (чĕре) вырăнта мар* «Душа (сердце) не на месте».

*Çак вăхăтра столовăя Доронин кĕчĕ те, вăл пĕрре пăхсах унăн чунĕ (чĕри) вырăнта маррине ăнланчĕ*[8] «В то время в столовую вошел Доронин, и она с первого взгляда поняла, что у него сердце не на месте (А. Чаковский).

– *Чун (чĕре) ыратать* «Сердце кровью обливается».

*Прасковья Ивановнăн чĕри хĕрхеннипе тата хăранипе çурăлсах тухнă*[9] «Сердце Прасковьи Ивановны обливалось кровью от жалости и ужаса» (С. Аксаков).

– *Чĕре чулланса ларнă, чĕри (чунĕ) хытса ларнă*[10].

*Чĕре* сăмах чăваш чĕлхинче ваттисен сăмахĕсенче те тĕл пулать:

– *Шывăн турачĕ çук, улпутăн чĕри çук* («У воды сучьев нет, у барина сердца нет»).

*Чĕлхере пыл, чĕрере пăр* «На языке мед, а на сердце лед».

Тӳр килӳсем: *На языке медок, под языком ледок* (выр.); çарм. *На языке масло, под языком лед*; груз. *На устах мед, да сердце лед*; кит. *На устах мед, а в душе меч*[11].

– *Хăрăк тимĕре тутăх çисе ярать, хуйхă чĕрене пĕтерет* «Старое железо поедает ржавчина, а сердце – печаль».

*Чĕре* компонентпа çыхăннă вырăс танлаштару çаврăнăшĕсем:

– *Как (словно, будто) бремя свалилось (скатилось) с сердца (с души)* – кĕтмен çĕртен чун (чĕре) çăмăлланни.

– *Как из сердца вынуть* – чунран (чĕререн) тухакан шухăшсем.

– *Как (словно) камень с сердца свалился (упал)* – пĕр-пĕр ĕçе туса пĕтернĕ хыççăн чун е чĕре лăпланни.

– *Как камень на сердце (душа) лежит* – чунра е чӗрере йывăрлăх.

– *Как Господь (Бог) на сердце (по душе) положит* – пурнăçра нимӗн пирки те интересленмен çын çинчен.

Ваттисен сăмахӗсенче, фразеологизмсенче, танлаштарусенче *чӗре* морфологемăна ытларах çыннăн шалти тата тулашри енӗсене хакланă чухне усă кураççӗ. В.А. Маслова шухăшӗпе, чӗрепе çыхăннă фразеологизмсем, танлаштарусем, ваттисен сăмахӗсем пӗтӗм тӗнчене çутатса пама пулăшаççӗ (пирӗн шутпа, çыннăн пӗтӗм шалти тата тулашри енӗсене те уçса парать):

1) çыннăн тӗрлӗ туйăмӗсене тата тăрăмне кăтартать: *чунӗ (чӗри) çунать ~ кошки на сердце (на душе) скребут; чӗре ӗçлеме чарăнчӗ ~ сердце замерло; чӗрене тыткăнлать ~ брать за сердце; чӗре вырăнта мар ~ сердце не на месте;*

2) çынна хаклани: *çемçе чӗре ~ мягкое сердце; ырă чӗре ~ доброе сердце; чул чӗре ~ каменное сердце; ылтăн чӗре ~ золотое сердце; вӗри чӗре ~ горячее сердце; чун вăркатмăш ~ покоритель сердец;*

3) çынна обществăра хаклани: *находить доступ к сердцу; давать волю сердцу, срывать сердце; покорять сердце* т.ыт.те.

Юлашки виçӗ çул хушшинче ЗАО «Унтропомиранг» пысăк тиражсемпе юрату çинчен çырнă тӗрлӗ романсем кăларать (ятсенче *чӗре* сăмах тӗл пулакан романсем). Вырăсла куçарнисем:

1) Люси Гиллен «Под шепот сердца» (2008);
2) Джейн Рей «Встреча двух сердец» (2009);
3) Келэр Хант «Похищение сердца» (2009).

Асăннă романсенче *чӗре* «сердце» сăмаха «чун» пӗлтерӗшпе кăна мар, çавăн пекех «юрату» пӗлтерӗшпе кăтартнă: *to give ones heart to smb ~ хуть те кам юратса пăрахсан; dear heart* «савни». *Чӗре (сердце, heart, йөрәк)* – этем ӳт-пӳ пайӗнчи юрату вырăнӗ. В.А. Маслова шухăшӗпе, «сердце есть центр не только сознания, но и бессознательного, не только души, но и тела, центр

греховности и святости, центр средоточия всех эмоций и чувств; центр мышления и воли; оно не только орган чувств и орган желаний, но и орган предчувствий, следовательно, сердце как бы абсолютный центр всего человеческого»[12].

Ку романсенче пуç, пуç мими тата нервсем çинчен çырни пур. Мĕншĕн тесен миме тата нервсем пире (çынсене) туйма, шухăшлама, япаласене ăнланса тума тата пĕтĕм органсен ĕçне йĕркелесе тăма пулăшаççĕ (çавăн пекех чĕрене те). Пуç миминчи нервсем пуç мимине куçсемпе, çăварпа, питпе çыхăнтарса тăраççĕ. Çурăм мимипе çыхăнман нервсем чĕре, ӳпке патне пыраççĕ. Пуç мимин çур чăмăрĕсен пысăк хуппи тата унăн хăш-пĕр пайĕсем ӳт-пӳ пайĕпе (çавăн пекех чĕрепе) çыхăннă. Тăсăк миме чĕре ĕçленине, сывланине йĕркелет. Пуç мими: ăна виçĕ пая уйăраççĕ: вĕçĕнчи миме (конечный мозг), мозжечок, юпа (ствол) вĕçĕнчи миме – чи пысăк пай; вăл ăс-тăнпа тата аспа çыхăннă.

Çапла вара: мимепе нервсем пире туйма, шухăшлама, тĕрлĕ япаласене ăнланма пулăшаççĕ. Тăсăк миме чĕре тымарне йĕркелесе тăрать.

Чĕре ĕçлени пуç мимипе çыхăннă. Чĕре ĕçлени: чĕре мышцăсенчен тăрать, ăна икĕ пая уйăраççĕ (сулахай тата сылтăм). Сулахай енĕ артери юнне ӳпкерен илсе пĕтĕм ӳт тăрăх хăвалать. Сылтăм енĕ венăри юна ӳтрен илсе ӳпкене хăвалать. Чĕре мышци кунне 100 пин хут хускалать.

**Чун** концепт (*чун-чĕм, чун-чĕре*; тут. *җан*; пушк. *йэн*; çарм. *чон*, *шӳм-чон*; акăлч. *soul*; ним. *Seele*.

Чылай чĕлхесене «чун» концепт курăнман вăя палăртать. Паянхи куна никам та татăклăн ку ыйтăва татса парайман. Ытларах чухне чун пуррипе çукки çинчен çын вилĕмĕ чухне калаçатпăр. *Чунĕ тухрĕ* «Душа ушла», – теççĕ. Чăваш чĕлхинче чун сăмахăн тĕрлĕ пĕлтерĕш пур: «чун», «чĕре», «пурнăç, пурăнни»; «пуç» (выльăхсене шутланă чухне) т.ыт.те.

Акăлчан чĕлхинче *heart* сăмаха «чун» пĕлтерĕшпе усă кураççĕ, *at heart* «чунра», *from the bottom of onse heart* «чунран», *with all once heart* «пĕтĕм чунтан». Çав вăхăтрах акăлчан чĕлхинчи *soul* сăмах «чун, чун-чĕм» пĕлтерĕшсемпе

танах «çын» семемăна палăртать. *He is a simple (honest) soul* «таса чунлă çын». «Çын» пĕлтерĕш Н.И. Ашмарин словарĕнче çапла çырăнса юлнă: *Мачча пĕр енĕ шартлатсан чун катăлать теççĕ* (ĕненӳ)[13] «Если матица издаст треск, то это оповещает о смерти человека». Акăлчан чĕлхинче *soule* сăмахăн иккĕмĕшле сăмахсем нумаях мар: *soul fue* «туйăмлă»; *soulless* «чунсăр».

Чăваш чĕлхинче *чун* сăмахăн деривачĕсем вунна яхăн:

– *чун-вар* «сердце и душа» (букв. «душа-живот»);

– *чунтан-вартан* «от всей души»;

– *чун-кăмăл* «настроение, душевное состояние»;

– *чунлан* «воспарить душой»;

– *чунлантар* 1) «одушевлять»; 2) «поднимать дух; воодушевлять»;

– *чунлан* «клясться»; *чунлатса кала* «косвенно заверять»;

– *чунлă* «имеющий душу»; «сердечный, добросердечный»;

– *чунлăх* «одушевленность, одухотворенность»;

– *чунсăр* «неживой»; «бесчувственный, бессердечный»;

– *чунсăрлан* «становиться бессердечным»;

– *чунсăрлăх* «бездушие, бессердечие, черствость»;

– *чун-чĕм* «душа», *чун-чĕме тапрат* «вынимать всю душу»;

– *чун-чĕре* «душа, сердце», *чун-чĕререн юрат* «не чаять души, любить от души».

Вырăс чĕлхин ăнлантаруллă сăмах кĕнекисенче **чун** сăмаха çапларах ăнлантараççĕ:

1) çыннăн шалти, ăс-пуç тĕнчи, чунри савăнăç;
2) çын хăйне евĕрлĕ характерĕпе е пахалăхĕпе;
3) религисенче çын вилсен те чун малалла пурăнать;
4) ĕç тума вăй параканни;
5) патша саманинче – тарçă[14];
6) çын: *Умра пĕр чун та çук.*

Чун çын ăшĕнче вырнаçнă, вăл материллĕ мар. Ăна эпир курма пултараймастпăр. Е.В. Урысон та çак шухăшах палăртать[15]. Чун ăçта вырнаçнине паянхи кун никам та татăклăн калаймасть. Кун пирки питĕ нумай шухăш. Тĕслĕхрен, *чун вырăнта мар* фразеологизм ку шухăша çирĕплетет.

Чылай чĕлхесенче **чун** концепт япаласăрлăха кăтартать, çав вăхăтрах организма чĕрĕлĕх кĕртет. Чуна чĕрере вырнаçнă тесе шутлаççĕ. Чĕре чуна пĕлтерет тенине асăрхама пулать. **Чĕре** тата **чун** концептсене ăнлантарма питĕ йывăр, мĕншĕн тесен вĕсем пĕр-пĕрне хирĕçлеççĕ те шайлаштараççĕ кăна мар. Çак хирĕçлевлĕхсем этемĕн тĕнче ӳкерчĕкне йĕркелеççĕ.

Халăх ăнлавĕнче чун вăл вĕçĕмсĕрлĕх, пĕтмĕшсĕрлĕх. Çын вилсен те чунĕ пĕлĕт çине вĕçсе каять. Религи палăртнă тăрăх, чун çынна çӳлти патшалăхпа çыхăнтарать, Турăпа. *Хăш çын чунĕ тухаймасăр асапланать* «Иной человек перед смертью долго мучается потому, что душа не покидает его». Н.И. Ашмарин словарĕнче **чун** кăкăрта вырнаçнине палăртнă (*кăкăртан чун тухиччен*). Çын çăварĕнчен чун тухса каять тесе палăртнă (*çăвартан чун тухмасăр*). Чăв. *чун тух,* тут. *җан биру* «испустить дух, отдать душу – умереть».

Чăваш чĕлхинче чĕрĕ чуна палăртма тĕрлĕ сăмах майлашăвĕсемпе усă кураççĕ:

1) *Чĕрĕ чун* «живое существо» (çын пирки). *Тинĕс хĕрринче чĕрĕ чун таврашĕ те пулман*[16] «На берегу моря ни души».

2) выльăхсене палăртма усă кураççĕ: *чĕрĕ чун* «живой организм» и *чĕрчун* «животное».

*Чунăм*, *җаным* «моя душа» сăмахсем камăнлăх-сăпат категорийĕнче пĕрремĕш сăпатра çӳреççĕ. Ку формăпа ытларах чухне çывăх çынпа калаçнă хушăра усă кураççĕ.

– *Чунăм! – тетĕп эп сана* «Я говорю тебе: «Душа моя!».

– *Җаным!* «Душа моя»; *Җан кис әчем!* – «Частица моей души!»; чув. *чун савни* «возлюбленный, возлюбленная».

*Чун* ~ тат. *җан* концептсем тĕпрен илсен эмоци тĕнчипе çыхăннă: *чун çунать* «душа горит», *чун ыратни* «душевная боль»; тат. *җан әрну, җан сырлену* «душевное страдание»; *чун илĕртмĕш* «мой прелестный, моя прелесть»; *җан рәхәте* «хорошее настроение».

Н.И. Ашмарин словарĕнче *чун* сăмах чылай фразеологизмсенче тĕл пулать. Хăш-пĕр тĕслĕхсене илсе кăтартăпăр:

– *чуна ил* «замучить»: *Тимуша чунне илес пек хĕненĕ* «Тимофея избили до полусмерти»;

– *чуна ват* «мучить душу»;

– *чуна кăлар* «замучить»;

– *чуна пар* «стараться из всех сил»;

– *чун ыратни* «душевная боль»;

– *чун илли* «душегуб, убийца»;

– *чун уççи* «отрада»[17];

– *чун ăшши* «тепло души, душевное тепло»;

– *чун юратни* «мой любимый, моя любимая»;

– *чун савни* «возлюбленный, возлюбленная»;

– *чун кантармăшĕ* «утешение души»;

– *чун кӳрт* «оживить»;

– *чун патĕнчи* «милый, близкий сердцу»;

– *чун пар* «принести в жертву животных»;

– *чун пек* «ровно своя душа, сильная любовь»;

– *чун савăнăçĕ* «моя радость»;

– *чун сисĕвĕ* «предчувствие, совесть»;

– *чун сутакан* «душепродавец»;

– *чуна çи* «погубить душу»;

– *чун çĕрĕ* «душевный надел земли»;

– *чун туртăм* «желание»;

– *чун хавалĕ* «остаток силы» и т.д.[18]

**Чун** тĕнпе тачă çыхăнса тăрать. Çакна Н.И. Ашмарин словарĕнчи тĕслĕхсемпе çирĕплетме пулать:

– *Чун илли* «дух смерти»: *Чон илли çын вилнĕ чух çын чонне илме пырать* «Дух смерти приходит к человеку перед смертью, чтобы забрать его душу».

– *Чун кӳртен (кӳрен) турă – Пӳлĕхçĕ* «провидение» (çынсене чун, телей паракан).

– *Чун кӳрен турă* – çуралнă ача валли чун тупакан турă.

– *Чун сыхлан* – чуна сыхлакан турă.

Тĕн вĕрентнĕ тăрăх, çынна **чун** Турăпа çыхăнма пулăшать. Паянхи кун та чун вырнаçăвĕ ыйту татăлман.

Тĕрлĕ халăх тĕрлĕрен шутлать. Унăн вырăнĕ: чĕрере, куçра, пĕверте т.ыт.те. Чунпа ӳт-пӳ пĕр-пĕринпе питĕ тачă çыхăнса тăраççĕ. Чунпа ӳт çывăх пулнине эпир тĕрлĕ тĕслĕхсенче асăрхатпăр: *чунтан-вартан* «от души», *чун-чĕререн* «от души», *чунтан-вартан юрат* «любить всей душой».

Славянсем (вырăссем, украинсем) пултарулăха чунпа çыхăнтараççĕ. Б.П. Вышеславцев шухăшĕпе, чун вăл – пĕлĕт хĕлхемĕ (Турă вăйĕ).

– *Чун çунать* «душа горит»;

– *Чун ăшши* «тепло, жар души»;

– *Чун хĕлхемĕ* «искра души».

Чылай халăх чуна сывлăшпа, çилпе, кайăкпа, лĕпĕшпе танлаштарать. Н.И. Ашмарин словарĕнче чуна чĕкеç сăмахпа палăртнă тĕслĕх пур:

*Пĕр ик-виç кунтан ача чунĕ чĕкеç пулса ашшĕ пӳрчĕ тăрринче тăрса юрлать* (юмахран) «Через два-три дня душа ребенка прилетает на крышу отцовского дома в виде ласточки и поет»[19].

**Чуна** хĕвелпе танлаштарнине те курма пулать: *Сан чунупа, тăван, ман чунăм тĕнче çине тухнă хĕвел пек*[20] «Твоя душа, родимый, и моя душа подобны восходящему солнцу».

Ыр-усал тĕнчине ĕненекен славянсен шухăшĕпе çын тĕрĕс пурăнать пулсан чун кăвакарчăна куçать, усал ĕçпе пурăнакан çыннăн чунĕ – çăхана, хăш-пĕр чухне куккука[21].

Чăваш чĕлхинчи ваттисен сăмахĕсенче **чун** çакăн пек пĕлтерĕшсемлĕ:

– *Чун хĕнекен мул тупать* «Угнетенная душа собирает богатство»;

– *Тарçăн тар тухнă, чуран чун тухнă* «Несмышленый работник работает до пота, раб – до погибели»;

– *Чун тус чуна илет* «Закадычный друг душу вынет»;

– *Пăчăр чун тухиччен ĕмĕтленет* «Рябчик надеется до самой смерти»;

– *Сăнĕ мĕнле, чунĕ çапла* «Каково лицо, такова душа»;

– *Чĕлхере пыл, чĕрере (чунра) пăр* «На языке мед, на душе лед»;

– *Чун пулсан чул хушшинче те усрăпăр* «Если есть душа, и меж камней сохраним»;

– *Чун савсан туй тунă, чун ыратсан чӳк тунă* «Если душа любит, устраивают свадьбу, если душа болит, устраивают моление»;

– *Куç курать те, чун чухлать* «Глаза видят, сердце (душа) догадывается»[22].

Вырăс чĕлхинчи **душа** тата **дух** сăмахсем танлаштарусенче (В.М. Мокиенко тата Т.Г. Никитина):

– *Гулять как душа мира* – о широко, разгульно гулящем, празднующем человеке.

– *Жить как одна душа* (вариант: *жить как голубки*) – о людях (обычно друзьях, любимых, супругах), живущих в абсолютном согласии, взаимопонимании, дружбе и любви.

– *Мило что душа, а горько что беда* – о реакции человека на любимое и нелюбимое.

– *Сбойливый что попова душа* – о непостоянном, легко поддающемся чужому влиянию человеке.

– *Тягаться как кобылья душа* – распутничать, развратничать (часто о женщине).

– *Без денег человек что тело без души* – бедный человек несчастен.

– *Как бремя свалилось (скатилось) с души; как бремя спадает (спало) с души* – о неожиданном и большом моральном, психологическом облегчении.

– *Беречь как свою душу* (ср. *беречь как зеницу ока*) – о человеке, чрезвычайно берегущем, хранящем кого-л., что-л.

– *Как Бог на душу положит; как Господь (Бог) на душу положит* – о чьей-либо небрежной, праздной, беспорядочной и необеспеченной жизни.

– *Любить больше, чем душу* – об очень сильной, беспредельной любви к кому-л.

**Дух:**

– *Как будто несет* (кого) *некошной дух* – о беспокойном человеке, который постоянно не бывает дома, носится с одного места на другое (*некошной* «злой дух, черт»).

– *Как дух свят* – о честном, доверчивом человеке.

– *Как дух святой* – о праведном, исключительно честном и безгрешном человеке.

– *Как злой дух* – о злобном, раздражительном и крайне недоброжелательном человеке.

– *Убегать как от злого духа* – о паническом бегстве от какого-л. злобного, раздражительного и крайне недоброжелательного человека.

**Кăмăл** сăмах, тĕпрен илсен, чĕрепе чун çыхăнăвĕн пĕлтерĕшĕсене палăртать: *чĕре / чĕреллĕ; чун / чунлă; шалти чун тĕнчи; кăмăл, шухăш, ас, юрату, характер, туйăм* т.ыт.те.

Кăмăл, чун пекех, материсĕр, этемĕн шалти тĕнчине палăртать. Ку эквивалентсăр, тĕрлĕ туйăма кăтартать: *ăшă кăмăл* «радушие, приветливость»; *йывăр кăмăл* «тяжелый характер». *Кăмăл* сăмах туйăма палăртать: *Кăмăл сисет* «Сердце чувствует».

*Кăмăл* сăмахран пулнă сăмахсем тĕрлĕ туйăма палăртаççĕ: *кăмăллă* «ласковый, любимый», *кăмăлсăр* «неприветливый, недовольный, обиженный».

Сăмах майлашăвĕсем *кăмăл* компонентпа çыхăнса ытларах чухне çын кăмăл туртăмне палăртаççĕ: *ырă кăмăл* «хорошее настроение»; *япăх кăмăл* «плохое настроение». Çавăн пекех фразеологизмсен тытăмĕнче вăл «юрату» пĕлтерĕшпе çӳрет, «чĕре», «чун» пĕлтерĕшĕсем те пур унăн. *Кăмăллă çын çумне çыпăçтар*[23] «Влюбиться в кого-либо». Чăваш тата тутар чĕлхисенче ку формăсем туху падеж аффиксне йышăнаççĕ: *кăмăлтан* «от души, от сердца» (*чунтан, чунтан-кăмăлтан, чунтан-чĕререн, чунтан-вартан*).

*Кăмăл* сăмах этемĕн шалти туйăмне тарăннăн уçса парать. Лексика, семантика, фразеологи, паремиологи пайĕсенче ятарлă вырăн йышăнать, мĕншĕн тесен асăннă пайсенче *кăмăл* сăмаха ăнлантаракан тĕслĕхсем самаях:

– *Кăмăла кай, кăмăла кил* «нравиться»;

– *Кăмăл туни* «удовлетворение полностью, во всех отношениях»;

– *Кăмăла хур* «принимать во внимание»;

– *Кăмăл урлă пулни* «легкая обида, быть слегка обиженным»;

– *Кăмăла уç* «развлекать, быть окрыленным» (букв. «душу, сердце открыть»);

– *Кăмăл уçăлми* «развлечение, становление щедрым»;

– *Кăмăл ӳкни* «влюбленность»;

– *Кăмăл юлни* «обида, неудовлетворенность»;

– *Кăмăл выляни* «прихоти»;

– *Кăмăл вĕçертĕнни* «дурные помыслы»;

– *Кăмăла кайни* «любовь»;

– *Кăмăл килни* «быть довольным»;

– *Кăмăла кур* «питать добрые чувства, сострадать»;

– *Кăмăл кӳр* «угодить»;

– *Кăмăл кăтарт* «обращаться сердечно (с кем-л.)»;

– *Кăмăла пĕлни* «желание»;

– *Ырă кăмăллă* «добрый»; *усал кăмăллă* «злой»; *уçă кăмăллă* «щедрый»; *ăслă кăмăллă* «умный и добрый»; *ăшă кăмăллă* «ласковый, приветливый»; *мăн кăмăллă* «гордый»; *çемçе кăмăллă* «мягкосердечный»; *хытă кăмăллă* «жестокий, безжалостный».

– *Кăмăл писни* «охлаждение»;

– *Кăмăл пистер* «охладеть сердцем, разлюбить»;

– *Кăмăл(а) пусар* «утешить, утешиться»;

– *Кăмăл пăс* «расстраивать (кого-л.)»;

– *Кăмăл пăтранни* «тошнота»;

– *Кăмăл сивĕнни* «охлаждение (к кому-л.)»;

– *Кăмăл(а) çавăр* «пленять, привлекать на свою сторону»;

– *Кăмăла çитни* «чувство полного довольства»;

– *Кăмăл çĕкленни* «вдохновение, возбуждение, подъем духа»;

– *Кăмăл тавăр* «вызывать отвращение»; *кăмăл таврăнни* «отвращение»;

– *Кăмăла тат* «обидеть»; *кăмăл татăлни* «огорчение»;

– *Кăмăла тыт* «возыметь расположение»;

– *Кăмăл ту* «пожелать, исполнить желание»;

– *Кăмăл тулни* «удовлетворение, довольство»;

– *Кăмăл туп* «угождать»;

– *Кăмăл туртни* «влечение, желание»;

– *Кăмăла хытар* «скрепить сердце»;

– *Кăмăла хуç* «воздействовать на настроение, расстроить»; *кăмăла хуçни* «огорчение».

– *Кăмăл хуш* «одобрить, поднимать настроение»;

– *Кăмăла хăвар* «причинить обиду, обижать»[24].

Р.Р. Замалетдинов шухăшĕпе, *күңел* лексемăна калаçу чĕлхинче питĕ тухăçлă усă кураççĕ[25]:

– *Күңел*[*] *кимелү* (букв. «отломился кусочек души») ~ *кăмăл хуçăлни* – в душе остался осадок; душа с чем-либо не может примириться; чувство обиды, неудовлетворения, разрушающее внутреннюю гармонию, целостность человека.

– *К. калу* – *кăмăла хуç* – подействовать на душевное настроение; растрогать, обижать, огорчать.

– *К. каралу* (букв. «почернение души») – морально разложиться; огрубление чувств, нравственное разложение, испорченность, развращенность;

– *К. ачу* – *кăмăла тултар* – получать наслаждение, радость, поднимать настроение (от видов природы, произведений искусства или во время застолий, каких-либо развлечений; доставлять удовлетворение.

– *К. азыгы* – *Кăмăл турамĕ* – *пĕр турам* «угощение, предложенное от души, единственное в своем роде» (*кăмăл турамĕ* – это духовная пища, букв. «духовный кусочек, ломтик».

– *К. ачлыгы* – *Çапах кăмăл выçă ман* «Тем не менее у меня духовный голод»[26].

– *К. кайту* – *кăмăл сивĕнни* охлаждение к кому-л.; тат. *күңел суыну* «тж».

– *К. булу* – *кăмăллă пул, çӳре*; удовлетвориться чем-л., остаться довольным;

– *К. бушату* – *кăмăл пушанни* – излить душу, избавиться от тяжести на душе;

---

[*] Малашне *Күңел* сăмах вырăнне пĕрремĕш *К* сас паллине кăна хăваратпăр.

– *Күңелгә ут салу – кăмăла пăтрат* – растревожить душу, сильно переживать;

– *Күңелән сындыру – Ачасен кăмăлне (кăмăлĕсене) ан пăс* «Не расстраивай (не обижай детей)»[27].

– *Күңелән табу – кăмăла çĕкле* – поднять настроение кому-л., найти лазейку к сердцу; букв. «поднять настроение».

– *К. болгану – кăмăл пăтранать, кăмăл пăтранни* – с души воротит, чувство тошноты; тошнота.

Ваттисен сăмахĕсенчи тата каларăшсенчи *кăмăл* сăмах:

– *Хăвăн кăмăлу юлсан та çын кăмăлĕ тупăнтăр* «Себя обидь, а другого уважь»;

– *Çын кăмăлне ытарайманăн хăй кăмăлне йывăр килнĕ* «Кто постарается оказать услугу другому, тот обидит себя»;

– *Кăмăл пĕрре сивĕнсен кăмака çинче ăшăтаймăн* «Любовь, как охладеет, на печи не разогреешь»;

– *Камăн тӳрĕ кăмăл, ăна ялан çăмăл* «У кого прямая душа, тому всегда легко»;

– *Кăмăл вылянă хыççăн ан çӳре* «Не старайся исполнять все прихоти» «Кто потакает страстям своим, тот для доблестей недостижим»;

– *Кăмăл турамĕ – пĕр турам* «Угощение, предложенное от души, единственное в своем роде».

Н.И. Ашмарин словарĕнче:

– *Кăмăла кура Тур парать* «Бог дает тому, кто приветлив, откровенен и чистосердечен»;

– *Кăмăл килсен пĕр турам, кăмăл юлсан çĕр турам, теççĕ*;

– *«Çын кăмăлне хăвариччен ху кăмăлу юлтăр», – теççĕ ваттисем.*

*Чĕре, чун, кăмăл* компонентсене пăхса тухнă хыççăн çакăн пек пĕтĕмлетӳ тума пулать: тĕпрен илсен вĕсем пурте эмоци тĕнчи патне питĕ çывăх, çав вăхăтрах пĕр-пĕринчен харкамăн уйрăлса тăраççĕ. Кашни çыннăн хăйĕн чĕри, чунĕ, кăмăлĕ.

**Чĕре** пĕр вăхăтрах материллĕ те, материсĕр те. **Чунпа кăмăл** концептсем материсĕр тĕнчене çывăхрах. Хăш-пĕр

контекстсенче вĕсем пĕр-пĕрне ылмаштараççĕ, мăшăр сăмахсем пек çӳреме пултараççĕ: *чун-чĕре*. **Кăмăл** тата **чун** концептсен хăш-пĕр фразеологи единицисенче материлĕх сĕмĕ палăрса тăнине асăрхама пулать: *чун пушăлăхĕ*, *кăмăл уçăлчĕ*.

Пĕтĕмĕшле илсен, асăннă виçĕ концепт çыннăн кăмăлне, туйăмне тĕрлĕ енчен уçса параççĕ. Пĕр вăхăтрах шалтан тата тулаш енчен кăтартаççĕ.

**Шăпа** «судьба, рок, фортуна».

**Шăпа** «судьба» – ăс-тăн категорийĕсенчен пĕри. Шăпа çыннăн е пĕтĕм халăхăн тавра курăмне уçса кăтартать. М.И. Скворцов редакциленĕ словарьте *шăпа* сăмахăн виçĕ пĕлтерĕшне палăртнă:

1. *шăпа* «жребий»; *шăпа яр* «метать жребий»; *шăпа яни* «жеребьевка»; *шăпа турт* «тянуть жребий»; *Сана шăпа тухнă* «Тебе выпал жребий».

2. перен. Судьба, участь, доля, удел, рок, жребий; уст. *телейлĕ шăпа* «счастливая судьба»» *телейсĕр шăпа* «горькая судьба»; *шăпа пӳрнипе* «волею судьбы»; *Шăпа вĕсене уйăрнă* «Судьба разлучила их».

3. уст. би́рка. *Шăпи тулчĕ* «Он получил сполна, по заслугам»[28].

Философсен шухăшĕпе, шăпа – тĕрлĕ пулăмсен пĕрлĕхĕ, халăхсене пĕр-пĕринпе çыхăнтараканни е уйăраканни. Шăпа – çутçанталăкри вăйлă вăй. Ăна эпир Турăпа çыхăнтаратпăр: *Турă çырни*. Вырăссен «судьба» сăмаха словарьсенче тĕрлĕрен ăнлантараççĕ:

1) стечение обстоятельств, не зависящих от воли человека, ход жизненных событий;

2) доля, участь;

3) история существования кого-нибудь;

4) будущее, то, что случится, произойдет[29].

*Шăпа* сăмах вырăс чĕлхинчи сăмах çаврăнăшĕсенче:

– *Неумолим, как сама судьба* – питĕ усал, чунсăр çын.

– *Любыми судьбами* (об обязательном исполнении чего-л.) – хуть мĕнле пулсан та ĕçе пурнăçласси.

– *Ходит как судьбой недовольный* – тем пулнă çын пирки.

Чылай халăхсем, çавăн пекех чăвашсем те, шăпа пирки пĕр пекех шухăшлаççĕ. Кашни çыннăн шăпи пур теççĕ. Турри çынна мĕнле кун-çул панă, вăл унтан иртеймест. Хуть мĕн япăххи пулсан çапла калаççĕ: *Турри панă, шăпи çавăн пек* т.ыт.те.

XX ĕмĕрĕн юлашки виçĕ çул хушшинче вырăс чĕлхипе **шăпа** темăпа ĕçсем самаях тухрĕç: Вежбицкая А. Судьба и предопределение // Путь. 1994. № 5. С. 82–150; Чернейко Л.О., Долинский В.А. Имя «судьба» как объект концептуального и ассоциативного анализа // Вестник МГУ. Сер. «Филология». 1996. № 6. С. 20–42 т.ыт.те. Асăннă концепта тĕпченĕ чухне Л.О. Чернейкопа В.А. Долинский *гештальт абстрактного имени* термин кĕртнĕ. Гештальт – хăйне евĕрлĕ мел. [*Гештальт* < ним. ята валли *Gestalt* – пĕр форма, тытăм].

**Литературăпа ăнлантарусем**

---

[1] *Никитин М.В.* Лексическое значение слова (структура и комбинаторика): учеб. пособие для пед. вузов. М.: Высшая школа, 1983. С. 48.

[2] *Ушаков Д.Н.* Большой толковый словарь современного русского языка: 180000 слов и словосочетаний. М.: Альта-Принт, 2007. С. 950; *Ожегов С.И., Шведова И.Ю.* Толковый словарь русского языка. М.: Язъ, 1984. С. 702.

[3] Чăвашла-вырăсла словарь / М.И. Скворцов ред. М.: Русский язык, 1982. С. 59.

[4] *Маслова В.А.* Лингвокультурология: учеб. пособие для студ. высш. учеб. заведений. М.: Академия, 2001. С. 138.

[5] Çавăнтах. С. 138–140.

[6] *Замалетдинов Р.Р.* Татарская культура в языковом отражении. М.: ВЛАДОС; Казань: Магариф, 2004. 239 с.

[7] *Чернов М.Ф.* Русско-чувашский фразеологический словарь: около 2000 фразеологических единиц. Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2003. С. 172.

[8] Çавăнтах. С. 173.

[9] Çавăнтах. С. 416.

[10] Çавăнтах.

[11] Ваттисен сӑмахӗсем, каларӑшсем, сутмалли юмахсем / Н.Р. Романов пухса хатӗрленӗ. 2-мӗш кӑларӑм. Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 2004. С. 116.

[12] *Маслова В.А.* Лингвокультурология … С. 140.

[13] *Ашмарин Н.И.* Чӑваш сӑмахӗсен кӗнеки: 17 томлӑ. Шупашкар: Чӑваш патш. изд-ви, 1936. Т. 11. С. 229.

[14] *Ожегов С.И., Шведова И.Ю.* Толковый словарь русского языка … С. 179; *Ушаков Д.Н.* Большой толковый словарь современного русского языка ... С. 205.

[15] *Урысон Е.В.* Проблемы исследования языковой картины мира: аналогия в семантике. М.: Языки славянской культуры, 2003. 224 с.

[16] *Ашмарин Н.И.* Чӑваш сӑмахӗсен кӗнеки ... Т. 15. С. 288.

[17] Чӑвашла-вырӑсла словарь ... С. 596.

[18] Çавӑнтах. С. 232–240.

[19] Çавӑнтах. С. 229.

[20] Çавӑнтах.

[21] *Маслова В.М.* Лингвокультурология … С. 141.

[22] Ваттисен сӑмахӗсем, каларӑшсем, сутмалли юмахсем ... С. 174.

[23] *Ашмарин Н.И.* Чӑваш сӑмахӗсен кӗнеки ... Т. 7. С. 130.

[24] Çавӑнтах. С. 132–139.

[25] *Замалетдинов Р.Р.* Татарская культура в языковом отражении ... С. 176–181.

[26] *Ашмарин Н.И.* Чӑваш сӑмахӗсен кӗнеки ... Т. 7. С. 130.

[27] Çавӑнтах. С. 131.

[28] Чӑвашла-вырӑсла словарь ... С. 611.

[29] *Ожегов С.И., Шведова И.Ю.* Толковый словарь русского языка … С. 767.

*Э.В. Фомин*

# Н.И. АШМАРИН СЛОВАРĔНЧИ ИКШЕР ХУТ ТĔЛ ПУЛАКАН СĂМАХ МАЙЛАШĂВĔСЕМ ÇИНЧЕН[1]

Н.И. Ашмаринăн 17 томран тăракан чăваш чĕлхин словарĕ 55 пине яхăн статьяран тăрать. Словарь уйрăмлăхĕ – сăмахпа пĕрлех сăмах майлашăвĕсене те леммăлани, тĕслĕхрен:

**ирхи** утренний;

**ирхи апат** завтрак;

**ирхи апат кĕлли** ранняя обедня;

**ирхи куна каçчен** день-деньской; весь день;

**ирхи кĕлĕ** заутреня [т. 3, с. 130–131][2].

Сăмах майлашăвĕсене леммăлас йăла вĕсене компоненчĕпе килĕшӳллĕн словаре темиçешер хут кĕртме хистет (тĕрĕссипе, леммăланă кашни сăмах майлашăвнех словаре сахалтан та икшер хут кĕртмелле пек, анчах та ун пек тĕслĕх тезаурусра нумаях мар).

Леммăланă сăмах майлашăвĕнчен ытларахăшне вырăсла пĕр евĕр куçарнă, танлаштарăр:

**ар çын** мужчина [т. 1, с. 306; т. 2, с. 71];

**вĕт măйăр** кедровые орехи [т. 5, с. 382; т. 8, с. 290];

**вырăсла çава** род косы [т. 5, с. 210; т. 12, с. 7];

**ĕне ашĕ** говядина [т. 2, с. 206; т. 4, с. 115];

**йĕкĕр ывăç** пригоршни [т. 3, с. 49; т. 5, с. 117];

**кăвак чан** церковный колокол [т. 7, с. 95; т. 15, с. 141];

**кĕленче курка** стакан [т. 7, с. 8; т. 7, с. 238];

**кĕççе атă** валенок [т. 2, с. 138; т. 7, с. 312];

**куç шăрçи** зрачок [т. 7, с. 37; т. 17, с. 338];

**лаптак токмак** валек для белья [т. 8, с. 34; т. 14, с. 109];

**лаптак чул** плитняк [т. 8, с. 35; т. 15, с. 221];

**лаша ашĕ** конина [т. 2, с. 206; т. 8, с. 65];

**пушар чанĕ** пожарный, колокол [т. 10, с. 61; т. 15, с. 141];

**çăпан парĕ** воспаление соответствующей железы при появлении чирья [т. 9, с. 102; т. 13, с. 34];

**çеçен хир** степь [т. 12, с. 91; т. 16, с. 124];

**çĕр сехмечĕ** название божества [т. 11, с. 102; т. 13, с. 95];

**така ашĕ** баранина [т. 2, с. 206; т. 13, с. 152];

**тĕп турта** две пары оглобель дугообразной формы [т. 1, с. 71–72; т. 15, с. 68];

**тĕпеклĕ ухват** ухват с порхлицей [т. 2, с. 52; т. 15, с. 69];

**тимĕр ака пуç** железный плуг [т. 1, с. 76; т. 14, с. 43];

**чĕкеç шатри** веснушки [т. 15, с. 279; т. 17, с. 149];

**чĕрĕ чун** живое существо [т. 15, с. 232; т. 15, с. 288];

**чул кашти** красный брус? [т. 2, с. 54; т. 15, с. 222];

**шăна кăмпи** мухомор [т. 7, с. 144; т. 17, с. 305];

**шăрчăк курăкĕ** герань луговая [т. 5, с. 150; т. 17, с. 343];

**шĕштерне йĕкерчи** круги шестерни [т. 2, с. 64; т. 17, с. 382];

**шĕштĕрнек тĕп** подпятка [т. 2, с. 64; т. 17, с. 382];

**шур тăхлан** олово [т. 15, с. 8; т. 17, с. 239];

**шыв арманĕ** водяная мельница [т. 2, с. 64; т. 17, с. 177];

**ывçă тупанĕ** ладонь [т. 3, с. 50; т. 14, с. 142];

**ырă кăмăллă** милостивый, добрый [т. 3, с. 61; т. 7, с. 134].

Н.И. Ашмарин словарĕнче сайра-хутра икĕ компонентран тăракан сăмах майлашăвне виçĕ хут кĕртни тĕл пулать, çакă сăмах вариантлăхĕпе сăлтавланнă:

**аслă инке** жена старшего пичче; жена старшего из старших братьев моего мужа [т. 2, с. 109] / **аслă инке** жена старшего брата [т. 3, с. 123] / **аслă йинке** жена самого старшего брата мужа [т. 4, с. 310];

**кĕçĕн инке** жена младшего из старших братьев [т. 3, с. 123] / **кĕçĕн йинке** жена младшего брата [т. 4, с. 310] / **кĕçĕн йинке** жена младшего из моих старших братьев [т. 7, с. 308].

Сăмах майлашăвĕсене словаре виçшер хут кĕртессине виçĕ компонентран тăракан тĕслĕхпе

çыхăнтармалла пек, анчах та вĕсене словаре иккĕрен ытла кĕртни тĕл пулмасть:

| | |
|---|---|
| **ĕретлĕ пăт юсман** очередная жертва, совершаемая без совещания с йомзей [т. 4, с. 132]. | **ĕретлĕ пăтă юсманĕ** семейный праздник с принесением в жертву пищи, празднуется после ярового сева и поздней осенью перед Николой [т. 4, с. 132]. |

Кунта илсе панă сăмах майлашăвĕсен пĕлтерĕш уйрăмлăхĕ вĕсен вариантлăхĕпе çыхăнман, ку вăл тĕрлĕ вырăнта пурăннипе аталанса кайнă пĕлтерĕш тĕрлĕлĕхĕ.

Икĕ хут лексикографиленĕ сăмах майлашăвĕсене тĕрлĕрех ăнлантарса пани кăсăк, танлаштарăр:

| | |
|---|---|
| **вырăсла хапха** тесовые ворота, створчатые ворота [т. 5, с. 210]. | **вырăсла хапха** тесовые русские ворота [т. 16, с. 55]. |
| **кĕçĕн çăварни** неделя православия [т. 7, с. 310]. | **кĕçĕн çăварни** прощеное воскресенье [т. 13, с. 5]. |
| **кĕçĕн çимĕк** название праздника [т. 7, с. 310]. | **кĕçĕн çимĕк** название праздника, четверг после троицы [т. 12, с. 160]. |
| **кĕтесри турă** особая клятва, икона на тябле [т. 7, с. 319]. | **кĕтесри турă** икона [т. 14, с. 157]. |
| **пĕт-пĕлтĕк** подражание крику перепела; коростель; гриб-дождевик [т. 10, с. 250]. | **пĕт-пĕлтĕк** подражание крику перепела [т. 10, с. 256]. |
| **пĕчĕк ача** малый ребенок [т. 2, с. 161]. | **пĕчĕк ача** ребенок, дитя [т. 10, с. 258]. |
| **пĕчĕк тете** дядя, младший брат отца [т. 10, с. 259]. | **пĕчĕк тете** младший из братьев моего отца, родившийся после него [т. 13, с. 311]. |
| **пысăк тете** старший брат отца [т. 9, с. 194]. | **пысăк тете** старший из братьев моего отца, родившийся после него; брат моего отца, родившийся прежде него [т. 13, с. 311] |
| **çил хӳри** то же, что *çил кăтартакан* флюгер [т. 2, с. 47]. | **çил хӳри** ветрельник; ветреный [т. 12, с. 151–152]. |
| **çонат кашти** то же, что *çунат йывăçĕ* [т. 2, с. 47]. | **çонат кашти** среднее бревно в крыле мельницы [т. 12, с. 246]. |

| | |
|---|---|
| **тĕклĕ алса** рукавицы из мохнатого меха [т. 1, с. 169]. | **тĕклĕ алса** рукавицы из овчины [т. 15, с. 20]. |
| **тимĕр карта** магический круг [т. 6, с. 112]. | **тимĕр карта** железная изгородь; колючее заграждение из проволоки; заколдованный магический круг [т. 14, с. 43–44]. |
| **хурт пахчи** пасека [т. 9, с. 147]. | **хурт пахчи** пчельник [т. 16, с. 233]. |
| **чул варри** вечея, отверстие бегуна [т. 2, с. 54]. | **чул варри** отверстие бегуна [т. 15, с. 222]. |
| **шăнтакан чир** лихорадка, малярия [т. 15, с. 210]. | **шăнтакан чир** лихорадка [т. 17, с. 302]. |
| **шурă тулли** следующая за полнолунием ночь [т. 3, с. 189]. | **шурă тулли** белое полнолуние [т. 14, с. 124]. |
| **шурă çăн** перга [т. 13, с. 32]. | **шурă çăн** пыльца (пчелы) [т. 17, с. 239]. |
| **юман кăмпи** название гриба [т. 4, с. 323]. | **юман кăмпи** название гриба с длинной ножкой [т. 7, с. 143]. |
| **юн çăмахĕ** лепешка с кровью [т. 4, с. 333]. | **юн çăмахĕ** замешанное в крови заколотого животного *çăмах* [т. 13, с. 25]. |

Кун пек чухне ăнлантарăвĕсем пĕрне-пĕри анлăлатаççĕ.

Н.И. Ашмарин словарьне сăмах майлашăвне кăна мар, пĕр сăмахах икшер хут кĕртни те тĕл пулать. Çакăн сăлтавĕсем:

1) арман номенклатурине малтан хăйне уйрăм, кайран алфавит йĕркипе тепĕр хут вырнаçтарни:

| | |
|---|---|
| **стаяк** стояк [т. 2, с. 44]. | **стаяк** стояк, вертикальный вал на мельнице [т. 11, с. 334]. |
| **тăтхă** железный клин на конце вала ветрянки [т. 2, с. 51]. | **тăтхă** сила, мощь, крепость; железный клин на конце вала ветряной мельницы [т. 15, с. 3]. |
| **тăхçа** насека, которой куют камень [т. 2, с. 51]. | **тăхçа** насека (инструмент, которым куют жернова) [т. 15, с. 10]. |
| **тĕревĕç** деревянный подпор на конце вала ветрянки [т. 2, с. 52]. | **тĕревĕç** деревянный подпор на конце вала ветрянки [т. 15, с. 78]. |
| **шĕштĕрне** то же, что *шĕштĕрнек* [т. 2, с. 64]. | **шĕштĕрне** шестерня на мельнице [т. 17, с. 382]. |

**шĕштĕрнек** то же, что *улт ура* [т. 2, с. 64].

**шĕштĕрнек** шестерня, часть телеги; тын [т. 17, с. 380].

2) сăмахăн каярах тупса палăртнă хушма пĕлтерĕшне палăртас тĕллевпе:

**эй-яй-яй** междометие жалобы и отчаяния [т. 3, с. 5];

**эй-яй-яй** междометие [т. 4, с. 157];

**ялттак** стройный, грациозный [т. 4, с. 184];

**ялттак** по словам С.А. Угандеева, значит бойкий [т. 5, с. 407];

3) хутлă сăмахăн уйрăм пайне ăнлантарнă май:

**так**[4] сокращено из *татăк;* встречается в сложении:

**тепĕртак** еще немного [т. 13, с. 152];

**тепĕртак** еще немного [т. 13, с. 301];

4) ăнсăртран:

**пĕтмĕш** окончание, конец [т. 10, с. 249].

**пĕтмĕш** окончание, конец [т. 10, с. 255].

Н.И. Ашмарин словарĕнче омонима палăртассине çирĕп тытса пырайман. Унти омонимсем час-часах пĕр сăмахăнах курăнаççĕ:

**ăрăмчăк** заклятье, околдование [т. 4, с. 60];

**ăрăмчăк** знахарь [т. 4, с. 60];

**ăстрăм** раз [т. 4, с. 75].

**ăстрăм** отдельное явление или момент в жизни [т. 5, с. 405].

Сăмах майлашăвне е пĕр сăмахах икшер хут ăнлантарса пани тепĕр чухне таса агнонима ăнкарса илме пулăшать, танлаштарăр:

**ача çĕри** какая-то гниль в дереве? [т. 2, с. 170].

**ача çĕри** белая гниль в дереве [т. 13, с. 81].

**така кăмпи** название гриба [т. 13, с. 153].

**така кăмпи** род больших съедобных грибов [т. 7, с. 143].

**тăварлă кăшкар** название растения? [т. 7, с. 218].

**тăварлă кăшкар** съедобный щавель [т. 14, с. 240].

| | |
|---|---|
| **шу мыри** название травы [т. 17, с. 207]. | **шу мыри** водяной орех [т. 8, с. 235]. |
| **чун пӳрен турӑ** название божества [т. 14, с. 157]. | **чун пӳрен турӑ** у язычников название божества, которое якобы находит душу для новорожденного [т. 15, с. 236]. |
| **кӗрлек** шумный? [т. 7, с. 292]. | **кӗрлек** шумный [т. 2, с. 275]. |
| **пуклеш** то же, что *пуплеш*? [т. 9, с. 260]. | **пуклеш** ссориться [т. 10, с. 75]. |
| **тикенек** название растения [т. 14, с. 32]. | **тикенек** репейник [т. 14, с. 32–33]. |

Пӗрремӗш юпана кӗртнӗ тӗслӗхсем леммӑна уҫӑмсӑр ӑнлантараҫҫӗ, иккӗмӗш юпарисем вара вӗсен пӗлтерӗшне пӗр иккӗленӳсӗр ҫирӗплетеҫҫӗ. Ҫапла майпа таса агноним ӑнлантарӑвне хӑш-пӗр чухне Н.И. Ашмарин словарӗнчех шыраса тупма пулать.

Юлашки вӑхӑтра тӗпчевҫӗсем ахаль словарех ят парас тӗлӗшпе усӑ курнӑ сӑмах майлашӑвӗсене те леммӑласа кӗртесси пирки калаҫаҫҫӗ. Тӗрӗссипе, сӑмах майлашӑвне номенклатура е терминологи словарьне леммӑласа кӗртни кӑна вырӑнлӑ, ытти чухне Европа чӗлхе пӗлӗвӗн йӑлине тӗпе хурса словаре уйрӑм хальлӗнхи сӑмаха ҫеҫ вырнаҫтармалла, урӑхла каласан *ирхи, ирхи апат, ирхи апат кӗлли, ирхи куна каҫчен, ирхи кӗлӗ* вырӑнне *ирхи* сӑмах кӑна словарь статйи пулма тивӗҫ, ыттине *ирхи* словарь статйинче ҫырса кӑтартмалла.

Сӑмах майлашӑвне те ахаль словаре статьяласа кӗртес тесе йышӑнни лексикографи ӗҫне пуҫӗпех пӑтраштарса ярӗччӗ. Малтанлӑха ят паракан сӑмах майлашӑвӗпе ирӗклине пӗр-пӗринчен уйӑрса илессине татса парас пулать.

Н.И. Ашмарин словарӗнче ссылка парас йӗрке аталансах ҫитеймен. Ҫакна нумай томран тӑракан кӑларӑма вӑрах вӑхӑт хатӗрлесе пынипе ӑнлантармалла (словаре 1928–1950 ҫҫ. пичетлесе кӑларнӑ). Кун пек чухне кирлӗ сӑмаха ссылка парса шыраса тупма сӗнекен тытӑма йӗркелесе пыма йывӑр. Ҫавӑнпа та леммӑланакан сӑмах майлашӑвӗсене словаре темиҫешер хут кӗртессине ҫирӗплетнӗ. Кунсӑр пуҫне ҫапла тума

словарьçăсене иллюстрацилĕх материал та хистенĕ пулас: вăл кашни хутĕнчех тенĕ пек тĕрлĕ, сайра-хутра кăна пĕр пекрех пулкалать, танлаштарăр:

**ывçă тупанĕ** ладонь. *Ывçă тупанĕ кĕçĕтет, укçа илеп пуль. Ывçă тупанĕ кĕççен (= кĕçĕтсен) укçа е каят, е килет. Час-часрах ил ывçупа çăнăх та, кĕрсенех сап куçĕнчен* [т. 3, с. 50].

**ывçă тупанĕ** ладонь. *Эпĕ ăна ывçă тупанĕ çинче тыткалап тесе калать тет* [т. 14, с. 142];

**чĕрĕ чун** живое существо. *Пĕр чĕрĕ чун та Елиса хутне кĕмен, унăн чунне пусарса унпа сăмах хушман* [т. 15, с. 232].

**чĕрĕ чун** живое существо. *Пирĕн çĕр çинчи чĕрĕ чунсем çинче ылттăнăн çутатать паян хĕвел. Мĕн пур чĕрĕ чун пурте ун тавра вилнĕ пек пулса пĕр сасă кăлармасăр выртать. Пĕр чĕрĕ чун та Елиса хутне кĕмен. Тинĕс хĕрринче пĕр чĕрĕ чун таврашĕ те пулман* [т. 15, с. 288].

Сăмах май каласан, хальхи лексикографире вариантлă леммăпа унăн тĕп кӳлепи хушшинчи çыхăнăва ăнăçсăр палăртас йĕрке çирĕпленнĕ, танлаштарăр:

**лĕкĕрт** то же, что **лăкăрт;**
**лĕкĕртет** то же, что **лăкăртат;**
**лĕкĕрти** то же, что **лăкăрти;**
**лĕкĕшти** то же, что **лăкăшти**[3].

Ку тытăма перекетлĕрех пулассипе сăлтавлаççĕ. Анчах та кун пек чухне кирлĕ сăмаха шыраса тупасси кăткăсланса каять. Çак йĕркепе пурте кăмăлсăр, ăна тахçанах пăрахăçлама вăхăт çитнĕ.

Çапла вара, Н.И. Ашмарин словарĕнче сăмах майлашăвĕсене компоненчĕпе килĕшӳллĕн темиçе хут ăнлантарса (вырăсла куçарса) парас йăла çирĕпленнĕ. Асăннă йăлапа хальхи лексикографире пĕтĕмĕшле словарь хатĕрленĕ чух тӳрремĕнех усă курма çук, анчах та вăл шухăшпа тӳрлетерех усă курма пулать, калăпăр, вăл е ку вариантлă сăмахăн тĕп формине урăх çĕрте пăхма сĕнес вырăнне çавăнтах ăнлантарса парас тĕллевпе.

**Литературăпа асăрхаттарусем**

---

[1] Тĕпчев ĕçне РГНФ пулăшнипе «Чăваш чĕлхинчи пĕлтерĕшсĕр сăмахсене уçăмлатасси» 13-04-00045 №-лĕ проектпа килĕшӳллĕн пурнăçланă.

[2] Çакăнта та, малалла та çак ĕçпе усă курнă: *Ашмарин Н.И.* Чăваш сăмахĕсен кĕнеки: 17 томлă. Хусан; Шупашкар, 1928−1950. Литература списокне анлăлатса ярас мар тĕллевпе тĕслĕхсем хыççăнах томпа страницăна асăнса хăварнă.

[3] Чăвашла-вырăсла словарь / М.И. Скворцов ред. М.: Русский язык, 1985. С. 218.

# БИБЛИН ЧĂВАШЛА КУÇАРĂВĔСЕНЧИ АРАБ ТАТА ПЕРС СĂМАХĔСЕМ

*П.Я. Яковлев*

Чăвашсене христианлăх тĕнне XVI ĕмĕртех йышăнтарма пуçланă пулин те, авалхи чăваш тĕнĕн (чăн чăваш тĕнĕн) йĕрĕсем паянхи кунччене упранса пыраççĕ. Паллах, çĕр чăмăрĕн кирек хăш кĕтессинчи пекех, христианлăх тĕнĕпе вырăнти халăхсен ĕненĕвĕ хушшинче хирĕçӳсем нумай пулнă: миссионерсем авалхи чăваш тĕнне нумай турăллă тĕшмĕшлĕх тесе хакланă, унпа çине тăрсах кĕрешме хистенĕ. Тĕрĕссипе вара, тĕпчевçĕсем палăртнă тăрăх, авалхи чăваш тĕнне пĕртен-пĕр турăлăх ĕненĕвĕ (монотеизм) тесе хакламалла. Çак тĕлĕшрен пăхас пулсан авалхи чăваш тĕнĕн ăнлавĕсем, таса сăмахĕсем христианлăх ĕненĕвне, сăваплă тексчĕсене епле куçса пынине сăнама питĕ кăсăк.

Христианлăх тексчĕсене чăвашла куçарса пичетлеме XIX ĕмĕр пуçламăшĕнчех тытăннă, XIX–XX ĕмĕрсен чиккинче вара тулли Çĕнĕ Халал пичетленнĕ, Кивĕ Халалăн хăш-пĕр пайĕсене куçарнă, чăваш чĕлхи чиркӳ чĕлхи пулса тăнă. Ăслăлăхра ку темăна чылай тĕплĕн çутатса панă, çавăнпа ку ыйту çинче чарăнса тăмăпăр.

Авалхи чăваш ĕненĕвĕн хăш-пĕр сийĕсенче мăсăльманлăх элеменчĕсем пуррине тĕпчевçĕсем тахçанах палăртнă. Чăваш чĕлхинчи араб-перс сăмахĕсем çинчен В.К. Магницкий, Н.И. Золотницкий, Н.И. Ашмарин т.ыт.те çырнă. XX ĕмĕрте ку материала В.Г. Егоров[1], М.Р. Федотов[2], М.И. Скворцов[3], А.П. Хузангай[4] тĕрлĕ енлĕн те тарăннăн тĕпченĕ. Уйрăммăнах кунта Bernd Scherner'ăн[5] сумлă та паха ĕçне палăртса хăвармалла.

Калас пулать, мăсăльманлăх тĕнне йышăннă ытти чылай тĕрĕк чĕлхисемпе танлаштарсан, чăваш чĕлхинче ислам ăнлавĕсен пĕрешкел тытăмлă хулăн сийĕ палăрмасть, çакă вăл араб-перс сăмахĕсем чăваш чĕлхине хăйне евĕрлĕ мел-меслетпе кĕнипе çыхăннă. Венгр тюркологĕ, этнографĕ тата фольклорисчĕ Дюла Месарош[6] XX ĕмĕр пуçламăшĕнчех «Авалхи чăваш тĕнĕн палăкĕсем» ятлă тĕплĕ ĕçĕнче çак хăйне евĕрлĕх пирки çапла çырнă: «...чăвашсен хальхи ĕненĕвĕнче

Турă пĕртен-пĕр тесе ăнланни уççăнах курăнать, вăл пĕртте çут çанталăк тĕнĕ (язычество. – *П.Я.*) евĕрлĕ мар. <...> Анчах та авалхи çут çанталăк тĕнĕ монотеизма ăнсăртран е аталанса кусса пынă тесе шутламалла мар. Чăваш халăх мифологийĕнчи мăсăльман тĕнĕн йышлă терминĕсем пире самай вăйлă ислам витĕмĕ çинчен шутлама хистеççĕ»[7]. Çапла вара, тĕпчевçĕсен шухăшĕпе, чăваш тĕнĕнчи монотеизм ислам витĕмĕпе пулса кайнă. Кунта тата çакна асăрхаттарса хăварни те вырăнлă пулассăн туйăнать: хальхи тĕпчевçĕсем авалхи удмурт тĕнне те монотеизмлă ĕненӳ тесе хаклаççĕ[8].

Тĕпчевçĕсем чăваш чĕлхинчи араб тата перс сăмахĕсене чылай тĕплĕн тишкернĕ, ушкăнланă. Калăпăр, мăсăльман ăнлавĕсем шутне вĕсем çакнашкал сăмахсене кĕртеççĕ: *пихампар* «хозяин волков», *пирĕшти* «ангел», *хăрпан* «хранитель овец», *шуйтан / шуйттан* «сатана», *киремет* «злой дух, демон», *эсрейлĕ / эсрел* «дух смерти» т.ыт.те.

Мăсăльман тĕн терминологийĕн йĕрĕ те чăваш чĕлхинче вăйлă палăрать: *тĕн* «религия», *айăп* «вина», *сăвап* «милость, спасение, небесный дар», *халал* «благословение, завещание», *харам* «бесполезный», *хăват* «сила, могущество», *рахмат* «благодарность», *масар* «кладбище», *тупăк* «гроб», *ахăр самана* «светопреставление», *хăямат* «воскресение, преисподняя» т.ыт.те.

Ку пысăках мар ĕçре эпир ĕненӳпе çыхăннă сăмахсене тата Библире тĕл пулакан абстрактлă ăнлавсене пăхса тухăпăр.

XIX ĕмĕр пуçламăшĕнче христианлăх кĕнекисене чăвашла куçарма, уйрăм кĕнекен пичетлесе кăларма тытăнаççĕ. Малтанхи куçарусем шутне «Кĕске катехизис»[9] тата «Тăвата Евангели»[10] кĕреççĕ. Чĕлхеçĕсем ку куçарусенче кивелнĕ сăмахсем упранса юлнине те палăртнă[11]. Çак ушкăна кĕрекен хăш-пĕр сăмахсем хальхи вăхăтра литература чĕлхинче те, вырăнти калаçусенче те тĕл пулмаççĕ. Пирĕн шухăшăмăрпа, кивелнĕ сăмахсем хушшинче манăçа тухнă араб-перс йышăнăвĕсем «пытарăннă». Тĕслĕхрен:

*ыра батытъ*

| | | |
|---|---|---|
| батыта | 001 | Лк 4:22 |
| батытне | 001 | Ин 1: 16 |
| батытъ | 009 | Лк 1: 28, 30 2: 40 6:32-34 Ин 1:14, 16, 17 |

*смилле*

смилле 001 Мат 23:39
смиллезам 001 Мат 25:34
смиллене 002 Мат 21: 9 26:26
смилляза 001 Мк 14:23

*халанъ*

халандар 001 Ин 7:21
халанза 009 Мк 1:22 2:12 5:20 6:2,6 7:37 10:26 11:18 Ин 7:15
халанмалла 002 Мк 6:2 Ин 9:30
халанре 002 Мк 15:5, 44
халанресь 001 Мк 6:51
халанъ 001 Ин 3:7

Паллах, кун йышши сăмахсен пĕлтерĕшне тупса палăртасси, мĕнле пулса кайнине тĕпчесси питĕ кăсăк, анчах та ку ĕç ятарлă статьяна тивĕç. Хамăр темăпа килĕшӳллĕн вара çакна палăртмалла: паян куна çитиччен те араб-перс сăмахĕсен лексикăпа семантика аталанăвне çителĕклĕн тишкермен-ха. Араб тата перс чĕлхисенчен кĕнĕ мĕнле сăмахсем Библин чăвашла куçарăвĕсенче тĕл пулаççĕ? Авалхи чăвашсен çут çанталăк тĕнĕнчен Библи куçарăвĕсене кĕнĕ сăмахсен семантики мĕнле улшăннă? Куçарусен пахалăхĕ, авалхи чăваш тĕнĕн ăнлавĕсене йышăнассипе йышăнмасси еплерех аталанса пынă?

Палăртнăччĕ ĕнтĕ, авалхи чăвашсен çут çанталăк тĕнĕн ăнлавĕсен самаях пысăк сийĕ – араб тата перс чĕлхисенчен йышăннă сăмахсем. Çак ушкăнри сăмахсем Библи куçарăвĕн тексчĕсенче епле шайлашăнса пынине сăнар-ха[12].

*айăп* «вина»

CHF: *Хонзя азеръ казярма болыръ синзама вулзам* ***аипсене****: сире-да казяре пюльть-синси сиринъ Азше.* «Ибо если вы будете прощать людям согрешения их, то простит и вам Отец ваш Небесный *(Мат 6:14).*

CHY: *Эсир çын* ***айăпне*** *каçарсан, Çӳлти Аçăр та каçарĕ сире.* Id.

CHV: *Ан айăплăр, вара хăвăра та* ***айăпламĕç****.* «Не судите, да не судимы будете» *(Мат 7:11).*

*асап* «мучение»

CHF: –

CHY: *Халăх çине халăх тăрĕ, патшалăх çине патшалăх тăрĕ; вырăнĕ-вырăнĕпе çĕр чĕтĕрĕ, выçлăхсем пулĕç, халăхсем пăлханĕç. Ку* ***асапсенĕн*** *пуçламăшĕ анчах-ха.* «Ибо восстанет народ на народ и царство на царство; и будут землетрясения по местам, и будут глады и смятения. Это – начало болезней» *(Мк 13:8).*

CHV: *Халăх çине халăх тапăнĕ, патшалăх çине патшалăх вăрçăпа тухĕ, тĕллĕн-тĕллĕн çĕр чĕтренĕ, выçлăх пуçланĕ, çынсем пăлханĕç. Çапах та ку –* ***асап*** *пуçламăшĕ кăна-ха.* Id.

*пехил* «завещание, дар»

CHF: –

CHY: *Хăй пурлăхне* ***пехиллесе*** *çыру тăвакан, хăй вилессине пĕлсе, çыру тăвать* «Ибо где завещание, там необходимо, чтобы последовала смерть завещателя» *(Евр 9:16).* Ку сăмах çак сăвăра çеç тĕл пулать, ытти çĕрте *пил* «id». *Эй тăвансем, этем пек шухăшласа калатăп: этем* ***пиллесе*** *хăварнине те никам та улăштармасть, ун çумне нимĕн те хушмасть.* «Братия! Говорю по рассуждению человеческому: даже человеком утвержденного завещания никто не отменяет и не прибавляет к нему» *(Гал 3:15).*

CHV: *Кам çак* ***пил-хушусенчен*** *чи пĕчĕккине те пулин пăрахăçлать, çынсене те çаплах тума вĕрентет, çавна Çӳлти Патшалăхра Турă кĕçĕнни тейĕ. Кам* ***пил-хушусене*** *пурнăçлать, çынсене те çапла тума вĕрентет, çавна Çӳлти Патшалăхра Турă асли тейĕ.* «Итак, кто нарушит одну из заповедей сих малейших и научит так людей, тот малейшим наречется в Царстве Небесном; а кто сотворит и научит, тот великим наречется в Царстве Небесном» *(Мат 5:19).*

Хальхи чăваш литература чĕлхинче *пехил* «благословение», *халал* «завещание, завет», çĕнĕ куçарура *пил-хушу* «заповедь».

*салам* «приветствие»

CHF: –

CHY: *Манпа пĕрле Христос Иисусшăн ĕçлесе пурăннă Прискиллăпа Акилăна* ***салам*** *калăр* «Приветствуйте Прискиллу и Акилу, сотрудников моих во Христе Иисусе» *(Рим 16:3).*

CHV: *Пӳрте кӗрсен ырӑ сунса: «Ҫак кил-йыша канӑҫлӑх пултӑр!» — тесе* ***саламлӑр*** «а входя в дом, приветствуйте его, говоря: «мир дому сему» *(Мат 10:12).*

*сӑвап* «милость, спасение, награда на небесах»

CHF: *Аравазыръ хибирдерь, асла* ***свап*** *сиринъ пюльтсамъ синче: апла хуза кларчесь сирдень илекъ борынна Пророксане* «Радуйтесь и веселитесь, ибо велика ваша награда на небесах: так гнали и пророков, бывших прежде вас» (Мат 5:12).

CHY: *Савӑнӑр, хӗпӗртенӗр: пӗлӗт ҫинче сире пысӑк* ***сӑвап*** *пулӗ: сиртен малтан пурӑннӑ пророксене те ҫапла хӗсӗрленӗ.* Id.

CHV: *Савӑнса хӗпӗртӗр: сире валли Турӑ Ҫӳлти Патшалӑхра пысӑк* ***сӑвап*** *хатӗрленӗ. Сире халӗ хӗсӗрленӗ пекех, сирӗнченхи пророксене те хӗсӗрленӗ.* Id.

*тав* «благодарность»

CHF: *Вулъ вара корзанъ аптраре онынъ сумахъсамъ ранъ, и шокшларе епле боле сягга* ***тава*** *каланы сумахъ* «Она же, увидев его, смутилась от слов его и размышляла, что бы это было за приветствие» *(Лк 1:29).*

CHY: *Вара, ҫичӗ ҫӑкӑрпа пулӑсене илсе, Турра* ***тав*** *тунӑ та, вӗренекенӗсене хуҫкаласа панӑ, вӗренекенӗсем халӑха валеҫсе панӑ.* «И, взяв семь хлебов и рыбы, воздал благодарение, преломил и дал ученикам Своим, а ученики – народу» *(Мат 15:36).*

CHV: *Унтан ҫав ҫичӗ ҫӑкӑрпа пулла илсе Турра* ***тав*** *тунӑ та вӗренекенӗсене хуҫа-хуҫа тыттарнӑ, вӗренекенӗсем халӑха валеҫсе панӑ.* Id.

*телей* «счастье»

CHF: *И сявырынза виренеггенъзамъ бадьне, каларе:* ***телейла*** *козьсамъ кораггаhъзамъ она, минь азеръ корадтыръ* «И, обратившись к ученикам, сказал им особо: блаженны очи, видящие то, что вы видите» *(Лк 10: 23).*

CHY: *Унтан, вӗренекенӗсем енне ҫавӑрӑнса, вӗсене ҫеҫ илтмелле каланӑ: эсир кураканнине куракан куҫсем* ***телейлӗ***. Id.

CHV: *Унтан Вӑл вӗренекенӗсем енне ҫавӑрӑнса, вӗсене ҫеҫ илтмелле каланӑ: «Ҫакна сире курма тӳр килнишӗн эсир* ***телейлӗ***». Id.

*туха* «заклинание»

CHF: –

CHY: *Хула тулашӗнчисем вӗсем йытӑсем,* ***тухатмӑшсем,*** *аскӑн ҫынсем, ҫын вӗлерекенсем, кӗлеткесене пуҫҫапакансем, тӳрӗ мара юратса, ӑна туса тӑракансем* «А вне – псы и чародеи, и любодеи, и убийцы, и идолослужители, и всякий любящий и делающий неправду» *(Откр 22:15).*

CHV: *Усал йытӑсемпе* ***тухатмӑшсем****, аскӑнсемпе ҫын вӗлеренсем, кӗлеткесене пуҫҫапакансем, тӗрӗсмарлӑха юратса тӗрӗс мар пурӑнакансем вара тулашӗнче юлӗҫ.* Id.

*хал* «состояние»

CHF: *Хонзя сана кордымыръ кирекъ* ***халзыра****, кирекъ да тюрмя ра, быдымыръ да санъ бадыма?* «Когда мы видели Тебя больным, или в темнице, и пришли к Тебе?» *(Мат 25:39).*

CHY: *Иисус Хӑйӗн вӗренекенӗсене чӗнсе илсе каланӑ: ҫак халӑха хӗрхенетӗп Эпӗ, вӗсем ӗнтӗ Ман патӑмра виҫӗ кун тӑраҫҫӗ, ҫиме вӗсен нимӗн те ҫук; Манӑн вӗсене ҫитермесӗр ярассӑм килмест, ҫул ҫинче* ***халран*** *ан кайччӑр, тенӗ.* «Иисус же, призвав учеников Своих, сказал им: жаль Мне народа, что уже три дня находятся при Мне, и нечего им есть; отпустить же их неевшими не хочу, чтобы не ослабели в дороге» *(Мат 15:32).*

CHV: *Иисус Хӑйӗн вӗренекенӗсене чӗнсе илсе ҫапла каланӑ: «Ҫак халӑха Эпӗ шеллетӗп: вӗсем ӗнтӗ виҫӗ кун хушши Манпа пӗрле, ҫимелли те вӗсен нимӗн те ҫук. Ҫул ҫинче* ***халтан*** *каясран Ман вӗсене выҫӑлла кӑларса ярас килмест».* Id.

*халал* «завещание, завет»

CHF: *Сягга хошра кильчесь Тивериадъ ранъ тябри кимьзамъ, тучесь та сивыгъ лежъ вырынъ-данъ шта сиресь сюкрузане, Торра* ***халаллаза*** «Между тем пришли из Тивериады другие лодки близко к тому месту, где ели хлеб по благословении Господнем» *(Ин 6:23).*

CHY: –

CHV: *Мӗншӗн тесен Хуҫамӑр саккунӗ ҫапла калать: «Малтан ҫуралнӑ ывӑл ачана Турра* ***халалламалла****»* «как предписано в законе Господнем, чтобы всякий младенец мужеского пола, разверзающий ложесна, был посвящен Господу» *(Лк 2:23).*

*хапăл* «одобрение»

CHF: –

CHY: *Кам та пулин сире **хапăл** тумасан, сăмахăрсене итлемесен, эсир çав çуртран е çав хуларан тухса кайнă чухне урăр çумĕнчи тăпрăра силлесе хăварăр* «А если кто не примет вас и не послушает слов ваших, то, выходя из дома или из города того, отрясите прах от ног ваших» *(Мат 10:14)*.

CHV: *Кам та пулин сире **хапăл** тумасан, сăмахăра та итлемесен, çав çуртран е хуларан тухса кайнă чухне эсир пушмак çумĕнчи тусана та силлесех асăрхаттарса хăварăр*. Id.

*харам* «бесполезный»

CHF: –

CHY: *Пама пулнине илессисем законпа пурăнакансем пулсан, ĕненни **харам** пулать, панă сăмах вырăнлă пулмасть* «Если утверждающиеся на законе суть наследники, то тщетна вера, бездейственно обетование» *(Рим 4:14)*.

CHV: *Эпĕ сирĕн патăрта вăй хурса тăрăшни **харама** ан кайтăрччĕ тесе сирĕншĕн питĕ шикленетĕп* «Боюсь за вас, не напрасно ли я трудился у вас» *(Гал 4:11)*.

*харсăр* «бесстрашный»

CHF: –

CHY: *Эпĕ кама юрататăп, çавсене питлетĕп, вĕсене хĕн кăтартатăп. Çапла ĕнтĕ **харсăр** пул, ÿкĕн* «Итак, будь ревностен и покайся» *(Откр 3:19)*. *Эпĕ те ăна тимлессе тимлерĕм те, вăл хăй пит **харсăр** пирки сирĕн пата хăй каяс тенипе пычĕ* «Ибо, хотя и я просил его, впрочем, он, будучи очень усерден, пошел к вам добровольно» *(2 Коринф 8:17)*.

CHV: –

*хăват* «мощь»

CHF: *Адий! Асландаръ санынъ ятне! Ончоня кильза сасъ пюлть синчень: абе **хватландардымъ**; и тада **хватландарыпъ***. «Отче! Прославь имя Твое. Тогда пришел с неба глас: и прославил и еще прославлю» *(Ин 12:28)*.

CHY: *Эпĕ сире çылăхран ÿкĕнтерсе шыва кĕртетĕп, ман хыçран Килекен манран **хăватлă**, эпĕ Унăн ури сыррине йăтса*

*пыма та тивĕçлĕ мар: Вăл сире Святой Сывлăшпа, вутпа тĕне кĕртĕ* «Я крещу вас в воде в покаяние, но Идущий за мною сильнее меня; я не достоин понести обувь Его; Он будет крестить вас Духом Святым и огнем» *(Мат 3:11).*

И.Я. Яковлев куçарăвĕсенче *хăват* сăмах нумай пĕлтерĕшлĕ, тĕслĕхрен, «чудо» пĕлтерĕшпе: *Çав кун Мана нумайăшĕ калĕç: эй Вĕрентекен, Вĕрентекен! Эпир Санăн ятупа пророкла калаçмарăмăр-и? Усалсене Санăн ятупа хăваласа кăлармарăмăр-и? Сан ятупа нумай* ***хăватсем*** *тумарăмăр-и? тейĕç.* «Многие скажут Мне в тот день: «Господи! Господи! не от твоего ли имени мы пророчествовали? и не твоим ли именем бесов изгоняли? и не твоим ли именем многие чудеса творили?» *(Мат 7:22).*

CHV: *«Эй, Хуçамăр, эй, Хуçамăр! эпир Сан ятупа Турă Сăмахне вĕрентмерĕмĕр-им? Сан ятупа усалсене хăваласа кăлармарăмăр-им? Сан ятупа тĕрлĕрен* ***хăват*** *кăтартмарăмăр-им» – тейĕç Мана чылайăшĕ суд кунĕ çитсен.* Id.

*хыпар* «весть, новость»

CHF: ***Хыбаръ*** *тюлюкъ ра ильтне-бя-да вулзама тавырынмасъ синчень Иродъ патне, орыхъ сиолъ-ба кайресь хувазам батне* «И, получив во сне откровение не возвращаться к Ироду, иным путем отошли в страну свою» *(Мат 2:12).*

CHY: *Çакăн çинчен Иерусалимри ĕненекен ушкăна* ***хыпар*** *çитнĕ те, вĕсем Варнавăна Антиохияна кайма хушнă* «Дошел слух о сем до церкви Иерусалимской, и поручили Варнаве идти в Антиохию» *(Деян 11:22).*

CHV: *Ангел ăна каланă: «Эпĕ* Id. *Турă умĕнче тăракан Гавриил. Мана сан патна çак ырă* ***хыпара*** *пĕлтерме янă»* «Ангел сказал ему в ответ: я Гавриил, предстоящий пред Богом, и послан говорить с тобою и благовестить тебе сие» *(Лк 1:19).*

*шик* «опасение, сомнение»

CHF: *Онда Иудейзамъ сырнза она, каларесь да она: хожчень сана тыдас пиря* ***шикланны*** *ра? Хонзя азъ Христосъ: кала пиря тюрь* «Тут Иудеи обступили Его и говорили Ему: долго ли Тебе держать нас в недоумении? Если Ты Христос, скажи нам прямо» *(Ин 10:24).*

CHY: *Иаков патӗнчен хӑш-хӑш ҫынсем киличчен вӑл суя тӗнпе пурӑннисемпе ҫиетчӗ; лешсем пырсан, ӳт кастарнисенчен* ***шикленсе****, пӑрӑнса ҫӳре пуҫларӗ* «Ибо, до прибытия некоторых от Иакова, ел вместе с язычниками; а когда те пришли, стал таиться и устраняться, опасаясь обрезанных» *(Гал 2:12).*

CHV: *Вара вӗсем тупӑклӑхран тухса тарнӑ, хӑйсем ӑнран каймаллах* ***шикленсе*** *ӳкнӗ. Хӑранипе вара никама та каламан* «И, выйдя, побежали от гроба; их обуял трепет и ужас, и никому ничего не сказали, потому что боялись» *(Мк 16:8).*

*элек* «клевета»

CHF: –

CHY: *Салтаксем те унтан: пирӗн мӗн тӑвас? тесе ыйтнӑ. Вӑл вӗсене каланӑ: никама та хур ан тӑвӑр, ан* ***элеклӗр****, хӑвӑра мӗн панипе тутӑ пулӑр, тенӗ* «Спрашивали его также и воины: а нам что делать? И сказал им: никого не обижайте, не клевещите, и довольствуйтесь своим жалованьем» (Лк 3:14).

CHV: *Салтаксем те унран ыйтнӑ: «Пирӗн тата мӗн тумалла?» Иоанн хуравланӑ: «Никама та ан хӗсӗрлӗр, ан* ***элеклӗр****. Хӑвӑра мӗн чухлӗ шалу панипе ҫырлахӑр».* Id.

*еткер* «наследство»

CHF: –

CHY: –

CHV: *Унтан вара, Ханаан ҫӗрӗнчи ҫичӗ тӗрлӗ халӑха пӗтерсе, вӗсен ҫӗрне Хӑй суйласа илнӗ халӑхне* ***еткерлӗхе*** *уйӑрса панӑ* «И, истребив семь народов в земле Ханаанской, разделил им в наследие землю их» *(Деян 13:19).*

*ӗмӗт* «мечта»

CHF: –

CHY:

1. Мечта: –

2. Надежда: *Эпир* ***ӗмӗтленнипе*** *ҫӑлӑнатпӑр. Курса тӑнипе* ***ӗмӗтленни ӗмӗт*** *тытни мар, хӑй* ***ӗмӗтленнине*** *курса тӑраканшӑн мӗн* ***ӗмӗтленмелли*** *пур* «Ибо мы спасены в надежде. Надежда же, когда видит, не есть

надежда; ибо если кто видит, то, к чему ему и надеяться» *(Рим 8:24)*.

Паллах, хальхи вулакан ку сӑвва ӑнланас тесен те ӑнланаймӗ. Эпир И.Я. Яковлев текстне хӑй вӑхӑтне кура аван хаклатпӑр, ку вӑл текста тӳрлетмелле маррине пӗлтермест, тӗслӗхрен, ҫак сӑввах ҫӗнӗ куҫарура: *«...ҫакӑ пире ҫӑлӑнӑҫ паракан шанчӑк. Анчах та шанни ҫитсессӗн, курӑнакан пулсассӑн, вӑл шанчӑк пулма пӑрахать. Куҫ умӗнче пуррине кам-ха шанчӑк теейтӗр?»*

3. Желание: *Иисус вара ӑна хирӗҫ каланӑ: эй, арӑм, эсӗ хытӑ ӗненетӗн, ху* ***ӗмӗтленнӗ*** *пек пултӑр сана, тенӗ. Унӑн хӗрӗ ҫав сехетре сывалнӑ* «Тогда Иисус сказал ей в ответ: о женщина! велика вера твоя; да будет тебе по желанию твоему. И исцелилась дочь ее в тот час» *(Мат 15:28)*.

CHV: *Хӑйӗн вӑй-хӑвачӗпе пирӗн ӑшӑмӑрта хамӑр ыйтнинчен те,* ***ӗмӗтленнинчен*** *те ытларах Тӑвакана мухтав пултӑр!* «А Тому, Кто действующею в нас силою может сделать несравненно больше всего, чего мы просим или о чем помышляем» *(Ефес 3:20)*.

*терт* «страдание»

CHF: –

CHY: *Манӑн сире* ***тертленмесӗр*** *пурӑнтарас килет. Авланман ҫын, Турра епле юрас-ши тесе, Туррӑннишӗн тӑрӑшать* «А я хочу, чтобы вы были без забот. Неженатый заботится о Господнем, как угодить Господу» *(1 Коринф 7:32)*.

CHV: *Вара Петра тата Зеведейӑн икӗ ывӑлне Хӑйпе пӗрле илсе кайнӑ та пит* ***тертленсе*** *хуйхӑра пуҫланӑ* «И, взяв с Собою Петра и обоих сыновей Зеведеевых, начал скорбеть и тосковать» *(Мат 26:37)*.

*хур* «горе»

CHF: *Ильне бя да Петръ не, икке Зеведей увылзане да, тапрадре хойгырма* ***хорланма*** *да* «И, взяв с Собою Петра и обоих сыновей Зеведеевых, начал скорбеть и тосковать» *(Мат 26:37)*.

CHY: *Сире Ман пирки* ***хурласан,*** *хӗсӗрлесен, тӗрлӗ усал сӑмахпа вырӑнсӑр хӑртсассӑн, эсир телейлӗ пулӑр* «Блаженны вы, когда будут поносить вас и гнать и всячески неправедно злословить за Меня» *(Мат 5:11)*.

CHV: *Илĕртсе çылăха кĕртнĕрен çак тĕнче* ***хур*** *курать. Илĕртӳсем пулаççех, анчах та илĕртсе çылăха кĕртекен çынна хуйхă пулĕ* «Горе миру от соблазнов, ибо надобно прийти соблазнам; но горе тому человеку, через которого соблазн приходит» *(Мат 18:7).*

*тăшман* «враг»

CHF: *Омба килесь санъ синя конъзамъ, хуньзя санынъ* ***тушманзамъ*** *хоплесь сана ьиря тавра сирмазамъ ба, хобырлесь сана, тувурладесь сана поръ енчень* «ибо придут на тебя дни, когда враги твои обложат тебя окопами и окружат тебя, и стеснят тебя отовсюду» *(Лк 19:43).*

CHY: *Çавăнпа ĕнтĕ* ***тăшману*** *выçă пулсан, тăрантар ăна; ĕçесси килет пулсан, ĕçтер; çапла туса, эсĕ унăн пуçĕ çине кăвар пуçтарăн* «Итак, если враг твой голоден, накорми его; если жаждет, напои его: ибо, делая сие, ты соберешь ему на голову горящие уголья» *(Рим 12:20).*

CHV: *«Хăвна çывăх çынна юрат,* ***тăшманна*** *кураймасăр тăр», – тесе авалах каланă.* «Вы слышали, что сказано: «люби ближнего твоего и ненавидь врага твоего» *(Мат 5:43).*

*тус* «друг»

CHF: *кильче эдем увыле сиять и изеть; и каладтыръ: агга синъ, хуже иорадать сима и исьме,* ***досъ*** *мытарьзане и силахлызане* «Пришел Сын Человеческий: ест и пьет; и говорите: «вот человек, который любит есть и пить вино, друг мытарям и грешникам» *(Лк 7:34).*

CHY: *Этем Ывăлĕ килчĕ: ĕçет те, çиет те; ку çын çиме те, эрех ĕçме те юратать, мытарьсемпе, çылăхлă çынсемпе* ***туслă****, тетĕр.* Id.

CHV: *Этем Ывăлĕ килчĕ: çиет те, ĕçет те. Эсир калатăр: «Ку çын çăкăр çиме те, хĕрлĕ эрех ĕçме те юратать. Вăл çылăхлă çынсемпе, налук пухакансемпе те* ***туслă****», – тетĕр.* Id.

Çапла вара, кĕске тишкерӳ пире çакнашкал пĕтĕмлетӳ тума май парать: чăваш чĕлхинче çирĕпленсе çитнĕ Библи ăнлавĕсен виçĕ сийне палăртмалла:

*1. Пĕтĕмĕшле тĕрĕк тата тĕп чăваш лексика элеменчĕсем*

Ку сийри сăмахсем питĕ кăсăк, мĕншĕн тесен мăсăльманлăхри тата христианлăхри тĕп ăнлавсене – *Турă* «Бог», *çылăх* «грех», *ӳкĕнӳ* «покаяние», *кĕлĕ* «молитва» евĕрлисене – чăвашсем çак тĕнсемпе паллашиччен пĕлнĕ.

*2. Араб тата перс чĕлхисенчен кĕнĕ лексика элеменчĕсем*

Çӳлерех илсе кăтартнă материала тĕпе хурса çакна çирĕплетсех калама пулать: араб тата перс йышăнăвĕсем чăваш чĕлхин таса тата абстрактлă лексикине пысăк витĕм кӳнĕ, тĕрĕссипе, вĕсем тĕп чăваш сăмахĕсенчен уйрăлса тăми пулнă.

Христианлăх тапхăрĕ пуçлансан кун йышши лексика элеменчĕсем Библи куçарăвĕн пуянлăхĕ пулса тăраççĕ, христианлăх тĕнче курăмне уçса пама пулăшаççĕ. Библи куçарăвĕсенче çакнашкал сăмахсем XIX ĕмĕр пуçламăшĕнчех тĕл пулаççĕ. Евангелин малтанхи куçарăвĕнче ӳкерĕнсе юлнă хăш-пĕр араб тата перс йышăнăвĕсем хальхи вăхăтра диалектсенче те тĕл пулмаççĕ, архаизма куçнă (*батытъ, смилле* т.ыт.те).

Библи ăнлавĕсен тĕп тытăмне И.Я. Яковлев епле суйласа илнине сăнани питĕ кăсăк. Ку куçарусене малтанласа тишкерни çакна кăтартса парать: И.Я. Яковлевпа унăн ушкăнĕ куçарусенче чăваш чĕлхин мĕн пур хăвачĕпе, пуянлăхĕпе усă курнă. Вăл вăхăтра тĕп чăваш сăмахĕ / йышăннă сăмах текен хирĕç тăру малти вырăнта пулман. Хирĕç тăру урăхларах чикĕпе иртнĕ: чăваш тĕнĕн ăнлавĕ / христианлăх ăнлавĕ. Çак хирĕç тăрăва тăлмачсем хăйсен чĕлхе туйăмĕпе татса пама тăрăшнă, унсăр пуçне ку ĕçе священниксем те хутшăннă. Пуртех те «чăваш ĕçне» ырă суннă темĕпĕр, ку ĕнтĕ урăх ыйту – экстралингвистика факторĕ. Калăпăр, Библири «жертвоприношение» ăнлав чăваш чĕлхинчи «чӳк» ăнлавран уйрăлса тăмасть, анчах ку сăмахпа Сăваплă Çырнинче усă курман, «Турра парне кӳни» тесе куçарнă.

Чăваш тĕнĕн ăнлавĕ / христианлăх ăнлавĕ текен хирĕç тăру куçару ĕçĕнче пысăк йывăрлăхсем кăларса тăратнă пулин те, И.Я. Яковлевпа унăн куçару ушкăнĕ паха куçару тума мехел çитернĕ, чăваш чĕлхине чиркĕве кĕртме пултарнă.

Каларăмăр ĕнтĕ, куçарусенчи христианлăх ăнлавĕсен самаях пысăк сийĕ этимологи тĕлĕшĕнчен араб тата перс сăмахĕсем пулса тăраççĕ.

*3. Чиркӳ славян тата грек лексика элеменчӗсем*

XIX ӗмӗр пуҫламӑшӗнчи куҫарусенче кун йышши сӑмахсем питӗ нумай тӗл пулаҫҫӗ, тӗслӗхрен СНF куҫарура славянизмсемпе грецизмсем питӗ йышлӑ. Малашнехи куҫарусенче вӗсенчен хӑпса пынӑ, хальтерехри куҫарусенче унашкал лексика элеменчӗсем сайра тӗл пулаҫҫӗ: *ангел*, *пророк*, *синагога* т.ыт.те.

Юлашкинчен ҫакна асӑрхаттармалла: И.Я. Яковлев пурнӑҫӗпе ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен ҫырнӑ ҫӗр-ҫӗр ӗҫ хушшинче эпир лингвистика тата текстологи тӗлӗшӗнчен тишкернӗ ӗҫсем тупаймарӑмӑр, ҫула май асӑнкаланисем кӑна. Эппин, чӑваш чӗлхеҫисен ҫак капашсӑр пысӑк ӗҫе тума кӳлӗнесех пулать.

**Литературӑпа асӑрхаттарусем**

---

[1] *Егоров В.Г.* Современный чувашский литературный язык в сравнительно-историческом освещении. 2-е изд. Чебоксары, 1971. 202 с.

[2] *Федотов М.Р.* Об арабских и персидских заимствованиях в чувашском языке (Лексико-семантический обзор и словарь) // Вопросы чувашского языкознания и литературоведения. Чебоксары, 1963. С. 89–124. (Ученые записки / ЧНИИ; вып. 26).

[3] *Скворцов М.И.* Еще раз об арабо-персидском вкладе в чувашскую лексику // Филология. Чебоксары, 1969. С. 139–155. (Ученые записки / ЧНИИ; вып. 39).

[4] *Хузангай А.П.* Об арабо-мусульманских терминах в чувашской сакральной лексике // Чӑваш терминологии аталанӑвӗн хальхи ыйтӑвӗсем: наука конференцийӗн доклачӗсемпе хыпарӗсен тезисӗсем. Шупашкар, 1995. С. 36–38.

[5] *Scherner B.* Arabische und neupersische Lehnworter im Tschuvaschischen. Wiesbaden, 1977.

[6] *Месарош Д.* Памятники старой чувашской веры / пер. с венг. Чебоксары: ЧГИГН, 2000. 360 с.

[7] Ҫавӑнтах. С. 17–18.

[8] *Атаманов М.Г.* Происхождение теонима Инмар «Бог» в удмуртском языке // Г.Е. Верещагин и этнокультурное развитие народов Урало-Поволжья: сб. ст. / УрО РАН, Удмурт. ин-т истории, яз. и лит.; сост. В.М. Ванюшев, Т.С. Зыкина; отв. ред. В.М. Ванюшев. Ижевск, 2004. С. 175–181.

[9] Краткий катехизис, переведенный на чувашский язык с наблюдением российского и чувашского просторечия, для удобнейшего познания онаго, восприявшим святое крещение. СПб.: Синод. тип., 1800.

[10] Святой Евангтель Матфей ран, Марк ран, Лука ран, Иоанн ран да чуваш чильге сине сявырза хоны Хозан холары архерей пыгагтан черггю таврашсамба. Хозанты университетра печатляне 1820 сиолдалыкра Христос сиоратны-ран. Казань: Тип. Император. ун-та, 1820. 516 с.

[11] *Петров Н.П.* О некоторых архаичных словах и их значениях в чувашском переводе Четвероевангелия // Чтения по вопросам

этимологии и ономастики, посвященные 60-летию со дня рождения академика Г.Е. Корнилова: тезисы докладов. Чебоксары, 1996. С. 20–23.

[12] **CHF** – Святой Еванггель … ; **CHY** – Новый Завет Господа нашего Иисуса Христа = Пирĕн Туррăмăр Иисус Христос хунă Çĕнĕ Сăмах. Симбирск: Типолитогр. Губерн. правления, 1911. 529 + 11 с.; **CHV** – Матфей, Марк, Лука, Иоанн пĕлтернĕ Ырă Хыпар. Мускав: Библи куçарăвĕн институчĕ, 2001. 307 с. (Çав куçарăвах туллин Çĕнĕ Халалра пăхмалла: Иисус Христос Хуçамăр панă Çĕнĕ Халал. Мускав: Библи куçарăвĕн институчĕ. 2009. 566 с.)

## ПАЛЛӐ ТӖПЧЕВҪӖСЕН ЮБИЛЕЙӖСЕМ



### БУРЫКИН
### Алексей Алексеевич
### (60 ҫул тултарнӑ май)

2014 ҫулхи чӳк уйӑхӗн 1-мӗшӗнче паллӑ чӗлхеҫӗ, филологи ӑслӑлӑхӗсен докторӗ, истори ӑслӑлӑхӗсен докторӗ А.А. Бурыкин 60 ҫул тултарчӗ. Вӑл Питӗр хулинче вырнаҫнӑ Раҫҫей ӑслӑлӑх академийӗн Лингвистика тӗпчевӗсен институчӗн словарьсен пайӗн ертсе пыракан ӑслӑлӑх ӗҫтешӗ, Обь-угр институчӗн хант филологийӗпе фольклористикин ӑслӑлӑх тӗпчев пайӗн ӑслӑлӑх тӗп ӗҫтешӗ, тунгус-маньчжур чӗлхисене (ытларах эвен чӗлхине) тӗпчесе тата танлаштарullӑ-историллӗ чӗлхе пӗлӗвӗнче палӑрнӑ.

Алексей Алексеевич – Ҫӗпӗрпе Ази халӑхӗсен чӗлхисене тӗпчекен хальхи вӑхӑтри чи паллӑ ӑсчахсенчен пӗри. Вӑл 1954 ҫулхи чӳк уйӑхӗн 1-мӗшӗнче Ленинград хулинче ҫуралнӑ. 1977 ҫулта Ленинград патшалӑх университечӗн филологи факультетӗнчен вӗренсе тухнӑ. Ҫав тапхӑртан пуҫласа паянччченех Раҫҫей ӑслӑлӑх академийӗн Лингвистика тӗпчевӗсен институтӗнче (малтан СССР Ӑслӑлӑх академийӗн Чӗлхе пӗлӗвӗ институчӗн Ленинградри уйрӑмӗ пулнӑ) вӑй хурать, 1977–2003 ҫулсенче алтай чӗлхисен пайӗнче, 2003 ҫултанпа словарь пайӗнче ӗҫлет.

2001 çулта «Язык малочисленного народа в его письменной форме» ĕçе хӳтĕлесе филологи ăслăлăхĕсен докторĕн ятне тивĕçет, 2011 çулта истори ăслăлăхĕсен докторĕн степеньне тивĕçтерекен диссертаци хӳтĕлет.

А.А. Бурыкин ăслăлăх тĕнчинче Çурçĕр халăхĕсене ырми-канми тĕпченипе тата вĕсен чĕлхисемпе йăли-йĕркисене тарăн пĕлнипе паллă. Вăл нумай çул хушши Магаданпа Анадырь хулисенче ĕçлесе пурăннă, Чукоткăпа Магадан облаçĕсене темиçе хутчен экспедици йĕркелесе кайнă.

Алексей Алексеевич алтай чĕлхисене танлаштаруллă-историллĕ тĕпчес ĕçе пысăк витĕм кӳнĕ. Пин ытла пичетленнĕ ĕç шутĕнче тĕрĕк чĕлхисене халалланисем те чылай. Пирĕншĕн кăсăклă темăпа кун çути курнă тĕпчевсенчен пĕлтерĕшлĕреххисем çаксем:

К изучению имен числительных в алтайских языках // Историко-культурные контакты народов алтайской языковой общности: тезисы докладов XXIX сессии постоянной Международной алтаистической конференции (PIAC), Ташкент, сентябрь 1986 г. Ч. 2. Лингвистика. М., 1986. С. 29–31.

Тюркский зетацизм-ротацизм, тюркско-нивхские лексические параллели и некоторые проблемы сравнительно-исторической фонетики алтайских языков // Лингвистические исследования-1986. Социальное и системное на различных уровнях языка. М., 1986. С. 30–37.

Соотношение общеалтайской реконструкции и общетюркского состояния в свете соответствий инлаутных консонантных групп // Чувашский язык и алтаистика. Чебоксары, 1995. С. 14–18.

Позиция корейского языка в классификации отдельных групп алтайских языков и новые перспективы алтаистики // 100 лет петербургскому корееведению: Материалы Международной конференции, посвященной столетию корееведения в Санкт-Петербургском университете, 14–16 октября 1997 года. СПб., 1997. С. 19–26.

Роль тюркских языков Алтая и Южной Сибири в исследовании родственных связей алтайских языков // Алтай и Центральная Азия: культурно-историческая преемственность (к 350-летию ойротской письменности): Материалы Международной научной конференции (5-7 октября 1998 г., г. Горно-Алтайск). Горно-Алтайск, 1999. С. 13–17.

Роль монгольских языков для алтаистических исследований // История развития монгольских языков. Улан-Удэ, 1999. С. 19–42.

Соотношение линейной фонологической структуры слова в алтайских языках // Вопросы востоковедения: Кононовские чтения XII. СПб.: Изд-во СПбГУ, 2000. С. 25–30.

О месте тунгусо-маньчжурских языков в алтаистических исследованиях // Проблемы изучения дальнего родства языков на рубеже третьего тысячелетия: доклады и тезисы международной конференции. М., 2000. С. 12–16.

Айсин эйхэн – altin eshäk, или К проблеме тюркского источника нескольких маньчжурских слов // Вопросы востоковедения: Кононовские чтения XII. СПб.: Изд-во СПбГУ, 2000. С.18–25.

Некоторые замечания к проблеме тюркских заимствований в тунгусо-маньчжурских языках и их значения для сравнительно-исторической тюркологии и алтаистики // Altaica VIII. М.: ИВ РАН, 2003. С. 38–48.

Тофаларская лексика на общеалтайском фоне: Проблемы этимологических исследований лексики одного тюркского языка на фоне генетических и ареальных связей алтайских языков // Проблемы монголоведных и алтаистических исследований: Международная научная конференция, Элиста, 11–13 ноября 2009 г. (к юбилею профессора В.И. Рассадина). Элиста, 2009. С. 42–47.

Идеи С.А. Старостина и дальнейшие перспективы алтаистики // Аспекты компаративистики. 4. М., 2009. С. 9–24. (Orientalia et Classica: Труды Института восточных культур и античности; вып. 28).

О взаимном соотношении отдельных групп алтайских языков и об относительном объеме изменений в отдельных группах алтайских языков: «древние», «новые» и «новейшие» алтайские языки // Вестник угроведения = Vestnik Ugrovedenia: научно-теоретический и методический журнал. № 4 (19). Ханты-Мансийск, 2014. С. 21–33 и др.

Институт администрацийĕпе ĕçченĕсем ăсчаха 60 çул тултарнă ятпа саламлаççĕ, çирĕп сывлăх сунаççĕ. Малашне те хастар ĕçлессе, çĕнĕ çитĕнӳсем тăвасса шансах тăратпăр!

*Ю.Н. Исаев, Э.Е. Лебедев*



# ДОБРОДОМОВ
## Игорь Георгиевич
## (80 çул тултарнă май)

1935 çулхи чӳк уйăхĕн 10-мĕшĕнче Курск (хальхи Белгород) облаçĕнчи Ракитное посёлокра çуралнă. Вăл паллă лингвист, филологи ăслăлăхĕсен докторĕ (1975), профессор (1978), Раççей тюркологĕсен комитечĕн пайташĕ, Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ ăслăлăх ĕçченĕ, Раççей Федерацийĕн аслă шкулăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ (2005), Раççей географи пĕрлешĕвĕн чăн пайташĕ.

Мускав патшалăх университечĕн филологи факультетĕнчен (1958), Социализмла Совет Республикисен Союзĕн Ăслăлăх академийĕн Вырăс чĕлхи институчĕн аспирантуринчен (1963) вĕренсе тухнă. Казах Социализмла Совет Республикинчи Уюк вăтам шкулĕнче (1958—1960) учитель пулса ĕçленĕ, Халăхсен туслăхĕ университечĕн преподавателĕ (1963—1964) пулнă. 1964 çултанпа В.И. Ленин ячĕллĕ Мускав патшалăх педагогика университетĕнче ĕçлет, 1980–2015 çулсенче çав университетри пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕ кафедрине ертсе пынă, халĕ çавăнтах профессор пулса вăй хурать.

«Проблемы изучения булгарских лексических элементов в славянских языках» темăпа (1974) доктор диссертацине хӳтĕленĕ, унта чăваш чĕлхи тата паянччен сыхланса юлман унпа тăванла Атăлçи пăлхар чĕлхи диалекчĕсен материалне тимлĕн тишкерсе тухнă. Ăсчах пилĕк çĕр ытла ăслăлăх ĕçĕ пичетленĕ.

Игорь Георгиевичăн ăслăлăхри тĕп çул-йĕрĕ – тĕрĕк тата славян халăхĕсен чĕлхе çыхăнăвĕсем, хальхи вырăс чĕлхи, пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕ, Хĕвелтухăç Европăри халăхсен историне чĕлхе материалĕпе çутатса парасси. Вăл çухалнă лексемăсене палăртас тĕллевпе ытти чĕлхесене (славян, Кавказ, финн-угр т.ыт.те) кĕнĕ сăмахсене шыраса тупса чăваш-пăлхар словарьне реконструкцилемелли меслетлĕх авторĕ. Сахал мар чăваш сăмахĕн оригиналлă этимологине сĕннĕ. Авалхи вырăс тата авалхи славян чĕлхисенчи сăмах йышне пулăвĕ тĕлĕшĕнчен тишкерсе вăл тĕрĕк сăмахĕсене тупса палăртнă. Унăн тĕпчевĕсенче половецсен сăмахĕсем русичсен чĕлхине тӳррĕн те, ытти халăх (уйрăмах Атăлçи, Дунай тата Кубань пăлхарĕсен е тĕрĕксен) чĕлхисем урлă та кĕни курăнать.

Тĕрĕк чĕлхисенчен куçса авалхи вырăс чĕлхинче анлă сарăлнă, «Слово о полку Игореве» хайлавра та çырăнса юлнă сăмахсене («жемчуг», «хинова», «толковины», «бусови» т.ыт.те), пайăр ятсемпе географи объекчĕсен ячĕсене (Шарукан, Тмутаракань, Каяла, Сурож, Дудутки) И.Г. Добродомов хăйĕн ĕçĕсенче тĕплĕн тишкерсе тухнă. «Хинова» этноним пĕлтерĕшĕ пирки Игорь Георгиевич каланă шухăш уйрăмах кăсăклă пулнине палăртаççĕ тĕпчевçĕсем.

Хисеплĕ ăсчаха 80 çул тултарнă ятпа саламлатпăр, малашне те ырми-канми ĕçлеме, палăртнă тĕллевсене пурнăçа кĕртме çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр сунатпăр!


**Тĕп ĕçĕсем**

О методах исследования древнейших тюркизмов в составе древнерусского языка: к истории слова «жемчуг» // ИОЛЯ АН СССР. 1966. Т. 25. Вып. 1. С. 58—60.

Рец. на кн.: *Čiževska T.* Glossary of the Igor’ Tale. The Hague, 1966 // Вопросы языкознания. 1966. № 6. С. 116—121. И. С. Улухановпа пĕрле.

Некоторые вопросы изучения тюркизмов в русском языке // Вопросы лексики и грамматики русского языка. М., 1967. С. 364—374.

Половцы и поле // Русская речь. 1968. № 6. С. 105.

Два булгаризма в древнерусской этнонимии // Этнонимы. М., 1970. С. 160—163.

Тмуторокань и Тамань // Русская речь. 1973. № 5. С. 129—133.

Этимология, контекст, значение // Вопросы словообразования и лексикологии древнерусского языка. М., 1974. С. 274—284.

Булгарские следы на карте // Русская речь. 1975. № 6. С. 87—92.

О половецких этнонимах в древнерусской литературе // Тюркологический сборник — 1975. М., 1978. С. 102—129.

Лингвистические ареалы и история товарно-денежных отношений (к истории названий некоторых денежных единиц в языках Восточной Европы и Средней Азии) // Диалекты и топонимия Поволжья. Чебоксары, 1979. Вып. 7.

Вторичные рунические надписи на монетах и вопросы денежного обращения у древних енисейских тюрков // Ближний и Средний Восток. Товарно-денежные отношения при феодализме. М., 1980.

О некоторых гиппологизмах и созвучных словах: из аланского пласта иранских заимствований чувашского языка // Проблемы исторической лексикологии чувашского языка. Чебоксары, 1980. (Труды ЧНИИ; вып. 97).

Роль этимологии в локализации старых географических объектов // Проблемы исторической географии России. М., 1982. Вып. 1. С. 81-84.

Булгарские заимствования в древнерусском и других славянских языках как источник для проблемы этногенеза чувашей // Вопросы истории чувашского языка. Чебоксары, 1985.

Об одном тюрко-монгольском слове (БУЛАВА) // Проблемы филологии народов Поволжья: сб. ст. / Моск. пед. гос. ун-т; отв. ред. Л.Г. Латфуллина, Р.З. Хайруллин. М.: [б.и.], 2007. С. 81−85. Л.Г. Латфуллинапа пĕрле.

О топонимике: Коломна // Русский язык в школе. 2007. № 3. С. 93−94.

Лексика и фразеология «Евгения Онегина»: герменевтические очерки / РАН, Отд-ние ист.-фил. наук, Ин-т языкознания и др. М.: Языки славянских культур, 2008. 312 с. И.А. Пильщиковпа пĕрле.

Еще раз о развесистой клюкве // Русский язык в школе. 2009. № 7. С. 54−55.

Гарниза // Русский язык в школе. 2009. № 10. С. 80−83.

Откуда пришло слово ШАРОМЫЖКА? // Русский язык в школе. 2012. № 9. С. 78−80.

«Хощу... копіе приломити конець поля Половецкаго...» // Русский язык в школе. 2013. № 9. С. 54−56, 68.

Дериватологические призраки // Древняя Русь. Вопросы медиевистики. 2014. № 3 (сентябрь). С. 13−20. А.М. Камчатновпа пĕрле.

Топонимика и источниковедение (Казань в хронологическом и этимологическом аспектах) // Вопросы географии / Моск. центр Русского геогр. о-ва; Ин-т геогр. РАН; МГУ им. М.В. Ломоносова, геогр. фак. Сб. 132: Современная топонимика / отв. ред. А.В. Барандеев; сост. Р.А. Агеева, А.А. Герцен. М.: Наука, 2009. С. 151−174.

Буртасский язык — исчезнувший аланский диалект в Среднем Поволжье // Uralo-indogermanica: Балто-славянские языки и проблемы

урало-индоевропейских связей: Материалы 3-й балто-слав. конф., 18–22 июля 1990 г. М., 1990. Ч. 2. С. 64–70.

Из аланского пласта иранских заимствований чувашского языка // Сов. тюркология. Баку. 1980. № 2. С. 21–29.

Казань: (Этимологический этюд) // Топонимика СССР. М., 1990. С. 45–53.

Некоторые осетинско-чувашские параллели // Межъязыковое взаимодействие в Волго-Камье. Чебоксары, 1988. С. 78–84.

О половецких этнонимах в древнерусской литературе // Тюркологический сборник. 1975. М., 1978. С. 102–129.

Роль этимологии в локализации старых названий географических объектов // Проблемы исторической географии России. М., 1982. Вып. 1: Формирование государственной территории России. С. 81–98.

Этимология и старые географические объекты // Вопросы географии. М., 1979. Сб. 110: Топонимика на службе географии. С. 157–163. В.А. Кучкинпа пĕрле.

*Ю.Н. Исаев, А.В. Кузнецов*



**ДЫБО**
**Анна Владимировна**
**(55 çул тултарнă май)**

1959 çулхи çĕртме уйăхĕн 4-мĕшĕнче Мускав хулинче çуралнă. Раççей паллă лингвисчĕ, тюркологĕ, компаративисчĕ, филологи ăслăлăхĕсен докторĕ (1992), Раççей ăслăлăх академийĕн член-корреспонденчĕ (2008). Раççей ăслăлăх академийĕн Чĕлхе пĕлĕвĕ институтĕнче 1981 çултанпа ĕçлет. Халĕ урал-алтай чĕлхисен пайĕн пуçлăхĕ, ăслăлăх тĕп ĕçтешĕ тата Раççей патшалăх гуманитари университетĕнчи Тухăç культурисен институчĕн Компаративистика центрĕн профессорĕ.

Ăслăлăхра ăна танлаштаруллă-историллĕ чĕлхе пĕлĕвĕ кăсăклантарать, тĕпрен илсен этимологи, танлаштаруллă-историллĕ фонетика, семантика типологийĕ, этнолингвистика, алтаистика, уралистика, славистика, индоевропеистика, ностратика ыйтăвĕсемпе ĕçлет.

1976 çултанпа тĕрлĕ экспедицисене хутшăнать, ертсе пырать: 1976, 1977 тата 1980 çулсенче А.Е. Кибрик ертсе пынă экспедицисене хутшăннă, В.М. Иллич-Свитыч ячĕллĕ ностратика семинарĕн 1978 çулхи лингвистика экспедицийĕнчен тытăнса паянччenех тĕрĕк (чăваш, хакас, тува, алтай) тата вырăс чĕлхисен диалекчĕсене тĕплĕн тишкерет. 2011–2013 çулсенче вăл Чăваш Республикин Етĕрне районĕнчи Пушкăрт ялĕнче ирттернĕ диалектологи экспедицине ертсе пынă.

А.В. Дыбо 1994 çултанпа Раççей патшалăх гуманитари университечĕн лингвистика факультетĕнче (халĕ институтĕнче)

«Танлаштаруллă-историллĕ чĕлхе пĕлĕвĕ» теори курсне вĕрентет. Лингвистика институтĕнче ĕçленĕ вăхăтрах вăл асăннă университетăн Тухăç культурисемпе антика институтĕнче «Этимологи тĕпчевĕсен меслетлĕхĕ», «Алтаистика кӳртĕмĕ – тюркологи», «Алтаистика кӳртĕмĕ – монголистика», «Турккă чĕлхи грамматикин теорийĕ», «Ностратика чĕлхе пĕлĕвĕн кӳртĕмĕ», «Историпе семантика тĕпчевĕсен меслетлĕхĕ», «Тĕрĕк чĕлхисен диалектологийĕ» тата ытти курссене вĕрентет. Тĕрлĕ çулсенче ăна Новосибирск, Баку, Вашингтон тата ытти нумай хулари университетсене лекци вулама чĕннĕ.

А.В. Дыбо алтай чĕлхисен танлаштаруллă-историллĕ фонетикине, тĕрĕк, монгол, тунгус-маньчжур чĕлхисен историллĕ фонетикине, тĕрĕк чĕлхисен историллĕ фонетикине сахал мар çĕнĕ шухăшпа пуянлатнă. Ĕçĕсенче историллĕ лингвогеографи, славян чĕлхисенчи алтай чĕлхисенчен йышăннă сăмахсем, тĕрĕксемпе иран халăхĕсен, урал-алтай халăхĕсен хутшăнăвĕсем пирки çырни нумай.

Халĕ вăл венгр чĕлхине тĕрĕк чĕлхисенчен кĕнĕ пĕтĕм йышăнусене туллин кăтартса паракан ĕç хатĕрлет, çак ĕçрех пирĕн вăхăтчен упранса юлман Дунай пăлхарĕсен чĕлхин нумай енне те кăтартса парасшăн, венгр чĕлхин историйĕнчи фонетика пулăмĕсемпе фонемăсен тытăмне туллин сăнлама палăртать.

Раççей тюркологĕсен комитечĕн председателĕн çумĕ, «Урало-алтайские исследования» журналăн тĕп редакторĕ, «Вопросы языкового родства» (Мускав), «Вестник РГГУ – лингвистика» (Мускав), «Российская тюркология» (Мускав – Хусан) тата ытти журналсен редколлеги членĕ. Вырăсла, нимĕçле, акăлчанла, французла, турккăлла пичетленĕ 130 ытла ĕç авторĕ, çав шутра 11 монографипе сăмах кĕнеки.

**Тĕп ĕçĕсем**


Этимологический словарь тюркских языков. Т. 9 (дополнительный): Этимологический словарь базисной лексики тюркских языков. Астана, 2013.

Лингвистические контакты ранних тюрков. Лексический фонд. Пратюркский период. М.: Восточная литература, 2007.

Сравнительно-историческая грамматика тюркских языков. Пратюркский язык-основа. Картина мира пратюрка / отв. ред. Э.Р. Тенишев, А.В. Дыбо.

М., Наука. 2006. Г.Ф. Благовăпа, И.В. Кормушинпа, О.А. Мудракпа, К.М. Мусаевпа, Д.М. Насиловпа, Ю.В. Норманскаяпа, Р.А. Тадиновăпа, Э.Р. Тенишевпа, З.Н. Экбăпа пĕрле.

Этимологический словарь тюркских языков. Общетюркские и межтюркские основы на Л, М, Н, П, С. М.: Восточная литература, 2003. Г.Ф. Благовăпа, Л.С. Левитскаяпа, В.И. Рассадинпа пĕрле.

Etymological dictionary of the Altaic languages. Leiden, Brill, 2003 (3 тома). С.А.Старостинпа тата О.А. Мудракпа пĕрле.

Сравнительно-историческая грамматика тюркских языков. Региональные реконструкции / отв. ред. Тенишев Э.Р. М.: Наука, 2002. Г.Ф. Благовăпа, Э.А. Грунинăпа, И.В. Кормушинпа, О.А. Мудракпа, К.М. Мусаевпа, Д.М. Насиловпа, Э.Р. Тенишевпа, А.А. Чеченовпа пĕрле.

Этимологический словарь тюркских языков. Общетюркские и межтюркские основы на К. М.: Индрик, 2000. Л.С. Левитскаяпа тата В.И. Рассадинпа пĕрле.

Сравнительно-историческая грамматика тюркских языков. Лексика. М.: Наука, 1997. Изд. 2. 2001. Г.Ф. Благовăпа, И.Г. Добродомовпа, И.В. Кормушинпа, Л.С. Левитскаяпа, О.А. Мудракпа, К.М. Мусаевпа, Э.Р. Тенишевпа пĕрле.

Этимологический словарь тюркских языков. Общетюркские и межтюркские основы на К–Ка. М.: Языки русской культуры, 1997. Л.С. Левитскаяпа тата В.И. Рассадинпа пĕрле.

Семантическая реконструкция в алтайской этимологии. Соматические термины. М.: Гнозис: Языки русской культуры. 1996.

Иллич-Свитыч В.М. Опыт сравнения ностратических языков (семитохамитский, картвельский, индоевропейский, уральский, дравидийский, алтайский). Сравнительный словарь (p–q). (По картотекам автора). М.: Наука, 1984. А.Б. Долгопольскипе тата В.А. Дыбопа пĕрле.

Отражение булгарских палатализаций в булгаризмах венгерского языка // Чувашский язык и этнос в истории евразийской цивилизации: материалы международной конференции. Чебоксары, 2011. С. 10–21.

К вопросу о реконструкции морфологических систем для языка агглютинативного типа // Словообразование в тюркских языках: исследования и проблемы. Казань, 2011. С. 44–58.

Bulgars and Slavs: phonetic features in early loanwords // Studies on the Turkic World. Festschrift in honour of Stanisжaw Stachowski edited by E. Маиczak-Wohlfeld and B. Podolak. Krakyw, 2010. P. 21–40.

Вокализм раннетюркских заимствований в венгерском // Finnisch-Ugrische Mitteilungen Band 32/33 Helmut Buske Verlag, 2010. P. 83–132.

Тюркские языки // Языки Российской Федерации и соседних государств: энциклопедия. Т. 3. М., 2005. С. 154–168. Э.Р. Тенишевпа тата Е.А. Поцелуевскийпе пĕрле.

*Ю.Н. Исаев, А.В. Кузнецов*

**ЛУКОЯНОВ**
**Геральд Васильевич**
**(80 çул тултарнă май)**



1935 çулхи çурла уйăхĕн 16-мĕшĕнче Чăваш Енĕн Муркаш районĕнчи Мишер ялĕнче çуралнă. 2001 çулхи пуш уйăхĕн 22-мĕшĕнче Шупашкар хулинче вилнĕ. Чăваш чĕлхин тĕпчевçи, шкул учебникĕсен авторĕ, филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ (1978).

Чăваш патшалăх педагогика институчĕн чăваш чĕлхипе литератури (1957), вырăс чĕлхипе литератури (1965) уйрăмĕсенчен вĕренсе тухнă, Чăваш патшалăх университечĕ çумĕнчи аспирантурăра (1969–1972) вĕреннĕ. «Марийские заимствования в чувашском языке» темăпа кандидат диссертацине хӳтĕленĕ (1973).

Хăйĕн тĕпчевĕнче Геральд Лукоянов пĕтĕм халăх усă куракан тата вырăнти калаçусенче тĕл пулакан мари чĕлхинчен йышăннă пĕтĕм сăмаха тĕплĕ тишкерсе тухма тăрăшнă, вĕсен семантикипе фонетика улшăнăвĕсене çырса кăтартнă.

Чăваш чĕлхипе литературине тата вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен пулса Чăваш Енри Вăрмар районĕнчи Мăнçырма шкулĕнче (1957–1959), Муркаш районĕнчи Мăн Хураçка çичĕ çул вĕренмелли шкулĕнче (1959–1960, 1962–1968), Çатракасси тата Йӳçкасси вăтам шкулĕсенче (1974–1984) ĕçленĕ. Çавăн пекех Чăваш кĕнеке издательствинче, Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче тата Чăваш Республикин вĕренӳ институтĕнче вăй хунă. «Марийские заимствования в

чувашском языке» (1974) монографи авторĕ. Г.В. Лукоянов чăваш чĕлхипе литературине пуçламăш тата вăтам шкулсенче вĕрентмелли нумай учебникпа шкул программи хатĕрленĕ. Вăл хăй тĕллĕн тата ытти авторсемпе пĕрле 40 яхăн вĕренӳ кĕнеки ăсталанă, вĕсенчен хăшĕ-пĕри 10 ытла кăларăмпа тухнă, пĕтĕмĕшле тиражĕ 2 миллиона çывхарать. Учебниксемпе ĕçлемелли методика кăтартăвĕсене те çырнă. Шкулта унăн кĕнекисемпе 1965 çултанпа пуçласа 2000 çулсемчченех вĕрентнĕ.

**Тĕп ĕçĕсем**


Чăваш чĕлхи: Виççĕмĕш класра вĕренмелли кĕнеке. Шупашкар, 1972.

«Чăваш чĕлхи» кĕнекепе ĕçлемелли кăтартусем. 3-мĕш класс. Шупашкар, 1972.

Марийские заимствования в чувашском языке / отв. ред. д-р филол. наук, проф. С.П. Горский; М-во просвещения Чуваш. АССР; Чуваш. ин-т усовершенствования учителей. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1974. 120 с.

Чувашский язык: учебник для 3-го кл. 8-е изд. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1979. 120 с. Ю.М. Виноградовпа тата Н.И. Мироваевăпа пĕрле.

Чувашский язык: морфология. Для V–VI кл. / Г.В. Лукоянов, С.С. Самсонова, С.П. Юшков. 8-е изд. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1979. 223 с.

Тăван литература: 4-мĕш класс валли. Шупашкар, 1980. И.И. Одюковпа пĕрле.

Чувашский язык: учеб. для 3-го кл. 3-е изд., доп. и перераб. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1983. 143 с. Ю.М. Виноградовпа пĕрле.

Чувашский язык: учеб. для 4-го кл. / Г.В. Лукоянов, Ю.М. Виноградов. 4-е изд., доп. и перераб. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1987. 159 с.

Чувашский язык: учеб. пособие для студентов, изучающих чуваш. яз. / Чуваш. гос. пед. ин-т им. И.Я. Яковлева. Чебоксары: [Б. и.], 1991. 175 с. Л.П. Сергеевпа пĕрле.

Чăваш сăмахĕ: учебник-хрестомати: вырăс шкулĕн 7-мĕш классĕ валли. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1991. 270 с. С.П. Юшковпа пĕрле.

Тăван литература: учебник-хрестомати: 5-мĕш класс валли. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1991. 255 с.

Чăваш литератури: вăтам шкул программисем: 5-11 классем / Чăваш ССР халăха вĕрентес ĕç министерстви. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1991. В.П. Никитинпа, Д.С. Филипповăпа, Г.Я. Хлебниковпа пĕрле.

Чувашский язык: учеб. для 4-го кл. / Г.В. Лукоянов, Ю.М. Виноградов, 5-е изд., доп. и перераб. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1992. 158 с.

Лукоянов Г.В. Чăваш чĕлхи: 4-мĕш кл. валли. Хушса çĕнетнĕ 5-мĕш кăларăм. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1992. 158 с. Ю.М. Виноградовпа пĕрле.

Шевле: хушма вулав кĕнеки: 2-мĕш класс валли. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1993. 253 с. З.Н. Портновăпа пĕрле.

Тăван литература: 5 класс валли. Шупашкар, 1998. Ытти авторсемпе пĕрле.

Çеçпĕл: хушма вулав кĕнеки: 1-мĕш класс валли. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2000. Н.Н. Масловăпа пĕрле.

Чăваш чĕлхи: 4 класс. Шупашкар, 2000. Ытти авторсемпе пĕрле.

*Ю.Н. Исаев, А.В. Кузнецов*



**НАСИЛОВ**
**Дмитрий Михайлович**
**(80 çул тултарнă май)**

1935 çулхи пуш уйăхĕн 18-мĕшĕнче Мускав облаçĕнчи Зарайск хулинче çуралнă. Раççей паллă лингвисчĕ, тюркологĕ, филологи ăслăлăхĕсен докторĕ (1990), профессор (1992), Раççей ăслăлăх академийĕн историпе филологи ăслăлăхĕсен уйрăмĕ çумĕнчи Раççей тюркологĕсен комитечĕн председателĕн çумĕ, Турци чĕлхе обществин (Türk Dili Kurumu) хисеплĕ пайташĕ (1989), «Российская тюркология» журналăн тĕп редакторĕ. 1996 çултанпа М.В. Ломоносов ячĕллĕ Мускав патшалăх университечĕн Азипе Африка çĕр-шывĕсен институтĕнче ĕçлет, 2013 çултанпа çак институтри тюркологи кафедрине ертсе пырать.

Ăслăлăхра ăна тĕрĕк тата ытти алтай чĕлхисен грамматикин теорийĕ, тĕрĕк чĕлхисен историллĕ грамматикипе лексикологийĕ, тухăç пĕлĕвĕ ăслăлăхĕсен историйĕ, Раççейри пĕчĕк йышлă халăхсен чĕлхисене сыхласа хăварса аталантарасси, чĕлхе политики ыйтăвĕсем, Раççейри наци шкулĕсенче тăван чĕлхесене вĕрентес ĕçĕн çивĕч ыйтăвĕсем кăсăклантараççĕ.

Д.М. Насилов профессор Раççейри, Узбекистанри, Казахстанри, Кыргызстанри, Турцири университетсенче лекци вулать, Мускав университечĕн тюркологи шкулĕ ятне-сумне тĕнчипе сарать. 2014 ç. Турци Республикин Президенчĕ Абдуллах Гюль Дмитрий Михайловича Турци Республикин «Лиякат» Патшалăх орденĕ парса чысланă.

Д.М. Насилов 1958 ç. М.В. Ломоносов ячĕллĕ Мускав патшалăх университечĕн Тухăç чĕлхисен факультечĕн тĕрĕк

филологийĕ кафедри енĕпе вĕренсе тухнă. Самарканд университечĕн узбек чĕлхи кафедрин преподавателĕ (1958–1960), Раççей ăслăлăх академийĕн Чĕлхе пĕлĕвĕ институчĕн аспиранчĕ (1960–1963), Раççей ăслăлăх академийĕн Чĕлхе пĕлĕвĕ институчĕн Ленинградри уйрăмĕн (халĕ Раççей ăслăлăх академийĕн Лингвистика тĕпчевĕсен институчĕ) кĕçĕн ăслăлăх ĕçтешĕнчен пуçласа алтай чĕлхисен пайĕн пуçлăхĕ таран (1963–1993), Раççей Федерацийĕн Наци ыйтăвĕсен тата регионсен политикин министерствин Раççей халăхĕсен институчĕн директор çумĕ (1993–1996) пулса ĕçленĕ. 1996 çултан паянччenex М.В. Ломоносов ячĕллĕ Мускав патшалăх университечĕн Азипе Африка çĕр-шывĕсен институтĕнче вăй хурать.

Ăсчах «Алтаистика историйĕ», «Авалхи тĕрĕк чĕлхин çырулăх палăкĕсем», «Авалхи уйгур чĕлхи», «Узбек чĕлхи», «Тĕрĕк чĕлхисен танлаштаруллă грамматикин никĕсĕ», «Тĕрĕк лексикологийĕ», «Тюркологи кӳртĕмĕ», «Узбек тата вырăс чĕлхисен танлаштаруллă грамматики», «Тĕрĕк социолингвистикин никĕсĕ», «Тĕрĕк чĕлхисен функци грамматикин никĕсĕ» тата ытти нумай программа йĕркелесе тĕрĕк чĕлхиллĕ аслă шкулсенче лекци курсĕсем ирттернĕ.

Вăл тăрăшнипе «Красная книга языков Российской Федерации» ĕç, Çĕпĕрпе Инçет Хĕвелтухăçри алтай чĕлхисен хальхи тăрăмне кăтартса паракан ытти энциклопеди пуххисем кун çути курнă, кашни тюрколог кунсерен тенĕ пек усă куракан «Древнетюркский словарь» (1969) тата А.Н. Кононовăн пысăк пĕлтерĕшлĕ «Грамматика языка тюркских рунических памятников» монографийĕ вулакан патне çитнĕ. Дмитрий Михайловичăн Раççейри çамрăк çырулăхлă тата çырулăхсăр халăхсене пĕлӳ парас ĕçри тӳпи пысăк, вăл вăтам шкулсемпе професси паракан вĕренӳ учрежденийĕсем валли вĕренӳ хатĕрĕсемпе сăмах кĕнекисем кăларассишĕн тăрăшса ĕçлет. Д.М. Насилов икçĕр ытла ĕç пичетлесе кăларнă.

**Тĕп ĕçĕсем**

Древнетюркский словарь / под ред. В.М. Наделяева, Д.М. Насилова, Э.Р. Тенишева, А.М. Щербака. Л.: Наука, Ленинградское отделение, 1969. 677 с.

Проблемы тюркской аспектологии: Акциональность. Л.: Наука, 1989. 208 с.

Проблемы тюркской аспектологии: акциональность: автореф. дис. ... д-ра филол. наук. М.: АН СССР. Ин-т языкознания, 1989. 32 с.

Концепция языкового типа в трудах Н.А. Баскакова // 90 лет Н.А. Баскакову. М.: Языки русской культуры, 1997. С. 180−185;

Языки малочисленных этносов в образовательном пространстве России // Язык и общество на пороге нового тысячелетия: итоги и перспективы. М.: УРСС, 2001. С. 241-244.

Типовая общеобразовательная программа по языкам тунгусо-маньчжурской группы для школ народов Севера. М.: ИНПО, 2001. 88 с. Авторсен йышӗнче тата редактор.

Концепция модели этнической (национальной) школы для коренных малочисленных народов Севера Российской Федерации. М.: ИНПО, 2001. 70 с. Авторсен йышӗнче тата редактор.

Концепция учебника родного и русского языка для национальной школы. Сб. МО РФ, 2004 .

Законодательная база языковой политики в Российской Федерации // Journal of endangered Languages. 2013. Т. 2. № 2. С. 26−47.

Современные тюркские языки: система научных взглядов в период смены лингвистической парадигмы // Тюркские языки и этносы: языковые и этнодемографические процессы: сб. ст. Алматы: Казак университети, 2015. С. 266−321.

Языковая ситуация России в контексте создания двуязычного образовательного пространства // Тюркские языки и этносы: языковые и этнодемографические процессы: сб. ст. Алматы: Казак университети, 2015. С. 106-120.

Некоторые вопросы описания тюркских рукописей // Актуальные вопросы тюркологических исследований: к 75-летию В.Г. Гузева: сб. ст. СПб: Изд-во РХГА, 2014. С. 151−157

Рукописи − надёжный источник изучения истории тюркских языков // Проблемы филологии народов Поволжья: Материалы Всероссийской научно-практической конференции (Москва, 17−19 апреля 2014 г.), М.: МПГУ, 2014. Т. 8. С. 16−24.

Махмуд Кашгарский о тюркских этносах // XXII Международная конференция «Дмитриевские чтения». М.: ИСАА МГУ им. М.В.Ломоносова, 2014.

К теоретическому обоснованию сопоставительного изучения языков // Сохранение и развитие родных языков в условиях многонационального государства: проблемы и перспективы: материалы 5 Международной научно-практической конференции (Казань, 19-22 ноября 2014 г.). Казань: Отечество, 2014. С. 214-216.

Тюркские языки в евразийском пространстве: современное состояние, тенденции и перспективы. Коллективная монография. Астана: «Сарыарка», 2012. 368 с. Н.Ж. Шаймерденовăпа, Г.-Р. А.-К. Гусейновпа, М. Джусуповпа, А.В. Кузнецовпа, Р.Р. Абишевăпа, Д.Б. Аманжоловăпа пӗрле.

Чувашский государственный институт гуманитарных наук

Научное издание

# ЧУВАШСКИЙ ЯЗЫК, ЛИТЕРАТУРА, ФОЛЬКЛОР

Сборник статей

На чувашском языке

Составитель
КУЗНЕЦОВ Александр Валерьянович

Редактор **Т.Н. Таймасова**
Корректор **Г.И. Алимасова**
Оригинал-макет и верстка **Л.Н. Сапоговой**

Подписано в печать 15.12.2015. Формат 60x84/16.
Гарнитура TimesET Chuwash. Бумага офсетная.
Печать оперативная. Усл. печ. л. 14,88.
Уч.-изд. л. 9,38. Заказ №22. Тираж 100 экз.

Отпечатано в РИО БНУ «Чувашский
государственный институт гуманитарных наук»
428015, г. Чебоксары, Московский пр., 29/1